ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ISBN 978-5-7670-2331-8

ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

ЧУВАШСКИЙ
ГОСУДАРСТВЕННЫЙ
ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ
НАУК

ЧĂВАШ
ПАТШАЛĂХ
ГУМАНИТАРИ
ĂСЛĂЛĂХĔСЕН
ИНСТИТУЧĔ

ЧУВАШСКОЕ
КНИЖНОЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВО

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ЧУВАШСКОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

# ЗАГАДКИ

ЧЕБОКСАРЫ
2015

ЧӐВАШ ХАЛӐХ ПУЛТАРУЛӐХӖ

# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

ШУПАШКАР
2015

УДК 398
ББК 82. 3(2 Рос=Чув)-6
Т 85

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн*
*Ăслăлăх канашĕ пичете ҫирĕплетнĕ*

Редакци канашĕ:

***Ю.Н. Исаев, А.А. Трофимов, В.Г. Родионов,***
***М.Г. Кондратьев, Н.И. Егоров***

Редакци ушкăнĕ:

***В.Г. Родионов, Н.И. Егоров, Г.А. Николаев, Л.П. Петров,***
***О.Н. Терентьева, Е.В. Федотова***

Ăслăлăх консультанчĕ:

Раççейĕн Ăслăлăх академийĕн А.М. Горький ячĕпе хисепленекен
Тĕнче литературин институтĕнчи фольклор уйрăмĕн ертсе пыракан ăслăлăх
ĕçтешĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ ***Ю.И. Смирнов***

Рецензентсем:

филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ ***Г.Г. Ильина***
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ ***А.В. Кузнецов***
философи ăслăлăхĕсен кандидачĕ ***О.Н. Терентьева***

Ăслăлăх редакторĕ, пухса хатĕрлекенĕ,
ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ —
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ ***Е.В. Федотова***

Т 85 **Чăваш халăх пултарулăхĕ.** Тупмалли юмахсем. Пĕрремĕш кĕнеке / ăслăлăх редакторĕ, пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ Е.В. Федотова. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. — 446 с.
ISBN 978-5-7670-2331-8

«Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмри «Тупмалли юмахсем» томăн пĕрремĕш кĕнекине архиври материалсем, экспедицисенче пухнă тупмалли юмахсем, халиччен тĕрлĕ çулсенче пичетленнĕ текстсем те кĕнĕ. Кăларăмра пурĕ виçĕ пин те сакăр çĕр алла яхăн текст. Вĕсенче чăваш халăхĕн кун-çулĕ, тĕнчене ăнланни, ĕмĕрсем хушши пуçтарăнса пынă ăс-хакăлĕ ӳкерĕннĕ.
Кĕнеке чăваш халăхĕн историйĕпе, сăмахлăхĕпе, йăли-йĕркипе, курăмĕпе, шухăшлавĕпе кăсăкланакан кирек хăш вулаканшăн та усăллă.

**УДК 398**
**ББК 82. 3(2Рос=Чув)-6**

© Федотова Е.В. Пухса хатĕрлени. Ум сăмах. Ăнлантарусем, 2015
© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2015
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2015

**ISBN 978-5-7670-2331-8 (1)**
**ISBN 978-5-7670-2358-5 (общ.)**

# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕН ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔХĔ

## Тупмалли юмах тата унăн пурнăçри вырăнĕ

Тупмалли юмах вăл метафорăллă текст: пĕр-пĕр япалан е пулăмăн пĕрпеклĕхне тĕпе хурса ытарлă майпа ӳкерсе (каласа) пани. Çакна асра тытса çыннăн унăн тупсăмне пĕлмелле. Тупмалли юмахсем кашни халăхăн пур.

Сĕм авал пулса кайнă тупмалли юмахсенче этемлĕх аталану тапхăрĕн чи малтанхи пусми çинче тăнă вăхăтри мифла символсем ӳкерĕнсе юлнă. Вĕсенчи поэтикăллă сăнарсем çут çанталăк пулăмĕсем, тавралăх çинчен каласа кăтартма е ăнлантарма кирлĕ пулнă. Тупмалли юмахсенчи çак пĕлтерĕш вăхăт иртнĕçемĕн çухалса пырать. Унăн ытарлă, аллегорилле калас форми, сăнарлăхпа пуян чĕлхи упранса юлать. Халăх ăна ăс çивĕчлĕхне туптамалли ансат хăнăхтару пек йышăнма пуçлать. Ĕлĕк-авал тупмалли юмахсене уйрăмах вăрттăн пĕлтерĕшлĕ тесе йышăннă: вĕсен тупсăмне тупассине ĕмĕт пурнăçланассипе, кăмăл тулассипе, хăрушлăха сирессипе çыхăнтарнă. Тупмалли юмах калассипе тупсăмне тупас ăмăрту ирттерни халăх эпосĕнче анлă сарăлнă мел. Вăл каярах çырулла литературăна та куçать. Ыйту-хурав мелĕпе йĕркеленĕ хайлавсем кашни ĕмĕрте кашни халăхăн тенĕ пекех тĕл пулать. Славян, вырăс халăхĕн тупмалли юмахлă юррисем «Ăслă хĕр» халап патне çывăх тăраççĕ, вĕсем хĕр каччăран ăс енчен нимпе те кая маррине кăтартса параççĕ. Чăвашăн та «Ăслă хĕр», «Ăслă ача» юмахсем пур, вĕсенче ахаль çын хĕрĕ патшаран, кĕçĕн ача çитĕннĕ çынтан ăслă пулма пултарать теекен шухăш тĕп вырăнта тăрать.

Мĕншĕн вырăсăн «загадки», чăвашăн «юмах» ятлă?

Н.И. Золотницкий «юмах» термина «сказка, повесть, загадка» тесе куçарнă [Золотницкий, 1875: 17][1]. А.К. Салмин «юмах» термина революцичченхи ал çырусемпе публикацисенче «тупмалли юмах» (загадка) пĕлтерĕшпе усă курни çинчен калать. Чăваш чĕлхин этимологи словарĕнче икĕ пĕлтерĕш (юмах тата тупмалли юмах) илсе панине, юмахпала тупмалли юмаха пĕр-пĕринчен уйăрма «вăрăм юмах», «кĕске юмах» ăнлавсем пуррине тата ахаль пуплевре «юмах» термин «юмахлав» пĕлтерĕшпе çӳренине те палăртать тĕпчевçĕ [Салмин, 1987: 33—34]. «Юмах» сăмахăн тымарĕнче — авалхи тĕрĕк чĕлхинчи «юм» (монг. *дом* — «асамлăх», «тухату» пĕлтерĕшпе, *домуг* — «легенда, сказание», «сказка» пĕлтерĕшпе) тăрать», — тесе çырать венгр ученăйĕ А. Рона-Таш [Рона-Таш, 1982: 136]. Н.И. Его-

[1] Тăваткал скобкăна илнĕ источниксен тулли варианчĕсене «Библиографи» пайра панă.

ров «юмах» термин этимологине «юм» сăмахпа çыхăнтарасшăн мар. Ун шучĕпе, «юм» сăмахăн пирвайхи пĕлтерĕшĕ «волшебство» мар — «лекарство, снадобье»; юмах, сăмах, уртмах, такмак, тăсмак йышши сăмахсенче глаголтан ят тăвакан -мах > -мех, -мак > -мек аффикссем тăраççĕ. Апла пулсан «юмах» сăмах тымарĕ *ю* (йу) глагол пулать. Чăваш чĕлхине «юмах» сăмах XIII—XIV ĕмĕрсенче вăта кыпчак (среднекыпчакский) чĕлхинчен кĕнĕ. Ку сăмахăн географийĕ шутсăр анлă: тĕрĕк йомэк, монг. домог «легенда, сказание» (< кăк пăлхар), тунг.-маньч. нимнăкăн «сказка» [Ильина, 2011: 8].

Тутарсем тупмалли юмаха *йомак* (диал.), пушкăртсем *йомак* [Федотов, 1996: 485] теççĕ.

Тупмалли юмахсене тури чăвашсем «сутмалли юмах» е «юптармалли юмах», анат енчисем «сутмалли юмах», «кĕске юмах» тата «тупмалли юмах», анатрисем «юмах», ытларах «тупмалли халлап», «кĕске халлап» тата «сутмалли халлап» теççĕ [Родионов, 1982: 69—70]. Вĕсене мĕн пухса пыма пуçланăранпах пичетре те тĕрлĕрен терминпа палăртнă. И.Н. Юркин хăйĕн тупмалли юмахсен кĕнекине «Юмахсем» тесе ят панă, Н.И. Ашмарин, М.Я. Сироткин — «тупмалли юмах», И.С. Тукташ, Н.Р. Романов, В.Я. Канюков — «сутмалли юмах», С.М. Михайлов хăйĕн кĕнекинче тупмалли юмахсене «юмах» тенĕ [Михайлов, 1853: 8]. 1883—1884 çç. Н.И. Ашмарин патне фольклор тексчĕсене тĕрлĕ вырăнтан çырса илсе ярса панă материалсене пăхсан та пухакансем тупмалли юмахсене тĕрлĕрен терминпа палăртни курăнать: «юмахсем», «сутмалли халлапсем», «сутмалли юмахсем», «тупмалли юмахсем», «кĕске юмахсем». Сутмалли юмах тесе сутмалла вылянă чух калакан тупмалли юмахсене калаççĕ. Пĕр ялтах «тупмалли юмах» тени те, «сутмалли юмах» тени те тĕл пулма пултарать. Вăл лару-тăруран килет. Сутмалли юмах тесе ытларах сутмалла вылянă чух калаççĕ. Ытти чухне, сутмалла мар чухне, çав текстах «тупмалли юмах» ятпа çӳрет. Юлашки çулсенче чăваш фольклористикинче «загадка» пĕлтерĕшпе усă курма йышăннă термин вăл «тупмалли юмах» (сказка, которую нужно найти). Анатри чăвашсем ытларах «халап» сăмах никĕсĕ çинче тăракан терминпа усă кураççĕ: «кĕске халап», «тупмалли халап», «сутмалли халап». Ăслăлăхра «халап» е «халлап» термин пĕлтерĕшĕпе эпикăллă проза жанрне (предание, несказочная проза) палăртма йышăннă [Родионов, 1982: 101; Никитин-Станьял, 1993: 311; Егоров, 2002: 21]. Çавăнпа тупсăмне тупмалли кĕске юмаха «тупмалли юмах» терминпа палăртни вырăнлăрах.

Тупмалли юмах, — ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем пекех, — афористикăллă жанр. Тупмалли юмахăн хăйне евĕрлĕхĕ вăл диалога тĕпе хунă текст: пĕри тупмалли юмах калать, теприн унăн тупсăмне тупмалла. Кунта сахалтан та икĕ çын кирлĕ. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем монологлă, пĕр çын пуплевĕллĕ те пулма пултараççĕ. Тупмалли юмах тексчĕ яланах икĕ пайран тăрать: пĕри тупмалли юмах, тепри тупсăмĕ. Тĕслĕхрен: тупмалли юмах тексчĕн пĕр пайĕ — *Атăл урлă пĕкĕ ывăтса kaçарăп*, тепĕр пайĕ — *хуран хăлăпĕ* — тупсăмĕ. Тупмалли юмах — тупсăмĕсĕр, тупсăмĕ — тупмалли юмахсăр текст пулаймасть.

Чăвашсен те, ытти халăхсенни пекех, тупмалли юмахĕсем авалах пулса кайнă. «Чи авалхи çынсем çут çанталăк пулăмĕсем асамлă вăйран килеççĕ тесе шутланă, пур япалан та хăйĕн ырри пур тесе ĕненнĕ. Су-

нарта та, çĕр ĕçĕнче те, вăрманта та çынна темле усал вăй чăрмантарнăн туйăнса тăнă. Çав усал вăя сирсе яма, ырăсенчен пулăшу ыйтма вĕсен кăмăлне килтерекен вăрттăн чĕлхе пĕлни кирлĕ пулнă. «Юм юмлас» тени «сиплĕ сăмах калас» тени, «вăрттăн сăмах калас» тени пулнă», — çырать Е.С. Сидорова хăйĕн ĕçĕнче [Сидорова, 1984: 15—16]. Тĕпчевçĕ вăрттăн чĕлхе сунара каяс умĕн кирлĕ пулнине, ачана чир-чĕр, усал-тĕсел ан тивтĕр, эсрел ун тĕлне ан пĕлтĕр тесе ăна кайăк-кĕшĕк е йывăç-курăк ятне панине (Курак, Чĕкеç, Юман, Кăлкан) тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать. Хĕр çураçма кайсан хĕрĕпе каччин ячĕсене ытарлă ятсемпе асăнни, туй ăçтан, мĕнле çулпа килнине вăлтса калани те çав вăрттăнлăха аса илтернине палăртать. Вăрттăн чĕлхене мĕн ачаранах пĕлмелле пулнă. Аслисем кĕçĕннисене вĕрентсе пынă. Этем пурнăçа ытларах ăнланса пынăçемĕн асăнас япалан тĕп паллисене сăнарлă çаврăнăшсемпе калама пуçланă. Вĕсем итлекенĕн ăс-тăнне, тавçăрулăхне тĕрĕслемелли, тавракурăма анлăлатмалли меслет пулса тăнă тесе тĕпчевçĕ ăнлантарнипе килĕшме пулать.

Каярах «тупмалли юмахсене чăвашсем ытларах улахра, выртмара, арманта, чăпта çапнă çĕрте тата ытти ĕçре ыйхă пусасран каланă. Вĕсене çавăн пекех каçсерен, ашшĕ-амăшĕ ĕçрен пушă вăхăтра е ал ĕç тунă чухне ачи-пăчине тавçăрулăха вĕрентес тĕллевпе каланă. Çапла майпа ватăрах çынсем çамрăксене пĕлӳ панă, харпăр хăй травашĕнчи япалан илемлĕхне курма вĕрентсе пынă» [Сидорова, 1984: 16]. Тупмалли юмахсем ача-пăчана, çамрăксене ăс-тăн енчен çивĕч пулма, аталанма питĕ кирлĕ жанр шутланаççĕ. Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» сутмалли юмахсене сутмалла вылянă чух каланине ăнлантарса çапла çырать: «**Сутмалла,** назв. игры. *Альш.* Унтан выляççĕ сутмалла. Сутмалла выляс тесе ак мĕне калаççĕ. Хăшĕ те пулин пĕри калат тупмалли юмах (загадка). Ăна ыттисем «тупаççĕ», мĕне пĕлтернине йĕркипе ыйтаççĕ вара: мĕн вăл тесе. Леш, пĕлменни, калат: вăл та пулин çавă тет. Унта хăшĕ пĕлмес, ăна вара «сутаççĕ»: арçынна пĕр килмен-кайман карчăк тавраше арăм параççĕ: сана çавă тесе; хĕрсене те çапла каччă е арçын параççĕ: сана çавă тесе. Унта вара кулаççĕ. Çавна калаç сутас тесе» [Ашмарин, 1936: 209]. Халĕ ку вăхăтсем иртнĕ, кун пек йăла хальхи пурнăçра çукпа пĕрех. Хальхи вăхăтра тупмалли юмахсене ытларах ача-пăча хушшинче калаççĕ. Ытла йывăрах мар ĕç ĕçленĕ чухне аслăраххисем хăйсене хăйсем çамрăк чух асламăшĕ, мăнаккăшĕ е аппăшĕ каланисене аса илсе кĕçĕннисене паянхи кун та тупмалли юмахсен тупсăмне туптараççĕ. Халăхра тупмалли юмахсем халĕ те тĕл пулнине юлашки çулсенчи экспедици материалĕсем те ĕнентерсе параççĕ[2].

[2] *Ермилова Е.В.* Анализ фольклорного материала экспедиции // Научный отчет по проекту «Чуваши Приволжского федерального округа». Чебоксары: ЧГИГН, 2002. С. 55—67; *Федотова (Ермилова) Е.В.* Наблюдения и предварительные выводы по материалам фольклорной экспедиции в чувашские селения Тюменской области (август 2006) // Сборник материалов научной конференции с международным участием «Немецкие исследователи на Алтае», посвященной 170-летию со дня рождения В.В. Радлова. Горно-Алтайск, 2007. С. 99—100. *Ендеров В.А.* Епле пурăнать-ши аякри тăван? Пур енлĕ экспедици материалĕсем. II пай. Шупашкар: ЧПГĂИ, 2013. С. 44. *Федотова (Ермилова) Е.В.* Устное народное творчество чувашей Присвияжья // Чуваши Присвияжья: история и культура / А.П. Васильева, А.П. Долгова, В.П. Иванов и др.; под ред. В.П. Иванова и Г.Б. Матвеева. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2015. С. 223—257.

## Тупмалли юмахсене пухни, пичетлени тата ушкăнлани

Тупмалли юмахсен пысăк пайĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕн ăслăлăх архивĕнчи Н.И. Ашмарин, Н.В. Никольский фончĕсенче упранать. Халăх сăмахлăхне пухакансем ытти жанрсемпе пĕрле тупмалли юмахсене те çырса илнĕ тата ятарласа тупмалли юмахсене хăйсене кăна пухса хатĕрленĕ ал çырусем те пур. Пухса пичете хатĕрлекенсен шутĕнче И.С. Тукташ, Н.В. Васильев[3] т. ыт. те. Ытларах чухне тупмалли юмахсене ытти жанрсемпе пĕрле пичетлесе кăларнă.

1853 çулта Хусанти университет типографийĕнче С. Михайлов-Янтушăн «Чувашские разговоры и сказки, составленные Спиридоном Михайловым, переводчиком чувашского языка»[4] кĕнеки тухать. Унта чăвашсен тупмалли юмахĕсен пайĕ те пур: «Загадки чувашския» тенĕ. Пурĕ 42 текст чăвашла-вырăсла пичетлесе кăларнă. Текстсене пухнă майăн черетпе вырнаçтарнă. Чăвашла текстсене вырăс алфавитĕнчи сас паллисемпе çырнă. Вырăсла хитре, оригинала çывăх куçарнă. Тупсăмĕсене тĕплĕн ăнлантарса панă. Вĕсене текст айĕнче вырнаçтарнă. Тĕслĕхрен: «Ашшĕ чăмăр, амăшĕ лаптак, хĕрĕ хитре, ывăлĕ ухмах. Топă: *ашшĕ авăн йуççи, амăш — итем, хĕрĕ — шăпăр, ывăлĕ — çапоççи.* (Отец толст, мать гладка, дочь красива, сын дурак. Отгадка: отец — овинный шиш, мать — ток на гумне, дочь — метла, сын — цеп). Текстсене Чикме тăрăхĕнче, тури чăвашсем хушшинче çырса илнĕ.

И.Я. Яковлев ертсе пынипе 1872 çултан пуçласа 1918 çулччен тухса пынă «Чăваш букварĕнче»[5] халăх сăмахлăхĕн ытти тексчĕсемпе пĕрле тупмалли юмахсем пичетленнĕ.

Н.И. Золотницкийĕн 1875 çулта тухнă «Корневой чувашско-русский словарь» кĕнекинче те тупмалли юмах тĕслĕхĕсем пур [Золотницкий, 1875: 156—157].

1888 çулта тупмалли юмахсем В.К. Магницкин Хусанта тухнă «Нравы и обычаи в Чебоксарском уезде. Этнографический сборник»[6] кĕнекинче те пур.

1907 çулта Хусанта И.Н. Юркин «Юмахсем» (Загадки) кĕнеке кăларнă[7]. Унта пурĕ 134 тупмалли юмах кĕнĕ. Тупмалли юмах тексчĕ мĕнле сас паллирен пуçланать — çав сас палли тăрăх вырнаçтарнă. Тупсăмне текст хыççăн юнашар панă. Сăмахран: «Асаттенĕн аллă арча Турă панă вир пĕрчи? — Вĕлле хурчĕ».

---

[3] Н.В. Васильев 1950—1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. III. 417—420.

[4] *Михайлов С.М.* Чувашские разговоры и сказки. Казань: В университетской типографии, 1853. 62 с.

[5] И.Я. Яковлев букварĕсене тата ытти вĕренӳ кĕнекисене 2008 çулта икĕ томпа репринтлă издани кăларнă. *Яковлев И.Я.* Учебные книги: в 2 т. Т. I / сост. Л.П. Кураков, Н.Г. Краснов, Г.Н. Плечов; предисл. Н.Г. Краснова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. 538 с.; *Яковлев И.Я.* Учебные книги: в 2 т. Т. II / сост. Л.П. Кураков, Н.Г. Краснов, Г.Н. Плечов; предисл. Н.Г. Краснова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. 510 с.

[6] *Магницкий В.К.* Нравы и обычаи в Чебоксарском уезде. Этнографический сборник. Казань: Типография Губернского Правления, 1888. С. 48—51.

[7] *Юркин И.Н.* Юмахсем. (Загадки). Казань: Типо-литография И.В. Ермолаевой (бывш. Ключникова), 1907. 16 с. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕн ăслăлăх библиотекинче упранать.

Кĕнеке вĕçĕнче «Кĕнеке кăларакантан» пай пур. Унта И.Н. Юркин вулакансем патне çакăн пек ыйтса çырнă: «Çак кĕнекене кĕмен юмахсем тĕл пулсан вĕсене çырса илсе ман патма яма тăрăшăр. Тепĕр хут станпа пуçтарса кăларнă чухне вĕсене те çакăнта шăнăçтарăпăр. Юмахсене пуçтарма пулăшнă çынсене пурне те тавтапуç тетĕп». Кĕнекери тупмалли юмахсенче Сĕве тăрăхĕнчи ял ячĕсем те тĕл пулаççĕ: «Аслă Кашаран Кĕçĕн Кашана туй килет. — Кăвар», «Çĕнĕ Мертлĕре архерей юрлать. — Чан çапни», «Çĕнĕ Мертлĕре çитмĕл кукша. — Куршанкă». Ытти тăрăхра çырса илмен, тĕл пулман текстсем те пурри кĕнекен пысăк пахалăхне кăтартать. Тупмалли юмахсенче халĕ усă курман, кивелнĕ, ĕлĕкхи ĕçе кăтартакан е ĕçленĕ чухне усă курнă сăмахсем упранса юлнă. Акă, сăмахран, «Пĕр шӳпкенĕн тăвату куç. — Хивсе». *Хивсе* — пир тĕртмелли станокăн пайĕ, тĕртнĕ пире хивсе çумне чĕркенĕ. Халь пир тĕртекен çукпа пĕрех, сăмахĕпе те питех усă курмастпăр. «Хивсе» сăмахăн пĕлтерĕшне пĕлекен те питĕ сайра. Эппин, тупмалли юмахсенче халăхăн кун-çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ упранса юлнă теме пулать. Тупмалли юмахсене И.Н. Юркин хăй çуралса ӳснĕ тăрăхра — Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Пӳркелте тата таврари ялсенче пухни уççăнах курăнать: текстсенче вырăнти калаçу формисем, диалект сăмахĕсем, Сĕве тăрăхĕнчи ял ячĕсем сыхланса юлнă.

1906—1908 çулсенче Венгри тĕпчевçи Дюла Месарош Хусан тата Чĕмпĕр кĕпĕрнисенчи чăваш ялĕсенче халăх сăмахлăхне пухнă, çав шутра тупмалли юмахсем те çырса илнĕ. Чăваш халăх сăмахлăхĕн пуххине вăл 1912 çулта Будапештра икĕ чĕлхепе — чăвашла тата венгрла — пичетлесе кăларнă. Унта ваттисен сăмахĕсем, юрăсем, юмахсем, 205 тупмалли юмах кĕнĕ[8]. Д. Месарош тупмалли юмахсен тексчĕсене мĕнле сас паллирен пуçланать, çав сас палли тăрăх алфавитпа вырнаçтарнă. Д. Месарош çырса илнĕ тупмалли юмахсенче те питĕ сайра тĕл пулакан сăмахсем тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, *«Мамин кочĕ мамăклă, кинемин кочĕ кирĕклĕ» (серетепе пăтолок). Серете* — урай; *«Хĕлле те, çулла та пĕр пелетĕш» (чăршă). Пелетĕш* — чечек; *«Асаттен усăннă, асаннен пĕрĕннĕ» (темех енчĕкĕ). Темех* — тапак. Е тата: *«Кĕтӳçĕ час-час корать, патша сайра корать, торă нихçан та коримас»* теекен тупмалли юмах Д. Месарош çырса илнĕ тĕслĕхсенче кăна тĕл пулать[9]. Унăн пĕлтерĕшĕ çакăн пек: *«Кĕтӳçĕ кĕтӳçĕне час-час корать, патша патшана сайрах корать, торă хăйĕн пек торăна нихçан та коримас»*.

Н.И. Ашмарин тупмалли юмахсен тексчĕсене нумай пуçтарнă, ун патне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тата ытти тĕрлĕ шкулсенче вĕренекенсем тупмалли юмахсем ярса панă[10], вĕсене вăл «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине»[11] чылай кĕртнĕ, тĕпчев ĕçĕсенче усă курнă[12]. Н.И. Ашмарин патне ярса панă

[8] Gsuvas nerköltesi gyüjtemeny, II kötet. Gyutötte es feldolgosta d-r Meszaros Gyula. Budapest, 1912. (Чăваш халăх сăмахлăхĕ. II т. Д. Месарош пухса хатĕрленĕ. Будапешт, 1912. 540 с.)

[9] Gsuvas nerköltesi gyüjtemeny, II kötet. Gyutötte es feldolgosta d-r Meszaros Gyula. Budapest, 1912. (Чăваш халăх сăмахлăхĕ. II т. Д. Месарош пухса хатĕрленĕ. Будапешт, 1912.) № 65. С. 36.

[10] Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тата тĕрлĕ шкулсенче вĕренекенсем 1900—1901 çулсенче Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 7; Тĕрлĕ ялсенчен Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. I. 807, 808; I. 24.

[11] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Словарь чувашского языка. Вып. I—XVII. Казань — Чебоксары, 1928—1950.

[12] *Ашмарин Н.И.* Опыт исследования чувашского синтаксиса. Ч. I. Казань: Типо-литография В.М. Ключникова, 1903. 570 с.

фольклор материалĕсем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранаççĕ. Текстсене 1883—1884 çулсенче çырса илни, пухха ĕлĕкхи текстсем кĕни материал пахалăхне ÿстереççĕ. Каярахри пухăсенче тĕл пулман текстсем сыхланса юлнă унта. Тĕслĕхрен: «Чашăк айĕнче чакак макрать» (лаша ури айĕнчи юр); «Шу-шу çĕлен, кăлтăртин яр, янтă кăна çеклĕ» (пусăран шыв ăсни)[13]; «Хун хĕрĕ хура кĕççе çинче ларать» (йĕтем юпи); «Вупăрлă карчăкăн кăвапинчен туртатăп» (çăм арлани)[14] т. ыт. те. *Хун хĕрĕ* тенинче хун (хан) вăхăтĕнчи самана ÿкерĕнсе юлнине куратпăр. *Вупăрлă карчăк* — чăваш мифологийĕн персонажĕ.

Тупмалли юмахсен тексчĕсем «Сунтал», «Хатĕр пул» журналсенче те пичетленсе тухнă[15].

1936—1940 çулсенче И.С. Тукташ ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсене пухса пичете хатĕрленĕ[16]. Тупмалли юмахсене вăл та, И.Н. Юркин пек, алфавит йĕркипе вырнаçтарнă. Пурĕ 450 текст. Вĕсен ытларах пайне литература чĕлхипе çырни куçкĕрет. Ĕçĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранать.

1941 çулта «Илемлĕ литература» альманахăн 7-мĕш кĕнеки тухнă[17]. Унта Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ таврашĕнче М. Нямань (Юрьев) пухнă тупмалли юмахсем 76 текст пичетленсе тухнă. Текстсене пухнă майăн мĕнле çырса пынă, çавăн пек пичетленĕ, ушкăнлама тĕллев лартман. Апла пулин те текстсене çырса илни, кĕнекере пичетлесе кăларни, чăваш халăх сăмахлăхне вырăна хуни, упраса хăварма тăрăшни паха. М. Нямань пухнă тупмалли юмахсем хушшинче ытти источниксенче тĕл пулаканнисемпе пĕрлех хăйне евĕрлĕ, урăх тĕл пулман текстсем те пур.

1946 çулта И.Д. Никитин-Юркки 356 тупмалли юмах пухса йĕркеленĕ. Тупмалли юмахсен тексчĕ мĕнле сас паллирен пуçланать, çав сас паллипе ушкăнланă[18].

1949 çулта И.С. Тукташ хатĕрленĕ «Чăваш фольклорĕ»[19] кĕнеке тухать. Унта сутмалли юмахсем те кĕнĕ. Вĕсене тĕпрен илсен темăсем тăрăх вырнаçтарнă. Тĕслĕхрен: «Çут çанталăк», «Культура. Пурнăçри явленисем», «Ĕç хатĕрĕсем», «Кил-çурт, кил-çурт таврашĕ», «Тыр-пулсем, пахча çимĕçĕсем», «Чĕр чунсем». Çак ушкăнсенче И.Н. Юркин 1902—1910 çулсенче пухнă (88 текст) тата И.А. Патмар сборникĕнчен[20] илнĕ тупмалли юмахсем вырăн тупнă. М.В. Васильевăран çырса илнĕ сутмалли юмахсем (29 текст) уйрăм пай йышăннă. Пурĕ 117 текст. Вĕсене литература

[13] 1884 çулта Е. Христофоров Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 28. С. 687.

[14] Çавăнтах. С. 693.

[15] Сутмалли юмахсем. Маль пухса çырнă (15 текст), Аттай пуçтарнă (8 текст) // Сунтал. 1926. № 5—6. С. 32; Ваттисен сăмахĕсем. Тупмалли юмахсем. Силиверстов-Актай (пухнă) (9 текст) // Хатĕр пул. 1940. 2 №. С. 21; Тупмалли юмахсем. Н. Синдимиров пухнă (10 текст) // Хатĕр пул. 1940. 9 №. С. 17 т. ыт. те.

[16] И.С. Тукташ 1936—1940 çулсенче пичете хатĕрленĕ ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 120. 1—28 л.

[17] *Нямань М.* Тупмалли юмахсем / Илемлĕ литература. Альманах. № 7. Шупашкар: Госиздат ЧАССР, 1941. С. 101—102.

[18] И.Д. Никитин-Юркки 1946 çулта пухса йĕркеленĕ тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 379. С. 340—365.

[19] Чăваш фольклорĕ / И. Тукташ хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1949. 328 с.

[20] Çавăнтах. С. 156—160.

чĕлхипе çырнă. Хăш-пĕр сăмахсен калаçу формине сыхласа хăварса пичетленĕ (Аçтăркан, тватă т. ыт. те).

1949 çулта Хельсинкире Х. Паасонен пухса хатĕрленĕ «Чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе поэзийĕ» кĕнеке тухать. Унта тупмалли юмахсем те кĕнĕ. Вĕсене «Юмахсем» тесе палăртнă, мĕнпурĕ 154 текст кĕнĕ[21]. Текстсене малтанхи сас палли тăрăх — мĕнле сас паллирен пуçланать, çавна пăхса алфавитпа вырнаçтарнă.

1950 çулта Шупашкарта В. Долгов пухса йĕркеленĕ «Ваттисем çапла калаççĕ. Ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем»[22] ятлă кĕнеке тухнă. Кĕнекере пурĕ 243 тупмалли юмах, вĕсене тупписен пĕлтерĕшĕ тăрăх ушкăнланă; сăмахран, «Çут çанталăк» ушкăнра 46 тупмалли юмах тексчĕ, «Йывăç-курăк» ушкăнра — 38 т. ыт. те. 1957 çулта В. Долгов хушса юсанă иккĕмĕш кăларăм тухать, вăл «Юмах ярăп, юптарăп»[23] ятлă. Унта тупмалли (сутмалли) юмахсем пичетленсе тухнă. Текстсене тĕпрен илсен малтанхи кĕнекинчи пекех ушкăнланă. Пурĕ 497 текст. 1950 çулта тухнă кĕнекере те, кунта та текстсене ăçтан çырса илнине кăтартман пулин те хăй вăхăчĕшĕн вăл ĕçсем питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнă. Кĕнекесен ум сăмах пайĕ те пур.

Чăвашсен тупмалли юмахĕсенче ытларах ял пурнăçĕ, хресчен пурнăçĕпе йăлисем, ял хуçалăхĕнчи ĕç хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх, тыр-пул, йывăç-курăк, пахча çимĕç çинчен калаканнисем тĕл пулаççĕ. Çав шутра ĕç хатĕрĕсем: плуг (тимĕр ака пуç), сӳре, çурла т. ыт. те; тырă-пулă: тулă, ыраш, сĕлĕ, урпа, пăри, вир, хура тул, пăрçа, ясмăк; выльăх-чĕрлĕх: лаша, ĕне, сурăх, качака, сысна т. ыт. те. Çаксем çумне тупмалли юмахсенче палăракан ĕçсемпе йăласене хушсан вĕсем халăхăн кулленхи пурнăçне туллин кăтартса пани уççăн курăнать. Тупмалли юмахсем тăрăх халăх хăш вырăнта пурăннине те пĕлме пулать.

Вулакансем валли асăрхаттару пайĕ те пур: «...Ку кĕнекере пĕр япалана е пулăма пĕлтерекен юмахсем икшер те виçшер тĕл пулаççĕ (ун пек çĕрте иккĕмĕшпе виççĕмĕшне * паллăпа асăрхаттарнă)».

Н.В. Васильев (Ытарай) та тупмалли юмахсен ал çырăвне темăсем тăрăх ушкăнланă: çут çанталăк — çут тĕнчелĕх, çĕр — çут çанталăк, вăхăт — виçе, халăх — этем, ată-пушмак, çемье — пурнăç, пура — пӳрт, кил — çурт ăш-чикĕ, хăйчикки — электричество, кăмака — вучах, хуçалăх — ăсталăх, ака — авăн, кантăр — çĕлев, вырăн — тумтир, апат-çимĕç, савăт-сапа, хатĕр-хĕтĕр, анкарти — пахча, тапак — хăмла, утар — сувар, кăмпа — курăк, улăх — утă, вăрман — йывăç, чĕр чун — ĕрчун, кайăк-кĕшĕк, хурт-кăпшанкă, выльăх-чĕрлĕх, çул — транспорт, вĕренӳ — культура, укçа-тенкĕ, вăрçă-харçă, патша — турă, тĕрлĕ-мерлĕ, хушăмлăхсем[24]. Н.В. Васильев материала хăй Хусанта пурăннă чухне кĕнеке кăларас тесе 4 пысăк ал çыру хатĕрленĕ, машинкăпа çапнă, ум сăмах та çырнă, Шу-

[21] *Паасонен Х.* Gebräuche und Volksdichtung der Tschuwassen. Gesammelt von Heikki Paasonen. Herausgegeben von Eino Karanka und Martti Räsänen. Helsinki, 1949 (Чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе поэзийĕ. Х. Паасонен пухса хатĕрленĕ. Хельсинки, 1949). С. 93—106.

[22] Ваттисем çапла калаççĕ. Ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем / В. Долгов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1950. 78 с.

[23] Юмах ярăп, юптарăп / В. Долгов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1957. 92 с.

[24] Н.В. Васильев 1950—1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. III. 417—420.

пашкара тĕпчев институтне ярса панă. Ку ĕç ЧПГĂИ ăслăлăх архивĕнче упранать. Пухакан хăйĕн ĕçне нумай материал кĕртнĕ, вĕсем тытăмĕ енчен пуян. Унта Н.В. Васильев тĕрлĕ çынсенчен хăй çырса илнисем, ăна çынсем çырса панисем тата ЧПГĂИ ăслăлăх архивĕнчи ал çырусенчен (шел, пур çĕрте те фонд номерне кăтартман) илнĕ материалсем, халиччен кĕнекесенче пичетленсе тухнă текстсем кĕнĕ.

1960 çулта Шупашкарта Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ «Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем» кĕнеке кун çути курнă[25]. Пухса йĕркелекен материала 35 çул хушши тĕпченĕ — 1924—1959 çулсенче. Кĕнекери текстсем икĕ чĕлхепе тухнă: чăвашла тата вырăсла куçарни те пур. Ку питĕ пĕлтерĕшлĕ. Чăваш халăхĕн тупмалли юмахĕсене вырăсла пĕлекен пур халăх та вуласа пĕлме пултарать. Чăвашсен тупмалли юмахĕсем çумне ытти халăхсен (белорус, латыш, уйгур, хакас, якут, ирçе, удмурт, эвенк, каракалпак т. ыт. те) фольклорĕнче çӳрекен эквивалентсене те хушса пама тăрăшнă. Н.Р. Романов тупмалли юмахсен пайне «Сутмалли юмахсем» тесе палăртнă. Текстсене темăсем тăрăх 12 пая пайланă: I. Этем. Человек; II. Пӳрт-çурт. Строения; III. Хатĕрсем, килти япаласем т. ыт. те. Кĕнекене 1700 ытла текст кĕнĕ[26]. Н.Р. Романов ют çĕршыв тĕпчевçисен (Д. Месарош, Х. Паасонен) ĕçĕсемпе те усă курнă, вĕсем чăвашсенчен çырса илнĕ тупмалли юмахсене хăйĕн кĕнекине кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, Х. Паасонен кĕнекинчен илнĕ «Урай варринче йĕс пукан ларать (Посреди пола стоит медный стул)[27] (кăкăр шăмми). Кун пек тĕслĕх урăх упранса юлман. Пухса хатĕрлекен текстсене ăçтан илнине пурне те кăтартнă. Источник кăтартман текстсене Н.Р. Романов 1924—1958 çулсенче хăй пуçтарнă, чăваш çыннисенчен ыйтса çырса илнĕ, Чăваш Ен районĕсенче вăл нумай хутчен пулнă. «Составительтен» пайра пухса йĕркелекен ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсен халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне, ытти халăхсеннипе танлаштарнине, хăйĕн ĕçĕн меслетне ăнлантарса панă, текстсене малашне те пухмалла иккенне палăртнă. Кĕнекере «Усă курнă кĕнекесемпе ал çырусем», «Каларăшсенчи тĕп сăмахсемпе сутмалли юмахсен тупписене кăтартни», «Кĕнекере усă курнă илемлĕ произведени авторĕсен ячĕсем» пур. Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ кĕнеке паянхи куна та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Ахальтен мар ĕнтĕ 2004 çулта ку кĕнекен 2-мĕш, 2012 çулта 3-мĕш кăларăмĕсем тухнă.

Тупмалли юмахсен чылай тулли пуххи 1984 çулта «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем» кĕнекере тухать[28]. Унта ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем кĕнĕ. Пухса хатĕрлекенĕсем — Е.С. Сидоровăпа, В.А. Ендеров. Тупмалли юмахсем пурĕ 3214 текст. Кашни текстăн хăйĕн номерĕ пур. Кĕнекере текстсене талккăшпе, витĕр (сплошь) номерленĕ. Текстсене çак темăсем тăрăх ушкăнланă: «Çут çанталăкри пулăмсем», «Йывăç-курăк», «Пахча çимĕç», «Тыр-

[25] Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем / Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ. Шупашкар: Чăваш АССР гос-во изд-ви, 1960. 360 с.

[26] Çавăнтах. С. 191—333.

[27] Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем. Чувашские пословицы, поговорки и загадки / Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ. 2-мĕш кăларăм. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. С. 185.

[28] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Вак жанрсем / пухса хатĕрлекенĕсем Е.С. Сидорова, В.А. Ендеров. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. 352 с.

пул», «Тискер чĕр чунсем», «Кайăк-кĕшĕкпе шыври чĕр чунсем», «Хурт-кăпшанкă», «Килти чĕр чунсем», «Этем», «Çи-пуç», «Ĕçме-çиме», «Çурт-йĕр», «Хуçалăхри хатĕр-хĕтĕр», «Ĕç-хĕл», «Тĕрлĕрен». Чи нумай текст хуçалăхри хатĕр-хĕтĕрпе (809), çут çанталăкри пулăмсемпе (666), ĕç-хĕлпе (243) çыхăннă. Текстсене ăçтан, камран çырса илнине май килнĕ таран туллин çырса пама тăрăшнă. Тома хатĕрленĕ чухне хальччен пуçтарнă, пичетленсе тухнă текстсене шута илнĕ. Çав шутра Е.С. Сидорова хăй 1969—1980 çулсенче тĕрлĕ çĕрте çырса илнĕ тупмалли юмахсем те кĕнĕ. Кĕнекере ум сăмахĕ, асăрхаттарусем: кĕскетнĕ ятсем, ăнлантарусем, сайра тĕл пулакан сăмахсем, библиографи, тупмалли юмахсен тупсăмĕсен кăтартмăшĕ — пур. Кĕнеке вăтăр çул каялла тухнă пулин те чăваш халăхĕн тупмалли юмахĕсен çакăн пек тулли пуххи паянхи куна урăх çук.

1993 çулта Канаш хулинче И.А. Патмар пухнă «Тупмалли юмахсем» кĕнеке тухнă[29]. Текстсене çак темăсем тăрăх вырнаçтарнă: «Çут çанталăк», «Çут çанталăк паллисем», «Вăхăт, пурнăç тата вилĕм», «Çи-пуç», «Пир-авăр, сӳс-кантăр», «Пӳрт-çурт». Кĕнекере пурĕ 1145 текст. Текстсене хăш ялта, районта çырса илнине кăтартнă.

2007 çулта Шупашкарта И.А. Патмар, Э.И. Патмар, С.Э. Патмар хатĕрленĕ «Тупмалли юмахсем» кĕнеке кун çути курнă[30]. Унта пурĕ 3174 текст. Тупмалли юмахсене тупсăмĕсем тăрăх, тупсăмĕсене алфавитпа вырнаçтарнă. Хăш тупмалли юмах ăçта вырнаçнине алфавитпа кăтартни пур. Вулакан кирлĕ текста çăмăллăнах тупма пултарать. Шел пулин те, текстсене ăçтан илнине кăтартман.

Çапла вара кашни кĕнеке тухмассерен тупмалли юмах тексчĕсен шучĕ ӳссе пыни курăнать. 1853 çулта С. Михайлов кăларнă кĕнекере тупмалли юмахсен тексчĕсене пухнă, çырса пынă майăн вырнаçтарнă. 1907 çулта тухнă И.Н. Юркин хатĕрленĕ «Юмахсем», Д. Месарош 1912 çулта Будапештра кăларнă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, юрăсем, юмахсем», Х. Паасонен 1949 çулта Хельсинкире кăларнă «Чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе поэзийĕ» кĕнекесенче, И.С. Тукташ пичете хатĕрленĕ текстсене, И.Д. Никитин-Юркки йĕркеленĕ тупмалли юмахсене пуçламăш сас паллипе вырнаçтарнă пулсан, каярахри кăларăмсенче (В.А. Долгов, Н.Р. Романов, Е.С. Сидорова, В.А. Ендеров т. ыт. те) тупмалли юмахсене темăсем тăрăх ушкăнланă.

Тупмалли юмахсене тупсăмĕсем тăрăх алфавитпа вырнаçтарас мелпе вырăс тĕпчевçи И.А. Худяков усă курнă, 1861 çулта вăл «Великорусские загадки» кĕнеке кăларнă. Унта пурĕ 731 тупмалли юмах кĕнĕ.

1984 çулта Болгари çĕршывĕнче «Болгарские народные загадки» («Болгарски народни гатанки». София, 1984) пичетленсе тухнă. Пухса хатĕрлекенĕ Стефан Стойков. Вăл та кĕнекери тупмалли юмахсене çак мелпе усă курса вырнаçтарнă.

И.А. Худяков, С. Стойков тĕпчевçĕсен ĕçĕсене тĕпе хурса «Чăваш халăх пултарулăхĕ. Тупмалли юмахсем» кĕнекери тупмалли юмахсене те тупсăмĕсем тăрăх алфавитпа вырнаçтарнă. Текстсене кун пек йĕркеленин

---

[29] *Патмар И.А.* Тупмалли юмахсем (1929—1975 çулсенче И.А. Патмар çырса илнĕ-пухнă сутмалли-тупмалли юмахсем). Канаш, 1993. 151 с.

[30] *Патмар И.А., Патмар Э.И., Патмар С.Э.* Тупмалли юмахсем. 1 том. Шупашкар: Çĕнĕ Вăхăт, 2007. 208 с.

сăлтавĕ: чи пĕрремĕшĕнчен, тупма çăмăл. Пĕр пулăмпа, пĕр япалапа çыхăннисем тĕпрен илсен пĕр çĕрте — çапла май вĕсем хăйсемех ушкăнланса пыраççĕ. Тĕслĕхрен: пӳрт, пӳрт кĕтесĕ (*вар.:* пӳрт кĕтесси, пӳрт кĕтессисем), пӳрт мăкĕ, пӳрт мăклани, пӳрт пĕрени, пӳрт тăрри, пӳрт улăхтарни — пӳртпе çыхăннисем пурте пĕрле. Темăпа уйăрнă пулсан пӳрт — çурт-йĕр патĕнче, пӳрт мăклани, пӳрт улăхтарни — ĕç-хĕл ушкăнĕнче пулмаллаччĕ. Капла вĕсем пĕр çĕрте — юнашарах тăраççĕ. Вулакан хăйне кирлине çăмăллăнах тупма пултарать.

## Тупмалли юмахсене тĕпчени

Н.И. Ашмарин «Введение в курс чувашской народной словесности» (1923) [Ашмарин, 1984: 3—48] ĕçĕнче тупмалли юмахсене те тишкерет. Чăвашсен тупмалли юмахĕсем аваллăх палăкĕсем пулнине кăтартать. Тупмалли юмахсен çемми авалхи чĕлхен тасалăхне упраса хăварнă, ку тĕлĕшĕнчен вĕсем чăваш сăвă хывăмне тĕпчеме паха материал тесе çырать. Н.И. Ашмарин тупмалли юмахсенче хун (хан) хĕрĕ тени тĕл пулни ку тĕслĕх авалхисен шутне, хун (хан) вăхăтĕнчех пулса кайнисем патне кĕрет тесе палăртать. Тепĕр тĕслĕх илсе парать: «Услан кайăк [лев], «услан» тени хальхи вăхăтра (1923 çул) манăçăннă, ку сăмахпа калаçу чĕлхинче усă курмаççĕ, анчах тупмалли юмахра çак сăмах тĕл пулать. Каярах чăвашсем хăйсен пурнăçĕнче татах вырăссем «лев» теекен чĕр чуна пĕлеççĕ те «арăслан» е «левăх» теме пуçлаççĕ». Тĕпчевçĕ тупмалли юмахсенче кивелнĕ, хальхи вăхăтра усă курман сăмахсем тĕл пулнине пусăмласа калать, тупмалли юмахсене çырса илнĕ чух питĕ асăрханса ĕçлемеллине, ăнланмалла мар сăмахсене çаплах çырмалла, ăнланмалла пултăр тесе сăмаха улăштарса çырмалла мар тесе сĕнет.

Н.Р. Романовăн «Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем» кĕнекесĕр пуçне тупмалли юмахсене халалланă тата тепĕр пысăк ĕçĕ пур — 1962 çулта унăн «О чувашских загадках» тĕпчев ĕçĕ тухать [Романов, 1962]. Унта вăл тупмалли юмахсене пур енлĕн тĕпчет. Тĕпчевçĕ пухакансем улт çĕр ытла текст пухнине, вариантсене шута илсен вĕсен шучĕ виçĕ пинтен те иртсе кайнине, хальччен тĕпчевçĕсем чăвашсен тупмалли юмахĕсен репертуарне те, поэтика формисене те тĕпчеменнине палăртать. Чăвашсен тупмалли юмахĕсем нумайăшĕ ял хуçалăх ĕçĕпе, хĕрарăм пурнăçлакан ĕçпе çыхăннине кăтартать. Вĕсем ытларах хĕрарăмсен пултарулăхĕ пулнине, чăваш хĕрарăмĕсен тупмалли юмахĕсем илемлĕ иккенне, вĕсенче çивĕч ăс-тăн курăннине пусăмласа калать.

Н.Р. Романов хĕрарăмсен тупмалли юмахĕсене виçĕ пая пайлать, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать: 1) çип арланипе, пир тĕртнипе; 2) апат хатĕрленипе; 3) кашни кунхи, вак-тĕвек, курăнман ĕçпе çыхăннисем. Тĕпчевçĕпе килĕшмесĕр тăма ниепле те май çук. Халĕ те тупмалли юмахсене ытларах чухне хĕрарăмсем астăваççĕ, хăйсен ачисене, ачин ачисене калаççĕ.

Тĕпчевçĕ чăваш халăх тупмалли юмахĕсен ытти халăхсеннипе пĕрпеклĕхĕ пуррине тĕслĕхсемпе кăтартать. «Шел пулин те, тĕрĕк халăхĕсен сăмахлăхне танлаштаруллă тĕпчемен», — тесе палăртать. Н.Р. Романов чăвашсен чылай тупмалли юмахĕ аллитераци тата ассонанс мелĕпе

пулса кайнине, вĕсенчен ытларахăшĕ ĕç процесĕпе çыхăннине каланă; хăш-пĕр тĕслĕхсем, историпе çыхăннисем, хăш тапхăрта пулса кайнине палăртнă.

1978 çулта Н.И. Егоров «Пионер сасси» хаçатра «Пĕлмесен хам калăп...» ятпа тупмалли юмахсем çинчен статья кăларать. Ăна вăл шкул ачисем валли çырнă. Тупмалли юмахсене хăçан, епле калани, «сутни» çинчен ăнлантарнă. Вĕсем çынна пысăк усă кӳнине палăртнă, ыраш пĕрчин пурнăçĕ çинчен илемлĕ юмах тĕслĕх вырăнне илсе панă: «Тупмалли юмахсем, илемлĕ сăнарсемпе илĕрте-илĕртех, çут çанталăкпа йĕритавралăх çинчен тĕрĕс пĕлӳсем илме те пулăшаççĕ. Ыраш пирки хывнă юмахăн тупсăмне пĕлес тесен, калăпăр, çаксене асра тытмалла: «ик эрнерен çуралать» (аксассăн икĕ эрнерен шăтать), «сакăр эрне сăпкара выртать» (кĕрхи калчара), «çирĕм пилĕк эрне кипкере çывăрать» (юр айĕнче хĕл каçать), «тăватă эрне ӳсет», «икĕ эрне савăнать» (шăркана ларать), «икĕ эрне самăрлать» (пучах тулать), «икĕ эрне саралать» (тĕшши пиçет), «çулталăкра çаврăнать» (вырса çапса илсен каллех пĕрчĕ пулса тăрать)» [Егоров, 1978: 3]. Автор ачасене тупмалли юмахсем халăхран çырса илсе е хăйсем шухăшласа кăларса хаçата е тĕпчев институчĕн адресĕпе ярса пама сĕннĕ. «Эсир хайланă е халăхран çырса илнĕ тупмалли юмахсем хаçатра пичетленейменшĕн пăшăрханма кирлĕ мар. Сирĕн çырусем паянхи ача-пăча пурнăçĕнче тупмалли юмах мĕн таран сарăлнине, мĕнле вырăн йышăннине тĕпчесе пĕлме нумай пулăшаççĕ. Сирĕн ăс-тăна та нумай çивĕчлетеççĕ, вĕсем шухăша аталанма пулăшаççĕ», — тенĕ тĕпчевçĕ ачасене хавхалантарса.

1984 çулта Е.С. Сидоровăпа В.А. Ендеров «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем» (V том) кĕнеке хатĕрлесе кăлараççĕ, унăн ум сăмахĕнче тупмалли юмахсене тарăннăн тишкернĕ [Сидорова, Ендеров, 1984].

1989 çулта В.С. Чекушкинăн «Пытаннă сăнарлăх» (Чăвашсен уçăмсăр текстлă тупмалли юмахĕсене тутарла вуласа пăхни) тĕпчев ĕçĕ тухать [Чекушкин, 1989: 46—59]. Унта вăл чăвашсен ăнланмалла мар сăмахлă тупмалли юмахĕсене тутарла вуласа пăхса, тутарлисемпе танлаштарса, тутарла текстсене чăвашла куçарса тарăн тĕпчет. Тутар чĕлхи урлă пĕлтерĕшне уçмалли юмахсен шучĕ çĕртен те иртет тесе палăртать.

2004 çулта В.А. Ендеров «О проблемах классификации чувашских паремий» тĕпчев ĕçĕ çырать [Ендеров, 2004: 245—254]. Унта вăл вак жанрсене, çав шутра тупмалли юмахсене те, мĕнле ушкăнлассине тишкерет, хăйĕн классификацине сĕнет. Тупмалли юмахсене вăл шалти тытăмне тĕпе хурса, унăн функцийĕсен тĕсĕсене шута илсе классификациленĕ. Тупмалли юмахсене тĕпчевçĕ çакăн пек ушкăнсене уйăрать: 1. Тупмалли юмахсем — юптарусем, ытарлă сăмахпа каланисем (загадки-иносказания): *«Кăмака айĕнче тимĕр туя выртĕ» (çĕлен)*. 2. Тупмалли юмахсем — каласа панисем (загадки-описания) ĕç пулса иртнин пĕтĕм процесне кăтартаççĕ:

*Утрăм-утрăм, улма тупрăм,*
*Улталарăм — кĕмĕл тупрăм.*
*Элчĕ килчĕ — парне пачĕ,*
*Хутаç кĕрӳ ташша ячĕ,*
*Енчĕк кĕрӳ çуппа пачĕ (пир тĕртни).*

3. Тупмалли юмахсем — диалогсем (загадки-диалоги) сайра тěл пулаççě:

*— Ăçта каян, икě ура?*
*— Тватă урана шырама.*
*— Ăçта каян, тватă ура?*
*— Ултă урана шырама.*
*— Ăçта каян, ултă ура?*
*— Выртнă упана вăратма (çын, лаша, çуна, улăм ури).*

4. Тупмалли юмахсем — ыйтусем (загадки-вопросы): *«Çут тěнчере мěн мăнтăр?» (çěр).* 5. Тупмалли юмахсем — числосем (загадки-числа): «*Çичě тăванăн пěр йăмăк» (эрне).* 6. Тупмалли юмахсем — чěнӳ (загадки-обращения): *«Ай-уй! Ан тивех, ӳкетěп!» (пас).* 7. Тупмалли юмахсем — юрăсем (загадки-песни):

*Яра пар, яра пар,*
*Ярапине хама пар,*
*Ялсем çине, хирсем çине,*
*Янкăр пичче, парне пар (çумăр).*

8. Тупмалли юмахсем — евěрлев сăмахěсем (загадки-звукоподражания) ытларах ěçпе, ěç хатěрěсемпе çыхăннă: *«Ир те чак-чак! Каç та чак-чак! Варри вак-вак!» (пăри тӳни).*

Кашни классификаци хăйěн тěллевне кура лайăх. Вырăс тěпчевçи В.В. Митрофанова та 1968 çулта тухнă ěçěнче тупмалли юмахсем тěрлисем пулнине, вěсене мěнле ушкăна пайлассине тишкернě [Митрофанова, 1968: 5—17]. Вăл текстсене пилěк ушкăна пайланă: 1) кěске тупмалли юмахсем, вěсем пěр-ик пěрпеклěхрен кăна тăраççě; 2) тупмалли юмахсем — калавсем (загадки-повествования) калăпăшěпе пысăкрах, вěсем ытларах япалана мěнле хатěрленине, кайран унпа пурнăçра мěнле усă курнине каласа кăтартаççě; 3) тупмалли юмахсем — ыйтусем — тупмалли юмахсен чи авалхи тěсěсем тенě; 4) шӳтлě ыйтусем; 5) алфавитри сас паллисем çинчен ыйтнă ыйтусене уйрăм кěртмелле, анчах хальлěхе ун пек пухă çуккипе çухалса пěтесрен вěсене тупмалли юмахсем патнех кěртрěмěр тенě. Пирěн те, чăвашсен, ун пек тěслěхсем пур, хальлěхе урăх пухă çуккипе вěсене тупмалли юмахсем патнех кěртрěмěр. Мěншěн тесен вěсем те ăс-тăна çивěчлетме, ача-пăчана шухăшлама вěрентеççě. В.А. Ендеров тěпчевě тăрăх, чăвашсен тупмалли юмахěсем тата ытларах ушкăнсене пайланнине, чăваш чěлхи евěрлев сăмахěсемпе пуяннине, тупмалли юмахсем вěсенчен тăнине куратпăр. Тупмалли юмахсем — диалогсем, тупмалли юмахсем — чěнӳсем те пуррине палăртмалла. Ку вăл хăйне уйрăм тěпчев ěçě пулмалла.

2003 çулта тěрěк тěпчевçи Фейзи Эрсой (Ersoy) тěрěк ăслайěсен «Turkiyat Arastirmalari Dergisi» журналěнче «Чăвашсен тупмалли юмахěсем» / «Çuvas bilmeceleri» тěпчев ěçě пичетлесе кăларать [Ersoy, 2003: 367—379]. Хăйěн ěçěнче вăл чăвашсен тупмалли юмахěсен уйрăмлăхěсем (идиоэтнические особенности) çинчен çырса кăтартнă [Дегтярев, 2011: 280]. Пурě чăвашсен 109 тупмалли юмахне латин чěлхин транскрипцийěпе тата турккă чěлхипе панă. Тематика принципне тěпе хурса автор тупмалли юмахсене тăхăр ушкăна уйăрнă [Дегтярев, 2013: 70].

## Юмахсенчи тупмалли юмахсем

Тупмалли юмахсене итлекенĕн ăс-тăнне, тавçăрулăхне пĕлме ятарласа усă кураççĕ. Вĕсенче халăх фантазийĕ курăнать, унта таврари япаласемпе пулăмсен паллисем сăнарланнă. Вырăс тĕпчевçи Е.Н. Елеонская палăртнă тăрăх, юмахсенчи ĕç-пуç малалла епле аталанса каясси, юмаха чĕрĕлĕх кĕртесси тĕрлĕ мелсенчен килет. Вĕсенчен пĕри вăл — тупмалли юмах. Юмахсенчи тупмалли юмахсен функцийĕ çинчен Е.Н. Елеонская: «Тупмалли юмахăн тĕп уйрăмлăхĕ хăех ăна юмахра пулма хистет: юмахри çав вăрттăнлăх (пĕлменлĕх, паллăмарлăх т. ыт. те) тупмалли юмахра та пур. Тупмалли юмах вăл çав тери çаврăнăçуллă, тĕрлĕ лару-тăрура кĕтмен çĕртен сиксе тухать, хăйĕн кӳлепине çăмăллăн улăштарать, сăнарлăх çинче тытăнса тăрать, пĕлесшĕн çунтарать тата тупсăмне хăвăртрах туптарасшăн тăрать, тепĕр тĕрлĕ каласан — юмах итлекенсене кăсăклантарса яма, тимлĕхре тытса тăма тăрăшнине пĕтĕмпех тивĕçтерет», — тесе çырать [Елеонская, 1994: 80].

Чăваш халăхĕн юмахĕсенче те тупмалли юмахсем пур. Тупмалли юмахсен малтанхи тĕслĕхĕсем ытларах мăшăр суйланă е тата урăх чух ăс виçнине тĕрĕслени çинчен калакан юмахсенче тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, 1912 çулта Пăла тăрăхĕнчи ялсенче çырса илнĕ «Ăслă хĕр»[31] юмахра ăслă хĕрпе патша пĕр-пĕрне хурав парса, пурнăçлама май çук ĕçсем хушса ăс виçеççĕ. Патшапа хĕр вун ик салтак урлă пĕр-пĕринпе хутшăнаççĕ:

<...> *Хай салтаксем патша патне каяççĕ те:*

*— Эсĕ пире чула пусса пар, вара эпир сĕвĕпĕр, — тесе калаççĕ.*

*— Кăна сире кам вĕрентрĕ? — тет патши.*

*— Эпир çул çинче пĕр вун ик çулхи хĕре тĕл пултăмăр та, çав каласа пачĕ, — теççĕ салтаксем.*

*— Вăл хĕр пит ăслă пулсан чултан çăпата тутăр, — тесе ярать патши.*

*Хайхи вун ик салтак хай хĕр патне каяççĕ те калаççĕ:*

*— Вăл сана чултан çăпата туса патăр терĕ, — теççĕ.*

*Хĕр пĕр хутаç хăйăр илет те хăйăр тултарса килсе калать:*

*— Патша çакăнтан кантра явса патăр, — тет.*

*Салтаксем çĕклесе каяççĕ те патшана калаççĕ:*

*— Вăл хĕр сана çак хăйăртан кантра явса пама каларĕ, — теççĕ.*

*— Ку хăйăртан епле кантра явмалла? — тет патша кусене.*

*— Чултан епле çăпата тумалла тата? — теççĕ.*

*Патши калать:*

*— Вăл пит ăслă пулсан ыран ман патма çапла килтĕр: ни çарамас мар, ни кĕпепе мар, ни лашапа мар, ни çуран мар, хапхаран ни кĕтĕр, ни ан кĕтĕр, — тесе ярать.*

*Хай хĕр атма пĕркеннĕ, качака утланнă, мăйракинчен тытнă та сиктерсе пырать тет. Хапхаран икĕ урине кӳртнĕ, икĕ урине кӳртмен тет. Патша тухать те тĕлĕнсе икĕ пĕççине шарт! çапать тет.* <...>

Пĕтĕм юмах сюжечĕ çав йывăр ыйту-ĕç хушнинчен тăрать. Хресчен хĕрĕ патшаран та ăслăрах. Асăннă юмахра патша вун ик çулхи хĕрĕн ăсĕнчен тĕлĕнет, ăна качча илесшĕн пулать, анчах илеймест.

---

[31] Ăслă хĕр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Юмахсем. 6 томпа тухнă. I т. Пухса хатĕрлекенĕ, ăнлантарусене çыраканĕ Е.С. Сидорова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1976. С. 153—154.

«Ăслă ача»[32] юмахра çулланнă çын (Анани) хăйĕн ача çуккипе тăван пиччĕшĕн ывăлне усрава илесшĕн пулнă. Ача ăсне çĕнтерейменрен илеймест ăна усрава. Ултă çулхи ачан ăсĕнчен тĕлĕнсе: «Отмăл çолхи старика олталарăм, олт çолхи ачана олталимарăм», — тет. Кунта та юмах сюжечĕ пĕтĕм йывăр ыйту-ĕçрен тăрать. Акă, тĕслĕхрен, пĕр сыпăк:

*<...> Ашшĕ карĕ.*

*— На çак ал хырине*, сан ул атă тутăр çак хыряран, — тет Анани. Хыряна чиксе тавăрнать Кантратти.*

*— Ну, улăм. Пиччу атă тума коларĕ çакăнтан, — тет.*

*— Хам кайса поплям-ха, атти, — тет ачи. Карĕ.*

*— Пичи, хăйăртан çип арласа-и? — тет ача.*

*— Хăйăртан çип епле полать? — тет Анани.*

*— Хыряран атă епле полать тата? — тет ача.*

*— Каях, аçу килтĕр, — тет Анани.* <...>

«Куртейпе Уртемей»[33] юмахра патша пуян Куртейпе чухăн Уртемее ыйтусем парать. Пĕрремĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере мĕн тутлă?» Уртемей хĕрĕ Урине: «Тĕнчере ыйхăран тутли ним те çук», — тесе вĕрентет ашшĕне. Патшан иккĕмĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере мĕн вăйлă?» Уртемей хĕрĕ: «Тĕнчере шывран вăйли çук, вăл теме те хирсе çĕмĕрсе каять», — тесе вĕрентет. Патшан виççĕмĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере кам хытă чупать?» Уртемей хĕрĕ ашшĕне: «Тĕнчере шухăшран хытă чупаканĕ çук», — тесе калама вĕрентет. Урине хуравĕсем патша кăмăлне каяççĕ: «Санăн хĕрӳ Урине манран та ăслă-мĕн», — тет патша.

Йывăр ыйту-ĕç хушни кунта патшапа вун ик çулхи хĕре, çитĕннĕ çынпа ултă çулхи ачан ăс çивĕчлĕхне е йывăр ĕçе пурнăçлаяссине тĕрĕсленине кăтартать. Паллă тĕпчевçĕ В.Я. Пропп фольклор материалĕсенче «йывăр ыйту-ĕç тымарĕсем пытарăннине» çирĕплетме пулать тесе палăртнă [Пропп, 1976: 167]. Шăп çакăн пек юмахсенче ĕнтĕ йывăр ыйту-ĕçсем упранса юлнă.

Вăхăт иртнĕçем тупмалли юмахсен функцийĕ улшăннине пур фольклорист та палăртать. Ун çинчен В.В. Митрофанова çакăн пек çырать: «Пĕр пĕлтерĕше пăрахăçа хăварса тупмалли юмах тепĕр пĕлтерĕш йышăнать пулсан та вăл хăйĕн тивĕçне — вĕрентессине — çухатмасть. Вĕрентӳ ĕçĕн тĕллевĕсемпе ыйтăвĕсем улшăнаççĕ пулсан та тупмалли юмахăн функцийĕ — çынна вĕрентесси — паянхи кунччен упранса юлнă» [Митрофанова, 1978: 36].

## Чăвашăн наци курăмĕпе шухăшлавĕ тупмалли юмахсенче

Тупмалли юмахсенче пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăну, тĕнчекурăм, сăнарлăх паллисем, чĕлхе уйрăмлăхĕсем, выльăх-чĕрлĕх усракан, тыр-пул ӳстерекен халăх çут çанталăк пулăмĕсене сăнани — пĕтĕмпе хăйне евĕр-

* Хăйрине.

[32] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Юмахсем. 6 томпа тухнă. I т. пухса хатĕрлекенĕ, ăнлантарусене çыраканĕ Е.С. Сидорова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1976. С. 154—155.

[33] Çавăнтах. С. 155—159.

лĕ, хăйĕнни пек кăна, халăхăн хăйне уйрăмлăхĕ, чăвашăн наци шухăшлавĕ курăнса тăрать.

Фольклористикăра тупмалли юмахсем виçĕ тĕрлĕ пулнине палăртаççĕ: метафорăллă, ыйтуллă тата арифметикăллă. Метафорăллисем чи йышлисем шутланаççĕ. Аристотель тупмалли юмах — лайăх метафора тесе пĕтĕмлетнĕ. Метафорăллă е аллегориллĕ тупмалли юмахсем чи йышлисем шутланаççĕ, вĕсенче пĕр япала тепринпе улшăнать, танлаштарăнать [Чичеров, 1959: 322]. Тупмалли юмахри икĕ япалан пĕрпеклĕхĕ ытларах кĕтмен çĕртен пулать, тупмалли юмах (тата пурнăçри япалан пĕрпеклĕхĕ) поэтикăллă парадокс принципĕпе пулса пырать [Рыбникова, 1932: 57]. Тĕслĕхрен: тĕк — тум, кĕпе; купăста — Пинпӳ майри, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тум тăхăннă пуп; куç — ĕнчĕ, шăрçа, ахах; пăри — пĕр сăпкара икĕ ача, пĕр хутаçра икĕ мăйăр; сĕлĕ — йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи т. ыт. те.

Тупмалли юмахсем сăнарлăх паллисемпе уйрăлса тăни çинчен Е.С. Сидорова çапла палăртать: «Халăх сăмахлăхĕн илемлĕх мелĕсем кунта пурте лайăх палăраççĕ. Çав мелсенчен чи анлă сарăлни — метоними. Тупмалли юмахсенчен чылайăшĕ хăйсен тупсăмĕн метафори пулса тăраççĕ. Халăх сăмахлăхĕнче, каярах литературăра çирĕпленнĕ метафорăсем тупмалли юмахсене илемлĕ сăнар парса тăраççĕ (сывлăм — куççуль, пăр — кĕмĕл, çурла — кукăр, çулăм — хĕрлĕ автан, çулталăк — вун ик туратлă йывăç, юр — шур пĕркенчĕк т. ыт. те)» [Сидорова, 1984: 19].

Тупмалли юмахсене хăйне евĕрлĕ сăнарлăх кӳрекенни вăл — танлаштару. Кăмакара вут çунса пĕтес умĕн кăвар туртнă чухне кăвар мĕнле шăнкăлтатса, сасăпа çунса, çулăмпа йăлкăшса, йăлтăртатса пынине чăваш мĕн авалтан сăнаса пурăннă. Юратса сăнаса пурăннă чăваш хĕрарăмĕсем çав кăвара туйипа, туй халăхĕпе танлаштарнă. Туй чăваш пурнăçĕнче пысăк тата пĕлтерĕшлĕ пулăм. Чăваш туя кайнă чух чи лайăх тумне тăхăннă. Чи чаплине, кĕмĕл тум, эрешлĕ тум. Туй халăхĕн йăлтăртатса, утнă, ташланă чухне шăнкăртатса тăракан тумĕ туя илем кӳнĕ. Акă çав илемлĕ текстсем: *«Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пĕр шăтăка кĕрех каять»*[34]; *«Аслă ялтан кĕçĕн яла туй килет»*[35]. Çапла вара, тупмалли юмаха калакан (калăплакан) çын текст тупсăмне ăс-тăнпа мĕнле йышăнни, ăшне хывни (восприятие), курни (видение), ăнланни курăнать. Тупмалли юмахсенче тата вĕсен тупсăмĕсенче чăваш халăхĕн пурнăçĕ, наци шухăшлавĕ палăрать. Текстсенче чăваш халăхĕ пурнăçри кулленхи ĕçĕн поэтикине, тĕрлĕ пулăмсен пĕрпеклĕхне курни, танлаштарни палăрса тăрать. Ку вăл пĕтĕмпе наци шухăшлавĕпе çыхăннă.

Е тата тепĕр тĕслĕх: *«Тĕп сакайĕнчен çар иртет (пăр айĕнчен пулăсем иртни)»*. Ку текста каласан куç умне кĕмĕл «тумлă» пулăсем — кĕмĕл тумлă çар тухса тăрать: вĕçĕ-хĕррисĕр. Таçти ĕлĕк-авалхи саманари кĕмĕл тумлă çар. Çав кĕмĕл тумлă çар çак тупмалли юмах тĕслĕхĕпе чăвашăн генетикăллă астăвăмĕнче упранса юлнă теме пулать. Тупмалли юмахсенче халăх кулленхи пурнăçăн, çут çанталăкри пулăмсен тĕлĕнмелле илемлĕ енĕсене курма пĕлни, асăрхани палăрать.

---

[34] 1940 çулта А. Соснова Пушкăрт АССРĕн Ермеккей районĕнчи заготскотра ĕçлекен чăвашсенчен çырса илнĕ тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 116. 90.

[35] Н.И. Ашмарин патне 1900 çулта Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Раккассинчен (хальхи ТР Пăва районĕ) П. Иванов учитель ярса панă фольклор материалĕсем. — ЧПГĂИ ĂА. I. 807. 12891. Л. 68 (об.).

Чăвашсен тупмалли юмахсен тексчĕсене пăхсан чăваш халăхĕ хăйĕнчен аслине вырăна хуни, хисеплени курăнать. Аслисен (асатте, асанне, кукамай, кукаçей, пичче) вăйне, хăватне кăтартни тĕл пулать, вĕсен япалисем те (вĕрен, хуран т. ыт. те) вăрăмрах, çӳллĕрех, пысăкрах, йывăртарах, вăйлăрах. Акă, тĕслĕхрен, *«Асатте вĕренне пуçтарса çитереймĕн» (çул)*; *«Асатте хуранне аллăн йăтаймĕç», «Мăн асаттен хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ» (авăн вучаххи); «Маçак çатми — мăнă çатми, ниепле те тытса илеймĕп», «Асанне çатми — мăн çатма, ниçтан тытса ӳпĕнтерме çук» (йĕтем); «Пичче лашине тытса чараймăн» (çил, çавра çил); «Асатте çурчĕ нихăçан та çĕрес çук» (тĕнче)* т. ыт. те. Ахальтен мар аслă çулти чăваш çыннисем кĕçĕннисене: «Эпир хамăртан аслисене — атте-аннене, асатте-асаннене, кукаçей-кукамая — çитес çук, эсир пире çитес çук», — теççĕ чун çирĕплĕхне, ӳт-пӳ вăй-халне, çын пултарулăхне тĕпе хурса[36]. Çакă тупмалли юмахсенче те курăнать.

Текстсенче чăваш çыннишĕн мĕн вăйлă, çӳллĕ, аслă, хисеплĕ пулнине те асăрхама пулать — лаша, пӳрт, çанталăк, юман, вăрман. Тĕслĕхрен: *«Тĕнчере пĕр лаша пур, ăна никам та тытса чараймĕ» (çил, çавра çил); «Пăхма çăмăл, пӳрт урлă ывăтса каçарас çук» (хут)* т. ыт. те. Тупмалли юмахсенче чăвашсемпе юнашар пурăнакан урăх халăх ячĕсем те ӳкерĕнсе юлнă.Тĕслĕхрен: вырăс — *«Вăрăм вырăс çул кăтартать» (ана йăранĕ); «Курпун вырăс йĕр йĕрлет» (шĕшлĕ);* майра — *«Мăнтăр майра уй сăвать» (çĕмел);* çармăс — *«Çармăс хĕрĕн ĕçлемесĕр тар юхать» (чӳрече йĕпенни);* тутар — *«Тотар коçне шор илнĕ» (чӳрече шăнни)* т. ыт. те.

Чăвашсен тупмалли юмахĕсем евĕрлев сăмахĕсемпе пуян. Вĕсем ытларах çут çанталăк пулăмĕсемпе, ĕçпе, ĕç хатĕрĕсемпе çыхăннă. Тĕслĕхрен: ***Явăш** çинче **ялт-ялт**! **Ха**пăс çинче **халт-халт**! **Янасалта ялт та ялт**! Ураски**лтре телт те телт!** (аслатипе çиçĕм). Ял, ялт, йăлтăр* сасă евĕрлевĕсем йăлтăртатăва палăртаççĕ[37], илсе панă тĕслĕхсенчи *ялт та ялт* — çиçĕм йăлтăртатнине курса тĕлĕннине кăтартакан сасă евĕрлевĕсем. *Халт-халт, телт те телт* — аслати авăтнă сасса евĕрлекен сăмахсем. Ĕçпе, ĕç хатĕрĕсемпе çыхăннисем: ***Çа**ра **çат**ма **çат-çат-çат**, шĕшкĕ **тĕми тӳп-тӳп-тӳп**! (авăн çапни); «**Ир** те **чак-чак**, **каç** та **чак-чак**, **вари вак-вак**» (пăри тӳни); «**Тӳпĕлтĕк-тӳпĕлтĕк**, **тӳпĕлтин калта тӳпĕлтĕк!**» (сӳс тӳни).* Ку тупмалли юмахсене ĕçленĕ чух илтĕнекен сасăсене евĕрлесе йĕркеленĕ, вĕсемпе килĕшекен сăмахсене суйласа кĕртнĕ. Илсе панă тĕслĕхсенче сасă евĕрлевĕ ритмлă, çемĕллĕ илтĕнет. Кун йышши тĕслĕхсем чăвашла кăна илемлĕ янăраççĕ, вĕсене урăх чĕлхене куçарса илемне сыхласа хăварма май çук.

Е.Н. Елеонская тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, тупмалли юмаха калакан çынни те, тупсăмне тупаканни(сем) те пĕр идея çаврăмĕнче пулмалла, икĕ енĕ те пĕлекен, ĕçлекен ĕç, пулăм пулмалла, пĕр шухăшлаври, пĕр тĕнчекурăмри, пĕр чун-чĕре аталанăвĕнчи (духовное развитие) çынсем

---

[36] Е.В. Федотовăн экспедици материалĕсем. Чăваш Республикин Комсомольски районне кĕрекен Юнтапара 1945 ç. ç. А.А. Федотова (Исмукова) (Чăваш Республикин Патăрьел районне кĕрекен Аслă Арапуçĕнчен качча килнĕ) каланине Е.В. Ермилова çырса илнĕ. ЧПГĂИ ĂА. III. 2921. 90 с.

[37] *Ашмарин Н.И.* Основы чувашской мимологии // *Ашмарин Н.И.* Чувашская народная словесность: исследования. Автобиография, воспоминания. Письма / сост. и примеч. В.Г. Родионова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. С. 162.

пулмалла, унсăрăн тупмалли юмахăн тупсăмĕ тупăнмасть [Елеонская, 1994: 80]. Çавăнпа хальхи вăхăтра нумайăшĕ (чăвашсемех!) чăвашсен тупмалли юмахĕсен тупсăмĕсене тупма йывăр теççĕ. Е.С. Сидорова та Е.Н. Елеонская шухăшĕн йĕрĕпе пырать: «Тупмалли юмахсем валли халăх хăйне паллă, куç умĕнчи, кил таврашĕнчи, куллен пурнăçра, ĕçре, хуçалăхра кирлĕ пулакан япаласене суйласа илет» [Сидорова, 1984: 17].

Чăвашсен тупмалли юмахĕсен — калавĕсен (загадки-повествования) хушшинче ӳсен-тăран пурнăçĕпе («житие» культурного растения) çыхăннисем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен: *«Чи! турĕ, пи! турĕ, çӳле кайрĕ, йăва савăрчĕ, çăмарта турĕ» (хăмла); «Чу! кайăп, йăва çаврăп, сакăршар çăмарта тăвăп» (пăрçа): «Ик эрнерен çуралать, сакăр эрне сăпкара выртать, çирĕм пилĕк эрне кипкере çывăрать, тăватă эрне ӳсет, икĕ эрне савăнать, икĕ эрне самăрлать, икĕ эрне саралать, çулталăкра çаврăнать» (ыраш)* т. ыт. те. Вĕсен чăваш литературин жанрĕсем аталаннă вăхăтри хăйсен òüï è ï óð[38]. Ӳсен-тăран пурнăçне кăтартакан тĕслĕхсен проекцийĕ каярах пĕр-пĕр паллă çын пурнăçĕ (житие) çинчен хайлас калавсене, каярах — повеçсене пулса кайма, аталанма пулăшнă, халăха çывăх текстсем пулнипе вĕсене чăваш вулаканĕ йышăннă. Ӳсен-тăран пурнăçĕ **Vita herbae** (Н.И. Толстой)[39] ӳкерĕннĕ тĕп шухăш (мотив) чăваш халăх сăмахлăхĕнче те, çав шутра тупмалли юмахсенче, курăнать.

Авалхи çын çут çанталăк пулăмĕсене пĕлсе çитерейменнипе вĕсене мĕнле те пулин ăнлантарса парасшăн пулнă. Этем тупмалли юмахсен илемлĕ сăнарĕсенче çав ăнланман япаласем, пулăмсем çинчен каласа пама, куç умне кăларса тăратма тăрăшнă. Çавăнпа çут çанталăк çинчен калакан тупмалли юмахсем авалхи çынсен тĕнчекурăмне кăтартакан мифсен кĕске формисем пулса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, *Аслати* — Аслă Турă. «Вăл ырă та, хаяр та. Çӳлти тĕнчери турăсенчен ăна ытларах пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен ăна асăрхамасăр юлма çук: вăл кашни çуллах кĕрлет. Ялти çын ăна паянхи кун та «аслă атте», «аслă ати» е «тур мучи» тет. Ĕлĕкхи этемсен шухăшĕпе, «Аслати хăйĕн капăр урапипе, вичкĕн учĕсемпе пĕлĕт тăрăх кĕмсĕртеттерсе çӳрет, уй-хирсене çумăр парать, Шуйттана хăвалать. Ăна тивертме Аслати туррăн Çиçĕм те, Аçа чул та пур. Вăл вĕсене вирхĕнтерсе ярсан Тĕнче кисренет, Çĕр çурăлать»[40]. Çак шухăш йĕрĕ аслатипе çиçĕм çинчен калакан тупмалли юмахсенче упранса юлнă, вĕсем шăпах çав кĕске мифсем: *«Асатте урхамахĕ çĕр кисретсе кĕçенет»; «Пӳрт тăрринче папай кĕрлет»*[41]; *«Çулла асатте мĕкĕрет-вăрçать, хĕлле çывăрать»*[42]; *«Çӳл тӳпе-*

---

[38] *Федотова Е.В.* Истоки и формирование жанров чувашской литературы XVIII—XIX вв. Чебоксары: Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2006. С. 66; *Федотова Е.В.* Фольклорные тексты как истоки жанра *житие* в чувашской литературе // Истоки и эволюция литератур и музыки тюркских народов: материалы международной научно-практической конференции (23—24 сентября 2014 г., г. Казань). Казань: ИЯЛИ, 2014. С. 191—194.

[39] *Толстой Н.И.* Язык и народная культура. Очерки по славянской мифологии и этнолингвистике. М.: Индрик, 1995. 380 с.

[40] Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем, легендăсем, халапсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. С. 79.

[41] Н.В. Васильев 1950—1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем. — ЧПГĂИ ĂА. III. 417—420. 161 с.

[42] М.П. Субаева Куйбышев (халĕ Самара) облаçĕн Шунтал районĕнчи Емелкке Таяпинче пухнă фольклор материалĕсем. — ЧПГĂИ ĂА. III. 489. 3612. 43 л. (об.).

*ре çӳрен ут кĕçенет»*[43]. Хăйсен тĕп тĕллевне пула тупмалли юмахсем авалхи саманасенчех пулса кайнă реликтсене, мифологи пайрăмĕсене паянхи куна илсе çитернĕ.

Тупмалли юмахсенче халăхăн ĕмĕрсем хушши пуçтарăнса пынă ăсхакăлĕ палăрать. Вĕсенчи историзмсемпе архаизмсем аваллăх йĕрĕсене упраса хăварнă. Тĕслĕхрен: *«Пинпӳ майрин пин саплăк, çĕрпӳ майрин çĕр саплăк» (купăстапа сухан).* «Çĕрпӳ», «пинпӳ» сăмахсем X—XV ĕмĕрсенче çуралнă, вĕсем çĕршер тата пиншер çынлă ушкăнсен пуçлăхĕсене пĕлтернĕ [Романов, 1962: 152—153; Сидорова, 1984: 16—17]. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче мăрьерен тĕтĕм тухса кайни çинчен калакан тупмалли юмахсен вариантчĕсем нумай. Е. Христофоров 1884 çулта çырса илнĕ *«Ашшĕ ура сыриччен ывăлĕ Сарая çитнĕ»*[44] текст чи малтан çырса илнĕ текстсенчен пĕри шутланать. Ытти вариантсенче Сарай вырăнне Хусан е Мускав тенине куратпăр: *«Ашшĕ ура сыриччен ывăлĕ Хусана çитет»; «Ашшĕ килĕнчен тухиччен ывăлĕ Мускава çитнĕ»*. Мĕншĕн чăваша тĕтĕм çак асăннă хуласене çитни кăсăклантарнă-ши? Каллех истори тапхăрĕпе çыхăннă. Мăрьерен тĕтĕм тухнăшăн — пӳртре пурăннăшăн — куланай, хырçă-марçă тӳлемелле пулнă. Тĕтĕм тухни çинчен калакан тупмалли юмахсем çав налук тӳлемелли системăна кăтартса параççĕ те. Сарай, Хусан, Мускав хула ячĕсене асăнни XIV—XVII ĕмĕрсенче куланай çав хулана тӳлемелле пулнине пĕлтерет [Романов, 1962: 153; Сидорова, 1984: 17]. Тепĕр тĕслĕх: *«Кĕпĕрнаттăр урапи кĕпер çинче илтĕнет» (аслати авăтни).* Ку вăл — Раççей кĕпĕрнесем çине пайланнă вăхăтра пулса кайнă тупмалли юмах. Акă тата тепĕр текст: *«Мучи пӳрчĕ — пĕчĕк пӳрт, алăкĕ мăкланнă, тĕнĕ шăтăкĕн пăкки çук, çил шăтăкĕн хуппи çук, çине кăлкан витнĕ»*. Кунта эпир *«тĕнĕ шăтăкĕн пăкки»* тенинче чăвашсем ĕлĕк юрттăсенче, каярах хура пӳртсенче пурăннине куратпăр. *Тĕнĕ шăтăкĕ* тĕтĕм тухмалли шăтăк пулнă, тĕтĕм тухса пĕтсен ăшă тула ан тухтăр тесе ăна пăкăланă.

Куртăмăр ĕнтĕ, халăх пурăнса ирттернĕ, историре пулса иртнĕ, хальхи вăхăтра пурнăçран тухса ӳкнĕ пулăмсем тупмалли юмахсенче ӳкерĕнсе, упранса юлнă. Уйрăм сăмах пĕлтерĕшĕсем, сăмах çаврăнăшĕсем тăрăх эпир хăш-пĕр тупмалли юмахсем хăш вăхăталла пулса кайнине пĕлме пултаратпăр. Хĕвел аннă вăхăтра тавралăха хĕрлĕ çутă ӳкнине сăнлакан *«Юман кутне юн тăкнă»* текен тупмалли юмах ĕлĕк-авал чăвашсен аслашшĕсем (пăлхарсемпе сăварсем) хăйсен йăли-йĕркипе турра чӳклеме пуснă лаша юнне чи çӳллĕ йывăç — юман — кутне тăкни çинчен аса илтерет[45]. Кашни самана хăйĕн вăхăтне сăнлакан тупмалли юмахсем çуратать.

Çапла вара, чăвашсен тупмалли юмахĕсенче халăх пурăнса ирттернĕ кун-çулăн историйĕпе культура пахалăхĕ упранса юлнă. Тупмалли юмахсем — чăваш халăхĕн иксĕлми пуянлăхĕ, ăслăлăх валли паха тĕслĕхсем, ĕмĕрсем хушши пуçтарăннă сăмахлăхăн ахах-мерчен хайлавĕсем.

***Елена ФЕДОТОВА,***
*филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ*

---

[43] Н.В. Васильев 1950—1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем. ЧПГĂИ ĂА. III. 417—420. 161 с.

[44] 1884 çулта Е. Христофоров Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем. ЧПГĂИ ĂА. I. 28. 2800. С. 692.

[45] *Булатов А.Б., Димитриев В.Д.* Параллели в верованиях древних суваров и чувашей // Ученые записки ЧНИИ. Вып. XXI. Чебоксары, 1962. С. 228.

# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

## Авăн

1. Кĕркунне кĕрĕклĕ, çуркунне çурхахлă.
2. Уй варринче йĕке чĕрес.
3. Тăрри пĕрре, кучĕ хĕрĕх.
4. Хĕрĕх йывăçăн тăрри пĕр.

## Авăн вучаххи

5. Асатте хуранне аллăн йăтаймĕç.
6. Атте мар, анне мар, пуççапмасăр кĕреймĕн.
7. Мăн асатте хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ.
8. Ойра хоран ларĕ.
9. Пачăшкă çăварне карса тăрать.
10. Çăварне карса пуп тăрать.
11. Улпут мар, пике мар, тайăнмасăр кĕрес çук.
12. Янкурас, мĕн курас, пуççапмасăр кĕреймĕп.

## Авăн йывăççи

13. Кĕркунне кĕрĕкпе, çуркунне çурхахпа.
14. Кĕрӳ çинче çĕлĕк, хĕр çинче пĕркенчĕк.
15. Пĕр тăрăллă, хĕрĕх кутлă.
16. Пĕр пӳртĕн хĕрĕх чӳрече.
17. Сакăр вон салтак, пĕр калпак.
18. Çорконне çорхахлă, кĕркунне кĕрĕклĕ.
19. Тăрри пĕрре, тĕпĕ хĕрĕх.
20. Тĕпĕ çитмĕл, тăрри пĕрре.
21. Тĕпĕ хĕрĕх, тăрри пĕрре.
22. Тул ен тутлăх, шал ен выçлăх.
23. Уй варринче йĕке чĕресĕ ларать.
24. Хĕрĕх йывăçăн пĕр тăрă.
25. Хĕрĕх йывăçăн тăрри пĕрре.
26. Хĕрĕх йывăçăн тăррисем пĕр çĕрте.
27. Хĕрĕх кут, пĕр тăрă.
28. Хĕрĕх салтак, пĕр калпак.
29. Хĕрĕх те пĕр йăвăçăн тăрри пĕр.
30. Хĕрĕх чăрăшăн тăрри пĕр.

31. Хĕрĕх чăрăш, пĕр турат.
32. Хĕрĕх шаршан, тăрри пĕр.
33. Хĕрӳ-хĕрӳ хĕрĕх хыр, хĕрĕх хырăн пĕр тăрă.

### Авăн йывăççи, йĕтем, шăпăр, çапуççи

34. Ашшĕ чăмăр, амăшĕ лаптак, хĕрĕ хитре, ывăлĕ ухмах.

### Авăн çапни

35. Анкартинче шевле вылять.
36. Пăтăлти-патăлти,
Пăтăлти-патăлти,
Тăкăлти-такăлти,
Тăкăлти-такăлти —
Пĕр купа сарă çăмарти.
37. Пĕри хĕртет, тепри ташлать.
38. Çара çатма çат-çат-çат,
Шĕшкĕ тĕмми тӳп-тӳп-тӳп.
39. Çĕр çынна вырттарса хĕнеççĕ.
40. Çӳлте ваш-ваш, аялта тӳп-тӳп.
41. Çӳлте văс-văс, аялта туп-туп!
42. Çӳлте văт-văт, çĕрте тĕп-тĕп!
43. Çӳлте văль-văль, аялта тĕп-тĕп!
44. Çӳлте văш-văш, аялта теп-теп!
45. Çӳлте вĕл-вĕл, аялта ток-ток.
46. Çӳлте вĕл-вĕл, аялта топ-топ.
47. Тапăр таппи пуссинче тур ут тăпăртатса тăрĕ.
48. Тапăр таппи тĕлĕнче тапăртатса тăрать турă ут.
49. Тăп-тăпиçĕм, тăпиçĕм, ишемеçĕм-курăкçăм, курăк çине пусмăп.
50. Тăрнасем аялалла та, çӳлелле те вĕçеççĕ.
51. Тӳп-тупăлтăк, тупăлтăк, тупăлтăк айĕнче чăш-чăш.
52. Тӳп-тӳп тӳпелет те сарă инкене вĕлерет.
53. Тӳп-тӳп-тӳп тӳптин, ăкăлтин-мăкăлтин, кăшт-кăшт йĕкĕлтин-мăкăлтин.
54. Ултă кайăк хур вĕçсе пырать, пурте юман сăмсаллă: вĕт эпир! те вĕт эпир! теççĕ.
55. Ултă кайăк хур вĕçсе пырать, пурте юман сăмсаллă, хăйсем вĕт-эвир, вĕт-эвир, вĕт-эвир те вĕт-эвир теççĕ.
56. Шăкăлтик, шакăлтик, тăшшик, ташшик, похом похать, çити витет.
57. Шăккăл-шаккăл Михайла, харăс-харăс Хайрулла.

### Авăн çапуççийĕ

58. Пĕр вĕçĕ юманлăх, пĕр вĕçĕ çăкалăх, варрипе вăкăр çӳрет.
59. Пĕр вĕçĕ юманлăх, тепĕр вĕçĕ çăкалăх, варри вăкăрлăх.
60. Тăрри — юман, аври — çăка, вăта çĕрĕ — вăкăр.

### Авăн хуранĕ

61. Асатте хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ.

### Авăн шучи

62. Çĕр чăрăшăн тăрри пĕр.

### Авăрлани

63. Çăка çине лартăм, вĕрене виттĕр пăхрăм.
64. Хӳме виттĕр йыт харкашать.

### Автан

65. Ик хут çуралать, икĕ ураллă — çын мар, юрлать.
66. Кăт-кăтăвăш, кăтăвăш, хӳри вĕçĕ ялавăш.
67. Килĕрен казак.
68. Мулла асан калат,
    Ылттăн хуран çурăлат,
    Шăна-пăван тапранат.
69. Пĕр майра кут хыçне икĕ çурла чикнĕ каять.
70. Пуçĕ — тукмак, хӳри — çурла.
71. Пуçĕ тура, кучĕ çурла.
72. Пуçĕ тура пек, хӳри çурла пек, кăшкăрать мулла пек.
73. Пуçĕ тура, хӳри çурла.
74. Пуçĕ тура, хӳри çурла, туттурутне кăшкăртать те пур халăха вăратать.
75. Сар сарана, сарана,
    Сарана çинче сар кайăк;
    Виççĕ тăрса кăшкăрсан
    Вилĕ-чĕрĕ тапранать.
76. Хăй мулла пек, кăшкăрать усал пек.
77. Шав, шав хăмăш, шав хăмăш,
    Шав хăмăшлăх хушшинче
    Ылттăн пуçлă пĕр хăмăш.
78. Шав, шав хумăш, шав хумăш,
    Шав, шав хумăш варринче
    Ылтăн пуçлă пĕр хумăш.

### Автан автать, тул çутăлать, халăх вăранать

79. Иван патша вăранат,
    Ылттăн тиркĕ çурăлат,
    Шăна-пăван тапранат.

### Автан кикирикки

80. Патша йăхĕнчен мар пулсан та корона тăхăнса çӳрет.

### Автан уринчи кача

81. Кнеç ратнинчен мар та, шпорпа* çӳрет.

### Автанпа чăх

82. Туприн тупать, яприн япать.

### Автансем каштана ларни

83. Лутра инке сак çинче, пӳлě инке ту çинче.

### Автомобиль

84. Тăватă кăлтăркка, икě йăлтăркка, пěр мăрăлкка.

### Ака ални*

85. Кайăп та калла килěп,
Кайăп та калла килěп.

### Акапуç

86. Кукăр-макăр мăйрашки, кукаçейěн куклешки.
87. Мăйракинчен тытмасăр ěç пулмасть.
88. Мěкěрт сысна çěр хăйрě.
89. Пěкрěç сысна пěтěм хире çавăрать.
90. Пěри йěр тăвать, тепри хăйпăтать.
91. Тимěр шăллă карчăк, ури сенкě пек, пур тěнчене тăрантарать, анчах хăй выçах пурăнать.
92. Уй варринче пěкреç сысна выртать.
93. Хирте икě ут çăрхалать.
94. Хирте Расман* алси ларать.
95. Хирте расшан* алси ларать.
96. Хирте тимěр чěрнеллě асамçă çěр чавать.

### Ал шăлли

97. Алашит, палашит, вутамина килешит.
98. Виçě пуслăх тавара çěрěн-кунěн çěр çын пырса килěшет.
99. Виçě пуслăх таварě çук, çěр çын пырса килěшě.
100. Виçě пуслăх тавар çук, пин çын пырса килěшě.
101. Виçě пуслăх япали çук, пин çын пырса калаçать.
102. Епиксěр*-тупиксěр, ăна тупмасан шанчăксăр.
103. Ипикăн-топикăн, çавна топмасăр шанчăксăр.
104. Ипикăн* тупикăн, çавна тупмасăр шанчăксăр.
105. Ипиксěр*, тупиксăр, çавна тупмасан шанчăксăр.
106. Кашни килте ватă тутар пур.
107. Кашни килте Матěрне.
108. Килěрен ластăк.
109. Лăпсăр-лапсăр ват карчăк, килен-каяна чуптăвать.
110. Лăпсăр-лапсăр кинěм пур, килен-каяна чуптăвать.

111. Пĕчĕккеç кинемей килен-каяна чуптăвать.
112. Çийăмра-пуçăмра татăк çук, ыр çын куç умне тăрăп.
113. Çийĕмре-пуçăмра татăк çук, ыр çын умне тăратăп.
114. Çичĕ пуслăх тавара çĕр çын пырса килĕшĕ.
115. Упиккăм, тупиккăм, ăна тупмасан арăмсăр юлан.
116. Упиккĕн-тупикĕн, çавна тупмасăр шанчăксăр.
117. Хăй çĕлен пек авкаланать, чунĕ çук.
118. Эпиксĕр, тупиксĕр, ăна тупмасан шанчăксăр.

### Ала

119. Вăрмана кайрăм — касрăм, çула тухрăм — аврăм, киле килтĕм — çĕлерĕм, варри — тиха тирĕ, хĕрри — пăру тирĕ.
120. Вăрмана кайрăм, касса килтĕм, пĕкĕртрĕм.
121. Вăрманта тирне сӳнĕ, килте кĕрĕк çĕленĕ, кĕрĕкĕ вĕр çĕнĕ — аркинче çитмĕл шăтăк.
122. Вĕр çĕнĕ пулсан та шăтăк кăна.
123. Йĕри-тавра ăвăслăх, варри и-ха-ха*.
124. Йĕри-тавра çăкалăх, варринче ахахах.
125. Пĕр шăтăкра — пин шăтăк.
126. Çавра çыран, айĕ тарăн.
127. Тĕкме виттĕр юр кӳртет.
128. Хăй çĕнĕ, шăтăк.
129. Шăтăк кутлă Тăманпике ташла-ташла тусан (тăман) кăларать.

### Алапа çăнăх аллани

130. Аслăк айĕнче юр çăвать.
131. Çăкалăх витĕр юр çăват.

### Алă

132. Алапит çемйинче пилĕк ача.
133. Алпике килĕнче пилĕк ĕçчен.
134. Алтакки çемйинче пилĕк ача пурăнать.
135. Амăшĕ пĕрре, ачисем пиллĕк, пурте пĕрле пурăнаççĕ.
136. Вăл туман ĕç те çук, çав кам пулать?
137. Икĕ Арахман нимле ĕçре хăраман.
138. Икĕ пичин пилĕкшер ача.
139. Пĕр амăшĕн ик турат.
140. Пĕр енникĕн пилĕк вĕç.
141. Пĕр кĕреплен пилĕк шăл.
142. Пĕр патакăн пилĕк тăрнак.
143. Пĕр туратăн пилĕк юпă.
144. Пилĕк йӳплĕ сеник пур, пит курман тăк килсе кур.
145. Шăмăллă пулин те мамăкран çемçе шутланать.

### Алă арманĕ

146. Вăр-çаврашка, арки вĕçĕ кĕпеллĕ.
147. Вăрт Варвари, арки вĕçлĕ шупăрлă.

148. Вити-вити вирьяла, арки вĕçĕ хăюллă.
149. Ĕни выртат, хӳри тăрат.
150. Кăр-кăр хура, аркă вĕçĕ — хăю.
151. Çеçкесĕр çарăк, хӳресĕр карăк.
152. Упи кăшкăрать, тĕкĕ тăкăнать.
153. Чипер инке вăрт-варт, арки вĕçĕ хăюллă.

### Алă арманĕн чулĕ

154. Икĕ чăпар хурăм пур, пĕр-пĕрне янахран çулать.

### Алă витри

155. Еккĕм арăмин кучĕ йĕпе.

### Алă çумалли кăмкан

156. Варсăр автан çакăнса тăрать, ялан шыв ыйтса авăтать.
157. Пĕр кăвакалăн икĕ сăмса.

### Алăк

158. Вăрманта ӳснĕ, пӳрт хыçне килнĕ, кĕрет те тухать, кĕрет те тухать.
159. Выртсан — ут вырăнче, ларсан — черкке вырăнче.
160. Икĕ кинĕ ларать, хунямăшĕ ĕçлет.
161. Икĕ кинĕ пăхса ларать, хунямăш ĕçлет.
162. Икĕ кинĕ пăхса тăраççĕ, хунямăшĕ ĕçлет.
163. Икĕ тăшман хире-хирĕç.
164. Иккĕн выртаç, иккĕн ура çинче тăраç, пиллĕкмĕш пăхса тăрать, улттăмĕш çавăтĕ.
165. Иккĕн тăраççĕ, иккĕн выртаççĕ, пĕри кускаласа çӳрет.
166. Иккĕн тăраççĕ, иккĕн выртаççĕ, пĕри çӳрет, пĕри çавăтать.
167. Иккĕн тăраççĕ, иккĕн выртаççĕ, пиллĕкмĕш çӳрет, улттăмĕш çавăтать.
168. Иккĕшĕ хире-хирĕç пăхса тăраççĕ, иккĕшĕ айлă-çийлĕ выртаççĕ, пĕри вĕсен хушшинче кускаласа çӳрет.
169. Илсе кай та килсе пар.
170. Кĕнĕ чухне хирĕç тухать, тухнă чухне ăсатса ярать.
171. Пĕр килемине кăвапинчен туртса кăларăп.
172. Пĕр кунта çĕр хут ытла унталла-кунталла хутлать, хăй вырăнтах ларать.
173. Çанат çурăмĕ çинче çара çерçи вăй вылять.
174. Хунямăшĕ чупса ĕçлет, икĕ кинĕ канса ларать, икĕ кинĕ канса выртать.
175. Хуняшшĕпе хунямăшĕ пăхса лараççĕ, кинĕ чупса çӳрет.
176. Ывăлĕсем лараççĕ, ашшĕ отать.

### Алăк, алăк янаххи

177. Кинĕ ларать, хунямăшĕ çӳрет.

### Алăк кĕли

178. Алăк патĕнче Энтри пӳрни çакăнса тăрать.
179. Пĕчĕк анчăк кукланчăк, анчăк арăм çакланчăк.
180. Шăнкăрч кайăк, туппи çарăк.

### Алăк куçакки

181. Икĕ салтак хире-хирĕç тăрса пӳ виçет.

### Алăк пусахи

182. Пĕчĕк кăна тихам пур, кĕрен-тухан утланать.

### Алăк çаклатни

183. Шăнкăрт топи çат.

### Алăк çаклашки

184. Кăнтăрла усланса тăрать, каç пулсан ункă шырать.
185. Кăнтăрла усланса тăрать, каçхине шăтăка кĕрет.
186. Тĕттĕм пӳртре ват хăта кармак ярса ларать.

### Алăк тăпси

187. Вупăрлă ватта кăвапинчен туртăп.
188. Ни тулта мар, ни шалта мар шăпчăк йăва çавăрнă.
189. Ни тулта, ни шалта çерçи йăви.
190. Пĕр вăкăрăн хӳрине хĕрĕх çын туртать.
191. Пĕр кинемине кăвапинчен туртса кăларăп.
192. Пĕр çын кăвапине çĕр çын пырса тытĕ.
193. Пĕр çын тунине пин çын тытать.
194. Пĕчĕкиççĕ кинĕм пур, килен-каян ал тытать.
195. Пӳртре те мар, тулта та мар пĕр пĕчĕк кайăк йăви.
196. Тулта мар, пӳртре мар, шăпчăк йăва çавăрать.
197. Хăна килсен алăк уçать, хăй алăк хыçне пытанать.
198. Хур-кăвакал ӳстертĕм те, килен-каян ал тытать.

### Алăк тимĕрĕ

199. Пӧртре те мар, толта та мар, пĕтиç кайăк юрри.

### Алăк тытки

200. Пĕр çын тăват, пинĕ çын тытат.
201. Пĕр çын тăвать, çĕр çын тытать.
202. Пĕчĕккеç ывăлăм тухан-кĕрене алă тытать.
203. Пĕчикçеççĕ кинĕм килекене пĕрне алă тытат.

### Алăк урати

204. Пĕчĕк кăна шăллăм пур, кашни килен-каянах пĕç хушшинчен пăхса ярать.
205. Пĕчĕк Пăнтти пурне те пĕç хушшинчен пăхса выртать.

### Алăк уçса тухни

206. Тăваттăн сута тăраççĕ, пĕччен сут тататъ.

### Алăк уçса хупни

207. Иккĕшĕ тăраççĕ, иккĕшĕ выртаççĕ, пĕри кĕрсе тухать.

### Алăк хăлăпĕ

208. Асанне кăвапине кунсерен унталла-кунталла турткалаççĕ.
209. Икĕ кĕрĕвĕ ларать, хуняшшĕ ĕçлет.
210. Кайнă чух та ал парап, килнĕ чух та ал парап.
211. Катен карчăк кăвапине килен-каян турткалать.
212. Кĕнĕ чухне кукăр тиха утланса кĕрĕп.
213. Кĕрӳçĕн те пуç çапатăп, тухуçăн та тайăлатăп.
214. Килен-каян ал тытать.
215. Мана кĕнĕ чух та, тухнă чух та ал параççĕ.
216. Пăру хӳри пăкăлтĕ.
217. Пĕр вăкăрăн хӳрине пин çын пырса туртать.
218. Пĕр вăкăрăн хӳрине хĕрĕх çын туртать.
219. Пĕр кинемине кăвапинчен тартса кăларăп.
220. Пĕр çын кăвапине çĕр çын пырса тытĕ.
221. Пĕр çынна хĕрĕх çын ал параç.
222. Пĕр çын тăвать, пин çын тытать.
223. Пĕр çын тăвать, çĕр çын тытать.
224. Пĕр çын тунă, пин çын тытнă.
225. Пĕр çын тунине пин çын тытат.
226. Пĕр çын хăлхине пин çын туртать.
227. Пĕчĕкиççĕ кинĕм пур, килен-каян ал тытать.
228. Пĕчĕккеç кинĕм пур, килен-каян алă тытать.
229. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, килен-каян алă тытать.
230. Пирĕн атти кăвапине пин çын тытĕ.
231. Хур-кăвакал ӳстертĕм те, килен-каян ал тытать.

### Алăк хупни

232. Алăкран кĕтĕм, куçне хупрăм.

### Алăк янахĕсемпе алăк хăми

233. Икĕ пиччĕшĕ тăрала тăраççĕ,
Икĕ шăллĕ урлă выртаççĕ,
Вăталăххи калла-малла чупкалать.

### Алăк янахĕ, тăпси, тытки, кăканĕ

234. Иккĕшĕ тăралла тăрать,
Иккĕшĕ урлă выртать,
Пиллĕкмĕш хăй çӳрет,
Улттăмĕш çӳретет,
Çиччĕмĕш юрă юрлать.

### Алăк янаххи

235. Ик тутар тăнă çĕртех хытса кайĕç.
236. Марьепе Тарье чуптăвас пек тăраççĕ.

### Алăкран сивĕ кĕни

237. Алăкран кĕтĕм, хуçкалантăм, урай сыппине çитрĕм, хуçкалантăм.

### Алăпа пӳрнесем

238. Алапит килет, пилĕк ачине ертсе килет.
239. Алпике килĕ, пилĕк ачине ертсе килĕ.
240. Алтаккайăн пилĕк яш, пиллĕкĕш те сарă яш.
241. Алтакки килчĕ, пилĕк ачине ертсе килчĕ.
242. Ăстакасси ялĕнче пилĕк пĕртăван пурăнать.
243. Ват кĕтӳçĕн чăпăркки
Пĕр авăрлă, икĕ йӳплĕ,
Пилĕкшер вĕçлĕ.
244. Икĕ ама, кашни аман пилĕкшер ача, пиллĕкĕш те пĕр ятлă, чĕнме тĕрлĕ чĕнеççĕ.
245. Икĕ ама пилĕкшер ачаллă.
246. Икĕ аман вунă ача.
247. Икĕ аман пилĕкшер ача,
Пурте пĕр ятлă.
248. Икĕ аннен пилĕкшер ача, пиллĕкĕш те пĕр ятлă.
249. Икĕ măн турат,
Пилĕкшер вак турат.
250. Икĕ нарат, наратсерен пилĕк турат, туратсерен пилĕк нухрат.
251. Икĕ тăванăн пилĕкшер ача, пилĕкшер ачан пилĕкшер пукани.
252. Икĕ хулăн турат пилĕкшер
Вак турат кăларнă.
253. Икĕ хураман пилĕкшер турат.
254. Пĕр авăрта пилĕк турат.
255. Пĕр амаран пилĕк яш,
Пиллĕкĕш те сарă яш.
256. Пĕр йывăçăн пилĕкшер йӳплĕ ик турат пур.
257. Пĕр патакăн пилĕк тармак.
258. Пĕр юпа çинче икĕ саламат, иккĕшĕ те пилĕкшер вĕçлĕ.
259. Пинерпийĕн пилĕк яш,
Пиллĕкĕш те маттур яш.
260. Пи-пи пикече, пикече мар — пĕкече, пĕкече вĕç чĕренче, чĕренче вĕç кĕленче.

261. Пилĕк йӳплĕ сенĕк
Утăмсерен кирлĕ.
262. Тăвансемпе пĕрле эп
Икĕ эртел пулатăп,
Хуть хăçан та эртелпе
Мĕн хушнине тăватăп.
263. Юпа çумĕнче икĕ сеник, кашни сеникĕн пилĕкшер вĕç.
264. Яштака яхтăн пилĕк турат.

### Алăпа пӳрнесем, сăрланă чĕрне

265. И эппичук, эптичук,
Эптичукра хăма чук,
Хăма чукра пилĕк турат,
Турат вĕçне юр ларнă,
Юр çине юн юхнă.
266. Пĕр йывăçăн пилĕк турат,
Пилĕк турат çине юр çунă,
Юр çине юн юхнă.

### Алăпа ура пӳрнисем

267. Амăшĕ пĕр, ачи пиллĕк, тăват аман çирĕм ача.

### Алăсем

268. Аламсари ик Йăван
Авалтанпа пĕртăван.
269. Алапитсем икĕ килпе пурнаççĕ.
270. Алпикесен икĕ кил.
271. Алтаккисен икĕ çемье.
272. Икĕ Алистар пур ĕçре те пит хастар.
273. Икĕ Алтакким пур ĕçре те шанчăклă.
274. Икĕ Ăрахман нимле ĕçрен хăраман.
275. Икĕ Ăрахман пĕрне-пĕри пăрахман.
276. Касман касăк, хуçман хуçăк.
277. Пĕр наратăн пилĕкшер йӳплĕ ик турат.
278. Пĕр пек икĕ Алистар пур ĕçре те пит хастар.
279. Пĕр тĕпри ик Алихман
Пĕрне-пĕри пăрахман.
280. Пĕр юпа çумĕнче икĕ сеник.
281. Пĕр ятпа ик ĕçчен йыш пурăнать.
282. Çак тĕнчере мĕн çемçе?

### Алка

283. Антăрлă, чĕнтĕрлĕ,
Арки вĕçĕ кĕмĕллĕ.
284. Пăт-пăт тумлĕ, çĕре ӳкмĕ.
285. Тимĕл-тимĕл çĕр тимĕ.

286. Тумламӗ тумлать, ҫӗре ӳкмест.
287. Тумлать-тумлать, ҫӗре тивмест.
288. Чăнкăр-чăнкăр чăх ури, лаппин-лаппин хур ури.
289. Ылттăн тумлам татăлса ӳкмест.

### Алка, сулă

290. Тумла тумлать, ҫӗре ҫитмест,
Кӗмӗл пиҫиххи пилӗке ҫитмест.

### Алла ҫӗрӗ тăхăнни

291. Тӗпсӗр катка аш толли.

### Аллă иккӗ

292. Икӗ саккăр, пӗр тăххăр,
Тата саккăр, вун тăххăр.
Миҫе пулать?

### Алма

293. Ҫумма ҫыпăҫнă Йăмапике
Ҫапăнать те перӗнет,
Перӗнет те ҫапăнать.

### Алмаз

294. Инкӗч-минкӗч, кӗленче ҫинче пӗр пӗрчӗк.
295. Инчӗ-пинчӗ, хывăх ҫинче пӗр пӗрчӗ.

### Алри сулă

296. Хун хӗрӗ ҫӗрри ҫыти* ҫитмест.

### Алри юн тымарӗ

297. Пӗчӗкҫеҫҫӗ сунтăхра чунли пур.
298. Уҫман арчара казак пур.
299. Уҫман сунтăхра касман кассăк выртать.
300. Юр айӗпе юс чупать.

### Алса тăхăнни

301. Пӗр старикӗн пилӗк ывăл: тăваттăшӗ пӳрте кӗреҫҫӗ, пӗри чăлана кӗрсе юлать.

302. Пиллӗкӗн пӗртăван, аслă ҫулпа пыраҫҫӗ; пырсан-пырсан аслă тăванӗ пӗчӗк ҫулпа уйрăлса каять.

303. Пиллӗкӗн пӗртăван: тăваттăш киле таврăнать, пӗри хваттере кӗрсе юлать.

304. Пиллӗкӗн пынă ҫӗртрен пӗри кӗрсе юлать.

305. Пиллĕкĕн чупса пыраççĕ те, пĕри кĕрсе юлат.
306. Çăмламасне сарса парап,
Яклашкине чиксе хур.
307. Çăмли ăшне çари кĕрет.
308. Тăваттăн пӳрте кĕчĕç, пĕри синлике* юлчĕ.
309. Тĕкли ăшне çари кĕрет.
310. Тĕклине яки кĕрет.
311. Эпир пиллĕкĕн çулпа пыратпăр, пĕри аташса юлчĕ.
312. Эпир пиллĕкĕн çулпа пыраттăмăр, пĕри аташша юлчĕ.

### Алса хывни

313. Алăкран кĕтĕм — карăнтăм.

### Алсари пӳрнесем

314. Пӳртре тăваттă, чăланта пĕрре.
315. Пӳртре тăваттăн, чăланта пĕччен.

### Алсиш

316. Пилĕк ачана пĕр кĕпе.
317. Пилĕк пичче пĕртăван, пиллĕкĕшĕн пĕр кĕпе.
318. Сак çинче Сарпи выртать, шăтăкне сарса хунă — пымалла та чиксе ямалла.

### Алсиш, пӳрнеске

319. Шурă пӳртре пилĕк пĕртăван, аслинчен кĕçĕнни — юнашар.

### Алтăр

320. Алтăр-малтăр вăт такой *(йĕкĕр ывăçа тытса кăтартаççĕ),* шай-вай-вай-йо *(чавса таран ал тунине тытса кăтартаççĕ).*
321. Кăвакал хӳри хӳме çинче, пĕсехи Атăл çинче.

### Алтăр (авăрлă алтăр)

322. Пĕр авăрлă, пĕр кутлă, варри хăвăл.

### Алтăр çăлтăр

323. Вренти ăйăр тулхăрат,
Хӳри вĕçне пăлхатат,
Тулхăрсан та, шăмарсан та
Вĕренне татса каяймас.
324. Пӳрт тăрринче аврăлă
Курка çаврăнса тăрат.
325. Пӳрт тăрринче аврăлă курка çакăнса тăрать.

326. Пӳрт тӑрринче авӑрлӑ курка.

327. Ут юпинчен ҫичӗ ӑйӑр кӑкарса янӑ — юпи тавра кукалесе ҫаврӑнат, хӳрине пӑтратат, шӑмарат-тулхӑрат... Ан шӑмар, ӑйрӑм, ан тулхӑр, тул ҫутӑличчен ниҫта та каяймӑн.

### Ама

328. Ани хӗрлӗ, йӑранӗ шурӑ.

### Ампар, кӗлет уҫни

329. Ир те шӑлтӑр-шӑлтӑр, каҫ та шӑлтӑр-шӑлтӑр.

### Ана йӑранӗ

330. Вӑрӑм вырӑс ҫул кӑтартать.
331. Ойра вӑрӑм вырӑс выртать.
332. Сарлакӑшӗ сарӑлса выртать, вӑрӑмӑшӗ тӑсӑлса выртать.
333. Уй варринче масмак выртать.
334. Уй варринче тимӗр кӗвенте выртать.
335. Уйра вӑрӑм вырӑс выртать.
336. Уйра тимӗр кисӗп выртать.
337. Уй тӑрӑх пӑта тӑсӑлса выртать.

### Ана йӑранӗ е ҫул-йӗр

338. Пирӗн асаннен хирте пиҫиххи тӑсӑлса выртать.

### Ана пурусни

339. Ҫеҫен хир варринче пӗрмелӗ сӑхман.
340. Ҫеҫен хирте пӗрмеллӗ сӑкман выртат.

### Анчӑк

341. Ашшӗ аллӑ, амӑш пӗрре.

### Анчӑк кут шӑтӑкӗ

342. Куккӑр хурӑн кутӗнче Эрехметтейӗн пусси пур.

### Анчӑк хӳри

343. Шӑршланнӑ кӳлӗре кукӑр ҫӑка ларать.

### Апат ҫини

344. Вуннӑн вӑтӑрӑшне параҫҫӗ,
Вӑтӑрӑн Талпаса параҫҫӗ,
Талпасӗ тепӗр ханкӑра ярать.

345. Вуннăн тытаççĕ, вăтăра параççĕ, вăтăрăн вăраççĕ, çавăрса çапаççĕ, пĕри тытать те — шăтăка ярать.
346. Умран илтĕм, армана ятăм, хутаçăма тултартăм.
347. Умран илтĕм, армана ятăм, хутаçăма тултартăм,
Хутаçăма тултартăм та мăшт-машт туса лартăм.
348. Шур кĕпеллисем çапаççĕ,
Хĕрлĕ кĕпелли тавăрса пырать.

### Арбуз

349. Ниçтан кĕме шăтăк çук, шалта пин çын пурăнать.
350. Симĕс арчара хĕрлĕ тавар.
351. Симĕс чиркӳ ăшĕнче хура халăх кĕлтăвать.

### Арлан

352. Ик-чик чăмăртак, ула мăйлă купик.
353. Лутра вырăс — мунча ăсти.
354. Пăрçа хуçи парлакра, мăйăр хуçи вăрманта.
355. Пĕчĕк мучи мунча тăвать.
356. Çĕре кĕрсен пурăнать, çĕр çине тухсан вилет.
357. Тенис, Тенис, крепле Тенис, ула пика купилкка.

### Арлани

358. Лотра капан айĕнчен утă тортăп.

### Арласа тултарнă йĕке

359. Вĕрен тăрăх ăйăр самăртрăм.

### Арлаççи*

360. Хĕлле тотлăх, çулла выçлăх.

### Арман

361. Ĕни макăрат, хӳри хĕсĕннĕ.
362. Уй варринче талттын ташлать.
363. Уй варринче ухмах ташлать.
364. Упи макăрать, çăмĕ тăкăнать.

### Арман авăртни

365. Ĕни чупать, сĕчĕ тăкăнать.
366. Икĕ вăкăр сĕкĕшет, тĕкĕ-çăмĕ тăкăнать.
367. Кăтăрнă упа тĕкне тустарать.
368. Тумаль, тумальрен катмаль, катмалĕ катăлмĕ, хĕрĕх те пĕр çăрхалĕ, мăнтăр купи купалĕ.
369. Уй варринче ухмах çын ташлĕ.
370. Уй варринче талттин ташлĕ.

371. Уй варринче ухмах арӑм ташлӗ.
372. Упи ахӑрать, ҫӑмӗ тӑкӑнать.

### Арман чулӗ

373. Кӑвак сурӑх кӗрте ларать.
374. Ҫеҫкесӗр ҫарӑк, хӳресӗр карӑк.
375. Ула ӗне ҫине ула вӑкӑр хӑпарса кайнӑ та — йӑккать те йӑккать, йӑккать те йӑккать.
376. Ула ӗни кавлесе выртать, ула вӑкӑрӗ хырӑмне ҫулать.
377. Хӑйӗн ҫимелли ҫук, тӗнчипе тӑрантарать.

### Арпалӑх

378. Ҫулла — выҫлӑх, хӗлле — тутлӑх.
379. Хӗлле тутӑ, ҫулла выҫӑ.
380. Хӗлле мӑнтӑрланать, ҫулла начарланать.
381. Хӗллӗ мӑнтӑр, ҫулла начар.
382. Хӗлле тутлӑх, ҫулла выҫлӑх.

### Арҫури

383. Вӑкӑр пек мӗкӗрет, качака пек ҫухӑрать, ҫил-тӑвӑл пек ҫавӑрать, ҫырмана та сиктерет.

### Арча

384. Алсӑр-урасӑр мул пухать.
385. Уҫмалаллӑ, хупмалаллӑ, шӑлтӑрмаллӑ, ҫӑраллӑ.

### Асамат кӗперӗ

386. Авра-ҫавра пурҫӑн тутӑр.
387. Аллӑ-кӗллӗ кӗвентене Атӑл урлӑ пӑрахрӑм.
388. Аллӑ-кӗллӗ пиҫиххие Атӑл урлӑ ывӑтрӑм.
389. Аллӑ- кӗллӗ явлӑкӑма Атӑл урлӑ ывӑтрӑм.
390. Аллӑ-кӗллӗ явлӑкӑма ҫатан урлӑ вӗҫтертӗм.
391. Ампар урлӑ чӗн йӗвен ывӑтрӑм.
392. Араватлӑ-теветлӗ, кӗпи арки хуйӑклӑ.
393. Арпа ҫуни, пурҫӑн тилхепи.
394. Асатте пӗкки — Атӑл урлӑ.
395. Асламас кӗперри авӑнчӑк.
396. Аслӑк урлӑ пурҫӑн тӗрки каҫартӑм.
397. Атӑл урлӑ вӗрен ывӑтса каҫартӑм.
398. Атӑл урлӑ пурҫӑн тилхепе картӑм.
399. Атӑл урлӑ — Улатимӗр кӗперӗ.
400. Атӑл урлӑ хӗлӗх карнӑ.
401. Атӑл урлӑ чӗн йӗвен ывӑтрӑм.
402. Атӑл урлӑ ылтӑн хӗҫ хутӑм.
403. Вӑрман урлӑ вӑрӑм кӗпер хывӑнчӗ.
404. Кӗперӗ пур, шывӗ юхать, кӗперӗ урлӑ каҫаймаҫҫӗ.

405. Кĕперри пур, çынсем каçаймаççĕ.
406. Кĕпер урлă лентă картăм.
407. Кӳлĕ çийĕнче кĕпер пур, пусса каçма çук.
408. Пăрçа урапи, пурçăн тилхепе.
409. Пĕкĕлме* пĕкки — Атăл урлă.
410. Пурçăн пиçиххи уй урлă.
411. Пӳрт тăррине йăс йĕвен ывăтрăм.
412. Пӳрт тăрринче пурçăн пиçиххи.
413. Пӳрт урлă вĕрен ывăтрăм.
414. Пӳрт урлă сăнчăр ывăтрăм.
415. Пӳрт урлă чĕн йĕвен утăп.
416. Пӳрт урлă чĕн йĕвен утса* каçартăм.
417. Пӳрт урлă чĕн йĕвен ывăтрăм.
418. Сăрлă кĕвенте çăлкуç урлă.
419. Сăрлă пĕкĕ — сăрт урлă.
420. Сăрт урлă урхалăх карса хунă.
421. Çанталăк хĕррине* пурçăн тилхепе тыттарнă.
422. Çичĕ тĕслĕ çич хăю Атăл урлă ывтăнчĕ.
423. Çичĕ тĕслĕ çутă карăм Çавал урлă карăнчĕ.
424. Ту урлă урхалăх туртса çыхăп.
425. Уй çийĕнче тĕрлĕ тĕслĕ пĕкĕ тăрать.
426. Улатимĕр хапхине çичĕ сăрпа сăрланă.
427. Уксах карчăк Атăл урлă пиççи* пăрахĕ.
428. Ула-чăла кĕвентеме Энĕш урлă ывăтрăм.
429. Улăхра утне йĕнерленĕ, чĕлпĕрне пĕлĕтрен кăкарнă.
430. Хĕрлĕ, симĕс кĕвенте çырма урлă курăнчĕ.
431. Хульча тĕрри карта урлă.
432. Хӳхĕм хăю сехетлĕх.
433. Шарпаш урлă шараç карнă.
434. Шупăр çинче хулча тĕрри.
435. Шыв кĕвенти çырма урлă.
436. Шыв кĕвенти Шетмĕ урлă.
437. Эреветлĕ-теветлĕ, кĕпи арки хăйăклă.

### Асамат кĕперĕ, çăлтăрсем

438. Кун-хум ули* хăюллă тумпа,
Уйх-хум ули тĕрлĕ тумпа.

### Аслати авăтни

439. Аслăк çинче тимĕр кăвак лаша кĕçенет.
440. Кăмака ишĕлет.
441. Сарайăмри сар утăм асра-тĕсре кĕçенет.
442. Хелт-хет Урискит, ялт-ялт Санасал.
443. Шаклатăр-таклатăр, йыт вĕртмĕр, холă хоçмăр.

### Аслати авăтса, çиçĕм çиççе çумăр çуни

444. Чак-чак чанкăртак, айăн тимĕр пит тимĕр, акалама тинĕс пек.

## Аслатиллĕ çумăр

445. Асанкасси асса килет, Сиккасси сиксе килет, Кумкасси куçса килет, куççульне тăкса килет.

446. Асанкасси асса килĕ, Сиккасси сиксе килĕ, Йĕпреç хĕрĕ йĕрсе ярĕ.

447. Ахмача ахăрса килет, Çиçтепе çиçсе килет, Хурамал хăпса килет, çут куççуль тăкса килет.

448. Йăлтăр-йăлтăр йăлтăркка, калтăр-калтăр калтăркка, ала витĕр алтăркка.

449. Кăлтăр-кăлтăр кăлтăрман,
Пĕлĕт çинче алармань.
Миххи-муххи çăнăх тухать,
Витри- витри сĕт-çу юхать.

450. Кĕмсĕрт! турĕ, йăлт! турĕ, пăрçи шăпăр-р! тăкăнчĕ.

451. Хапăс çинче халт-халт! Явăш çинче ялт-ялт! Пирĕн çие пат-пат!

## Аслатипе çиçĕм

452. Авăр, авăр чечек, авăр кукăр чечек.
453. Алли çук — шаккать, вучĕ çук — çунать.
454. Асатте çулу шаккать, хĕлхемĕ кунта сирпĕнет.
455. Асатте урхамахĕ çĕр кисретсе кĕçенет.
456. Асламас куçĕ хĕм сапать.
457. Аслăк çинче тур лаша кĕçенет.
458. Аçтăрханта вут касаççĕ, турпасĕ кунта сирпĕнет.
459. Аçтăрханта çулу çапаççĕ, çути кунта курăнать.
460. Ахайăмăн ăйăрĕ кĕçенет, инкемĕн вăкăрĕ сĕкĕнет.
461. Вĕлт турĕ — вĕлле хыçне пытанчĕ.
462. Вĕçет вутлă ухă, никам та тытаймасть.
463. Вутланта вут çапать, Хĕлеçре хăйă çунать.
464. Йăлăм урлă йăлтăртăк.
465. Йăлт пăхать те йăлт пытанать.
466. Йăлт пăхрăм та йывăç хыçне пытантăм.
467. Йăлт пăхрăм та юман хыçне пытантăм.
468. Йăлт-ялт тутăр шăтать.
469. Йăлт! турĕ те чалт! турĕ — куç умĕнчен çухалчĕ.
470. Йăлт тăвать те, кăмака ишĕлет.
471. Кĕпĕрнаттăр урапи кĕпер çинче илтĕнет.
472. Лаша чупать, çĕр чĕтрет.
473. Малтан йăлтăркка, кайран кăлтăркка.
474. Пӳрт тăрринче папай кĕрлет.
475. Çармăс лаши кĕçенет — çавра тĕнче кисренет.
476. Çеçенхир варринче ылтăн туя выртать.
477. Çеçенхир варринче ылтăн юпа.
478. Çеçенхирте хĕр вылять, çути кунта курăнать.
479. Çĕрпе пĕлĕт хушшинче вутлă çĕлен вăй вылять.
480. Çиçтĕпере хăй çутнă, çути кунта курăнать.
481. Çулла асатте мĕкĕрет-вăрçать, хĕлле çывăрать.

482. Çӳлти касра чан çапни аял касра илтĕнет.
483. Çӳл тӳпере çӳрен ут кĕçенет.
484. Турă лаша кĕçенет — тимĕр кăвак çӳçенет.
485. Ту çинче турхан лаши кĕçенет.
486. Упăшки саспа илĕп тет, арăмĕ куçпа илĕп тет.
487. Ураскилт енче халт! Ялтра енче ялт!
488. Хантăрмакăн мăн хапхи хăлтăртатса уçăлать, Хантăрмак маткин алми ялтăртатса курăнать.
489. Хĕлеç çинче хĕç вылять, Çĕрпӳре çĕр чĕтрет.
490. Чак-чак, чанкăртак, айăн тимĕр пит тимĕр, акалама тинĕс пек.
491. Шаклатăп, маклатăп, йыт вĕртмĕп, хулă хуçмăп.
492. Явăш çинче ялт-ялт! Хапăс çинче халт-халт!
493. Янасал ялт! Ураскилт хӳлт!
494. Янасалта ялт та ялт! Ураскилтре телт те телт!
495. Янасал ялт! турĕ,
Ураскилт халт! турĕ,
Кĕртекасси тĕрр! терĕ.
496. Янаскал ялт-ялт! Ураскилт хат-хат!
497. Ярăм-ярăм йăлт та йăлт!

**Аслатиллĕ çумăр (çиçĕм, аслати, çумăр)**

498. Пĕри ялтăртаттарат, тепри шалтăртаттарат, виççĕмĕшĕ шарлаттарат.

**Аслăк**

499. Çитти-питти, пархун питти.

**Аçа çапни**

500. Чăнкăр-чанкăр,
Чăнкăр ту,
Тимĕр ту;
Чăнтри-чантри,
Тăр! Стой.

**Аçа-çиçĕм**

501. Асаттенĕн хапхийĕ
Шăрт-шарт! туса уçăлать,
Йăлт-ялт! туса йăванать.
502. Асаттен хапхи шăлт-шалт
Туса уçăлчĕ, асаттен ампарĕ
Йăлт-ялт туса хыпса кайрĕ.
503. Ват асаттен мăн хапхи
Йăлт-ялт! туса уçăлать,
Шăрт-шарт! туса хупăнать.
504. Мăн асаттен мăн хапхи
Шарт-шарт туса уçăлать.

505. Сарă айран илнĕ сарă ăйăр
Асăнмассерен кĕçенет.
506. Çӳрен кĕсри çăрхаласа килет, хура ăйăр кĕçенсе килет.
507. Çӳлти тӳпере çӳй тухнă.
508. Пиччен ăйăрĕ тапăшать,
Инкен вăкăрĕ сĕкĕшет.
509. Пӳрт тăрринче чутлă хумçа* — ялтлатат та шартлатат.
510. Çӳлти тĕнчере çуй тухнă.
511. Тетен ăйри кĕçенет, инкин вăкри сĕкĕшет.
512. Ураскилт енче халт, Ялтра енче ялт.
513. Хĕлеç çинче хĕç выллять, Çĕрпӳ енче çĕр çунать.
514. Янасал ялт-ялт! Ураскилт халт-халт!

### Аçа-çиçĕм. Аслатиллĕ çумăр

515. Упи мĕкĕрсе килет, тĕкĕ-çăмĕ тăконса пырать.

### Аçтăрхан мăйри

516. Пысăк хуранăн мимĕрĕ тутлă.

### Атă

517. Ик арап пĕртăван, çӳллĕшĕсем чĕркуççи çӳллĕш, пур çĕрте те пирĕнпе çӳреççĕ тата пире сыхлаççĕ.
518. Картлă — купăс мар, хăвăл — пичке мар, кукăр — турчка мар.
519. Пуçĕ пур, ăсĕ çук, çурăмĕ пур, ăшĕ çук.
520. Пуçĕ пур, алли-ури çук, хăй çӳрет.
521. Çемен пĕççи картлă-картлă.
522. Тĕттĕм картара çурăк хырăмлă сурăх выртать.
523. Хора — хоран мар, кокăр — торчка мар, хăвăл — катка мар.
524. Хуп-хура — хуран мар, вĕçĕ кукăр — турчка мар.
525. Хура пӳртре çурăк хырăмлă сурăх выртать.

### Атă пăти

526. Атăпа пулин те çарран çӳретĕп;
Урапа пулин те çурран çӳретĕп.
527. Хăй ура тĕпĕнче, пуçĕпĕлен çул çӳрет.

### Атă-пушмак

528. Çиме ларсан — сĕтел айĕнче,
Çывăрма выртсан — нар айĕнче.

### Атă çĕлени

529. Кантăра сысна (вăкăр) ăшне хăваласа кĕртейĕн-и?

### Атă тăхăнни

530. Ик хĕрринчен тытрăм та варринчен чышрăм.
531. Пĕри тăраниччен тепри кĕтсе тăрать.
532. Чикĕп, чикĕп, чиксе кĕртеймĕп, татах чикĕп те кĕртсех ярăп.

### Атă, чăлха тăхăнни

533. Икĕ хĕррĕнчен тытать, варрĕнчен чикет.
534. Хура ĕне шур сурăха çăтса янă.

### Атăпа çăм тăла

535. Пĕр вăкăр пĕр такана хыпса çăтса ярĕ.

### Атăл пăрĕ

536. Вăкăрĕ чĕрĕ, тирне сӳсе çакнă.

### Атăл пăрĕ ларни

537. Асатте савасăр, пуртăсăр кĕпер хыват.

### Атăл урлă каçни

538. Касрăм-касрăм, торпас полмарĕ.

### Атăл урлă пĕрене каçарни

539. Атăл урлă параппан çапса каçăр.

### Атăл урлă утă урапи каçни

540. Атăл урлă лăпсăр-лапсăр упа каçат.

### Ахрăм

541. Асатте чĕмĕ аякран илтĕнет.
542. Ăна илтмен çын та çук, ăна курнă çын та çук.
543. Вăрман варринче вăрăм чĕлхе пур, хуть кама та мăшкăлать.
544. Вирьял ачи виртлеме юратать.
545. Илтме пур, курма çук.
546. Йĕкĕрвар хыçĕнче йĕкĕлтекен йĕкĕт пур.
547. Калаçма калаçать — хăйне курма çук.
548. Куçа курăнмасть, хăлхана илтĕнет.
549. Маçакăма мĕн пулса?
Эп мĕн калап — çанах калать.
550. Мĕнпур çынпа калаçать — никама та курăнмасть.
551. Пурăнать мĕлкесĕр, калаçать чĕлхесĕр.
552. Пур çынпа та калаçать, хăйне никам та курни çук.
553. Сассине илтме пур, хуçине курма çук.
554. Сасси пур та, хăйçи çук.
555. Сасси пур, хăйне курма мехел çук.
556. Сăмах пуçне пĕлместĕп, сăмах вĕçне пуплетĕп.

557. Сăн-сăпатсăр пурăнать,
Сăмахлама юратать,
Такампа та калаçать,
Никама та курăнмасть.

558. Çăварăм çук — пуплетĕп, сăмахăм çук — виртлетĕп.

559. Çăварĕ çук, чĕлхи çук, сăмахлама ăсĕ çук, çавра тĕнче варринче вăл чухламан чĕм те çук.

560. Ту хушшинче хушса калаçакан ăста пур.

561. Ӳтсĕр пурăнать, чунсăр калаçать: илтме пур, курма çук.

562. Ӳтсĕр ӳпре сас ӳкерме пит ăста.

563. Хам аякра-аякра тăрăп, эс каланине тавăрса пырăп.

564. Хам аякра çӳретĕп, çын хыçĕнчен пуплетĕп.

565. Хапасăр пурăнать, чĕлхесĕр калаçать, курасса пĕри те курмаççĕ, илтессе пурте илтеççĕ.

566. Хăйĕн чĕлхи те çук, пур чĕлхепе те калаçма пултарать.

567. Хăлхана илтĕнет, куçа курăнмасть.

568. Хутлăхра хут-хут калаçакан пурăнать.

569. Хушăлкаран килнĕ чун хушса калать кирлĕ чух.

570. Чĕреллĕ мар — пурăнать,
Чĕлхеллĕ мар — калаçать.

571. Чунĕ çук, чĕлхи пур,
Чĕлхи çинче чĕмĕ пур:
Калаçтарсан калаçать,
Чарăнсассăн чарăнать.

572. Чухламасăр калаçать, уйламасăр сăмахлать: сасси пур, хăйне курма çук.

573. Эсрел теме ĕлки çук,
Этем теме чĕлхи çук,
Эс чĕнсессĕн чĕнет вăл,
Эс чĕнмесен чĕнмест вăл.

574. Юмахлама пĕлместĕп, йĕкĕлтеме пĕлетĕп.

## Ача

575. Алăран кайнă ал шăлли.

576. Кăтит кăтатмăш, чун йăпатмăш.

577. Кун ирттермĕш, чун йăпатмăш.

578. Тăхăр уйăх тĕрмере ларнăскер, çулталăк çурхах ăшĕнче выртнăскер, çулталăк çум çакки пулнăскер.

## Ача тапакки

579. Сак хĕрĕнче пĕр чĕрнесĕр пурне.

## Ашак

580. Вăрăм хăлхаллă — мулкач мар, чĕрнеллĕ — лаша мар.

## Ашăм юпи

581. Йĕтем варринче ват старик ларать.

582. Хура кĕççе çинче пĕр хĕр ларĕ.

### Ăвă

583. Алли çук — шаккать, вучĕ çук — çунать.

### Ăвăс

584. Лявук арăм çатăлти.
585. Ухмах хулти çатăлти.

### Ăйă

586. Лаптăк пуçлă яш каччă çĕнĕ шăтăк шырать.
587. Пĕчĕк пичи пин çапсан та вилмест.
588. Пĕчикĕç пикемпи пин çапсан та вилмĕ.

### Ăса

589. Айĕ те йĕтĕн, çийĕ те йĕтĕн, хушшинче çӳрет кукăр тăши.
590. Пĕр кăвакалăн ик сăмса.
591. Суккăр сурăх тĕкме витĕр тĕкет.
592. Суккăр така сĕкесшĕн калла-малла сиккелет.
593. Суккăр така çатан карта урлă (витĕр) сиккелет.
594. Çăтăр-çатăр хушшипе ылтăн туя ывăтрăм.

### Ăса. Пир тĕртни

595. Икĕ сĕреке хушшинче çăрттан пулă ишсе çӳрет.
596. Кантăр витĕр пĕтĕ сысна çӳрет.
597. Пăр витĕр çăрттан сикет.

### Ăсан

598. Ахан-сахан холтăрч.
599. Ахан-çахан халтăрч.
600. Хирте хĕрлĕ куçлă хĕр выллять.

### Ăсан туйĕ

601. Хура вăрманта хĕрлĕ куçлă йĕкĕтсем хĕр вăрлама тапратнă.

### Ăскăч

602. Вăрăм хӳре чакак пур, пур хурана пушатать.
603. Пĕр ачан чăмăр пуçĕ чупа-чупа шыв тултарать.
604. Тутар ачи Туйпăлат чупа-чупа шыв тултарать.
605. Чакак хӳре кинĕм пур, пур хурана пушатать.

### Ăсла вĕрени

606. Аслă ямра сим вĕрет.

## Ăс-хакăл

607. Аш арча, аш арча,
Аш арчара асл(ă) аттей;
Ир те тимес, каç та тимес,
Шухăшласа çеç ларать.
Çӳлтен те çӳлте
Мĕн çӳлте?

## Ăтăр

608. Ултă уйăх пулă çиет, çичĕ уйăх çулçă çиет.

## Ăшă

609. Алла лекмест, куçа курăнмасть.
610. Ăна куçпа курма çук, ӳтпе анчах туйма пур.
611. Кашни килтех кушак ырри.
612. Кăмака çинче кушак вылĕ.
613. Курма çук та, туйма пур.
614. Куçпа ăна курмастăп,
Ӳтпе анчах туятăп, —
Ун ыррине туйсанах
Çири тума хыватăп.
615. Кутăнла та ырă вăл, пуçăнла та ырă вăл.
616. Пирĕн килте кирли пур.
617. Пуçăнла май вулатăп —
Пурпĕр ăна ырлатăп,
Кутăнла май вулатăп —
Каллех ăна ырлатăп,
Пуçăнла та ырă вăл, кутăнла та ырă вăл.
618. Пӳртре мĕн курăнмасть?
619. Çуллахи кун пӳртре те пур, тулта та пур, хĕллехи кун пӳртре кăна.
620. Туйма лайăх туятăп, курма пачах курмастăп.
621. Унай кăна хырлăх пур,
Ун ăшĕнче ырлăх пур.
622. Хăй пӳрт тулли, çапах та ăна курма çук.
623. Хăй пӳрт тулли тулса тăрать, хăйне çапах курма çук.
624. Хĕвелпеле туслăскер,
Хĕле кĕрсен хаклăскер.
625. Хĕлле — хӳтлĕх тулли, çулла — тĕнче тулли.
626. Ытарайми Ĕреçук,
Ытамлама ĕрет çук.

## Валашка

627. Пĕр пичи икĕ пуçлă.
628. Хĕлле — кăмăр*, çулла — валак.
629. Хĕлле мăнтăрланать, çулла начарланать.

630. Хĕлле мăнтăрланат, çулла ырханланат.
631. Хĕлле мăнтăр, çулла начар.
632. Хĕлле мăнтăр, çулла ырхан.

### Валашка, пусă валашки

633. Хĕлле çатрака, çулла шулап.

### Варинкке

634. Ĕçет-ĕçет, тăрана пĕлмест,
Çăварĕнчен яран,
Кутĕнчен юхать.

### Вар-хырăм

635. Анне панă шăрттан пур.

### Ват

636. Кăмака айĕнче симĕс пукане ташлĕ.
637. Кăмака çинче кăвак такмак* çакса тăрĕ*.
638. Мăн сакайĕнче пукане ташлать.
639. Пĕр такмакра симĕс кĕрчеме.
640. Тĕп сакайĕнче симĕс тапка çакăнса тăрать.

### Вăкăр

641. Сенĕкĕ малта, шăпăрĕ кайра, ырçи вăта çĕрĕнче, икĕ енче тăватă тăпачă, тăваттăш те авăн çапаççĕ.

### Вăлта

642. Пулли тинĕсре, хӳри сапур çинче.

### Вăрăм сăрка

643. Пӳрт хыçне сӳре çакрăм.

### Вăрăм туна

644. Вĕçет каять, сасси çинçе, сăмси вăрăм; кам ăна вĕлерет — юн тăкать.
645. Кайăк мар, енлĕк мар, вĕçет — авăтать, ларать — чарăнать, вĕлерсен — хăв юнна тăкан.
646. Пĕчик кайăк вĕçсе пырать, сăмси вăрăм, сасси çинçе, кам ăна вĕлерет — этем юнне юхтарать.

### Вăрман

647. Атăл шывĕ хумханать,
Хура халăх пухăнать.

648. Пӗр тӗнчере пин ҫанат,
Пин ҫанатӑн пин салтат,
Кашни салтатӑн пин ҫунат.
649. Ҫулла симӗс, хӗлле ҫара.
650. Ҫулла тумланать, хӗлле пӑрахать.

**Вӑрман касни**

651. Сӑр урлӑ ям ярӑп.

**Вӑрман касни, пуртӑ сасси**

652. Сӗм вӑрманта йӑт* вӗрет.

**Вӑтӑр**

653. Икӗ саккӑр — вун улттӑ, тата саккӑр та улттӑ. Миҫе пулчӗ?

**Вӑхӑт**

654. Асламас кайӑкӗ килет те иртет, килет те иртет.
655. Ӗҫлекеншӗн нихҫан та ҫитмест, юлхав ҫыншӑн ытлашши.
656. Кӑнтӑрлаччен вӑкӑр кӳлсе каять, кӑнтӑрларан мулкачпа каять.
657. Килет те иртет; тарса хӑтӑлма ҫук, хӑваласа ҫитме ҫук.
658. Маншӑн та килет, саншӑн та килет; маншӑн та иртет, саншӑн та иртет.
659. Патшана та пӑхӑнмасть, тиеке те тӑхтамасть.
660. Пӗлӗт мар — шӑвать, юхӑм мар — иртет.
661. Тем пек тытса чарасчӗ — тытса чарма мехел ҫук.
662. Шур сухаллӑ хӑта пур:
Вохӑтлӑ килсе вохӑтлӑ
Кайма юратать.
663. Шур сухаллӑ хӑта пур, хӑтлӑ килсе хӑтлӑ кайма юратать.
664. Яланах шӑвать — хӑйӗн ҫитес ҫӗрӗ ҫук, яланахваскать — хӑйӗн тӑвас ӗҫӗ те ҫук.

**Вӑхӑт. Ӗмӗр**

665. Мӗн япала вырӑнтан тапранмасть, иртсе каять?

**Вӑчӑра**

666. Икӗрчӗк-кукӑрчӑк, утмӑл ик кукӑрчӑк.

**Вӗлле**

667. Вити кӗтессӗр, сурӑхӗсем хӳресӗр.
668. Кӑмака айӗнче хыҫлӑ пукан ларать.
669. Сурӑхӗ йышлӑ, вити тӑвӑр, алӑкӗн тӑпси ҫук.

**Вӗллепе пыл хурчӗ**

670. Вити кӗтессӗр, сурӑхӗ хӳресӗр.

### Вĕллери пыл

671. Хăвăлта тутли пур; çиес килет те кĕрес килмест.

### Вĕллери хурт

672. Пĕчĕкçеççĕ кайăк, Турă пӳрчĕ урлă манăн выйăм çунать тесе вĕççе каçать.

### Вĕлле хурчĕ

673. Асаттенĕн аллă арча Турă панă вир пĕрчи.
674. Ăшĕ йăтăнни йĕрсе ларать, кушак пиçиххи çыхни кулса ларать.
675. Вĕр, вĕр вĕрене,
Вĕрене варри вĕр ылттăн,
Çӳппи-çаппи пин ылттăн.
676. Мамми хĕрĕ хора хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвĕ.
677. Нăр-нар! терĕ те йывăç тăрне улăхса ларчĕ.
678. Пахча, пахча ăшĕнче мунча, мунчана çинçе пилĕклĕ хĕр шыв çĕклет.
679. Пĕр пуянăн пахчи пур,
Пахчи варринче мунчи пур,
Çинçе пилĕк хĕрĕсем
Çав мунчана шыв тултать.
680. Пĕр пуянăн пахчи пур,
Пахчи пур та мунчи пур,
Çинче пилĕк кинĕ пур,
Шав мунчана шыв тултать.
681. Пĕчĕкçеççĕ пӳлĕмре
Чĕнтĕр çыхать хĕр ача.
682. Пӳрт тавралла йĕр пур,
Кăтра çӳçлĕ хĕр пур,
Илĕттĕм — те мулăм çук.
683. Сăр-сăр, сăрма калак,
Тиксĕр катман тик-калак.
684. Çинçе пилĕк, сарă хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвать.
685. Тăп-тăп тăпиçăм,
Тăпи ура хуçăкçăм,
Пиçен-таçан курăкçăм,
Курăк çине пусаймăп.
686. Хунĕм хĕрĕ хура хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвĕ.
687. Хун хĕрĕ хунт* илет, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвать.
688. Хун хĕрĕ хура хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕр тăвĕ.

### Вĕлтĕрен

689. Вут пек пĕçерет.
690. Ешĕл ăйăр кĕçенсе тăрать, пырса тытсан çыртса илет.
691. Карта витĕр кăшкăрать.
692. Кăвар мар, çунтарать.

693. Мĕнле курăка суккăр та пĕлет?

694. Пӳрт айккинче усал инке, иртме-кайма майĕ çук, чĕпĕтсе илет, вĕтсе илет.

695. Çатан витĕр кипке парать.

696. Хăй вут мар, çапах та пулин вĕтелет.

697. Шăтан куштан, прати куштан.

698. Эс ал тăссан вăл сана вут хыптарать.

### Вĕрене

699. Çулла симĕс хыс тăхăнать, кĕркунне сарă кĕрĕк тăхăнать.

### Вĕретнĕ сĕт: хăйми, сĕчĕ, хысми

700. Тăрри сарă, варри шурă, тĕпĕ сăрă*.

### Вĕсем виççĕн кăна: аслашшĕ, ашшĕ тата ывăлĕ

701. Икĕ ашшĕпе икĕ ывăлĕ виçĕ çăмарта тупнă та хăйсен хушшинче пайланă, кашнине пĕрер çăмарта тивнĕ. Епле апла?

### Вĕçен кайăк

702. Пусмасăр çӳле улăхать, вĕренсĕр çĕре анать.

703. Хăна килчĕ, хăва тăрне ларчĕ.

### Вĕчев курки

704. Кăвакалĕ чăмса пырать, хӳри кăнтарса тăрать.

### Вилĕм

705. Ват хăта хăвалаcard килет, хыçăмран çитсе килет.

706. Çӳрерĕм, çӳрерĕм те калла килме çук çĕре пырса кĕтĕм.

### Вир

707. Алтăм пик, алтăм пик, çĕр çирĕм çăмарта.

708. Вĕт вăрманăн тăрринче темиçе пин çăмарта.

709. Пĕр йывăç çинче çĕр çирĕм çăмарта.

710. Пĕчĕкçеççĕ хутаç пур, хутаç тулли сарă тыр.

### Вир тӳни

711. Ир те чак-чак, каç та чак-чак, валиккĕм вак-вак.

712. Тӳп-тӳп, тӳпен кĕлти, мĕн кĕлти? Ваш-ваш кĕлти, мĕн кĕлти?

713. Шурă йыттăм так-так тăвать, икĕ хăлхи шак-шак тăвать.

### Вирт яни

714. Хĕрлĕ ĕне пĕтĕм çеçен хире çисе ярĕ.

715. Хĕрлĕ вăкăр пĕтĕм хире хирсе тухĕ.

## Витре

716. Икĕ пичче кунĕпех шыва кĕме каяççĕ.
717. Ик чипер хĕр шыва каять.
718. Икĕ хĕр шыва кĕме каять.
719. Икĕ чипер хĕрĕм пур, ир те, каç та шыва кĕме каять.
720. Ир те вик-вик! каç та вик-вик!
Мĕншĕн вик-вик пултăм-ши?
721. Кайнă чух чиперех каять, килнĕ чух хăсса килет.
722. Кайнă чух юрласа кайнă, килнĕ чух макăрса килнĕ.
723. Кайнă чух — юрла-юрла, килнĕ чух — хăса-хăса.
724. Ластăр арăмĕн кучĕ — лач шыв.
725. Лутăр карчăкăн кучĕ лачкам.
726. Нестĕр арăмĕ — йĕпе кут.
727. Пасартан килен Паймичей пилĕк пиçихиллĕ, икĕ хăлхаллă.
728. Сӳс вĕрен вĕçĕнче ăйăр вылять.
729. Хăла кĕсре ик хăлхине тăратса шыва анать.
730. Хăла кĕсре çăла анать ик хăлхине тăратса.
731. Хăлхи иккĕ, ури çук.
732. Хăлхисем пур та — илтмест.
733. Хĕлĕп арăмĕ — йĕпе пуç.
734. Хĕлĕп арăмĕн йĕпе кучĕ.
735. Хусантан килнĕ хура лаша шăмара-шăмара шыв ĕçет.
736. Чăри-чари ту чари.

## Витре, кĕвенте

737. Виçĕ хĕр шыва аннă, иккĕшĕ шыва кайнă, пĕри çыранта хĕртĕнсе выртать.

## Витре тĕпĕ

738. Ластар арăм кучĕ лаччăк шыв.

## Витресем

739. Икĕ тăван куллен шыва кĕреççĕ.

## Виçе

740. Ултă ура, икĕ туя,
Каçанĕ çул, варри чĕлхе,
Туйи çӳреместĕ;
Ăсли ăнкарать,
Ухмах тăнлать.

## Вун икĕ уйăх

741. Вун икĕ паттăр пулĕ,
Пĕрин хыççăн тепри пырĕ;
Кайĕç-кайĕç те
Калла çаврăнса килĕç.

### Вут

742. Курма — курккам, тытма — хăрам.
743. Куçпа курма хитре, алла тытма вĕри.
744. Лаши чупать, хӳри юлать.
745. Мăн асатте хуранне çĕр аллă çын йăтаймасть.
746. Пĕр пасмана пылăм пур, вăю çитсен тытса çи (илсе кай).
747. Çак пӳртре мĕн йăвăр?
748. Çитерсен — чĕрĕлет, ĕçтерсен — вилет.
749. Шурă çиет, хура хăсат.

### Вут вучаххипе кĕл вучаххи

750. Икĕ куян кута-кутăн выртать.

### Вут, кăвайт

751. Пĕр чунсăрри тепĕр чунсăррин чунне илет.

### Вут-кăвар

752. Пăхма çăмăл, çĕклеме йывăр.

### Вут кăларни тата сӳнтерни

753. Ту çине хăпартăм,
Ту çинчен антăм,
Çӳрен ут утлантăм,
Кӳлле сикрĕм: чăш-ш!
754. Хăвăл чул хыçĕнче хĕрлĕ тумлă хĕр выртать.
755. Чулра çывăрĕ,
Тимĕртен вăранĕ,
Йывăç тăрăх чупĕ,
Кайăк пулса вĕçĕ.

### Вут пуççи

756. Пуççĕнчен тытсан çыртать, кутĕнчен тытсан парать.

### Вут çинчи хуран

757. Хура ĕнене хĕрлĕ йыт çыртать.
758. Хура йытти çакăнса тăрать, хĕрлĕ йытти вĕрсе тăрать.
759. Хура йытти харсăррăн пăхать, хĕрлĕ йытти çаплах вĕрет.

### Вут çулăмĕ

760. Çатан карта тăрринче хĕрлĕ автан чупса çӳрĕ.

### Вут çунни

761. Пĕр чунсăрскер тепĕр чунсăрскерĕн чунне илет.

### Вут тамăк

762. Ват асатте хуранне пилĕк пин çын йăтаймасть.

### Вут, хуран

763. Хĕрлĕ вырăспа хура тутар çапăçать.

### Вутă касни

764. Суккăр автан сиксе авăтать.

### Вутă пуленки, вут сыппи

765. Вăрăм терĕççĕ те татрĕççĕ,
Хулăм терĕççĕ те çурчĕççĕ,
Кайран вутта хучĕççĕ.
766. Кăмака çинче суккăр старик выртать.
767. Кăмака çинче чунсăр старик выртать.
768. Кăмакара Йăкăнат пĕççи выртать.

### Вутă çурни

769. Кукăр автан сиксе автать.
770. Эп хайт! терĕм,
Вăл шарт! турĕ.
Эп ух! терĕм,
Вăл кӳп! турĕ,
Çăварне карчĕ,
Тăрса тарчĕ,
Хĕвĕме кĕрсе ларчĕ.

### Вутă хутни

771. Аслăк айĕнче хĕрлĕ автан хирĕлсе авăтать.
772. Йăкăнат пуçĕ кăмакара выртать.
773. Кăмакара йĕп ташлĕ.
774. Мами хыçне шăрпăк чиксе тултарăп.
775. Пĕр карчăк кутне хĕрĕх шăрпăк кĕрĕ.
776. Пĕр шăтăка çĕр савăл çапрĕç.

### Вутпа тĕтĕм

777. Ашшĕ атă тăхăниччен ывăлĕ Самара çитет.
778. Ашшĕ атă тăхăниччен ывăлĕ Чĕмпĕре çитет.
779. Ашшĕ пӳртрен тухиччен ывăлĕ Хусана çитнĕ.
780. Ашшĕ çураличчен ывăлĕ çара каять.
781. Ĕни картара мĕкĕрет, пăрушĕ тӳпере çӳрет.

### Вучах

782. Икĕ кайăк пуçа-пуçăн выртаççĕ.
783. Икĕ мулкачă кута-кутăн выртаççĕ.
784. Улпут чашки тăп-тулли.
785. Ура вĕçлĕ вырăс выртат.

### Вучах, хуран

786. Ашшĕ ачине йăтса тăрать.

### Вучах, хуран, çăмах

787. Чул хула, чул хула,
Чул хулара тимĕр хула,
Тимĕр хулара шăмăсăр халăх.

### Вучахри кăвар

788. Тиркĕ толли тип салма.

### Вучахри кĕл

789. Кахал* куян вырта тăрăх самăрăлать.
790. Ашшĕ атă тăхăначчен ывăлĕ Хусанта.

### Вучахсем

791. Икĕ кайăк хире-хирĕç пăхса лараççĕ.

### Выльăхсем пуçтарни

792. Юмах ярăп та юптарăп,
Юплă çăпала хыптарăп.

### Вырăн сарни-пуçтарни

793. Ир те кăшăр-кăшăр, каç та кăшăр-кăшăр.
794. Каç — улăх, ир — купа.
795. Тĕр-тĕме, ăна тĕрме мĕнĕ пур? Хуç-хуçма, ăна хуçма мĕнĕ пур?
796. Хуç-хуçмалла, ăна хуçасси мĕн пур? Тĕр-тĕрмелле, ăна тĕресси мĕн пур?

### Гидроплан

797. Хăй сывлăшра вĕçет, канма тинĕсе анать.

### Енчĕк

798. Асаннен тути пĕрĕннĕ.
799. Кăр! шупăр пĕрмечи.

800. Кĕлет алăк туртмăш, Энтри йытти пĕлтермĕш.
801. Хĕрлĕ хĕрхин тăватă хӳре.
802. Хĕрлĕ шăшин тăватă хӳре.
803. Хуш хутаççи хунт хушать.
804. Чипер акамăн тути пĕрĕнчĕк.
805. Эсех пуян, çăварна каран та ларан.

### Енчĕк çăварĕ

806. Кăрт туртмĕш, куклетмĕш, Энтĕри арăмĕ тухатмăш.

### Енчĕк хутаççи

807. Чипер акканăн тути пĕрĕнчĕк.

### Ĕмĕлке

808. Кăçта кăна кайсан та хура кĕсрем* хуса çитет.
809. Кăçта кăна кайсан та хура сухалăм хыçран юлмасть.
810. Кирек кăçта кайсан та хура кĕсрем хыçран пырать.
811. Утсан утать, чупсан чупать, тăрсан тăрать, ырмасть-тумасть, хыçран юлмасть.
812. Хĕвел куçне курăнмаç, хуçинчен хăпмаç.
813. Хура сухал хăтам пур, хăçта кайсан та хыçран пырать.
814. Хуçинчен тарçи пысăккă.

### Ĕмĕр

815. Алăпала тытма çук, аршăнпала виçме çук, аршăнпала виçсен те — вăрăмăшне пĕлме çук.
816. Вăрăм та пулĕ, кĕске те пулĕ — вăрăмăшне пĕлме хĕн пулĕ.
817. Виçсе панă япалан вăрăмăшне пĕлместĕп.
818. Мĕнле вăрăм тăсăлсан та мĕн пĕчĕкрен çав вĕрене виçетĕп.
819. Пĕр вăрăмкка вĕрен пур, мĕн пĕчĕкрен çав вĕрене виçетĕп.
820. Пӳлĕх явнă вĕренĕн вĕçне-хĕрне пĕлме çук.
821. Çут тĕнчене çуралтăм, çип аврама пуçларăм; çут тĕнчерен çухалăп — тин аврама пăрахăп.

### Ĕне

822. Алаппа сенĕк шыва каяççĕ.
823. Алăк умĕнче айтар капанĕ, айĕнче тăватă тăравăç, пĕр енче — ик йӳплĕ сенĕк, тепĕр енче — çулăк, хăнтăр-мăнтăр, çутă çăлтăр.
824. Алăк умĕнче утă капанĕ, айĕнче тăватă юпа, умĕнче икĕ сенĕк, хыçĕнче пĕр çулăк.
825. Алппан-салппан,
Алама чаппан,
Тăватă тĕревĕç,
Пĕр пăтраткăç,
Кукăр хăнтăр,
Çутă çăлтăр.

826. Анкартинче пĕр çĕмел, айĕнче тăвата юпа, умĕнче икĕ сенĕк, хыçĕнче пĕр çулăк.
827. Апчăк-капчăк, алама чаппан, тăвата тăравăç, пĕр пăлхавăç, кукăр хăнтăр çутă çăлтăр.
828. Икĕ Махмати, пĕр Ахмати, пĕр çĕмел, пĕр çулăк, тăвата тĕрев.
829. Икĕ сĕкевĕç, тăвата çӳревĕç, пĕр сĕлтевĕç.
830. Кайри кăмака, малти ухват.
831. Кучĕ çулха, варри пичĕке, тăрри сенĕк.
832. Лăпăпа, сенĕкпе шыва каять.
833. Малта сенĕк, кайра çулкă, варринче пичке.
834. Малта сенĕк, хыçалта шăпăр.
835. Малти сенĕк, хыçалти шăпăр.
836. Ну тесен — чарăнать, тпру тесен — утать.
837. Пĕр вĕçĕ ухват, пĕр вĕçĕ шăпăр, варри пӳлме.
838. Пĕр вĕç сенĕк пек, пĕр вĕç солкă пек, вота çĕрĕнчи пичĕке пек.
839. Пĕр кĕлетĕн тăвата тĕке.
840. Пĕр пуçĕ сенĕк, тепĕр пуçĕ çолкă.
841. Пĕр пуçĕ ухват, тепĕр пуçĕ мелке, варри — пичке.
842. Пирĕн инке ирхине килтен тухса каять те каçхине кĕпи аркине тавăрса килет.
843. Пуçĕ — сенĕк, хырăмĕ — пичке, хӳри — милке.
844. Пуçĕ — ухват, хӳри — саламат.
845. Сенĕкĕ малта, шăпăрĕ хыçалта, ырçи варринче.
846. Сенĕкне тăратнă, ырçине çакнă, çулăкне сĕтĕрсе пырать.
847. Сенĕкне тăратнă, ырçине çакнă, шăпăрне хĕстернĕ.
848. Сенки малта, çак йывăççи вăта çĕрте, пăлтăрĕ хыçалта.
849. Сенки малта, ырçи* варĕнче, шăпăрĕ кайра.
850. Сенки сиктерсе пырĕ, çулки шăлса пырĕ, ырçи тулса пырĕ.
851. Çӳпçи валтан, хорси хыççăн.
852. Çӳпçи малтан, хурси хыççăн.
853. Тăвата ывăлĕ пылчăк çăрать, пĕри курăк çăлать.
854. Тăваттăн таптаççĕ, тăваттăшĕ çакăнса тăраççĕ, иккĕшĕ чикет, пĕри çапать.
855. Тăпăр-тăпăр тăваттă, сĕкки-мĕкки иккĕ.
856. Тăрри сенĕклĕх, кучĕ çулăклăх, варри çӳпçелĕх.
857. Тĕпĕр-тĕпĕр тăваттă, Ĕлĕксантăр иккĕ, Хĕветĕр, мĕскĕн, хăй пĕччен.
858. Хӳри çулăк, măйраки сенĕк, варри ырçă.
859. Ырçи шыв ĕçĕ, кăвак кăвакарчăн вăйă вылĕ.

## Ĕне вак патне пыни

860. Ырçапала сеник шу патне анни.

## Ĕне каяшĕ

861. Картлă-картлă пашалу, йытта парсан — йыт çимест.

## Ĕне кĕтĕвĕ кĕни

862. Серте татма кайнă хĕрсем юрла-юрла таврăнаççĕ.

### Ĕне мăйраки

863. Кукăр йывăç çине юр çумасть.
864. Кукăр патак çумне юр çыпăçмасть.
865. Кукăр турата пурак лармас.
866. Мĕн пасарин пасарĕ, пушăт йывăççи пасармĕ.
867. Мĕн пасарин пасарĕ, шур пушăт йывăççи пасармасть.
868. Палан йывăçне пас тытмас.
869. Палан йывăçне пас тытмĕ.
870. Пин йывăçа пас тытĕ, ик йывăçа пас тытмĕ.
871. Пур-пур йывăç пасарать, пушăт йывăçĕ пасармасть.
872. Сайра акипе Майра аки хире-хирĕç.
873. Тула тухсан пасармасть, пӳрте кĕрсен пасарать.

### Ĕне мăйраки, хырăмĕ, хӳри

874. Сенĕкĕ малта, пички варĕнче, шăпăрĕ хыçалта.

### Ĕне пăх

875. Пăсра çулă нимĕр ларат.
876. Çеçен хир варринче кĕсел чашки ларать.

### Ĕне сăмса çулани

877. Пĕр мелкепе икĕ кăмака шăлăп.
878. Икĕ вучахха пĕр вăт касси.

### Ĕне суни

879. Пĕр вакка тăватă майра шăрать.
880. Пĕр кӳлле тăватă çăлă юхса кĕрет.
881. Пĕр кӳлле икĕ енчен икшер çăл юхса кĕрет.
882. Пĕр хĕр тăватă вакăран шыв илет.
883. Тăватă насус пĕр çĕре пĕрĕхет.
884. Тăватă пĕр тăван пĕр шăтăка шăрать.
885. Тăватă салтак пĕр витрене шăрать.
886. Тăватă çăлкуç пĕр кӳлле пухăнать.
887. Тăватă тăван тăваттăн пĕр шăтăка шăрса тăрать.
888. Тăватă тутар пĕр чилеке шăрар*.
889. Тăватă хĕр пĕр шăтăк шыраççĕ.
890. Тăваттăн пĕртăван, тăваттăш те пĕр шăтăка шăраççĕ.
891. Тăват тутар пĕр çĕре шăраççĕ.

### Ĕне, сурăх, сысна чĕччисем

892. Тăванпилин тăваттă, Илемпилин иккĕ, Сарампин саккăр.
893. Саламатăн саккăр, туй çынниййĕн тăваттă, эсремейĕн иккĕ.
894. Саплăкĕ пур та, çĕвви çук.
895. Сарампин саккăр, Тăвампин тăваттă, Илемпин иккĕ.

### Ĕне сысни

896. Лап-лап, лап-лап,
Лап-лап çине пăнть!
897. Тетвит инке кĕсел антарать.

### Ĕне çилли

898. Аслăк айĕнче тăпăрчă хутаççи çакăнса тăрать.
899. Вырăн айĕнче тăвата кĕпçе,
Тăваттăшĕ те тан кĕпçе.
900. Енчĕкре сĕт йӳçмест.
901. Кăмака айĕнче мами тăпки çакăнса тăрать.
902. Кăмака айĕнче сăпка çакăнса тăрать.
903. Кăмака айĕнче тăпка* çакăнса тăрать.
904. Пĕр кăмака айĕнче тăвата хутаç.
905. Пĕр сăпка айĕнче тăвата пĕртăван çумăртан хупăрланса лараççĕ.
906. Пĕр ту айĕнче тăвата çăл.
907. Пӳрт хыçĕнче тăпка çакăнса тăрать.
908. Пӳрт хыçĕнче тыпка çакăнса тăрĕ.
909. Сак айĕнче сарă такмак çакăнса тăрать.
910. Тăват кăвакал пĕр çĕрте.
911. Хутаçне хуçи темле силлесен те кăмăс пулас çук.

### Ĕне тути

912. Хĕлле те йĕп-йĕпе, çулла та йĕп-йĕпе, кĕрлĕ-çурлă та типмест.

### Ĕне тутипе чĕлхи

913. Икĕ çăрана пĕр çăраççи.

### Ĕне чĕччи

914. Аслăк анче тиркĕ çакăнса тăрать.
915. Кăмака çинче тавата тăпка çакса тăрĕ*.
916. Кӳме айĕнче тăвата тӳме.
917. Лупас айĕнче тăват кĕпçе, тăваттăш те тутлă кĕпçе.
918. Путмар айĕнче тăват кĕпçе, тăваттăш те тан кĕпçе.
919. Тӳшек айĕнче тăвата йăвача.

### Ĕне шыв ĕçни

920. Ырçи шыв ĕçĕ, кăвак кăвакарчăн вăй вылĕ.

### Ĕне юр-варĕ

921. Кăкăр уççи пĕç хушши.

## Ĕнсе

922. Хулăн йывăç çине çăк çакрăм.
923. Пучинке пăталкки пуçхĕрлĕ.

## Икерчĕ пĕçерни

924. Ел, ел, елсе пырать, уксах салтак siksе пырать.
925. Епрем кутне епретĕп.
926. Ихĕртĕп, чĕкĕртĕп, вутра пĕçерĕп, кайран хăвна çитерĕп.
927. Йĕрĕп-йĕрĕп йĕпретĕп, Ерми питне чăшкăртăп.
928. Йывăç ту, йывăç ту çинче чул ту, чул ту çинче чугун ту, чугун ту çинче йӳç ту, йӳç ту çинче ĕне, ĕне çинче чăхă.
929. Кĕлтĕртрĕм, пĕлтĕртрĕм, кăмакана ĕлкĕртрĕм.
930. Куçма кĕрӳ хускалать, Лапата кĕрӳ лап ларать.
931. Лупан калать, лупкалать, кусан калать, кускалать.
932. Çӳл ту, çӳл ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче пăрçа ани, пăрçа ани çинче ĕне хӳри.
933. Тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче пăри капанĕ, пăри капанĕ çинче ĕне хӳри.
934. Тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче тырă уй, тырă уйĕнче хура ĕне.
935. Тăм ту, тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче урпа, урпа çинче ĕне ашса çӳрет.
936. Тăм ту, тăм ту çинче чугун ту, чугун ту çинче урпа, урпа çинче шур мулкач кускаласа çӳрĕ.
937. Тăм ту, тăм ту хĕрринче чугун ту, чугун ту хĕрринче урпа калчи, урпа калчи çинче шур упа выртса йăванать.
938. Тăн ту, тăн ту çинче чугун ту, чугун ту çине орпа акăп, онтан ĕне хӳрипала сĕркелĕп.
939. Тăн тухри, тăн тухри, тăн тухри çинче тимĕр тухри, тимĕр тухри çинче навус, навус ани çинче чăхă выртса йăванĕ.
940. Тимĕр çине сартарăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп, кайран ачасене таткаласа парăп.
941. Халап ятăм, халлантартăм, Йĕмпикене чĕкĕртрĕм, Туйпикене тасаттартăм.
942. Юмах ярăп, юптарăп, юмăç кутне чĕçкĕр(т)ĕп*.
943. Юмах ятăм, юптартăм, юплĕ çăмах хыптартăм.
944. Юмăç карчăк кутне йĕпретĕп.
945. Юмăç ярăп, йепретĕп, Ерли кутне чакăртăп.
946. Ярăп-ярăп йĕпретĕп, Ерми кутне йĕпретĕп.
947. Юмах ятăм, юптартăм, юплĕ çăмах хыптартăм.
948. Ярăп-ярăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп.
949. Ярăп-ярăп, яра парăп, Ерми кутне епретĕп.
950. Ярăп, ярăп, яр-р! ярăп, тимĕр çине сарса хурăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп.

## Икĕ ура, хырăм, икĕ алă тата пуç, çӳç, çӳç çинчи пыйтăсем

951. Икĕ патак, пĕр пичке, ун çинче тата икĕ патак тата арпус, арпус çинче вăрман, вăрман çинче тĕрлĕрен кайăк.

### Ирхи сывлăм

952. Шурăмпуçпе çуралать те хĕвел тухсан качча каять.

### Ирхи тăм

953. Чупса-чупса пынă чух кĕмĕл çĕрĕ тухрĕ ӳкрĕ, уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.

### Ишкев*

954. Каялла мăйрака, лаптак кут.

### Йăва

955. Ик чак — пĕр чăмăртак.

### Йăва туни

956. Алăсăр, портăсăр пӳрт лартĕ.

### Йăвача

957. Сар мăйăрăн хуппи çук, вак мăйăрăн тĕшши çук.
958. Шур мăйăрăн тулĕ çук, вак мăйăрăн тĕшши çук.

### Йăмра

959. Вăрт-вăрт, вăртан килен, нимче хули Микули.

### Йăмра туратти

960. К... чиксен те хулхине кăларать.

### Йăмра, турахуп

961. Тăрри хĕрĕх, тĕпĕ пĕрре.

### Йăран

962. Ойра вăрăм вырăс выртĕ.
963. Уй варринче картлă кĕвенте выртĕ.
964. Хирте пĕр вăрăм вырăс выртать.

### Йăран çинчи кишĕр

965. Йăран-йăран йĕс тукмак.

### Йăрхалăх

966. Пĕчик пиччен пӳрни кукăр.

### Йăрхах

967. Кунĕн-çĕрĕн тумтир йатать, пĕр те ывăнмасть.

### Йĕвен

968. Икĕ енне уйăрнă, ăйăр çăварне хайăрнă.
969. Йĕс калпакăм йĕри-тавра çĕтĕк-çурăк.
970. Пĕчĕк кăна пура ăйăра пуç пулать.
971. Янахĕ пур — кавлеймест, хĕври пур — саланмасть.

### Йĕке

972. Вĕрен вĕççĕн ăйăр мăнтăрланать.
973. Вĕрен вĕççĕн тиха (лаша, сысна) самăртăп.
974. Виççĕ çаврăнăп та кĕрт хывăп.
975. Ик хырăмлă, пĕр пилĕклĕ.
976. Килтен киле çӳресе çие юлтăм.
977. Мĕн чухлĕ çаврăнать, çавăн чухлĕ хулăнланать.
978. Пĕр вĕçĕ пымак, тепĕр вĕçĕ шĕвĕр.
979. Пĕр лашана вĕрен вĕççĕн вылятăп.
980. Пĕр хĕр кускала-кускала пĕтĕ пулнă.
981. Пĕчĕк йыттăм чупа-чупа çӳресе мăнтăрланчĕ.
982. Пĕчĕк кăна пĕр ача чупа-чупа çăк туртать.
983. Пĕчĕкçеççĕ тихам пур, вĕренте тăрать — самăрлать.
984. Пĕчĕкçеççĕ тиха (тур лаша) вĕрен вĕççĕн тăранать.
985. Пĕчĕкçеççĕ тур лаша вĕрен вĕççĕн тăранать.
986. Пĕчĕкçеççĕ утăм пур, вĕрен вĕççĕн мăнтăрланать.
987. Пĕчиккĕç утăм пур, вĕрен вĕççĕн самăрлать.
988. Хĕсĕр тынам пурччĕ, чупа-чупа пĕтĕ пулчĕ.
989. Чĕлпĕр вĕççĕн лаша мăнтăрланать.
990. Шăлти-шалти Микулай, çинçе пуçĕ çӳлелле.
991. Шурă сурăх анаталла-тăвалла чупсах самăрлать.
992. Ылтăмпике ывăнмасть,
Çаврăнать те çаврăнать,
Çаврăнмассайра самăрлать.

### Йĕке, кĕнчеле

993. Йывăç, йывăç тăрринче йĕтем, йĕтем варринче вар шăччи.
994. Пĕр ăйăра вĕрен вĕççĕн çитереççĕ.

### Йĕке тулни

995. Лара-тăра пĕлмерĕм: Тукасран Анаткаса, Анаткасран Тукаса çӳрерĕм, хырăм йăтса таврăнтăм.

### Йĕке тултарни

996. Чăпăркка пек тихам пурччĕ, вĕрен вĕççĕн çитертĕм, çăмарта пек самăртрăм.

### Йĕкел

997. Кам хăйпе пĕрле пӳртне сĕтĕрет?
998. Мăн хуранăн пăтти йӳçĕ.
999. Пĕр юмана икĕ çуркам тăвăп, икĕ такана тăвăп.

1000. Пĕр юман касăп та икĕ такана кăларăп, икĕ пулене тăвăп.
1001. Путинке кутамкки пуçхĕрлĕ.
1002. Путинке пăталки пуçхĕрлĕ.
1003. Салтак малтан, калпак хыççăн.
1004. Энтри пӳрни пуçхĕрлĕ.
1005. Пысăк хуранăн пătти йӳçĕ.
1006. Салтак — сакайне, калпак — хыççăн.
1007. Салтакĕ — сакайне, шлепки çӳле тăрса юлчĕ.
1008. Çпирка çĕлĕкпе, Туши такмакпа.
1009. Тутарĕ сикет, калпакки юлать.
1010. Туши такмакпа, Çпиркка ĕçлĕкпе.
1011. Энтри пĕрни пуçхĕрлĕ.

### Йĕкелпе хупписем

1012. Ик валашка, ик çуркам.

### Йĕкелпе шĕлепки

1013. Салтак малтан, калпак кайран.

### Йĕке хӳре

1014. Нӳхрепере хĕсĕр ĕне çӳрĕ.

### Йĕлтĕр

1015. Асаттерен юлнă икĕ лашам пур:
Выçсан — сĕлĕ ыйтмасть,
Ырсан — кантар тесе тăмасть,
Кӳлсен — юртать те юртать.
1016. Выçсан — выçрăм темест,
Ырсан — ыртăм темест,
Хушсан — тăрать те чупать.
1017. Икĕ улма-чăпар утăм пур:
Вилĕм çитсен — шăмармасть,
Кашкăр курсан кĕçенмест,
Кукалесе кур(ă)к ыйтмасть.
1018. Ну! тесен утмасть, тăр! тесен тăмасть, çиме парсан çимест.
1019. Павăлпа Савăл ăмăртса чупаççĕ.

### Йĕлтĕр йĕрĕ

1020. Ойра пĕр çын сорпан сарĕ.
1021. Ойра шор сорпан выртать.
1022. Поччушĕнчен пошăчĕ вăрăм.
1023. Уйра шур сурпан выртать.

### Йĕм

1024. Икĕ йӳп, пĕр тĕп.
1025. Икĕ пĕçлĕ, пĕр тĕплĕ.

1026. Кĕме — пĕр алăк,
Тухма — икĕ алăк.
1027. Пĕр çăрттанăн виçĕ çăвар.
1028. Пĕр çилĕмĕн ик тетел.

## Йĕм, йĕм кантрисем

1029. Икĕ пĕçлĕ, пĕр тĕплĕ, тăвата хăлхаллă.
1030. Улпут йăтти тăвата хулхаллă.
1031. Улпут йытти тăват хăлхаллă.

## Йĕм тăхăнни

1032. Виçĕ çăварлă йĕлмевĕс килĕ: мăн çăварĕпе çынна хыпса çăтса ярĕ, икĕ кĕçĕн çăварĕнчен урисем курăнса тăрĕç.

1033. Пĕр çулпа кайăп та çул юппине çитĕп, çул юппине çитсен икĕ çулпа кайăп.

## Йĕнер

1034. Атантан лотра, утран çӳллĕ.
1035. Икĕ пуçлă лашам пур.
1036. Истал* постал тепĕл теши(?).
1037. Йĕкĕрĕлчĕк-кукăрăлчăк, ик айакки авăнчăк.
1038. Ларкăчăм — ланкашка.
1039. Лашаран çӳллĕ, çолтан лотра.
1040. Стел пустав, тĕпел терши.
1041. Тапнă çĕрте — танкăр*, пуснă çĕрте — путăк, ларнă çĕрте — лакăм.
1042. Улăхрăм çӳллĕ ту çине, лартăм сăран минтер çине, урана тимĕрпе кăшăлларăм.
1043. Ыр урхамах çинче ыр майра, ик пĕççине сарса ларать.

## Йĕнерчĕк

1044. Автанран лутра, лашаран çӳлĕ.
1045. Курăкран лутра, утран çӳллĕ.
1046. Лашаран çӳлĕ, кăвакалтан лутра, икĕ татăк тишĕрлĕ*.
1047. Лашаран çӳлĕ, курăкран лутра.
1048. Лашаран çӳллĕ, автанран (чăхăран, курăкран) лутра.
1049. Çӳле хурсан лашаран çӳлĕ, аяла хурсан автанран лутра.
1050. Чăхран лутра, лашаран çӳлĕ.

## Йĕп

1051. Вăрăм вырăс утса пырат, уймак-уймак йĕрĕ юлат.
1052. Йĕс шăши — сӳс хӳре.
1053. Кучĕ шăтăк, пуçĕ шĕвĕр.
1054. Пĕр йыттăн сӳс хӳре.
1055. Пĕчĕкçеç пике пĕтĕм халăха тумлантарать.

1056. Пӗчӗкҫеҫҫӗ кинӗм пур,
Пур тӗнчене тумлатать.

1057. Пӗчӗкҫеҫҫӗ тихам пур, ҫӗре ӳкрӗ, ҫухалчӗ.

1058. Пирӗн пӳртре кам хыткан?

1059. Пур халӑха тумлантаратӑп, хам ҫара пакка тӑратӑп.

1060. Пур халӑха тумлантарать, хӑй ҫара пакка ҫӳрет.

1061. Сӳс хӳреллӗ хурҫӑ йытӑ пӗр кӗрет те пӗр тухать.

1062. Тимӗр шӑшин сӳс хӳре.

1063. Хӑй ҫара пакка ҫӳрет, хӑй пур халӑха тумлантарать.

1064. Хӑрах куҫлӑ ҫӗвӗҫ пур, ҫынсене кӗпе ҫӗлесе парать, хӑй ҫарамас ҫӳрет.

1065. Хурҫӑ йыттӑн сӳс хӳре.

1066. Чике старик, хур сухал, тӗнчене тумлантарать, хӑй ҫарамас ҫӳрет.

1067. Шӑма шӑват, ҫӗлен хӑват.

1068. Шӑшийӗ шӑтӑка пытанать, хӳрийӗ тулта тӑрса юлать.

### Йӗп кусне ҫип тирни

1069. Пӗр хӗре пиллӗкӗн ярса тытнӑ, иккӗшӗ чикеҫҫӗ, иккӗшӗ пӑхса тӑраҫҫӗ.

1070. Хӗрӗ ҫурта пек, шӑтӑкӗ ҫӑрта пек, пиллӗкӗн тытса тӑраҫҫӗ, пиллӗкӗн чиксе яраҫҫӗ, иккӗн пӑхса кулаҫҫӗ.

1071. Яштай пӳллӗ ясар хӗр кутне ҫӳлелле тӑратнӑ, пиллӗкӗн тытса тӑраҫҫӗ, пиллӗкӗн чиксе яраҫҫӗ, иккӗн пӑхса тӑраҫҫӗ.

### Йӗппе ҫип

1072. Куҫӗ пур, ҫӑварӗ ҫук, хӳри пур, ҫӑмӗ ҫук.

1073. Пӗчӗкҫеҫҫӗ хурҫӑ йыттӑм пур, ҫичӗ ту урлӑ каҫса кайрӗ, хӳри кунтах курӑнса тӑрать.

1074. Пӗр шӑшин икӗ хӳре.

1075. Сӑмси тимӗр, хӳри сӳс.

1076. Сӑрӑ шӑши — шур хӳре.

1077. Ҫӗленӗ шуса пырать, хӳри явкаланса пырать.

1078. Тимӗр йыттӑн сӳс хӳре.

1079. Тимӗр йытти йӑвине кӗрсе выртать, сӳс хӳри тула тӑрса юлать.

1080. Тимӗр туя, сӳс хӳре.

1081. Тимӗр шапан сӳс хӳре.

1082. Хӑй пӗр шит, сухалӗ сакӑр шит.

### Йӗр

1083. Ҫул ҫӳрен ҫулпа пырат, сӗречӗ ҫулта юлса пырат.

### Йӗрӗлче*

1084. Ачама пиҫиххи ҫыхап.

1085. Ӑшӗ хӑвӑл, тулӗ чул,
Ӑна пӗлмен хӗрсене
Пуҫран тивет ҫавӑ чул.

1086. Тимӗр пуканӑн варри пур.

### Йĕрĕх

1087. Икĕрчĕк-кукăрчăк, Ехветер ватти кукăрчăк.

### Йĕтем

1088. Алапайăн аллине аллă çын та йăтаймĕ.
1089. Анкартинче хура кĕççе сарнă.
1090. Анкартинче хура кушма сарнă.
1091. Анкартинче çавра çатма ларать.
1092. Асаттен çатми — мăн çатма, ниçтан тытса ӳпĕнтерме çук.
1093. Асаттен çатми — мăн çатма, тытса çавăрма мелĕ çук.
1094. Асаттен çатмине çавăрса çапаймăн.
1095. Аслати çатмине çавăрса çапимĕн.
1096. Аслати çатми мăк çатма,
Тытса çавăрма амаль* çук.
1097. Аслă атте çатмине ӳпĕнтерме çук.
1098. Маçак çатми — мăнă çатми, ниепле те тытса илеймĕп.
1099. Маçак çатми — мăн çатми, çапатăп-çапатăп — çĕмĕрĕлмест.
1100. Маçи çатмине ӳпĕнтерĕпĕр.
1101. Мăн асаттен кĕскине çитмĕл çын та çĕклеймĕ.
1102. Мăн уйра мăн çатма.
1103. Ойра çара çатма выртĕ.
1104. Пăсра çара çатма ларат.
1105. Уй варринче кĕсел тирки ларать.
1106. Уй варринче çара çатма выртать.
1107. Уйра çара çатма ларать.
1108. Хĕлле тутă, çулла выçă.
1109. Хĕрĕх пӳрне, хĕрĕх чĕрне,
Икĕ чуна пĕр сывлăш.
1110. Хирте çара çатма ларать.
1111. Чĕп-чĕп чĕпиккĕм,
Чĕппи ори хоçăк,
Яшмулаçăм хăтаçăм,
Эшемечĕм кĕрӳçĕм.

### Йĕтем, авăн йывăççи, çапуççи, кĕлте

1112. Амăш лаптак, ашшĕ шĕвĕр, ывăлĕ ухмах, хĕрĕ лăстах.

### Йĕтем юпи

1113. Пăр та çăвать, юр та çăвать, Пăртас хĕрĕ тулта тăрать.
1114. Хун* хĕрĕ хура кĕççе çинче ларать.
1115. Хун хĕрĕ хура кушма çинче ларать.
1116. Хуньăм хĕрĕ хура кĕççе çинче ларать.
1117. Хура кĕççе варринче
Пуян çын хĕрĕ тăрать.
1118. Хура кĕççе çинче хун ларĕ.
1119. Хура кĕççе çинче хунь* хĕрĕ ларать.
1120. Хура кĕççе çинче шурă кĕрӳ ларĕ.

### Йĕтĕн

1121. Кучĕ çип пек, тăрри пăрçа пек.
1122. Тимпĕл-тимпĕл кăвак чечек.
1123. Уйра ылтăн пуçлă ача ларĕ.

### Йӳç кăшман

1124. Атякка-катякка, карта айĕнче муклашка.
1125. Вырăсĕ шалта, сухалĕ тулта.
1126. Тĕп сакайĕнче мушелник выртать.

### Йывăç

1127. Алли-урин шучĕ çук, ниçта та юнĕ çук.
1128. Кĕркунне кĕпине хывать, çуркунне тумланать.
1129. Пăхан тăран — чунĕ çук, тăпра çият, шыв ĕçет, хăй çӳлеллех ӳсет.
1130. Пĕр салтакăн пин алă, пин ура.
1131. Çӳлелле çĕр юп, аялалла çĕр юп, вăти çĕрĕнче пĕрре.
1132. Тĕпĕ пĕр, пуçĕ пин.
1133. Çуркунне тăхăнать, кĕркунне хывăнать.
1134. Чунĕ çук, юнĕ çук, тăпра çиет, шыв ĕçет, пӳртрен çӳлĕ ӳсет.

### Йывăçваракĕ

1135. Уйăх-хĕвел курманскер, юманпа тан ӳснĕскер.

### Йывăç варри

1136. Йывăçпа танпа тан, уйăха-хĕвеле курăнмаç.
1137. Йывăçпа таппа-тан, уйăхпа хĕвеле курăнмасть.
1138. Уйăха та курăнмас,
Хĕвеле те курăнмас,
Йывăçпалан тан ӳсет,
Ӳсни пĕртте палăрмас.
1139. Уйăха, хĕвеле курăнмас, çил те лекмес, хăй йывăçпа танах.
1140. Уйăх пур та, çути çук.
1141. Хăй йывăçпа тăп тан, уйăхпа хĕвеле курăнмасть.
1142. Хăй йывăçпа тан, уйăхпа хĕвеле курăнмасть.

### Йывăç çулçи

1143. Çуркуннепе ешерет, кĕркуннепе сарăхать, сарăхать те тăкăнать.

### Йыт пырши

1144. Алсăр-урасăр йывăç çине улăхать.

### Йытă

1145. Вăр-вăр, тяп, лăп.
1146. Ларсан — кукăль, выртсан — пӳремĕç.
1147. Пусма вĕçĕнче пиçмен хуплу.

1148. Пӳртре куккăль, тулта йĕкĕрĕлче*.
1149. Тулта хуралçă, пӳртре улпут.
1150. Ялта япташка, киле пырсан — купташка.

### Йытă хӳри

1151. Сăр вăрманне кайрăм, сĕклелĕх* тупаймарăм.
1152. Шăршлă кӳлĕ урлă кукăр çăка выртат.
1153. Шăршлă кӳлĕ хĕрринче кукăр çăка ларать.
1154. Шăшлă кӳлĕ хĕрринче кукăр чăртă.
1155. Ырмас, ывăнмас, йыт хыçĕнчен юлмас.

### Йытă чĕччипе ĕне чĕччи

1156. Сарпайăн саккăр, манăн тăванăн тăваттă.

### Йытăпа кушак

1157. Кăмака çинче Картилак, урайĕнче Уртилак.
1158. Кăмака çинче кар тилĕк, урайĕнче ур тилĕк.
1159. Урамĕнче Уртилак, кăмака çинче Картилак.

### Кавăн

1160. Вĕренне шăварăп та пăрăвĕ ӳссе пырĕ.
1161. Икшик-тукшик, мăнтăр Якур.
1162. Пĕр вĕренте çичĕ сурăх.
1163. Турă тунă кермене этем ывăлĕ çĕмĕрсе пăрахĕ.

### Кайăк

1164. Алăсăр, пуртăсăр пӳрт лартĕ.
1165. Килтĕм хăнана, лартăм хăванна.
1166. Пусмасăр пĕлĕте улăхат.
1167. Пусмасăр çӳле улăхать, пăявсăр çĕре анать.

### Кайăк* ана йăранĕнче выртни

1168. Тупик тукмак улами.

### Кайăк йăва çавăрни

1169. Татăк-кĕсĕкрен тум турăм.
1170. Пуртăсăр, алăсăр хăйне вали çурт тăвать.

### Кайăк йăви

1171. Ик чак — пĕр чăмăртак.

### Кайăк хăвалани*

1172. Еремет* теремет сикки** теремет.
1173. Эремет теремет, сикки теремет.

### Кайӑк хур

1174. Пӗр кашта автан, пурте пӗр пек авӑтат.

### Кайӑк хур карти

1175. Атӑл урлӑ, Сӑр урлӑ
Икӗ ҫутлӑ ҫул килет,
Тӳкерек кӳллине ҫитсессӗн
Кӳлле кӗрсе ҫухалать.

### Какай

1176. Чупса-чупса ҫӳрерӗм те
Ҫӗҫӗ вӗҫне пырса тӑрӑнтӑм,
Касӑнтӑм, сӗвӗнтӗм те
Вучаха кӗрсе ӳкрӗм.
Ҫунтӑм та, кӑврӑм та
Капан пек пултӑм,
Умӑра килсе выртрӑм.

### Какай тушки

1177. Хӗретсе хыврӑм та пӑвӑртса илтӗм.

### Калак

1178. Пилӗк тӑван хушшинче пуҫ пултӑм, выҫҫа килекене тӑрантрӑм.

### Калӑп

1179. Арпиййӗ куритинчен хытӑ.
1180. Каласан та — калӑп, каламасан та — калӑп.
1181. Курити ҫемҫе, ути хытӑ.
1182. Пӗлсен те калӑп, пӗлмесен те калӑп.
1183. Пӗр вӗҫӗ виҫ кӗтес, тепӗр вӗҫӗ тӑват кӗтес, пӗлсен те — калӑп, пӗлмесен те калӑп.
1184. Пӗр кӗтесси тӑваткаллӑ, тепӗр кӗтесси виҫҫӗллӗ, пӗлмесессӗн хам калӑп.
1185. Пӗр поҫӗ виҫӗ пеҫеклӗ, тепӗр поҫӗ тоат пеҫеклӗ.
1186. Алапайӑн аллине аллӑ ҫын та йӑтаймӗ.
1187. Анкартинче хура кӗҫҫе сарнӑ.
1188. Пӗр пуҫӗ виҫӗ кӗтес, пӗр пуҫӗ тӑватӑ кӗтес, пӗлмесен хам калӑп.
1189. Пӗр пуҫӗнче виҫӗ кӗтес, тепӗр пуҫӗнче тӑватӑ кӗтес, пӗлмесен хам калӑп.
1190. Пӗр пуҫӗнче тӑватӑ кӗтес, тепӗр пуҫӗнче виҫӗ кӗтес, пӗлмесен хам калӑп.
1191. Пӗр пуҫӗ тӑватӑ, тепӗри виҫӗ кӗтеслӗ.
1192. Пӗр пуҫӗ тӑват кӗтеслӗ, тепӗр пуҫӗ виҫ кӗтеслӗ; пӗлмесен хам калӑп.
1193. Пирӗн килте ҫичӗ кӗтеслӗ япала пур, пӗлмесен — хам калӑп.

1194. Çичĕ кĕтеслĕ япала пур, ытах пĕлмесен калăп.
1195. Çич кĕтеслĕ чăсмака.
1196. Çурăмĕ пур, хырăмĕ çук.
1197. Юмах ярăп, туппине хамах калăп.

## Калем

1198. Пуçне касрăм,
Чĕрине кăларса илтĕм,
Çĕре пăрахрăм,
Нумай çынна калаçтартăм.

## Календарь

1199. Асатте пахчинче пан йывăççи пур, пан йывăççи тăрринче виç çĕр утмăл пилĕк çулçă пур, çав йывăç çинчен куллен пĕр çулçă çухалать.

1200. Кулине инкен виççĕр утмăл пилĕк шур тутăр, Кулине кашни кун пĕр тутăрне хывса пăрахать.

1201. Кунсерен хухса пырать, çулталăкран вилсе выртать.

1202. Пĕр йăвара виç çĕр утмăл пилĕк кайăк пур, кашни кун пĕр кайăкĕ вĕççе каять.

1203. Пĕр кайăкăн виç çĕр утмăл пилĕк чĕпĕ пур, кашни кун пĕр чĕппи çухалса пырать.

## Калпак

1204. Пиччерен те пысăк, аттерен те пысăк, асаттерен те пысăк, патшаран та пысăк.

1205. Çӳлте ларап, кам çинчине каламастăп.

1206. Хура вăрман çине хура хăлат çунат сарнă.

1207. Хура-хура хурамана хура хуранпа хупларăм.

## Калуш

1208. Навус çуни туртасăр.
1209. Пĕр йăттин пĕрре те çук.
1210. Пылчăк çуни туртасăр.
1211. Улпут çунин турти çук.

## Калча

1212. Исенет, писенет, çулталăксăр тапранмасть.
1213. Кăçал кӳртĕп те килес çул кăларăп.
1214. Хирте пĕрмечĕ сăхман выртать.
1215. Юсанать, писенет, симĕс сăхман тăхăнать.

## Кантăк

1216. Йĕри-тавра йывăç, вăта çĕрĕ çурхах. Тултан пăхсан — хура чул, шалтан пăхсан — çутă чул.

### Кантăк, алăк, кăмака

1217. Пĕри: «Уçăл, Турă», — тет
Тепри: «Хупăн, Турă», — тет.
Виççĕмĕш: «Маншăн пулсан,
Кун та пĕр, çĕр те пĕр», — тет.

### Кантăк кусĕ

1218. Кунĕн-çĕрĕн куçне хупмасть.

### Кантăк кусĕ шăнни

1219. Ульян куçне шур илĕ.

### Кантăр

1220. Аякран пăхсан — тамăр хăва, патĕнчен пăхсан — ĕнчĕ хăва.
1221. Катаран — кар вăрман, патне çитсен — сĕм вăрман.
1222. Катаран пăхсан — катăр* вăрман, патне çитсен — патăр** вăрман.
1223. Кĕтессерен пĕр йăва, йăвисерен пĕр çăмарта.
1224. Кучĕ туя пек, туйи çинче çиппи пур, тăрри милке пек.
1225. Пĕр туратра çĕр çитмĕл çулчă, пĕр çулчăра çĕр çитмĕл йăва, кашни йăвара çĕр çитмĕл çăмарта.
1226. Пуçне çийĕпĕр, тирне тăхăнăпăр.
1227. Сикĕп-сикĕп пăрçа пек, симĕс курăк сухан пек.
1228. Тĕпĕ — тымар, пĕвĕ — шăнăр, пуçĕ — çу.
1229. Тирне тăхăнаççĕ, тăлппуне пăрахаççĕ, пуçне çияççĕ.
1230. Уй варринче симĕс пустав сарнă.
1231. Уй варринче симĕс салтак тăрĕ.

### Кантăр вăрри

1232. Турчăка вĕçĕнче тутли пур.
1233. Турчăка çинче тутли пур.
1234. Турчăка тăрринче мĕн тутлă?
1235. Турчăка тăрринче тутли пур.
1236. Юмах юплĕ, Ахматяк çимĕçĕ çуллă.

### Кантăр пуçне çерçи сăхни

1237. Менти пуçне тевти сăхать.
1238. Çеркей пуçне Çемен çиет.

### Кантăр тылли

1239. Пĕççе тăратмасăр ĕç пулмаст.

### Кантăр тыллани

1240. Вată йыттăн кучĕ лак-лак.
1241. Вată карчăк шăмă кăшлать.
1242. Йытти ленк-ленк, хӳри шак-шак.

1243. Карта хыҫĕнче качака ташлать.

1244. Пĕр шăллă карчăк пур: утă ҫиет те хăсса кăларать, утă ҫиет те хăсса кăларать.

1245. Хытса кĕрет те шанса тухать.

1246. Ӳе-ӳе, так-так, сире пире раш-раш.

1247. Шăлсăр карчăк шăмă кăшлат.

### Кантăр хутни

1248. Ватă карчăк пилĕкне ҫыхать те шыва сикет.

### Кантăр шывра ҫемҫелни

1249. Хытса кĕрет, ҫамҫанса тухать.

### Кантăрпа пăрҫа

1250. Ҫемек ҫĕлĕкпе, Туши такмакпа.

### Кантăрпа пуса

1251. Вырăспа тутар хутăш.
1252. Никăнпа Якур хутăш.
1253. Пĕр вăрлăхран ик тĕслĕ япала.
1254. Пуп кӳрши тутар.
1255. Хăмăшпа хăях хутăш.
1256. Хĕрпе арăм хутăш.
1257. Хурăнпа йăмра хутăш.
1258. Чăвашпа мишер хутăш.

### Кантраллă ҫăпата

1259. Пĕр шăшийĕн икĕ хӳре.
1260. Пĕр юсăн икĕ хӳре.

### Капан

1261. Мĕн ҫăвăрлин ҫăвăрлĕ, мăнтăр упа ҫăвăрламĕ.
1262. Пĕр пичĕкенĕн хĕрĕх кăшăл.

### Капан, ҫĕмел, тĕме

1263. Амăшĕнчен малтан ачи ҫуралать.

### Капан хумалли аслăк

1264. Пĕр калпак айĕнче тăваттăн пĕртăван хутшăнимасăр тăраҫҫĕ.
1265. Пĕр шĕлепке айĕнче тăваттăн пĕртăван хутшăнмасăр тăраҫҫĕ.

### Капанпа кĕлте

1266. Ашшĕнчен-амăшĕнчен малтан ачи ҫуралать.
1267. Ашшĕнчен, амăшĕнчен малта ачи-пăчи ҫуралат.

### Капкăн*

1268. Асаттен уххи юсăнмасть.

### Каптăрма

1269. Асанне хапхинчен асатте çакăннă.
1270. Кукăр турчăка ухватран çакланнă.

### Караслă пыл

1271. Асаннен ылтăн али пур, али çинче чилекĕ пур, чилекĕнче сарă çырли пур.

### Кара тăран шăналăк

1272. Выртсан мулкаç пек, тăрсан тĕве пек.

### Карăнтăк шăнни

1273. Куçне тăм илнĕ.

### Карăнтăк янаххи

1274. Икĕ эсрелĕ хире-хирĕç пăхĕç.
1275. Маччапа урай хире-хирĕç пăхĕç.

### Карăш

1276. Уй варринче Станюк пичче çăм тапĕ.

### Карăш авăтни

1277. Леш айккинче мочей çăм тапĕ.

### Карта

1278. Çĕр салтак хурал тăрат, пурне те çыхса хунă.

### Карта, йывăç

1279. — Кăçта каян, картлă пуç?
— Сана сыхлама, йĕпе кут.

### Карта, пахча çимĕç

1280. — Мĕн ĕçлен, кукăр кут?
— Сана сыхлап, йĕпе кут.

### Карта юпи

1281. Икĕ мужик пĕр пиççипе.
1282. Икĕ пиччен пĕр пиçиххи.

1283. Икĕ çынна пĕр кушшакпа çыхаççĕ.
1284. Хунямăшĕнчен кинĕ вăрăм.

## Карттă

1285. Çулĕ пур — утма çук; ани пур — акма çук; шывĕ пур — ишме çук.
1286. Хули пур, халăхĕ çук, Атăлĕ пур, шывĕ çук.

## Каска

1287. Пути муклашки.
1288. Пӳрт умĕнче сысна тăрать.

## Каска пукан

1289. Мăкăльтин-мăкăльтин мăнтăр кот.

## Каснă салма

1290. Вĕрекен хуранта вĕт пулă выллять.

## Каç

1291. Тĕкмеççĕ, çапмаççĕ, юратса куç хупаççĕ.
1292. Тĕнчи выртать, яш çын хĕвелĕ кулать.
1293. Тĕнче çывăрать, тăмани вăранать.
1294. Хăçан куç хупса куç уçан?
1295. Хура вăкăр пĕтĕм кĕтĕве выртарĕ.
1296. Хура ĕни яла тĕксе çĕнтернĕ.
1297. Хурчăка çунаттипе хуплать, тăмани куçне уçать.

## Катăркас çырли

1298. Шалта тимĕр, тулта нимĕр.

## Катка

1299. Кĕлетки юман, пиçиххи хăва.
1300. Пĕр улпутăн тăват пиçиххи.

## Катмак

1301. Хăй курпун, чунсăр, çĕр чавать.

## Качака

1302. Асатте пек сухаллă, шуйттан пек мăйракаллă.
1303. Ват инкен сухалĕ кăн-кăвак.
1304. Вăкăр мар — мăйракаллă, ĕне мар — сăваççĕ, старик мар — сухаллă.
1305. Вăрăм Терпитĕнчи тинеке ирех тăрать те итеме каять ик юплĕ сенĕкне тăратса, кĕрĕк аркине тавăрса.

1306. Калла чупать Талляна,
Малла чупать Талляна,
Пырне хырать Талляна,
Сухал силлет Талляна.

1307. Кам сухаллă çуралать?

1308. Каринке кантăр кăларма каять: кĕрĕк аркине тавăрнă, сенĕкне хулпуççи çине хунă.

1309. Каçăр пичче кĕрĕк аркине тавăрнă.

1310. Кĕрĕк аркине тавăрса хунă, сенĕкне çĕкленĕ, йĕтеме утă пуçтарма каять.

1311. Мăйраки хӳринчен вăрăм.

1312. Мĕтюк сенĕк йăтса пахчана каять.

1313. Пĕчĕк инкем шыва каять, алки-сăрки юхса пырать.

1314. Сухаллă та — ватă мар,
Мăйракаллă та — вăкăр мар,
Мамăклă та — кайăк мар,
Пушăт касать, çăпата тумасть.

1315. Сухаллă та — ват çын мар; туратлă та — йывăç мар; хутаçлă та — кĕлмĕçĕ мар.

1316. Çырмара пĕчĕк Курмиле арăмĕ макăрать.

1317. Упа мучи хырăмĕ ăшă-и, манăн ăшă-и?

1318. Урлă та чупат Тептеки,
Пирлĕ те чупат Тептеки,
Чупа-чупа çӳресе
Чечек пухат Тептеки.

1319. Хăййăм-хăййăм хăй айĕнчи, карта витĕр пăханчи.

1320. Чипер акка анкартне сенĕк йăтса каять.

## Качака таки

1321. Сухалĕ пур, ăсĕ çук,
Пусса çиме ашĕ çук,
Ларса сума сĕчĕ çук.

1322. Сухалĕ пур, ăсĕ çук,
Çиме тăрсан ашĕ çук,
Сума ларсан сĕчĕ çук.

1323. Урлă та чупать Кăçтакки,
Пирлĕ те чупать Кăçтакки,
Пирне хырать Кăçтакки,
Сухал силлет Кăçтакки,
Шăрçа сапать Кăçтакки,
Çавă пулать.

## Качака чĕччи

1324. Икенпин иккĕ.

## Кашăк

1325. Мĕнпур çынна çитерĕп, хам çимесĕрех пурăнăп.

1326. Пĕр çын тунине пин çын çулать.

1327. Пĕчĕк кинĕм пур, ирĕн-каçăн чуптăвап.
1328. Пур халăха тăрантап, хам çимесĕр пурăнап.
1329. Çатан пӳртре вĕт халăх: тытсан — калаçаççĕ, тытмасан — калаçмаççĕ.

### Кашăкпа апат çини

1330. Çăклă лавĕ хапхаран кĕрет, ут хӳри кĕреймест.
1331. Хăрах туртапа утмăл лав вутă кӳреп.

### Кашкăр

1332. Авă пырать пĕр хун, тути-çăварĕ чĕп-чĕр юн.
1333. Ав-иç килет хун, сăмси-çăварĕ юн.
1334. Вăр-вăр вăрханти, турат куç турханти.
1335. Вăрманта кăвак макаç çӳрет.
1336. Вăрман хыçĕнче тихасем кĕçенеççĕ, киле килмеççĕ.
1337. Тӳп-тӳп тӳпечук, тӳпе тăрри илечук.
1338. Хӳри — тукмак, шăлĕ — шак-шак.
1339. Чиксĕр ана-çаран тытрăм,
Кунĕн-çĕрĕн выльăх кĕтрĕм,
Пĕр сурăх та пăхмарăм,
Юр-варсăр кун курмарăм,
Çавах мана начар теç,
Мĕнле хăйса калаç-ши?

### Кашкăр куçĕ

1340. Вăрманкасра вут çунать.
1341. Сăрт çамкинче кăвайт (вут) çунать.

### Кашкăр, сурăх, йытăсем, çын

1342. Шурă мур килнĕ те чикки-приккине йăтса кайнă, чăмачисем илтнĕ те хуçине каланă; хуçисем шурă мура хăваласа çитсе вĕлернĕ, чикки-приккине илсе таврăннă.

### Кашта (турта)

1343. Тăратса лартсан — лашаран та çӳллĕ, вырттарса хурсан — алтантан та лутра.

### Каштасем

1344. Сарай тулли сарă хĕр.

### Кăвайт

1345. Çилтен вăй илет, шывран вилет.
1346. Хĕрлĕ вăкăр хăмласа пăрахĕ, виç çул курăк ӳсмĕ.

### Кăвайт, вутпуççи

1347. Хĕрлĕ утăм çыртасшăн, хура утăм тапасшăн.

### Кăвайт вырăнĕ

1348. Çӳрен кĕсре выртса йăваланнă çĕртре курăк шăтмасть.
1349. Çӳрен ут выртса йăваланнă çĕрте курăк ӳсмест.
1350. Хĕрлĕ ĕне выртнă çĕрте курăк ӳсмĕ.
1351. Хĕрлĕ ĕне йăваланнă çĕрте курăк шăтмасть.
1352. Хĕрлĕ тилĕ йăваланнă вырăнта çичĕ çулсăр курăк шăтмĕ.

### Кăвайт çинчен хуран илни

1353. Тăрнисем вĕçсе кайрĕç, тыла пуççи ларса юлчĕ.

### Кăвакал

1354. Алăк урлă ах! темесĕр каçаймĕ.
1355. Анатран Антун арăмĕ кăшкăрса хăпарĕ.
1356. Анатран Макар майри макăрса хăпарать.
1357. Ах! темесĕр урата урлă каçаймасть.
1358. Вăрăм инке шыва анать.
1359. Ипчăк* купчăк, симĕс купчăк.
1360. Ипчик купчек тайкаланчăк.
1361. Ишеми, кинеми, акмак-такмак, шыв тĕпĕнче вут илĕп.
1362. Кĕреçи малтан, ырçи кайран.
1363. Кĕреçи малта, ырçи хыçалта.
1364. Кĕреçипе хырать, шăприпе шăлать.
1365. Лакăшти инке шыва анать.
1366. Лăкăшти йинке шыва анать.
1367. Лăкăшти инке шыва анать.
1368. Лутра инке шыва анать.
1369. Лутра йинке шыва анать.
1370. Малтан кĕреçи, унтан ырçи, унтан çулки.
1371. Пат-пат Унеçи, нăкăл-нăкăл Утати.
1372. Пĕр пиçихиллĕ, симĕс пуçлă.
1373. Пĕчикçеççĕ кинĕм лăтăр-лăтăр шыв тултат.
1374. Пошшол матка шыв тăрăх.
1375. Сутир матки.
1376. Çырмара Ахтяр кăçкăрĕ.
1377. Çырмаран Макар арăмĕ макăрса хăпарĕ.
1378. Çырмаран нăкăл-нăкăл Утатти утса хăпарать.
1379. Утюк шыва сикĕ.
1380. Хирте çӳрет хир енлĕкĕ, шывра ишет шыв енлĕкĕ.
1381. Эрхип арăм — пуклак кут.

### Кăвакал аçи

1382. Пĕр пиçихиллĕ, симĕс пуçлă.

### Кăвакал кăшкăрни

1383. Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек.

### Кăвакал сăмси

1384. Кĕреçи малтан, ырçи кайран.

### Кăвакалпа хур

1385. Лутра инке шыва каять, вăрăм инке шывран улăхать.

### Кăвакарчăн

1386. Хĕрлĕ туна апăрша.

### Кăвакарчăн, чĕкеç, кăвакал çăмартисем

1387. Илемпин иккĕ, Тăвампин тăваттă, Салампин саккăр.

### Кăвапа

1388. Асламас кĕперри çинче виçĕ пус выртĕ.
1389. Асламас тăвайккинче виçĕ пус укçа выртĕ.
1390. Атăл варринче пултиннĕк тенки выртать.
1391. Касса илнĕ кантра йĕрĕ хĕрĕх çултан та палăрать.
1392. Касса илнĕ çăм вĕренĕн хĕрĕх çултан та йĕрĕ юлнă.
1393. Пĕтре çинче пĕр кăмпа.
1394. Çеçен хир варринче пĕр пĕрчĕ пĕрлĕхен выртать.
1395. Çеçен хир варринче пĕр тунката ларать.
1396. Çеçен хирте пĕр пăрçа.
1397. Такăр* çĕрте тиха йĕрĕ пур.
1398. Тап-такăр çул çинче мулла ларать.
1399. Таса уйра мулла ларать.
1400. Тăвайккире пĕр пус выртĕ.
1401. Тикĕс çĕрте тиха йĕрĕ.
1402. Тикĕс хирте тиха йĕрĕ.
1403. Ту çинче йĕрĕлче выртать.

### Кăвар

1404. Арча тулли ылттăн ашăк.
1405. Аслă Кашаран Кĕçĕн Кашана туй килет.
1406. Аслă ялтан кĕçĕн яла.
1407. Аслă ялтан кĕçĕн яла туй пырать.
1408. Кăмакара ылттăн укçа выртĕ.
1409. Килĕрен тип самла.
1410. Мами чашки пĕр чашăк, ниçтан тытса çиеймĕн.
1411. Пăхма çăмăл, йăтма йывăр.

1412. Пăхма пĕчĕк, çĕклеме çук.
1413. Пăхма çăмăл пек, йăтма тăрсан — çĕклеме çук.
1414. Пĕр карта ут, тытса чарма полмасть.
1415. Пĕр карта ут — тытса чарма çук.
1416. Пĕр тирĕк йăвана ниçтан та çыртса çиеймĕп.
1417. Пĕр япала ниме те тиркемест, пĕр шĕвĕ япалана тиркет.
1418. Пӳрт йĕри-тавра мĕн çĕклесе çавăрнаймастăн?
1419. Пысăк ялтан пĕчĕк яла пырать.
1420. Пысăк ялтан пĕчĕк яла туй килĕ.
1421. Çакă пӳртре мĕн йывăр?
1422. Тирĕк тулли типĕ салма.
1423. Чиркӳ тулли тип салма.
1424. Шĕлтĕр-шĕлтĕр туй пырать, ланкашкала анах каять.
1425. Шыва кĕрет хĕп-хĕрлĕ, шывран тухать хуп-хура.
1426. Шыва прахан — шывра путмас, çĕре чикен — çĕрте çĕрмес.

### Кăвар кăларни

1427. Пиччĕш панче той сикĕ, шăлнĕ патне той ӳкĕ.
1428. Шăнкăр-шăнкăр той килĕ, пăлтăр хыçне той ӳкĕ.

### Кăвар çинчи хуран

1429. Хура йытти çакăнса тăрать, хĕрлĕ йытти ăнах вĕрет.

### Кăвар туртни

1430. Аслă витерен кĕçĕн витене хас, тĕве, хас, тĕве!
1431. Аслă картаран кĕçĕн картана рйа!
1432. Аслă картаран кĕçĕн картана тăрйа-йа!
1433. Аслă ялтан кĕçĕн яла туй килет.
1434. Кĕçĕн ялтан аслă яла туй килет.
1435. Кукăр кукамай ылтăн кĕтӳ хăвалать.
1436. Пиччĕш* панче туй ӳкĕ,
Шăлнĕ** панче çĕр выртĕ.
1437. Пысăк картаран пĕчĕк картана.
1438. Пысăк картаран кĕçĕн картана тĕр ĕси.
1439. Пысăк картаран пĕчĕкçĕ картана кукăр мучи мул туртать.
1440. Тĕпĕр-тĕпĕр туй килет, пĕр ланкашкана анах каять.
1441. Тимĕр кăвак ăйăрăм пур,
Куллен ӳрĕ* пуçтарать,
Пĕчĕк картана тултарать.
1442. Хура ăйăрăм ӳрĕ пуçтарчĕ, пĕчĕк картана тултарчĕ.
1443. Шăнкăр-шăнкăр мул тухать, кукăр мучи хăвалать.
1444. Шăнкăр-шăнкăр той килет, Алип патне той ӳкет.
1445. Шăнкăр-шăнкăр той килет, пырсан-пырсан пĕр яма кĕрех ӳкет.
1446. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пĕр шăтăка кĕрех каять.
1447. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, хунĕ патĕнче çĕр выртать.

### Кăвас йӳҫни

1448. Алсăр-урасăр хăпарса анать.
1449. Алсăр-урасăр юман (ҫăка) тăрне хăпарать.
1450. Пăш-пăш калаҫать — чунĕ ҫук, этем мар.

### Кăвас калакки

1451. Килĕрен Настаҫҫи.
1452. Ырă ҫын хĕрĕ Ухтепи.
1453. Ыр ҫин хĕр — ҫеҫтепи.

### Кăвас хуни

1454. Ыраш пăтти шăмпăрти.

### Кăвас хуни. Ҫӳп тăкни

1455. Тĕпелте тĕпĕрчĕк, алăк панче алтăрчăк.

### Кăвас чĕресĕ

1456. Алсăр-урасăр пенте*
Ялан ларать тĕпелте.
1457. Кăмака ҫинче Кăмтилет, —
Саркаланни килĕшет:
Ҫăнăх ҫиет, шыв ĕҫет,
Хырăмĕнчен туп тухать,
Туп ҫиекен тут(ă) пулать.
1458. Кăмака ҫинче хĕрт-сурт
Пилĕкне ҫыхса ларать,
Пăтă парсан пăтă ҫимес,
Ҫăкăр парсан ҫăкăр ҫимес,
Ҫăнăх ҫиет те шыв ĕҫет,
Пур халăха ҫитерет.
1459. Карчăк, карчăк, карчамас,
Кăмака ҫине улăхаймас.
1460. Ҫак пӳртре мĕн пуян?

### Кăвас чĕресĕпе калакĕ

1461. Старик карчăккине
Йăкăшт та йăкăшт;
Тăрать-тăрать те —
Татах йăкăшт та йăкăшт,
Йăкăшт та йăкăшт.

### Кăкăр сĕчĕ

1462. Алăпа туман, ҫĕҫĕпе касман, ăна ҫимен ҫын та ҫук.
1463. Малтан эсĕ мĕн ҫинĕ?

1464. Мана касмаççĕ, хуçмаççĕ, сĕтел çине хумаççĕ, пурте çисе пăхаççĕ.
1465. Пусман, пĕçермен, ăна çыманни юлман.
1466. Çу мар, сахăр мар, сĕтел çинче пулман, ăна çымасăр юлман.
1467. Хор мар, какай шӳрпи туман, така мар, ăна çыманни юлман.
1468. Эсĕ те ĕçнĕ*, эпĕ те ĕçнĕ, çавна ĕçсе ӳснĕ.
1469. Эс те ĕçнĕ, эп те ĕçнĕ, çавна ĕçнĕрен ӳснĕ.

### Кăкăр шăмми

1470. Тĕттĕм чăланта пĕкечесем çакăнса тăраççĕ.
1471. Урай варринче йĕс пукан ларать.
1472. Ӳт витере шăмă читлĕх.

### Кăкăрсем

1473. Пĕр касканăн икĕ пăчăр.
1474. Пĕр пăчăрăн икĕ чĕп.
1475. Таса уй, таса уйра икĕ сăрт, иккĕшĕ те пуçлă.

### Кăкшăм

1476. Кăвак така мăйне пăрса шыв ĕçет.
1477. Пĕр вырăсăн икĕ сăмса.
1478. Хура така шыва анать.

### Кăлăк чăххи

1479. Аслăк çинче хуртлă кĕççе кăрт-кăрт туса ларать.
1480. Пӳрт хыçĕнче хуртлă кĕççе кăрт! кăрт! туса ларать.

### Кăмака

1481. Алăсăр-урасăр, шап-шурă питлĕ ларать.
1482. Алăсăр-урасăр, шурă кĕпе тăхăннă.
1483. Амăшийĕн аллă саплăк, хĕрийĕн хĕрĕх саплăк.
1484. Амăшийĕн алă саплăк, хĕрийĕн хĕрĕх саплăк.
1485. Амăшин аллă саплăк, хĕрин хĕрĕх саплăк.
1486. Асаттен вăрăм çипиркке.
1487. Асаттенĕн вăрăм çипиркке.
1488. Асатте витинче ула ĕне пур, хĕлле çиет, çулла çыврать, хевти вĕри, юнĕ çук, утланма утланăн та вырăнтан тапранаймăн.
1489. Ахмат кӳмине ултă лаша туртаймасть.
1490. Ахмат хăмăтне ултă лаша туртаймасть.
1491. Ахмат хăмăчĕ.
1492. Ăшĕ хăвăл, тулĕ чул, çавна пĕлмесен — ухмах пуç.
1493. Варринче пуставлăх, икĕ хĕрринче шупăрлăх.
1494. Варринче хыçлăх, икĕ айккинче шупăрлăх.
1495. Вăрăм йысна шурă кĕпе тăхăнат (нă).
1496. Вăрăм йысна шурă шупăр тăхăннă.
1497. Ĕни витере, хӳри тӳпере.
1498. Икĕ ен шупăрлăх, вăта çĕрти капталлăх.

1499. Кайми-килми кӳме ларать.
1500. Карма çăварлă карчăк кантăкран пăхса ларать.
1501. Кашни килте тӳр кĕлли кил ăшши* сыхласа ларать.
1502. Кашни килте шур упа.
1503. Кăкăрсăр карчăк тĕпелелле пăхкалать (пăхса ларать).
1504. Кĕтесре карчăк ларать, пĕççине чарнă, çăварне карнă, кашни кун çиме ыйтать.
1505. Килсерен карма çăвар карчăк пур, шав урама пăхса ларать.
1506. Килсерен карма çăварлă карчăк.
1507. Кукăр-макăр ват вырăс тапак туртса ларать.
1508. Кутăн йысна шурă кĕпе тăхăннă, янаххи айĕ маччана тивет.
1509. Нумай çиет, тăранмасть.
1510. Пĕр карчăк çăварне хĕрĕх шăрпăк кĕрет.
1511. Пĕр майран çĕр саплăк.
1512. Пирĕн килте пĕр карма çăвар пур, çăварне никçан та хупмасть.
1513. Пӳрт варринче ват асанне: пурте хăпарса выртасшăн, пурте шăтăкне чикесшĕн.
1514. Çак пӳртре мĕн пысăк?
1515. Çамки хура, ăшĕ хĕрлĕ.
1516. Çулла çывăрать, хĕлле çиет, ӳчĕ ăшă, юнĕ çук.
1517. Тăлăпĕ пӳртре, çанни тулта.
1518. Тĕпелте çуннă кăкăрлă карчăк кантăкран пăхса ларĕ.
1519. Тулĕ шурă, ăшĕ хура.
1520. Тӳтĕ* çук тăхлачă тĕпел кукрине пăхса ларĕ.
1521. Улпут павускин турти çук.
1522. Ӳчĕ ăшă, чунĕ çук.
1523. Хĕлле нумай çиет, çулла нумай çывăрать.
1524. Хĕрлĕ вăкăр вите алăк(ĕ) витĕр утă туртать.
1525. Хĕлле çиет, çулла канать.

## Кăмака, вут, тĕтĕм

1526. Амăшĕ ларать, хĕрĕ ташлать, ывăлĕ вĕçет.
1527. Амăшĕ мăнтăр, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ паттăр, пĕлĕт патне кайнă.
1528. Амăшĕ сарăлса ларать, хĕрĕ сиксе ташлать, ули* килтен тухса тарать.
1529. Амăшĕ яклашка, хĕрĕ хĕрлешке, ачи-пăчи кăтрашка.

## Кăмака, вучах

1530. Амăшĕн аллă, хĕрĕн хĕрĕх.
1531. Амăшĕн аллă саплăк, хĕрĕн хĕрĕх саплăк.
1532. Ашшĕ аллăра, ачи çирĕмре.

## Кăмака вучаххинчи кăвар

1533. Хĕрлĕ йытă купара выртать, никама та çывăха ямасть — çыртать.

## Кăмака, мăрье, вучах

1534. Амăшĕ кӳпшек, ывăлĕ вăрăм, хĕрĕ хĕрлĕ.

### Кăмака, мунча, авăн

1535. Виçĕ тарçă тĕл пулнă та калаçса тăраççĕ:
— Сана кунне миçе çитереççĕ?
Пĕри калать:
— Талăкран талăка, — тет.
Тепри :
— Мана эрнерен эрнене, — тет.
Виççĕмĕшĕ:
— Мана çулталăкран çулталăка çеç лекет, — тет.

### Кăмака çамки

1536. Икĕ енче кĕçĕн çын, вăта çĕрĕнче тукатмăш*.
1537. Икĕ ен шупăрлăх, вăта ен капталлăх.

### Кăмака, çулăм, тĕтĕм

1538. Амăшĕ самăр, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ паттăр, пĕлĕт патне кайнă.
1539. Амăшĕ хулăн, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ çӳле каять.
1540. Амăш пысăк, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ кăтра.

### Кăмака хутни

1541. Нумай çиет, тăранаймасть.

### Кăмака шăлни

1542. Пĕр майран çĕр саплăк.
1543. Пĕр упа килчĕ те картари сорăхсене хăвармарĕ.

### Кăмака шăтăкĕ

1544. Уйăх пур, çутти çук.

### Кăмака юшки

1545. Аслă кинĕн хушпăвĕ
Кĕçĕн кине юрамас,
Кĕçĕн кинĕн хушпăвĕ
Аслă кине юрамас.

### Кăмакапа вут çулăмĕ

1546. Çамки хура, чĕлхи хĕрлĕ.

### Кăмакапа уша юписем

1547. Хунемĕшĕнчен кинĕсем çӳлĕ.

### Кăмакапа чӳрече

1548. Тарье акипе Марье аки хире-хирĕç пăхса тăраççĕ.

### Кăмакара вут çунни

1549. Çамки хура, чěлхи хěрлě.

### Кăмакари вут

1550. Чул кăмака ăшěнче хěрлě тумлă хěр выртать.

### Кăмакари кукăль

1551. Пěр карта сурăхăм пур, пурте мăйне пăрса выртě.

### Кăмакаран вучаха кăвар кăларни

1552. Аслă картаран кěçěн картана тăр-рях!
1553. Аслă Кашаран* Кěçěн Кашана** туй килет.
1554. Аслă ялтан кěçěн яла туй ӳкет.
1555. Пиччěш патěнче туй ӳкнě, шăллě патěнче çěр выртě.
1556. Пиччěш патне туй сикě, шăлнě патне туй ӳкě.
1557. Пысăк картаран кěçěн картана тăрья.
1558. Пысăк Хăмăшлăран Пěчěк Хăмăшлăна шăнкăр-шăнкăр туй килет.
1559. Тăкăс картаран пěчěкçě картана тăриях!
1560. Тěмпěл-тěмпěл туй килет, Аччакассинче* çěр выртать.
1561. Тěпěр-тěпěр туй килет, ланкашкана кěрех каять.
1562. Тукшикре* туй сикет, Çеçмерте** çěр каçать.
1563. Чăнкăр-чăнкăр туй килет, пěр шăтăка анах каять.
1564. Чăнкăр-чăнкăр туй килет, чӳрече витěр пай туртать.
1565. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, аслă хапхаран тухать те кěçěн хапхаран кěрет.
1566. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, лупашкана анах каять.
1567. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пиччěш панче кун кунлать, ашшě панче çěр выртать.
1568. Шăнкăр-шăнкăр туй килě, пăлтăр хыçне туй ӳкě.
1569. Шěлтěртěм-шěлтěртěм туй килет.

### Кăмакаран тěтěм тухни

1570. — Вăрăм вырăс, кăçта каян?
— Сана мěн ěç, хура çăвар?
1571. Амăшě тула тухиччен ывăлě Мускава çитет.

### Кăмкан

1572. Мăрăнě мăрттас,
Хырăмě карттас,
Ут утланмас,
Çурран та утмас.

### Кăмпа

1573. Ватти те, вěтти те шěлепке тăхăннă.
1574. Вăрман варринче хěрлě шлепкеллě лутра вырăс çӳрет.

1575. Пĕчĕкскер, хитрескер,
Çĕр мăкăртса тухнăскер,
Пурçăн тутăр çыхнăскер.
1576. Пĕчĕкçеççĕ паттăр çĕр витĕр тухрĕ-тухрĕ, хĕрлĕ çĕлĕк тăхăнчĕ.
1577. Çĕр ăшĕнчен шлепке тăхăнса тухать.
1578. Çĕр витĕр тухрăм, хĕрлĕ çĕлĕк тупрăм.
1579. Туйралăхра хĕрлĕ кĕлеппуçлă тутар тăрать.
1580. Хура вăрмана кĕнĕ чух хĕрлĕ çӳçлĕ хĕр куртăм.
1581. Шурă хурăн айĕнче хĕрлĕ тутăрлă хĕр тăрать.

**Кăмрăк**

1582. Çĕр айĕнче çĕрмест, шывра путмасть.
1583. Çĕре чикрĕм — çĕрмерĕ, шыва ятăм — путмарĕ.
1584. Çĕрте çĕрмерĕ, шыва ятăм — путмарĕ.
1585. Çĕрте çĕрмест, шывра путмасть.
1586. Шĕвикĕм, сенкерĕм, шыва ятăм — путмарĕ, çĕре чикрĕм — çĕрмерĕ.
1587. Шивĕкĕм, шĕнкĕрĕм, шыва ятăм — путмарĕ, çĕре чикрĕм — çĕрмерĕ.
1588. Шыва ярсан путмас, çĕр тĕпĕнче çĕрмес.
1589. Шыва ятăм — путмарĕ, çĕре чикрĕм — çĕрмерĕ.
1590. Шывра путмасть, çĕрте çĕрмест.

**Кăпшанкă**

1591. Хăй хуп-хура — çăхан мар, мăйракаллă — вăкăр мар.

**Кăравать**

1592. Тăлппăвĕ пĕрре, пуçĕ иккĕ, ури тăваттă.

**Кăранташ**

1593. Пĕрене ăшĕнче хура çĕлен.

**Кăраççын çунни**

1594. Мăн çăпата Апас, çинче пилĕк Янасал, çурăмпуç çути.

**Кăркка**

1595. Автей каять йĕтеме,
Кĕрĕк аркине тавăрнă;
Кĕпи кĕске — салтак пек;
Туни вăрăм — Петрав пек.
1596. Ăсли пырать çул тăрăх кăпăрт-кăпăрт тумтирпе.
1597. Кăвак пуçлă, хĕрлĕ пуçлă калтри пуян хĕрĕ.
1598. Катĕр-катĕр кăтрапи, симĕс кайăк упăшки.
1599. Кăкăлттин — кукша пуç.
1600. Кăлтăр-кăлтăр кăткă тĕми, симĕс кайăк упăшки.
1601. Тик-тик калтăм, тик калтăм, ылтăн пуçлă тик калтăм.

1602. Урам тăрăх хранцус майри макăрса çӳрет.
1603. Хултăр-хултăр хултăрчă Хурасана култарать.
1604. Хун хĕрĕн кĕпи чăпар.
1605. Хун хĕрĕ хĕрлĕ тĕсе юратмасть.
1606. Ылтăн пуçлă никăлтăк.

### Кăрман

1607. Армак-чармак Пăритун.

### Кăрчама

1608. Алăсăр, урасăр, улпута та урараn ӳкерет.

### Кăсăя

1609. Сик-сик кутлă, кăс çĕлĕклĕ, пурçăн йĕмлĕ.

### Кăсла

1610. Икĕ мăйракаллă, тăватă ураллă, пĕрин те чĕрни çук.

### Кăçатă

1611. Пуçĕ пур, ăсĕ çук, çурăмĕ пур, ăшĕ çук.
1612. Пуçĕ пур, ăсĕ çук, хыçĕ пур, ăшĕ çук.
1613. Хура така юр чавать.
1614. Чĕркуççи тăршшĕ икĕ ристан ăмăртмалла чупаççĕ, пĕринчен-пĕри юлмаççĕ.

### Кăткă

1615. Анчăк-пинчăк хывăх çинче.
1616. Кăнтăвай кăтăклă, мăй шăмми шăтăклă.
1617. Кăнтăк-кăнтăк кăтăклă, çăпати пуçĕ сыпăклă.
1618. Кăнти кăтăклă, мăйĕ сыпăклă.
1619. Кăптăк, кăптăк, кăптăклă, çăпати пуçĕ сыпăклă.
1620. Кĕвен, кĕвен, кĕвен ут, кĕвен ут та çӳрен ут, таки мине таймик, ту хăпарсан аймик.
1621. Кирлĕ-курлă, купи урлă, купи çуллă, хĕрĕх çухрăма кайĕ, сула пулса вилмĕ.
1622. Пилен-пилен пилен ут,
Пилĕкĕ çинçе кĕрен ут,
Ту улăхсан таймас ут,
Талак пулса вилмес ут.
1623. Пилĕк-пилĕк пилен ут, сула пулса вилми ут, ту хăпарса ывăнми ут.
1624. Пи-пи пиен ут, çинçе пĕвĕм юлан ут, шыв ĕçтерсе ывăнми ут.
1625. Пи-пи пиен ут, çурлă-кĕрлĕ вилен ут, амак тивсен — вилми ут.
1626. Çинçе пилĕк — хура ут, пилĕк урлă хăлха ут, сула пулсан — вилми ут, ту хăпарсан — шуçми ут.
1627. Çинçе пӳлĕ çӳрен ут, вилми ут.
1628. Чунĕ пур та, юнĕ çук.

## Кăткă йăви

1629. Ашĕ те çук, шывĕ те çук — хуранĕ вĕресе тăрать.
1630. Вамă юман айĕнче мăн хуран вĕресе ларать.
1631. Сĕм вăрманта сĕт вĕрет.
1632. Çеçен хир варринче çăл вĕрет.
1633. Çеçен хир варринче туй хуранĕ вĕрет.
1634. Тӳлем çĕрте хуран вĕрет.
1635. Ӳплере вĕтĕ халăх вĕркет.
1636. Хирте хĕрлĕ хуран вĕресе ларĕ.
1637. Шывĕ те çук, ашĕ те çук,
Хуранĕ вĕресе тăрать.
1638. Юрлă-варлă-каварлă мăнтăр купа çавăрнă.

## Кăткă тĕми

1639. Ала тулли тулăм пур,
Йăтайсассăн йăлтах ил.
1640. Анчăк-пинчăк хывăх çинче.
1641. Кăн тăвай кăтăклă, мăй шăмми шăтăклă.
1642. Кĕçĕн вăрманта сĕт вĕрет.
1643. Сĕм вăрманта сĕт вĕрет.
1644. Çынсам кайнă пӳрт тума,
Пӳртне тунă пуртăсăр,
Пӳрчĕ пулнă кĕтессĕр.
1645. Туйралăхра туй хуран вĕресе ларать.

## Кăшкар

1646. Вăр-вăр вăркамị, турат куç тĕркеми.
1647. Вăр-вăр вăрханти, турат куçĕ турханти.
1648. Тулашĕ тутă, ăшĕ выçă.
1649. Упăти пиччен пуç кукăр.
1650. Шалаш выçă, тулаш тутă.

## Кăшман

1651. Ик-чак, чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
1652. Мучей шалта, сухалĕ тулта.
1653. Тĕпсакайĕнче мушелник выртать.
1654. Хăй пӳртре, çивĕчĕ тулта.
1655. Юнĕ пур, чунĕ çук.

## Кăшман çеçки

1656. Мучийĕ аялта, сухалĕ тулта.

## Кăшман çини

1657. Эс те чипер, эп те чипер, иккĕн тытса чуптăвар.

### Кĕвенте

1658. Алăсăр, урасăр, хĕрарăм
Çине сиксе утланать.
1659. Картлă пуçлă кукăр старик
Тул çутăлнă-çутăлман
Хĕрарăм çине утланать те
Шыва каять.
1660. Икĕ пуçĕ картлă, хĕрарăм çине утланать.
1661. Курпунлă картлă пуç кашни хĕр çине хăпарса анать.
1662. Уй варринче икĕ эсрелĕ ташлĕ.
1663. Хĕвел тухнă-тухманах кукăр карчăк шыва каять.

### Кĕвенте, витре

1664. Пĕр пĕкĕре икĕ кӳлĕ.

### Кĕвентепе кĕпе кивни (тӳни)

1665. Вар пуçĕнче икĕ туй арăм ташлать.

### Кĕл

1666. Çак пӳртре апăшши пур.
1667. Çак пӳртре мĕн кичем?
1668. Уксах куян выртнă çĕртех самăрăлать.

### Кĕл купи

1669. Урасăр сурăхăм пур, выртнă çĕртех самăрлать.

### Кĕле

1670. Кăнтăрла çывăрать, каçхине кил сыхлать.

### Кĕленче

1671. Кучĕ сарлака, тăрри шӳреке.
1672. Мамаккин тути тавăраннă.
1673. Пĕр вырăсăн çăварĕ ĕнси çинче.
1674. Пирĕн инкин тутти тавăрăнчăк.
1675. Пулкки* айĕнче пуççăр салтак тăрать.
1676. Симĕс чиркӳн тăрри шăтăк.
1677. Çывăхран курăнмас, аякран курăнат.
1678. Хăй хуп пек, йĕп кĕмест.
1679. Хăй хут пек, йĕп кĕмест.

### Кĕленче, кантăк

1680. Аякран пăхсан — елпек чул, патне пырсан — хăйкак чул.

### Кĕленче савăт

1681. Яка хырăм, картлă пуç.

### Кĕле, сăлăп

1682. Каçпа санăн та шăтăка кĕрет, манăн та шăтăка кĕрет.

### Кĕлетке

1683. Вутра та çунмас, шывра та путмас.

### Кĕлте

1684. Карта хыçĕнче пичура пилĕкне çыхса ларать.
1685. Пин аппан пĕрех пиçикки.
1686. Пин çармăсăн пĕр пиçиххи.
1687. Пин хĕр пĕр пиçиххи çыхнă.

### Кĕлте пăрахни

1688. Аслăк çинчен леппер сысат.

### Кĕмĕл окçа

1689. Пĕчĕккĕ те çаврашка, çап-çутă, пĕтĕм тĕнче çыннисене юрат-тарать.

### Кĕнеке

1690. Ани шурă, вăрлăхĕ хура.
1691. Кĕпе мар — çĕленĕ, йывăç мар — çулçăллă, çын мар — каласа парать.
1692. Пĕчик япала тĕнче çавăрать.
1693. Пуçĕ çук — этемрен нумай пĕлет.
1694. Хăйне çĕленĕ — темĕн те калаçать.
1695. Шурă ана, хура вăрлăх.
1696. Юр çинчен йĕр выртать, хура сăсар кам тытать?

### Кĕнеке вулакан çын

1697. Сылтăм енче пĕр тĕнче, суллахайра — тепĕр тĕнче. Эпĕ икĕ тĕнче хушшинче.

### Кĕнчеле арлани

1698. Айсăр капан айĕнчен утă туртаççĕ.
1699. Айтар капана пилĕк сурăх çиет.
1700. Айтар капанне айĕнчен туртаççĕ.
1701. Айтур капан айĕнчен туртать.
1702. Алтăр капан айĕнчен вунă сурăх туртĕ.
1703. Алтăр капан айĕнчен утă туртăп.
1704. Антер капанне айĕнчен туртăп.
1705. Асаттен сухалне çăла-çăла пӳрнем ыратрĕ.
1706. Атвăр капанне аялтан çийĕп.

1707. Атьăр, атьăр капан айĕнчен туртар.
1708. Вĕрен вĕçĕн лаша тăрантарăп.
1709. Вĕрен тăрăх ăйăр самăртап.
1710. Вупăрлă карчăкăн кăвапинчен туртăп.
1711. Ĕмпичче сухалне туртаççĕ-туртаççĕ, туртса пĕтерейменççĕ.
1712. Матрĕн капан айĕнчен утă туртать.
1713. Паттăр капанне шăши аялтан туртать.
1714. Пĕри сăвать, пĕри ĕмет, урай тăрăх чупса çӳрет.
1715. Пĕр капана вун икĕ качака çиет.
1716. Пĕр капана пилĕк ĕне туртать.
1717. Пĕр мăкăра кăвапинчен тортăп.
1718. Пĕр капана пилĕк качака çийĕ.
1719. Пилĕк сурăх утă туртать, пилĕк сурăх пуçтарса тăрать.
1720. Пиллĕкĕн сăваççĕ, пĕри ĕмет, урай тăрăх кусса çӳрет.
1721. Пиллĕкĕн туртаççĕ, пиллĕкĕн тăраççĕ.
1722. Пӳрнепе çисех хырăмне пысăклатать.
1723. Сак çинче ларакан мучине пиллĕкĕн пырса сухалĕнчен туртаççĕ.
1724. Сак çинчи старике сухалĕнчен туртаççĕ.
1725. Çăка çине ларăп та пуçăма турăп.
1726. Çăка çине лартăм, вĕрене витĕр пăхрăм, хурăн турачĕ тытрăм.
1727. Çилсĕр-шывсăр арман авăрать.
1728. Тĕкме витĕр йăтă туртать.
1729. Тĕкме витĕр йăт* харкашать.
1730. Тĕнсĕр капан айĕнчен пĕри утă туртать.
1731. Шиххи-паххи, талуй пайти.
1732. Ярăп, ярăп, яра парăп, писмелĕп те тӳмелĕп.

### Кĕнчеле арлани, йĕке

1733. Акка умĕнче ача выллять.

### Кĕнчеле арлани, йĕке тулни

1734. Кокăр çăка кот çеми.
1735. Чупкăн хĕрĕм пур: пĕр Тукаса ларма каять, пĕр Анаткаса ларма каять, хырăм йăтса таврăнать.

### Кĕнчеле йывăççи

1736. Ват качака — мăк сухал.
1737. Ĕни выртать, хӳри тăрать.
1738. Каткана кĕримасть, уçа (ывăça) кĕрет.
1739. Кукăр çăка айĕнче Ене ятлă хĕр хӳхлĕ.
1740. Кукăр туна Марина.
1741. Куккăр çăка кут çеми.
1742. Куккăр туя кут çемçи.
1743. Кучĕ — кукамай, тăрри — Çемен пичче.
1744. Пăтавккана кĕмест, ывăça кĕрет.
1745. Чавса тăршшĕ çăмламас, чавса тăршшĕ çарамас, чавса тăршшĕ кут айĕнче.

1746. Чике тăршшĕ тĕклĕ, чике тăршшĕ çара, чике тăршшĕ кут айне кĕрет.
1747. Ывăçа кĕрет, пăтавккана кĕмест.

### Кĕпе

1748. Кĕме — пĕр шăтăк, тухма — виçĕ шăтăк.
1749. Пĕç-урасăр, пĕвĕ пур, кевти çук, алли пур.
1750. Юратсан та, юратмасан та ман çине.

### Кĕпе валашки

1751. Илтуттин икĕ поç.
1752. И турт, инке, турт, инке, туртса кай та туртса кил.
1753. Çулла ырхан, хĕлле мăнтăр.
1754. Шыв хĕрринче тулли, кил хушшинче пушă.

### Кĕпе-йĕм

1755. Этем ывăлне чи çывăх тăракан япала мĕскер пулать?

### Кĕпе кĕвенти

1756. Çырмара икĕ майра (сар хĕр, туй арăмĕ) ташласа тăраççĕ.
1757. Тăрсан — çăмарта вырăнĕ илĕп, выртсан — лаша вырăнĕ илĕп.
1758. Уй варринче икĕ есрелĕ ташлĕ.
1759. Уй варринче икĕ чиперкке ташлĕ.

### Кĕпе килли

1760. Туп-тупилче, тупилче, туртса карăм та туртса килтĕм.
1761. Хĕлле мăнтăрланать, çулла начарланать.
1762. Хĕлле самăр, çулла ырхан.

### Кĕпе киллипе кисĕпĕсем

1763. Старикĕ выртса макăрать, икĕ арăмĕ сиксе ташлать.

### Кĕпе çапни

1764. Çар çине çат, çат, çат!

### Кĕпе тĕрри

1765. Апаш* кĕперри пуçхĕрлĕ.
1766. Мускав кĕперри кутăн тăрĕ.
1767. Шорча* чиркӳвĕ котăн тăрĕ.
1768. Ярмушка* кĕперри пуçхĕрлĕ.

### Кĕпе туса тăхăнни

1769. Татрĕç мана, ватрĕç мана,
Туртрĕç мана, тăсрĕç мана,

Урлă-пирлĕ çыхрĕç мана, —
Çерем çинче çу каçрăм,
Сар хĕр çине улăхса выртрăм.

### Кĕпӳм (кĕпе умĕ)

1770. Апаш кĕпери пуçхирлĕ.
1771. Ямаш кĕперри пуçхирлĕ.

### Кĕпер

1772. Ик çыран хушшинче улăп выртать.
1773. Мăн йĕнер айĕпе шыв юхать.
1774. Уртемей мучи çырма урлă ӳпĕннĕ.
1775. Чике старик шыв урлă чикĕнсе выртать.

### Кĕрепле

1776. Урташ — урлă, Исментер — тăрăх.
1777. Шăлĕ пур — çыртаймасть.

### Кĕрепле. Сӳре

1778. Хире шăнăçать, вăрмана шăнăçмасть.

### Кĕрĕк

1779. Пĕр ен вăрманлăх, тепĕр ен уйлăх.
1780. Пĕр ен вăрман, тепĕр ен хир.
1781. Пĕр енĕ пушă хир, тепĕр енĕ — хура вăрман.
1782. Пĕр енĕ çеçен хир, тепĕр енĕ — вăрман.
1783. Пĕр енĕ хăмăшлăх, тепĕр енĕ çеçен хир.
1784. Пĕр енни хир, тепĕр енни вăрман.
1785. Пĕр енче хир, тепĕр енче вăрман.
1786. Тĕкли ăшне яки.
1787. Тĕкли çине якли.
1788. Унталла та ăшă, кунталла та ăшă.
1789. Шалашĕ — вăрман, тулашĕ — ялан.

### Кĕрĕк çанни

1790. Тĕкли ăшне çари кĕрет.
1791. Тĕкли çине яки кĕрет.

### Кĕрĕк тăхăнни

1792. Тĕкли ăшне якли кĕрет.

### Кĕрĕпе шăлтăрма

1793. Утрăм-утрăм, улма тупрăм, улталарăм, кĕмĕш тупрăм, илчĕ килчĕ, парне пачĕ, хутаç кĕрӳ ташша ячĕ, енчĕк кĕрӳ çуппа тăчĕ.

**Кĕр кунĕ**

1794. Ĕçет те çиет, çият та çият, ача-пăчана киле хăвалать.

**Кĕркунне**

1795. Асаттен пĕр хĕрĕ ула куна юратать.
1796. Ĕçет те çиет, макрать те йĕрет, ача-пăчана киле хăвалать.
1797. Йăрăм-ярăм, ула-чăла, йĕре-кула, йĕпе куç.
1798. Йĕпе куç каять, хаяр куç килет.
1799. Кĕркури каять, Хĕлимун килет.
1800. Çулленех пĕр пичче килет, ула кунсем илсе килет.
1801. Пĕри калать: мана шанма çук, эпĕ кĕске ăслă тет.
1802. Хăй тутă пак, хойхи çоккă пак, йĕме поçласан — чарма та çок.

**Кĕркуннехи калча**

1803. Так-так такана,
Симĕс кайăк пуçана.

**Кĕрпе авăсни**

1804. Хаш-хаш хашан кĕлти,
Тӳп-тӳп тӳпен кĕлти,
Тӳпен кĕлти, ман кĕлти.
1805. Шарккăм-шарккăм шарне кускайăм.

**Кĕрпе, пăтă**

1806. Пинĕн-пинĕн килеççĕ,
Пĕр хурана кĕреççĕ,
Кĕрекене лараççĕ.

**Кĕрт**

1807. Анкартинче эскер выртать.
1808. Карта витĕр куç ярăп.
1809. Карта çумĕнче шур ĕне выртать.
1810. Лупас хыçĕнче кӳпĕннĕ сурăх выртать.
1811. Пӳрт айккăнче кӳпнĕ сурăх выртать.
1812. Пӳрт айккинче кӳпĕннĕ сурăх выртат.
1813. Пӳрт хыçĕнче кӳпĕннĕ сурăх выртать.
1814. Çатан çумĕнче кӳпĕннĕ сурăх выртат.

**Кĕрт хӳни**

1815. Пӳрт çумĕнче кӳтнĕ сурăх выртат.
1816. Пӳрт умĕнче кӳпĕннĕ сурăх выртать.

**Кĕрӳ тутри**

1817. Вĕл-вĕл вăлча, вăлча тăррине вăлчака.

### Кĕсел

1818. Шывран пĕве пулать.

### Кĕсел лăкани

1819. Йĕл-йĕл йĕлсе выртать, уксах салтак siksе çаврăнать.

### Кĕсье

1820. Кăвапаран аяларах, чĕркуççинчен çӳлерех, унта пурте чикеççĕ, çавна мĕн теççĕ?
1821. Кăвапаран аяларах, чĕркуççинчен çӳлерех чиксе кăлармалли пур. Çав мĕн ятлă?

### Кĕскĕ

1822. Чип-чип чиперок, икĕ питлĕ сĕверок.

### Кĕсле

1823. Вунă пӳрне сиккелĕ, чăрăш йывăç чĕтренĕ, ăшри ӳте макăртĕ.
1824. Вун ик пӳрне шалт та шалт.
1825. Кăтьăр-кăтьăр кăткă тĕмески, Ураскилт — Мемет упăшки.
1826. Лаппин-лаппин хур ури, кăлттин-кăлттин чĕп ури.
1827. Палан йывăççи парт та парт! Пилĕк пӳрне шарт та шарт!
1828. Палан палт-палт, вун икĕ пӳрне шалт-шалт!
1829. Чăнкăр-чанкăр чăх ури, лай-лай хур ури.
1830. Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен, лăппи-лаппи хур ури.
1831. Чунсăр-юнсăр — юр юрлать.

### Кĕсле калани

1832. Хоп холтăрчи, холтăрчи, холăм яла колтар-и*?

### Кĕсмен

1833. Каялла мăйрака, лаптăк кут.

### Кĕççе

1834. Кăнтăрла труба пулать, каçхине лекке.

### Кĕтес

1835. Пурте кĕрсен — мăклă,
Пуртрен тухсан — тăвата мăйракаллă.

### Кĕтӳ кĕртни

1836. Паняç хыççăн пуччи чупать, пуччи хыççăн чух-чух чупать.

**Кĕтӳçĕ кĕтӳçе час-час курать, патша патшана сайра курать, Турă хăйĕн пек Турра нихçан та курмасть**

1837. Кĕтӳçĕ час-час корать, патша сайра корать, торă нихçан та коримас.

**Килĕ**

1838. Асаннен тилĕ çĕлĕкне илсе тăхăнам терĕм те, пулмарĕ.
1839. Асаттен ялккасне тавăрса тăхăнаймарăм.
1840. Тулти вăкăр каçансăр.
1841. Туп-тупансăр, тупансăр, тулти вăкăр каçансăр.
1842. Туп-тупинке, тупинке, туртса кайрăм, туртса килтĕм.
1843. Туп-туп тупансăр, тути мăкăрç, каçансăр.

**Килĕпе кисĕп**

1844. Пус кутĕнче пуп майри выртать, икĕ вырăс пычĕç те харăс тӳрĕç.

**Килĕре вир тӳни**

1845. Суп-суп, супанкĕлти, манкĕлти, туп, тупанкĕлти, манкĕлти.

**Килтен тухмалли çул, сукмак**

1846. Вăкăрĕ картара, мăйраки çырмара.

**Кимĕ**

1847. Апат паран — çимес, шыва путаран — путмас, каят — йĕрне çухатат.
1848. Кайсассăнах йĕрĕ çухалат.
1849. Ну! тесен утмасть. Тăр-р-р! тесен чарăнмасть. Çиме парсан çимест.
1850. Пынă çĕрте йĕрĕ çук, каснă çĕрте юнĕ çук.
1851. Пынă çĕрте йĕр юлмасть, каснă тĕлте юн тухмасть.
1852. Суккăр тĕве шывра çӳрет.
1853. Ула лаша чупса пырат, унăн йĕрĕ çухалса пырат.
1854. Халĕ кайрĕ, йĕрĕ çук.
1855. Хăй каят, хăйĕн йĕрĕ çук.
1856. Яка çул, йывăç лаша, çимесĕрех турттарать.

**Кимĕ çӳрени**

1857. Йывăç лаша шыв тăрăх чупать, ура йĕрри çухалса пырать.

**Кисĕп**

1858. Çинче(çинçе) пилĕк яш ача.
1859. Чипер инкен пилĕкĕ çинçе.

**Кишĕр**

1860. Вăр çаврашка — уçă мар, хӳри пур та — шăши мар.
1861. Йăранăски йĕс тукмак.
1862. Майри шалта, çитти тулта.

1863. Çĕр айĕнче ылттăн хутав.
1864. Çĕр çинче симĕс кĕл*, çĕр айĕнче сарă кĕл.
1865. Çĕр çинче симĕс кĕл, çĕр айĕнче хĕрлĕ кĕл.
1866. Çивти тулта, хăй шалта.
1867. Хăй шалта, çӳçĕ тулта.
1868. Хĕрлĕ хĕр тĕрмере ларать, çӳçĕ тулта.
1869. Хĕрлĕ хĕр тĕттĕм пӳлĕмре ларать, çивĕчĕ тулта.

### Кишĕр: тымарĕпе çулçи

1870. Сарă, сарă, сап-сарă та,
Сарă хĕрсем мар çавă;
Симĕс, симĕс, сип-симĕс те,
Симĕс курăк мар çавă;
Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕркке те
Вĕт вир кĕрпи мар çавă.

### Комбайн

1871. Сарă тинĕсре карап çӳрет.

### Консерва

1872. Йĕс пуракра тутлă шăрттан.

### Краççын

1873. Тунката çинче çутă пуç.
1874. Хура çиетĕ, шурă сысать.
1875. Шыв çинче путмасть, çĕр çинче путать.

### Краççын лампи

1876. Ашшĕ ывăлне йăтнă, ывăлĕ çĕлĕкне йăтнă.
1877. Ĕмĕрсĕр çăлтăр пĕр пӳрте анчах çутатса тăрать.
1878. Ик çумăр пĕлĕчĕ хушшинчен хĕвел пăхать.
1879. Йĕтем, йĕтем варринче вут.
1880. Катка, катка тăрринче пичке, пичке тăрринче ывăс.
1881. Кĕленче пӳртре ылтăн шăллă карчăк ларать.
1882. Кĕленче чиркӳ ăшĕнче пĕр хĕр кĕлтăвать.
1883. Килĕрен ясар.
1884. Лап çăпата, çутă куç.
1885. Лап çăпата, çутă пуç, çинçе пилĕк, хура куç.
1886. Лап çăпата, çинçе пилĕк, хĕрлĕ сăмса.
1887. Лап ураçăм, çинçе пĕвĕм, чĕл-чĕл куçăм.
1888. Лапша ураллă, çинçе пилĕклĕ, ял-ял куçлă.
1889. Мăн хырăмлă асаннен шăлĕсем тимĕр.
1890. Мӳклеке, мӳклеке, мӳклеке тăрринче çавра çап-çутă.
1891. Патша хĕрĕн пурçăн çӳç.
1892. Пĕрĕлчĕк, чарăлчăк, Илтирей куçĕ чарăлчăк.
1893. Пĕр пӳртрен çĕр чӳрече.

1894. Пĕчĕк аппан хырăмĕ пысăк.
1895. Пĕчĕк пиччен пин шăтăк, пысăк пиччен пĕр шăтăк.
1896. Пин, пин, пин шăтăк, Микулайăн пĕр шăтăк.
1897. Пин-пин шăтăк, пин шăтăк, пирĕн Микулайăн пĕр шăтăк.
1898. Пирĕн Микулан хĕрĕх шăтăк.
1899. Çийĕ чашăк пек, ăшĕ чăмăр пек.
1900. Çинçе пилĕк-çурăм, чăл-чăл куç.
1901. Çӳлте çăлтăр, аялта çăл.
1902. Тĕлĕнтермĕш кӳлĕ пур,
Çав кӳлĕре çĕлен пур,
Çĕлен пур та пулă пур;
Кӳлĕ шывĕ типсессĕн
Çĕленĕ те вилет,
Пуллийĕ те пĕтет.
1903. Тунката çинче çутă пуç.
1904. Тунката çинче çутти пур.
1905. Чăл-чăл куçлă, лай-лай хăлхаллă.
1906. Чăр-чăр куçлă, мăн хырăмлă.
1907. Чипер акин пуç тӳпи шăтăк.
1908. Якор арăмĕ яла тохмĕ.

**Краççын лампин ывси**

1909. Пĕр енĕ — кантăр вăрри икерчи, тепĕр енĕ — тăпăрч икерчи.

**Крептук***

1910. Унтри кантри — йĕм кантри,
Хĕрсен кантри — тăват кантри.

**Кукăль**

1911. Кăмакара Алюш пĕççи выртать.
1912. Кĕленкене мăйне пăрса лартнă.
1913. Пĕр картара сурăх мăйне пăрса хурăп.
1914. Пĕр карта сурăхăм пур, пурте мăйпăран.
1915. Пĕр карта сурăхăм, пурте кукăр мăйлă.
1916. Пĕр карта сурăх, пурте пĕр мăйлă.
1917. Пĕр карташ сурăх мăй хуçса выртĕ.
1918. Тĕр-тĕр-тĕр карта, вун икĕ сурăх пĕр карта, пурте татăк хӳреллĕ.

**Куккук**

1919. Асаттенĕн арчине çулталăкра пĕрре уçса пăхатăп.
1920. Хир-хир кайĕк, хир кайĕк,
Ылттăн-кĕмĕл çăмарти
Йăвине выртса юлатĕ.

**Кукша**

1921. Арпалăхра курăк çук, аксассăн та шăтас çук.
1922. Аслă вăрман варринче уçланкă пур.
1923. Им-паш пашалу, иртсе каян усламăç.

1924. Кăмака ҫинче сĕлĕ пашалăвĕ.
1925. Кăмака ҫинче сĕлĕ пашалăвĕ выртат.
1926. Кăмака ҫинче тул чусти выртать.
1927. Кĕпĕрнаттăр хурама тăрри кăпăр-кăпăр.
1928. Ҫеҫен хирĕн варри — йĕтем.
1929. Хура вăрман варринче уҫланкă пур, ҫав уҫланкăра йывăҫ та ӳсмест, курăк та ӳсмест.
1930. Шур курăксем хушшинче ту тĕмески курăнать.
1931. Яка ту ҫинче курăк сайра.

### Кукша пуҫ

1932. Тунката ҫинче тулă икерчи.

### Кукша, шакла пуҫ

1933. Хура вăрман варринче хушка ту ҫуталса тăрĕ.

### Кулач

1934. Пăшти-пашти тăмаши-яши.

### Кулă

1935. Вырăсăн-чăвашăн пĕр халап.

### Кулюкка

1936. Кăлтăр-кăлтăр кăлтăрчăк, хĕрлĕ атă, кăвак хыс.

### Кун

1937. Каҫпа вилет, ирпе чĕрĕлет.
1938. Каҫсерен вилет, ирсерен чĕрĕлет.
1939. Каҫхине вилет, хĕвел тухнипе чĕрĕлет.
1940. Тĕттĕмпе вилет, кăвак ҫутпа чĕрĕлет.
1941. Тĕттĕмпе куҫне хупать, кăвак ҫутпа куҫне уҫать.
1942. Хĕвел аннипе вилет, тухнипе чĕрĕлет.
1943. Хĕвел тухнине курать, хĕвел аннине курать, хĕвел ҫулĕпе утать. Ҫав мĕн пулать?

### Кун ҫути

1944. Шаккамасăр-тумасăр, алăка уҫмасăр пӳрте кĕрет.

### Кунпа ҫĕр

1945. Акăшĕ сарă, йăмăкĕ хура.
1946. Акăшĕ ҫутă, йăмăкĕ хура.
1947. Аппăшĕ шап-шурă, йăмăкĕ хуп-хура.
1948. Атăл урлă, Сăр урлă сăнсăр карчăк хăпса килĕ.
1949. Вăртахăн икĕ хĕр: пĕри хура, тепри сарă.

1950. Икӗ хӗр пӗр аҫаран, пӗр амаран: пӗри — сап-сарӑ, пӗри — хуп-хура; ӑна кашни кун куран, пӗлмесен — ухмах пулан.

1951. Йӑмӑкӗ пиччӗшӗ патне хӑнана каять, пиччӗшӗ унтан вӑрмана тарать.

1952. Йӑмӑкӗ пиччӗшӗ патне хӑнана каять, пиччӗшӗ унтан вӑрман хыҫне пытанать.

1953. Кайӑк ҫуначӗпе сулса янӑ та пӗр тӗкӗпех пур тӗнчене витсе лартнӑ.

1954. Кашкӑр килчӗ — тӗнче лӑпланчӗ, шур упа килчӗ — тӗнче вӑранчӗ.

1955. Пӗр тӗнче пӗтет, тепӗр тӗнче тухать.

1956. Пӗр хур ҫунатне хупларӗ те, пӗтӗм тӗнче хупланчӗ.

1957. Сар пикепе хура пике ылмашӑнса тӑраҫҫӗ.

1958. Сарпипе Хурапи вӗҫрен вӗҫе ҫӳреҫҫӗ.

1959. Ҫӗрпӳ хӗрӗн хура чаршав, пинпӳ хӗрӗн хура чаршав.

1960. Ҫурри хура, ҫурри шурӑ.

1961. Хура акӑш килсессӗн
Шуррин кайма тӳр килет;
Шурӑ акӑш килсессӗн
Хурин кайма тӳр килет.

1962. Хура вӑкӑр вырттарчӗ, шурри тӑратрӗ.

1963. Хура вӑкӑр хӑратса выртатчӗ, шурри кулса тӑратрӗ.

1964. Хура ӗне килсе выртать — шурӑ ӗне тӑрса каять; шурӑ ӗне килсе выртать — хура ӗне тӑрса каять.

1965. Хура ӗне пӗтӗм тӗнчене ҫӗнӗ.

1966. Хура кайӑк килчӗ те
Пур халӑха ӳкерчӗ,
Шурӑ кайӑк килчӗ те
Пур халӑха тӑратрӗ.

1967. Хура кайӑк хура ҫунаттипе сулса ярать те ҫут тӗнчене хупласа хурать.

1968. Хура пустав вырттарать, шурӑ шупӑр тӑрататать.

1969. Хура пустав хурататать, шурӑ шупӑр шурататать.

1970. Хура сӑхман вырттарать, шурӑ сӑхман шутлаттарать.

1971. Хура улӑп килет те пӗтӗм тӗнчене ҫӗнсе тухать.

1972. Хура чаршав карӑнать —
Хура халӑх йӑванать,
Шурӑ чаршав карӑнать —
Хура халӑх вӑранать.

1973. Шӑркалчӑ шап-шурӑ, хурами хуп-хура.

1974. Шур акӑшпа хура акӑш ылмаш вӗҫсе килеҫҫӗ.

1975. Шурӑ кӑвакарчӑнпа хура курак ылмаш вӗҫсе килеҫҫӗ.

1976. Шурӑ тӑван шурӑ шупӑрпа, хура тӑван хура халатпа.

## Купӑс

1977. Ай тӗм, вай тӗм, чунӗ пур та юнӗ ҫук.

1978. Вӑрманта ҫуралать, килте макӑрать.

1979. Йӑнӑшать, макӑрать, варне-хырӑмне ыталать.

1980. Касакĕ каска çӳллĕш те çук, мĕнпур хĕре çавăрать.
1981. Палан-палан пат та пат, пилĕк пӳрне шалт та шалт.
1982. Хутлă-хутлă хутаçлă, хура сăран atăллă.
1983. Чăнкăр-чăнкăр чăнкăрти,
Чăнккăртаттăр тимĕрти,
Алаттăрски Питтимĕр,
Тусăм пашăм Натали.
1984. Чике старик, хур сухал.

### Купăс калани

1985. Чăнк, чăнк, чăнкăрти, чăнкăр татăк тимĕрти; анарски Пиктимĕр, тусăм пашла Натали.

### Купăста

1986. Алсăр, урасăр, пин хут кĕпе тăхăнать.
1987. Алсăр, урасăр, çĕр хут кĕпе тăхăнать.
1988. Амăшĕн аллă саплăк, хĕрĕн хĕрĕх саплăк.
1989. Вăтăр шупăр тăхăннă, пĕрин те тӳми çук.
1990. Касман пир тĕрки айĕнче çĕр утмăл мулкачă.
1991. Катта, ката, ката-кипек, иссе чăккаç киев кĕпĕк.
1992. Качăр-качăртатмăш, чун илĕртмĕш, тухатмăш.
1993. Лăпă-лăпă çунатлă,
Утмăл икĕ туратлă,
Хутлă-хутлă хутаçлă,
Урлă-пирлĕ кĕпеллĕ.
1994. Лăпсăр-лапсăр карчăк хĕрĕх кĕрĕк тăхăннă, пĕрин те каптăрми çук.
1995. Мăкăнь пĕрчи пек ӳкнĕ, шурă хут пек ӳснĕ.
1996. Мăнтăр майра сакăр вун сараппан тăхăнать.
1997. Мы, мы, мычала, мычаланын варри мамаля.
1998. Пĕр карта сурăх, пурте хăрах ура çинче тăраççĕ.
1999. Пĕр майран хĕрĕх хут кĕпе.
2000. Пĕр майран хĕрĕх сарафан.
2001. Пĕр майра çĕр хут кĕпе тăхăннă.
2002. Пĕр майра çитмĕл хут сараппан тăхăнать.
2003. Пĕр майра темиçе хут сараппан тăхăннă.
2004. Пĕр майра хĕрĕх хут сараппан тăхăннă.
2005. Пĕр майра хĕрĕх сарахван тăхăнать.
2006. Пĕр пуканен хĕрĕх калпак.
2007. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк.
2008. Пĕр тунката тăрринче пуп тăрать, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тум тăхăннă.
2009. Пĕчĕкеççĕ пукане пин хут кĕпе тăхăннă.
2010. Пĕчĕкиç Пинеслĕ пин хут кĕпе тăхăнать.
2011. Пĕчĕкиç Пинӳç пин хут кĕпе тăхăннă.
2012. Пĕчĕкиç салтак çитмĕл çич кĕпе тăхăннă.
2013. Пĕчĕккеç пукане хĕрĕх кĕпе тăхăннă.

2014. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать.
2015. Пĕчĕкçеççĕ пукане пин хут кĕпе тăхăнать.
2016. Пĕчĕкçеççĕ пукане хĕрĕх хут кĕпе тăхăнать.
2017. Пĕчикиç Пинеслу пин хут кĕпе тăхăнать.
2018. Пĕчиккĕç пукане пур, пин хут кĕпе тăхăнат.
2019. Пин, пин аслу, пин аслу пин хут кĕпе тăхăннă.
2020. Пин Пинеççе, Пинеççе, пин хут кĕпе тăхăнать.
2021. Пинпӳ майрин пин саплăк, çĕрпӳ майрин çĕр саплăк.
2022. Сит-сителти, сителти,
Çич ял çинчен сителти.
2023. Çĕрпӳ майри çĕр хут йĕм тăхăннă, пĕрин те кантри çук.
2024. Çĕтĕк майра çĕр хут сараппан тăхăннă.
2025. Çитмĕл хут тăхăннă, пĕрне те çĕлемен.
2026. Ула лашан тирĕ хулăн.
2027. Урлă-пирлĕ кĕпеллĕ, хура сăран атăпа.
2028. Хăрах ураллă пиччен пин саплăк.
2029. Хутлă-хутлă хутала, хутала та мамала.
2030. Хутлă-хутлă, хутарлă, симĕс сăрлă кĕперлĕ.
2031. Хутлă-хутлă хутаçлă, хура сăран атăллă.
2032. Хут-хут кĕпе тăхăнтрĕç: хывам та пăракам, хывам та пăракам.
2033. Хуч-хуч хучала, варри мунчала.
2034. Хуч-хучала, хучала, хучала варри мамала.
2035. Хуч-хучала, хучала, хучала варринче мамала, мамала урлă, вар урлă, урлă-пирлĕ йĕс кĕпер.
2036. Хуч-хуч хучăкла, хучăла çинче мунчала, мунчала çинче çаврашка.
2037. Шурă чăхă пĕр ура çинче тăрать.

## Купăста тӳни

2038. Тӳтелкки тăват уран тăрать, тӳмепей çулталăкра пĕрре пырса тĕвет.

## Курак

2039. Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек.

## Курăк

2040. Акмасăр шăтрăм, сапмасăр ӳсрĕм, чĕнмесĕр килтĕм.

## Курите çинчен ăсла юхни

2041. Çӳлĕ ямран сим юхать.

## Курка

2042. Иван пичи шыва кайĕ, шыва кайсан — кăларĕ.
2043. Кăвакалĕ шывра, хӳри карта çинче.
2044. Кăвакал шыв çинче, хӳри ту çинче.
2045. Натякка, шыва!
2046. Пăхăр çĕленĕн хӳри кукăр.

2047. Пĕвĕ шывра, хӳри çырта (çыранта).
2048. Пĕр çын тунине пин çын чуптăвать.
2049. Пĕчĕкиç утĕкки шыв çинче ярăнса çӳрет.
2050. Пĕчĕкçеç кинĕм пур, килен-каян чуптăвать.
2051. Пĕчĕкçĕ кинĕм пур, килен-каяна чуптăвать.
2052. Пĕчĕкçеççĕ Пинекей, килен-каян чуптăвать.
2053. Пирĕн инкене пит юратаççĕ, пымассерен чуптăваççĕ.
2054. Тимĕр çыранлă кӳлĕре пăхăр кăвакал ишсе çӳрет.
2055. Утьăкки, шыва!
2056. Чипер çын, килен-каян чуптăвать.
2057. Шахчă шыва каять.

## Курка, шыв ĕçни

2058. Пĕчĕккеççĕ кинĕм пур, килет-каять — чуптăвать.

## Куршак

2059. Ăшĕ хăвăл, тулĕ чул,
[Ăшĕ çăхăр, тулĕ чул]
Акăлински йĕрелчĕ.

## Куршанак

2060. Ан кай-ха, эпĕ те пырам.
2061. Ан тĕкĕн, Тимухха, тивмен çĕртен тивертĕп.
2062. Ан тив, Тимуххи! Тивмен çынпа мĕн тăван?
2063. Ăçта каятăн мансăр, эпĕ те пыратăп.
2064. Йонсăр, чонсăр, çынпа варлă.
2065. Куштан, сана тĕкĕнместĕп, тĕкĕнсессĕн — уйăрăлмастăп.
2066. Пĕр тĕкĕ тăрринче хĕрĕх кĕлет ларĕ.
2067. Пĕр юпа çинче пин шăрт, патне пыма çук — сăхаççĕ.
2068. Пĕр юпа тăрринче хĕрĕх кĕлет.
2069. Пĕр юпа тăрринче хĕрĕх кĕлте ларать.
2070. Пĕр ялта çитмĕл кукша.
2071. Çĕнĕ Мертлĕре çитмĕл кукша.
2072. Çĕнĕ урамра çитмĕл пилĕк кукша.
2073. Çыпăçать, çыпăçать Спиритун Элекçи кĕрӳшĕ.
2074. Тивмен çĕртен тивертĕп.
2075. Тупи-тупи тупиçĕм,
Тупи ури хуçăкçăм,
Арăш-пирĕш кĕрӳçĕм,
Пĕр çыртăп та пĕр ямăп.
2076. Хитре Хĕрккен хĕрĕх мурка.
2077. Чипи-чипи чипиçĕм,
Чипи хӳри çариçĕм;
Исепкеçĕм, кĕрӳçĕм,
Пĕр тытăп та пĕр ямăп.
2078. Шак-шак юман, шак юман,
Шак юманта шак турат,
Шак туратра шак йĕкел.

2079. Эп тивместĕп, хăй тивет.
2080. Юнсăр, чунсăр, çынпа варлă.

### Кусар

2081. Ивиккĕм, тувиккĕм, çавна тупмасăр шанчăксăр.
2082. Кăвак така ту ярăнать.
2083. Тимĕр така ту шăват.
2084. Тимĕр така ту ярнать.

### Кустăрма

2085. Вăр-çаврашка, варри шăтăк.
2086. Çулла çу çиет, хĕлле типĕ тытать.
2087. Тăваттăн пĕртăван, пĕрне-пĕри кураççĕ, пĕр-пĕрин патне пыраймаççĕ.

### Кусуйсем*

2088. Ирлĕк** — йарлăк, Йемел(к)ке куçĕ чарлăк.

### Куç (куçсем)

2089. Акка шăрçи аякка сапăнать.
2090. Ĕнчĕ-пĕнчĕ*, кĕленче çинче пĕр пĕрчĕ.
2091. Ĕнчĕ-мĕнчĕ, тĕмĕ урлă ик пĕрчĕ.
2092. Ĕнчĕ-пĕнчĕ, кĕленче витĕр пĕр пĕрчĕ.
2093. Икĕ автан вăрçаççĕ, кашта урлă каçаймаççĕ.
2094. Икĕ автан каска орлă вăрçаççĕ.
2095. Икĕ айкки тĕклĕ, варри шăтăк.
2096. Икĕ ахах пĕрчи тĕнче тавра çаврăнĕ.
2097. Икĕ енчĕкре икĕ шăрçа, пин тенкĕпе сутмастăп.
2098. Икĕ мулкач каска урлă выляççĕ.
2099. Икĕ пăт тулă пур, çанталăкпех акса çаврăнăп.
2100. Икĕ пăт тулла темиçе уя салатăп, пӳрт тавра салатаймăп.
2101. Икĕ пăт чула тĕнчипе акса çӳрĕп.
2102. Икĕ пĕртăван çумма-çуммăн тăрать, пĕр-пĕрне курмасть.
2103. Икĕ пĕртăван уйрăлмасть,
Урам урлă пурăнать,
Пĕрне-пĕри курмасть.
2104. Икĕ пĕрчĕ вирĕме пĕтĕм тĕнчене салатрăм.
2105. Икĕ пĕрчĕ пăрçана пĕтĕм хире çапса салатрăм.
2106. Икĕ пĕрчĕ толă — çавăнталăкпеле* акса çавăрнăп**.
2107. Икĕ тăван сăрт урлă анчах пурăнаççĕ, çапах пĕр-пĕрне куримаççĕ.
2108. Икĕ тăван урам урлă пурăнаççĕ, нихçан та пĕр-пĕрне курмаççĕ.
2109. Икĕ хура йăмăкăм пур — йĕп тупсан йĕп йăтаймасть.
2110. Икĕ хура шăрçам пур, Атăл урлă ывăтрăм.
2111. Ик-так, чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
2112. Ик тăвайккинче иккĕн, пĕр-пĕрне курмаççĕ.

2113. Йăлтăр-ялтăр икĕ чул, вăта çĕрте кевер чул.
2114. Йĕкĕрлĕ хăвăлта мăшăрлă хăнтăр вылять.
2115. Каска орлă ик атан вăрçаççĕ.
2116. Каска* урлă икĕ кайăк** вăй вылять.
2117. Кăнтăрла уçăлать, çĕрле хупăнать.
2118. Марьепе Тарье пĕр-пĕрне курмаççĕ.
2119. Пĕлĕтсĕр-мĕнсĕр çăлтăр пăхать.
2120. Пĕр каска урлă икĕ авăлтан* вăрçаççĕ.
2121. Пĕр пăчăх туллăм пĕтĕм хире саланать.
2122. Пĕр çаранта икĕ хăмăшлă кӳлĕ.
2123. Пĕр çут аяккинче икĕ куршак.
2124. Пĕчĕкçеççĕ касна* урлă икĕ автан сиксе тӳпелешеççĕ.
2125. Пĕчĕк те хĕсĕк, йĕри-тавра тĕклĕ.
2126. Пиччĕшпе шăллĕ урам урлах пурнаççĕ, пĕр-пĕрне нихçан та курмаççĕ.
2127. Пӳрт тавра çавăрăнать, пуç тавра çавăрăнимаст.
2128. Сарай çунатти айĕнче икĕ ăмăрт кайăк пăхса лараççĕ.
2129. Çавра ту, çавра ту çамкинче ăмăрт кайăк çунатти, ăмăрт кайăк çунатти айĕнче çунса тăран хăй çути.
2130. Çамка, çамка çинче тамха, тамха çинче шăрçа, шăрçа çинче пăрçа.
2131. Çĕр сумлăх лаша çӳпĕ туртаймĕ.
2132. Çĕр çинче мĕн çивĕч?
2133. Çут айккисенче икĕ куршак.
2134. Улентейпе Мулентей урам урлă пурнаççĕ, пĕрне-пĕри курмаççĕ.
2135. Урам урлă икĕ тăван пĕтĕм тĕнчене кураççĕ, пĕрне-пĕри курмаççĕ.
2136. Хăвăлта хăнтăр вылять.
2137. Хĕлĕх картара ула тиха.
2138. Чул ту витĕр хура чул.
2139. Шурă чара, шурă чара, варринче хура чашкă, хура чашкăра хура ĕнчĕ.
2140. Ывăçласа илсен ывăç тулмасть, салатса ярсан çарана шăнăçмасть.

## Куç кĕски

2141. Пĕчĕкçеççĕ сарă хĕр куçран пăхса кулать.
2142. Чалт уярта пĕлĕт çук,
Патри пăхрĕ — чалт çутă.
2143. Чӳрече куçĕнчен çын мĕлки курăнать.

## Куç харши

2144. Икĕ кашта хура чăххăм пур.
2145. Икĕ çунат вĕçе-вĕçĕн вĕçет.
2146. Ту тăррине хăпарăп, мăшăр кĕвенте туянăп.
2147. Пĕр ту çинче икĕ хура çĕлен авкаланса выртать.

## Куç харши, куç

2148. Икĕ хура чĕкеç, икĕ хура хурлăхан.

### Куç хăрпăкĕ

2149. Леш енче те çĕр лаша,
Ку енче те çĕр лаша —
Тапăшать те тапăшать.
2150. Çĕр кăвакал хура кӳлле чăмасшăн пăхса тăрать.
2151. Çурăк кутлă çытмам пур, мĕнле тăхăнмаллине хам калăп.

### Куç хупаххи

2152. Кăшкар хĕвинче ик ката.
2153. Сăрт вĕçинче ик ката.

### Куç хупни

2154. Тĕкпе тĕк, ӳтпе ӳт.

### Куçлăх

2155. Каять пуш утпа, ларнă каялла, пăхать малалла.
2156. Улпут урапин турти каялла.
2157. Хăй утланнă, урине хăлха çине хунă.

### Куçпа куç харши

2158. Икĕ йăлтăркка çинче икĕ хура пĕкече пур.
2159. Икĕ йăлттам çинче икĕ кăнттам пур.
2160. Икĕ кӳлĕ хĕрне икĕ картлав пăрахса хăварнă.
2161. Икĕ кӳлĕ хĕрринче икĕ çĕлен авăнса выртаççĕ.
2162. Икĕ тарăн кӳлĕ пур, икĕ енĕпе вĕтлĕх пур.
2163. Икĕ хĕрри тĕкленсе тăрать, вăта çĕрĕ нӳрленсе тăрать.
2164. Йĕри-тавра хăях пулĕ, вăта çĕрте кӳлĕ пулĕ.
2165. Пĕр йăлтăркка тавра хĕрĕх шăрт.
2166. Сăрт çамкинче пĕр хăлат сарса хунă ик çунат.
2167. Çавра кӳлĕ хĕрринче хăва хуллисем ӳсеççĕ.
2168. Çурт çумĕнче чĕкеç çунатти çакăнса тăрать.
2169. Çутă кӳлĕ хĕрринче хăмăшлăх.
2170. Хуралт çумĕнче хурчăка çунатти çакăнса тăрать.
2171. Чӳрече тăрне чĕкеç çунаттине çакса хунă.
2172. Ылтăн кӳлĕ тавра сыхлавçăсем тăраççĕ.

### Куçпа сăмса

2173. Икĕ кӳлĕ хушшинче ту хысакĕ.
2174. Икĕ кӳлĕ хушшинче улăп тĕмески.

### Куçпа хăлха

2175. Ик тăванĕ малтан чупаççĕ, иккĕшĕ хыçалтан хăвалаççĕ.

### Куççуль (куç çулĕ)

2176. Тӳперен кӳлли тулса тăкăнать.
2177. Чул ту витĕр çăл куç тапать.

**Кутамкка**

2178. Хирелле кайнă чух ялалла пăхать, яла кĕнĕ чух хирелле пăхать.

**Кушак**

2179. Аялта тăваттă, çӳлте иккĕ, пĕри чанк.
2180. Ватă кайăкçă пăшалне пӳртре те тăратса çӳрет.
2181. Ĕçчен куштан, мăр-мăр салтак.
2182. Иван кутакăн пăшалĕ вăрăм.
2183. Иван кутакăн* сăнни вăр(ă)м.
2184. Ир те, каç та мăр-мăр салтак.
2185. Кăмака айĕнчен пĕр салтак тухать.
2186. Кăмака айĕнче сăрлă-сăрлă патак выртать.
2187. Кăмака çинче кăп тиек ларĕ.
2188. Кăмака çинче кăп тилек, сак çинче сак тилек.
2189. Кăмака çинче каптирек ларĕ.
2190. Кăмака çинче кĕрĕк пĕркенсе выртать.
2191. Кăмака çинче меме* салтак выртать.
2192. Кăмака çинче пуçламан шăрттан выртать.
2193. Кăмака çинче сăрлă туя выртать.
2194. Кăмака çинче çывăрать, çири кĕрĕкне пăрахмасть.
2195. Кĕрĕкĕ пур, кĕпи çук, мăйăхĕ пур, сухалĕ çук.
2196. Кĕрĕкĕ пур, сăхманĕ çук, мăйăхĕ пур, сухалĕ çук.
2197. Лутра салтак пăшалне тăратса пӳрте кĕрет.
2198. Мăркин-маркин — мăркин салтак, курас килмест курпун салтак.
2199. Мăр-мăр мăрлатать, патаккине тăратать.
2200. Пĕчĕкçеççĕ йыттăм пур, ир тăрать те куяна каять.
2201. Пĕчĕкçеççĕ кинеми пур, турахупне йӳтать те çӳрет.
2202. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, кĕнчелеççине йăтсах çӳрет.
2203. Пĕчик кинеми турчка йăтсах çӳрет.
2204. Пĕчик салтак пӳртелле пăшалне тăратса кĕрет.
2205. Пирĕн кинеми турчкине йăтсах çӳрет.
2206. Пирĕн хăна-хĕр ир тăрать те кĕнчелеççи йăтса тухса каять.
2207. Сак айĕнче йĕс хӳре.
2208. Сак çи çинче сар пике — писенет те тĕсенет.
2209. Тăвата кăчăркка, икĕ йăлтăркка, пĕр шĕвĕркке.
2210. Уретник пăшалне тăратнă.
2211. Ури çемçе, усси хытă.
2212. Чăл-чăл куçлă, пăк-пăк çăварлă, пăшалне тăратнă, пӳртелле кĕрет.
2213. Шурă кĕççе çинче кукрый-мукрый мулла ларать.
2214. Шурă кĕççе çинче Мевли мулла ларать.
2215. Энтрух пичче анкарти тăрăх шертине тăратса çӳрет.
2216. Энтрӳк пичче анкарти тăрăх шерте сĕтĕрет.

**Кушак, ача, путек**

2217. Сак çинче Сактирлек, урайĕнче Утирлек, кăмака çинче Кăтирлек.

### Кушак кайӑк

2218. Сак айӗнче пӗчӗк ҫӑмха кускаласа ҫӳрет.
2219. Ҫичӗ тӗслӗ тыр-пулӑма
Ҫичӗ кӗлет тытатӑп,
Ҫичӗ йӗтем ҫийӗнче
Ҫичӗ капан тытатӑп,
Кирек кӑҫта кайсан та
Сӑсар кӗрӗк тӑхнатӑп.
Кам мана пуян тейӗ-ши?
2220. Чал такан мӑйраки ҫук.
2221. Шав та пулмасть,
Кӗр те пулмасть,
Сухалӗнчен турттармасть.

### Кушак куҫӗ

2222. Икӗ ҫӑлтӑр хура ҫӗрле мӑч та мӑч.

### Кушак хӳри

2223. Варук сӑмси вака* каҫӑр.
2224. Вырӑс ерни кунӗ вырӑс пӑшалне тӑрататть.
2225. Кӑмака айӗнче сӑрлӑ туя.
2226. Кӑмака айӗнче сӑрлӑ туя выртат.
2227. Кӑмака ҫинче сӑрлӑ туя выртать.

### Кушил

2228. Тӑвата хӑлха, икӗ хырӑм.

### Куян

2229. Чал такан мӑйраки ҫук.
2230. Шарт сикет, ялт сикет, чӑтлӑха кӗрсе ҫук пулать.
2231. Шурӑ улпут шурӑ пӳртре выртать.

### Кӳлӗ

2232. Асатте куҫне аллӑ икӗ улӑп та ҫӗклеймӗ.
2233. Аслӑ улӑхра асатте куҫӗ ҫуталса выртать.
2234. Улӑх варринче улӑп куҫӗ пур.
2235. Хӗл ларсан шурӑ пулать, ҫу ҫитсен кӑвак пулать.

### Кӳлнӗ ут

2236. Икӗ йывӑҫ кашта, вӑта ҫӗрте ихахай.

### Лампа

2237. Алӑк панче алпанас, тӗпелте телпенес, варринче Кӗркури.
2238. Алӑк патӗнче — аппанас, тӗпелте — теппенес, варӗнче ухмах Иван.

2239. Йăлтăр-йăлтăр Илмил*, çинçе пилĕк Киремет**, пысăк кут Мăкшă***.
2240. Йăлтăр-ялтăр Ялтан, лап çăпата Саврăшпуç.
2241. Килĕрен пĕр пăчăр.
2242. Килрен каян, салтак куран.
2243. Куçпа куратăп, алăпа тытимастăп.
2244. Мăн çăмарта, çутă куç.
2245. Пĕр пӳртĕн çĕр чӳрече.
2246. Пирĕн пичийĕн пин шăтăк.
2247. Пичĕке, пичĕке ăшĕнче лакăм, лакăм ăшĕнче шур куян.
2248. Ылттăн çăмарта тупрăм, çăмарта ăшне вут хутăм.

### Лампа çути

2249. Хăй пӳртре, мĕлки тулта.

### Лампатка

2250. Пин-пин-пин çĕтĕк, Миколайăн пĕр çĕтĕк.

### Лапатка

2251. Хура аппа икĕ енчен çупать.

### Лаç

2252. Çĕр çерçийĕн пĕр сăмса.
2253. Хура сыснан тӳрчĕ шăтăк.

### Лаçра вут çунать, алăк уçсан курăнать

2254. Ан кар çăварна — ӳпкӳ курăнать.

### Лаххан

2255. Виçĕ ура, тăваттăмĕш — хырăм.
2256. Виç ура, ик хăлха, куçĕсем хăлхи çинче.
2257. Виç ураллă, ик хăлхаллă.
2258. Виç ураллă, ик хăлхаллă, нимĕне те тиркемест.
2259. Ик хăлхаллă, виç ураллă, варринче хырăм.
2260. Ик хăлхаллă, мăн хырăмлă, виç ураллă.

### Лаша

2261. Ахи-пăхи, шăнкăлт-тункăлт.
2262. Иккĕн пăхаççĕ, пĕри ĕçет, иккĕн выляççĕ.
2263. Иххи-паххи, тăлтти-талтти.
2264. Платник мар, столяр мар, маляр мар, ялта ятлă ĕçлекен.
2265. Суха тăвакан мар, сĕтел тăвакан мар, платник мар, ялта хăй тарçă.
2266. Тăвата уралла — тискер кайăк мар.
2267. Тăваттăн пыран тӳн-тӳн-тӳн, икĕ хăлхăне* качĕ-качĕ.
2268. Тăваттăн тăпăл-тăпăл, иккĕн хăть-хуть, пĕччен вăш-вăш.

2269. Тăваттăн тăраççĕ, хĕрĕхĕн хăвалаççĕ.
2270. Тăваттăн тӳп-тӳп, пĕри авăсать.
2271. Тăваттăн тӳп-тӳп, пĕр харамса.
2272. Тăваттăн тӳп-тӳп, хăй пĕччен.
2273. Тăваттăн хăйăрлаççĕ, пĕри авăсать.
2274. Тимĕрçĕ мар, платник мар, пирвай ялта ĕçлекен çав.
2275. Тимĕрç мар, платник мар, ялта пĕрремĕш ăста.

### Лаша, йĕнер, йăрана

2276. Ӳт кермен, тимĕр пусма, пусрăм та хăпарса кайрăм.

### Лаша, йĕнер, çăк (е юлан утçă)

2277. Пирĕн йысни инкине
Тăсса хунă сак çине:
Сакки авнать, инки савнать,
Йысни кулса çеç выртать.

2278. Вырăн çинче инки, инки çинче йысни. Йысни кусать, инки кулать, вырăнĕ мĕнле чăтать-ши?

### Лаша куçĕ, хăлхи, урисем; çуна шăлĕсем

2279. Иккĕшĕ çунса тăрать, иккĕшĕ ташласа тăрать, тăваттăшĕ тарса пырать, саккăрăшĕ хăваласа пырать.

### Лаша кӳлсе тăварни

2280. Алашит, тулашит, вăтаммине кĕлешит; тӳп-тӳремми, тӳрески, тĕверĕски-ярăски.
2281. Энтриччĕ, çăваччĕ; кĕрĕк туртнă, куклетнĕ.

### Лаша урисем, хӳри

2282. Тăваттăн тĕвеççĕ, пĕри авăсса пырать.

### Лаша, çара çуна шăлĕсем

2283. Тăваттăн тараççĕ, саккăрăн хăвалаççĕ.

### Лаша, çуна-урапа

2284. Тăваттăн утаççĕ, иккĕн шăваççĕ.
2285. Чĕррине вилли хăвалать.
2286. Чĕррин тăваттă, виллин саккăр.
2287. Чунли тарать, чунсăрри хăвалать.

### Лаша сысни

2288. Ту çинчен тунката (муклашка) йăваланса анать.

### Лаша ҫӑварлӑхӗ

2289. Аш хуранта тимӗр пиҫет.

### Лаша ҫӑварлӑх кавлет

2290. Тур папай ывӑлӗ тимӗр чейӗр чӑмлать.

### Лаша тӑварни

2291. Еприче, ҫави-че кӗрек туртнӑ, куклетнӗ.
2292. Ир те чак-чак,
Каҫ та чак-чак,
Валик вак-вак.
2293. Эприче, ҫавиче, кӗрӗк туртнӑ, куклетнӗ.

### Лаша урапи

2294. Ларкӑҫӗ пӗрре, ҫӳреткӗҫӗ иккӗ, тӗкӗр-тӗкӗр — тӑваттӑ.

### Лаша урисем

2295. Алтӑр айӗнче автан авӑтӗ.
2296. Алтӑр айӗнче кӑчӑр-кӑчӑр!
2297. Аслӑк айӗнче автан авӑтать.
2298. Пӗр старикӗн сухалӗ каялла.
2299. Тӑватӑ старик, тӑваттӑшӗн те сухалӗсем каялла.
2300. Тирӗк айӗнче чакак макрать.
2301. Хупӑлчаллӑ савӑт айӗнче автан авӑтать.
2302. Чашӑк айӗнчен чакак сасси илтӗнет.
2303. Чӗввик-чӗввик, кап-кап!
2304. Тӑватӑ старик тӑрать, тӑваттӑшӗн те сухалӗсем каялла.
2305. Тӑватӑ тӑван: иккӗшӗ малта, иккӗшӗ хыҫалта, умлӑ-хыҫлӑ чупаҫҫӗ, пӗр-пӗрне хуса ҫитеймеҫҫӗ.
2306. Тӑваттӑн малта, пӗри хыҫалта.

### Лаша ури айӗнчи юр чакӑртатни

2307. Чашкӑ айӗнче чакак кӑшкӑрать.

### Лаша ури такӑртатни

2308. Чашӑк айӗнче чакак чакаклать.

### Лаша утланнӑ ҫын

2309. Улт ураллӑ, икӗ пуҫлӑ, ик алӑллӑ, тӑват хӑлхаллӑ.

### Лаша утланни

2310. Ултӑ ураллӑ, тӑват куҫлӑ, икӗ чунлӑ, икӗ сӑмсаллӑ, икӗ пуҫлӑ.

### Лаша утни

2311. Хупăлчаллă тирĕк айĕнче автан автат.

### Лаша хӳри

2312. Вăрмана кайрăм — çĕклемлĕх вут тупмарăм.
2313. Лашаран кайра, çунаран малта.
2314. Пĕр çын хыçĕнче пин çын тăрать.
2315. Сĕм вăрманта сенĕклĕх тупаймăн.
2316. Сĕм вăрманта çекĕллĕх тупаймăн.
2317. Сĕм вăрманта çаклăлăх топимăн.
2318. Шыва пин лаша кĕрет, шывран пĕр лаша тухать.

### Лаша чарни

2319. Кăлтăрттин ой.

### Лаша чупни

2320. Пĕри ухать, тепри авăсать, тăваттăн тĕвеççĕ, иккĕн итлеççĕ.
2321. Тăваттăн тĕвеççĕ, пĕри авăсать.

### Лаша шыв ĕçни

2322. Услан кайăк шыв ĕçет, икĕ тетерлек вăйă вылят.
2323. Араслан кайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк вăй вылять.
2324. Арăслан кайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк уй* вылят. *Вар.:* Арăслан кайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк вăйă вылять. *Вар.:* Икĕ текерлĕк вăй вылять, арăслан кайăк шыв ĕçет. *Вар.*: Арăслан кайăк шыв ĕçнĕ чух ик текерлĕк вăйă вылять.
2325. Ăмарт кайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк вăй вылять.
2326. Ăсан кайăк (вар.: аслан кайăк, арăслан кайăк, услам кайăк, ăмăрт кайăк) шыв ĕçет, икĕ текерлĕк вăйă вылять.
2327. Икĕ текерлĕк вăйă вылять, ăмăрт кайăк шыв ĕçет.
2328. Икĕ текерлĕк вăйă вылять, услан кайăк шыв ĕçет.
2329. Ослан кайăк шыв ĕçет, ик тетерлек вăй вылять.
2330. Услан кайăк шыв ĕçет, икĕ текерлик вăй вылять.
2331. Услан кайăк шыв ĕçет, икĕ текерлӳ вый вылять.

### Лĕпĕш

2332. Икĕ хупăллă алăк инçете вĕçсе каять.
2333. Хĕлле вилет, çулла чĕрĕлет.
2334. Чунĕ пур, юнĕ çук.
2335. Шурă, шурă, шур чарлан хĕвеллĕ кун вĕçет, тĕрлĕ чечек пуçтарать.

### Лупас ай юписем

2336. Тăватă ывăл ӳстертĕм, тăваттăш те пĕр тан.

### Мамăк

2337. Пĕр кило мамăк йывăр-и, пĕр кило тимĕр йывăр-и?
2338. Çĕклеме пулĕ-ха та, аякка ывăтайăн-а-ха?

### Манка шăнкарни

2339. Иккĕн тухаççĕ, пиллĕкĕн çĕклесе çапаççĕ.
2340. Иккĕн чупса тухать, пиллĕкĕн йăтса пăрахаççĕ.
2341. Лап çĕре çутă пуç.
2342. Матĕрне аппа иртсе пырат, шурă тутăр ӳксе юлат.
2343. Шăвикăм шăнкарăм, шыва ятăм — путмарĕ.

### Манка юхни

2344. Икĕ çырмапа сулă юхать, пилĕк касак кĕтсе тăрать.
2345. Иккĕн чĕкĕреççĕ, пиллĕкĕн тасатаççĕ, тасатса çитерейменççĕ.

### Марта*, пыл карасĕ

2346. Шывсăр-çилсĕр арман авăрать, вутсăр-мĕнсĕр çăкăр пиçет.

### Масар

2347. Автанĕсем авăтаççĕ, çыннисем тăмаççĕ.
2348. Кай енче пĕр ял пур: автанĕсем авăтмаççĕ, çыннисем çывăраççĕ, нихăçан вăранмаççĕ.
2349. Ялĕ ларса тухнă, автанĕсем авăтаççĕ, çыннисем тăмаççĕ.
2350. Ял хыçĕнче ял — автанĕсем те авăтмаççĕ, çыннисем те вăранмаççĕ.

### Масмак

2351. Асламас кĕперри авăнчăк.
2352. Лаптак кашта çине симĕс курăк шăтĕ.
2353. Пӳрт урлă пĕкĕ ывтăп.
2354. Улăм ори тăрринче хĕрлĕ йытă выртать.

### Мачча

2355. Ретук ретне Синчук пĕчченех.

### Мачча кашти

2356. Андрей шалта, пуç тулта.
2357. Аçу пуçĕ тулалла.
2358. Ермей малта, пуçĕ тулта.
2359. Улăп пӳрт урлă выртать.
2360. Энтри шалта, пуçĕ тулта.

### Мачча кашти, мачча хăмисем

2361. Ашшĕ пӳрт урлă тăсăлса выртнă, ывăлĕсем ăна урлă пусса выртнă.
2362. Вăрăм вырăс тăсăлса выртать, ачи-пăчи тĕрĕнсе выртать.

2363. Орпа ани орлă, толă ани тăрăх.
2364. Пĕр лашана çĕр çын утланнă.
2365. Пĕр салтак çине пин салтак пуç хурать.
2366. Пĕр ут çине çĕр йĕкĕт утланса ларĕ.
2367. Пуçлă-вĕçлĕ пуçана выртать.
2368. Ретюк ретĕм, Сенчук пĕччен.
2369. Утмăл кахал ура вĕçлĕ выртаççĕ.
2370. Утмăл нӳкер ура вĕçлĕ.
2371. Хĕрĕх ывăл ашшĕне пусса выртнă.

**Мачча хăми**

2372. Отмăл тотар кота котăн выртаççĕ.
2373. Утмăл тотар ора вĕçлĕ.
2374. Утмăл тутар ура вĕçлĕ.
2375. Утмăл тутар ура вĕçлĕ выртать.

**Мачча хăмисемпе вучах**

2376. Вăтăр хусах пĕр хĕр çине пăхса выртать.

**Маччапа урай**

2377. Орташ орлă, Исментер тăрăх.
2378. Тайрапа Майра чуптăваççĕ.
2379. Тайрепе Майре чуптăвас пек тăраççĕ.
2380. Тарйепе Майре хире-хирĕç пăхса йăл кулать.
2381. Тарьепе Марье хире-хирĕç чуптăваççĕ.

**Маччапа урай хăми**

2382. Тарчепе Марче хире-хирĕç тăрса ташлаççĕ.
2383. Хире-хирĕç пăхса пурăнаççĕ, пĕрне-пĕри сăмах хушмаççĕ.

**Маяк**

2384. Уй варринче качака кутăн ташлать.
2385. Хĕлле ларать, çулла ӳкет.

**Мăй**

2386. Мăн йывăçăн вулли тĕрлĕ енне пăрăнать.

**Мăй çыххи çыхни**

2387. Эсĕ те унтан кай, эпĕ кунтан каям. Энтри арманĕ хыçĕнче тĕл пулайăпăр-и?

**Мăйăр**

2388. Авкаланать, хуçкаланать, тĕкли ăшĕнчен якли тухать.
2389. Ав мана, тыт мана, ман çинче тĕкли пур, тĕкли çинче яки пур, яки çинче çари пур.

2390. Амăшĕ çĕтĕк çĕлĕклĕ, хĕрĕ ылттăн тухьяллă.
2391. Ан тив мана, ан тив мана, тивсен шăлă катăлат.
2392. Ăшĕ нимĕр, тулĕ тимĕр.
2393. Пĕкĕрт мана, хоç мана, хăпар ман çийа, ман çира тĕкли пор, тĕклисенче яклаки пор, яклакисенче тутли пор.
2394. Пĕр васанта пин патак, патаксерен çĕр йăва, йăвисерен виçшер çăмарта.
2395. Пĕчĕкçеççĕ хуранăн пăтти тутлă.
2396. Пĕчĕкçеççĕ чӳлмекре çуллă çăмах пиçет.
2397. Пĕчĕкçĕ хуранăн пăтти тутлă.
2398. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă.
2399. Пĕчĕк хуранта тутлă пăтă пиçĕ.
2400. Пĕчиккеç хуранăн пăтти тутлă.
2401. Пĕчикçеççĕ хуранăн пăтти тутлă.
2402. Сап-сар тиек, сар тиек, никам та ытарас çук.
2403. Сăк-сакăлта, сакăлта, сакăр вунă сакăлта.
2404. Тĕкли, тĕкли ăшĕнчен яки, яки ăшĕнчен тутли.
2405. Тимĕрĕ тулта, çимĕçĕ шалта.
2406. Ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ, тĕм хушшинче курăнчĕ, алран алла куса кайрĕ, шăл хушшине пырса лекрĕ.
2407. Шăкăр-шăкăр шăкăрчак, тулĕ сарă, ăшĕ шурă.
2408. Шăрт-шарт алăк уçăлат, пĕр чипер килсе тăрать. Ярса тыт та хыпса яр.

### Мăйăр курланки

2409. Пĕр сар ачан çичĕ хăлха.
2410. Хусан тиек, сар тиек, ӳпне выртса улталать.
2411. Хусан турпас — сар турпас, ӳпне выртса астарать.

### Мăйăр тĕшши

2412. Кĕçĕн хуранăн пăтти тутлă.
2413. Пĕчиккĕ хоранăн пăтти тутлă.

### Мăйăр хуппи

2414. Ӳпне выртсан утланать.
2415. Хăй яп-яка — ӳпне ӳкет — улталат.
2416. Хусан каччи сар каччă, упне выртса астарать.
2417. Хусан тиек сар тиек, ӳпне выртса улталать.
2418. Чипер аки ӳпне выртса астарĕ.

### Мăйăрпа икел

2419. Пĕчĕкçĕ хуранăн пăтти тутлă, пысăк хуранăн пăтти йӳçĕ.

### Мăйăх

2420. Асаттен вăрманĕ ик еннелле йăваннă.
2421. Вак хĕррипе хăмăш ӳсет.

2422. Тĕпсĕр çырма хĕррипе вĕт вăрман.
2423. Укçуне карăнтарнă, уххи çук.
2424. Уххине карăнтарнă, сăнни çук.
2425. Хĕрлĕ хăлашра вата лаша хӳри.

### Мăйрака

2426. Йӳплĕ йывăç çине юр лармасть.
2427. Сĕм вăрманта пĕтĕм пушчи пасарать, икĕ пушчи пасармасть.

### Мăк

2428. Пĕчник пилти çеç шăтарса тухнăскер, симĕс калпак тăхăннăскер, пурçăн туттăр çыхнăскер.
2429. Пӳрт йĕри-тарипе пăклă вĕрен.
2430. Сан сысна та хĕсĕннĕ, ман сысна та хĕсĕннĕ.
2431. Сирĕн те сысна хĕсĕннĕ, пирĕн те сысна хĕсĕннĕ.
2432. Ула лаша утлантăм, кăмака тавра çавăрăнтăм.

### Мăк хуни

2433. Пӳрт йĕри-тавра вĕрен çавăртăм.

### Мăкăнь

2434. Пĕр калпак ăшĕнче çич çĕр казак.
2435. Пĕр пĕчĕк хулара çич çĕр салтак вăрçă вăрçать.
2436. Пĕчĕк майра пурçăн тутăр çыхнă.
2437. Пĕчĕкскер, хитрескер, çĕр мăкăртса тухнăскер, пурçăн тутăр çыхнăскер.
2438. Пурçăн тутăрлă кинĕм пур, кунĕн-çĕрĕн пахчара.
2439. Çаврăнтăм пăхрăм — çавра пуç,
Карăнтăм пăхрăм — катăк пуç,
Чăн чиперри — хĕрлĕ пуç.
2440. Çĕр тĕпĕнчен тухнăскер, пурçăн тутăр çыхнăскер, симĕс сумка çакнăскер.

### Мăкăнь вăрри

2441. Пичетленĕ кĕлетре хура мул (вăрлăх).

### Мăрье

2442. Ĕни витере, хӳри тӳпере.
2443. Мачча çинче маçак ларать.
2444. Пĕр вăкăр хĕрĕх çĕртен чашлатать.
2445. Пĕр кăмаканăн хĕрĕх шăтăк.
2446. Пĕр кĕпен хĕрĕх саплăк.
2447. Пĕр мулаххайăн çĕр саплăк.
2448. Пĕр çĕлĕкре çĕр саплăк.
2449. Пӳрт тăрринче вăрă ларат.
2450. Чипер аккийĕн пуç тӳпи шăтăк.

### Мӑрье, юшка

2451. Кӑҫат ӑшӗнче хура кушак.

### Мӑрьерен тӗтӗм тухни

2452. — Ӑҫта каян, вӑрӑм чӑваш?
— Эс мӗн пӗлен, хура ҫӑвар?
2453. Вӑрӑм Йӑван юн хӑсать.
2454. — Хура сӑхман, ӑҫта каян?
— Хуп ҫӑварна!

### Мелке

2455. Кӑмакара лӑпсӑр-лапсӑр упа ташлат.
2456. Кӑмакара лӑпсӑр упа ташлат.
2457. Кӑмакара упа ташлат.
2458. Кӑмакара чунсӑр упа ташлат.
2459. Кӑмак умӗнче лӑпсӑр-лапсӑр упа ташлат.
2460. Пӗр лӗмсӗр йытӑ пӗр карта сурӑха хӑваласа кӑларчӗ.
2461. Пӗр упа кӗрӗ те пӗр карта сурӑха пӗтӗмпе хӑваласа кӑларӗ.
2462. Пӗчӗк мунчара упа ташлать.

### Мелке валашки

2463. Кашни килтех пӗр пыл калакки.
2464. Килӗрен пыл чашки.

### Мӗлкӗ

2465. Вутра ҫунмасть, шывра путмасть.
2466. Ӗмӗр хӑвалӑн — тытаймӑн.
2467. Ӗмӗрне ирттерет — пӗр сӑмах каламасть, чей те ӗҫмест.
2468. Куҫа курӑнать, ӳчӗ ҫук.
2469. Куҫпа курӑн, алӑпа тытаймӑн.
2470. Пӗрене ҫинчен мӗн касаймастӑн?
2471. Ҫуса та яраймӑп, шӑлса та яраймӑп.
2472. Хӑвалатӑп-хӑвалатӑп — хӑваласа ҫитмелли ҫук, тӗкетӗп-тӗкетӗп — тӗксе ямалли ҫук, вӑхӑчӗ ҫитсен хӑех каять.
2473. Хӑвалатӑп-хӑвалатӑп — хӑваласа ҫитмелли ҫук, тӗкетӗп — тӗксе юлмасть, вӑхӑт ҫитсен — хӑех пӗтет.
2474. Хӑвалӑп-хӑвалӑп — ҫитеймӗп, ҫитсен те тытаймӑп, тытсан та чараймӑп.
2475. Хӗвел тухать — юлташӑм тупӑнать.
2476. Хирӗҫ пырсан — тарса каять, кирелле кайсан — хыҫран хӑвалать.
2477. Чупап — тытаймас.
2478. Чупрӑм-чупрӑм — хуса ҫитеймерӗм.
2479. Шӑлсан — шӑлса пӑрахмалла мар; ҫӗклесен — ҫӗклесе пӑрахмалла мар; вӑхӑт ҫитсен — хӑех каять.

## Милĕк

2480. Кăтра вырăс вырăн çине улăхаймасть.
2481. Кукша пуçлă каччă симĕс сăхман тăхăннă.
2482. Пĕр лутра йĕкĕт пилĕкне туртса çыхнă, çĕлĕкне хуçса лартнă, хыптарать те çунтарать.
2483. Пушăт пиçихи, симĕс сăкман.
2484. Пушăт Пухтан, симĕс сăхман.
2485. Пушăт Пуштан, кăвак сăхман,
Туртнă çыхнă пилĕкне,
Урлă лартнă çĕлĕкне.
2486. Пушăт Пуштан, симĕс кафтан.
2487. Пӳртекӳнче кукша пуçлă симĕс хур тăрать.
2488. Симĕс кĕпеллĕ, пурçăн пиçхиллĕ. Ан çап, каччăм, ан çап, каччăм, аттене калăп.
2489. Симĕс кĕпе тăхăннă, пĕр çынна та хĕнемесĕр хăвармасть.
2490. Симĕс кĕпе тăхăннă, пилĕкне туртса çыхнă, сана та хĕнет, мана та хĕнет.
2491. Симĕс те кăвак тăхăннă, пилĕкне пурçăн çыхнă.
2492. Синепи симĕс кĕрĕк тăхăннă, пилĕкне пурçăнпа çыхнă, хăй мунчана каять.
2493. Çĕтĕк-çатăк тумтирпе, крымски çĕлĕкпе, московски пиççипе.
2494. Симĕс-кăвак тăхăнать, пилĕкне шурă çыхать.
2495. Симĕс-кăвак тăхăннă, туртнă çыхнă пилĕкне, хĕнемен çын хăвармасть.
2496. Симĕс кĕпе тăхăннă, эрнесерен çаптарать.
2497. Симĕс тумтирпе, пиçиххисем пушăт.
2498. Туртнă çыхнă пилĕкне, хуçнă лартнă çĕлĕкне, хĕнемен çын хăвармасть.
2499. Хăй симĕс, кăвак тăхăнать, пилĕкне мунчала çыхать.
2500. Якатрăм, шăматрăм, сар пиçиххи çыхтартăм.

## Миме

2501. Алпа туман арчара пыл чашки.
2502. Алпа туман арчара ылттăн тавар.
2503. Ахах арчара ачаш тавар.
2504. Йĕс сунтăхра калем пур.
2505. Сунтăхра чăкăт пур та, çимелле мар.
2506. Тир хутаçра шăмă арча, шăмă арчара çуллă нимĕр.
2507. Уçăлми арчара пиçмен какай пур.
2508. Уçман арчара касман катанпир.
2509. Уçман арчара пуçламан шăрттан.
2510. Уçман-хупман сунтăхра катман кашăк выртать.
2511. Уçман чӳлмекре йӳçмен чуста.

## Минтер

2512. Алăсăр-урасăр кĕпе тăхăнат.
2513. Алли çук, ури çук, кĕпе тăхăнать.

2514. Алăсăр-урасăр кĕпе тăхăнатăп.
2515. Пĕр кăвакалăн тăват сăмса.
2516. Хăпарап-хăпарап хăпарту пик, хăпарса пиçнĕ çăкăр пик.

## Минтерпе тӳшек

2517. Алăсăр-урасăр кĕпе тăхăнать.

## Михĕ

2518. Выçсан — выртать, тăрантсан — тăрать.
2519. Кантăр кĕлет, çăка çăра.
2520. Пир кĕлет, пир кĕлетĕн сӳс çăра.
2521. Сӳс кĕлетĕн мунчала çăра.
2522. Сӳс кĕлет мунчала çăра уççи.
2523. Тăрантсан — тан тăрĕ.
2524. Урасăр сăвăр килтен киле, ялтан яла çӳрет.

## Молотилка

2525. Кĕлти кĕрет, тырри юлать, арпи вĕçет, улăм юлать.
2526. Унтри-кантри вут çурать, Васли арăм çăм тапать.

## Мотоцикл

2527. Уйра утсăр урапа кусать.

## Мулкач

2528. Акă сана пĕр юмах:
Çулла сăрă, хĕлле шурă,
Кĕске хӳре, вăрăм хулка.
2529. Катăк çăвар Кармантей хĕл каçа хăва хышлать.
2530. Кĕске кутлă Кĕçтенкке йĕтем хыçне вĕçтерет.
2531. Кукăр хурăн айĕнче хунĕм хĕрĕ йĕр хывать.
2532. Лутра вырăс вăрман касать.
2533. Мăш-мăшарик, мăшарик, шĕшкĕ айĕн кăп-кăп.
2534. Сикрĕм, сикрĕм, шиклентĕм, шĕшкĕ кутне лăпчăнтăм.
2535. Çăва тухсан — çулла, хĕле кĕрсен — хĕлле. Ту çине чупса улăхать, ту çинчен йăванса анать.
2536. Çулла кăвак, хĕлле шурă.
2537. Çулла сăрă, хĕлле шурă.
2538. Тап-тап тапанак, тяппи пусмас, тапанак.
2539. Тарас тарать, хӳри хăвалать.
2540. Тăл-тăл, шĕшкĕ кутне çитсен пăк!
2541. Хĕлле шурă, çулла сăрă, мана çапла ырă тет.
2542. Шаккăм-шаккăм шикленĕп, шĕшкĕ кутне лăпчăнăп.
2543. Шик! шăхăртăм, шĕшкĕ кутне куклентĕм.
2544. Шик-шик шикленет, ката кутне кукленет.
2545. Ши-ши! У-у! илемлĕ тĕлт-тĕлт! шĕшкĕ кутне пашт!

2546. Шур пур такан мăйраки çук.
2547. Ятамас салтак йăлт та ялт, çăнăх чăпти паш та паш.

### Мулкач, йытă, çĕçĕ, хуран, ăскăч, кашăк

2548. Вăрмантан тухать, Итмăрса тытать, Пиктимĕр пусать, Хурапи пĕçерет, Алтăрпи антарать, ачă-пăчи çисе ярать.

### Мулла

2549. Хăрăк йывăç тăрринче урнă упа мĕкĕрет.
2550. Хăрăк чăрăш тăрринче хура çăхан кăçкăрать.

### Мунча

2551. Ту тăррине тулă акрăм, тутлă çисе килентĕм.

### Мунча кăмаки

2552. Апраç (*араб. çырнă*) пĕр çона.
2553. Пĕр майра ăшĕнче çĕр салтак.
2554. Çăварне карнă, шăлне ирнĕ, çăварĕнче вут пуççи, kaçанĕ çинче чул миххи.

### Мунча чулĕ

2555. Амăшин аллă саплăк, хĕрин хĕрĕх саплăк.
2556. Ик-чак, чăмăркка.
2557. Малахайăн çĕр саплăк.
2558. Пĕр кăмаканăн хĕрĕх шăтăк.
2559. Пĕр мулахайăн хĕрĕх шăтăк.
2560. Пĕр çĕлĕкĕн пин саплăк.
2561. Пĕр çĕлĕкĕн çĕр саплăк.
2562. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк.
2563. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх шăтăк.
2564. Пĕр çĕлĕкре çĕр саплăк.
2565. Хĕрин хĕрĕх саплăк, арăмин аллă саплăк.

### Мунчала

2566. Килĕрен пăчăр.
2567. Пĕр пӳртре пĕр пăчăр.
2568. Унемĕш-кунĕмĕш, култăрин касак.
2569. Хутлă-хутлă хучавчă, урлă-пирлĕ кĕперлĕ.
2570. Хуч-хучала, хучала хушши мамала.

### Мурта*

2571. Шыва чăмать, шывран ачисемпе тухать.

### Мучин хĕрĕ арçыннăн арăмĕ пулнă

2572. Тăватă çыннăн виçĕ çăмарта пулнă. Çăмартисене хăйсен хушшинче пайланă та — кашнине пĕрер çăмарта тивнĕ. Мучи хĕрĕпе, ар арăмĕпе пĕрер çăмарта çинĕ. Мĕнле апла пулнă?

### «Н» сасă

2573. Санта та пур, манта та пур, этемре çук, тĕнчере пур.

### «Н» сас палли

2574. Вăрманта пур, хирте çук, мунчара пур, пӳртре çук, арçынта пур, арăмра çук.
2575. Вăрманта пур, хирте çук, мунчара пур, пӳртре çук.
2576. Çăнăхра пур, чустара çук, арçынта пур, арăмра çук.

### Нăрă

2577. Вăкăр мар — мыряллă*, сысна мар — çĕр чакалтать, кайăк мар — çунатлă.
2578. Вĕçет — мĕкĕрет, ларать — çĕре чакалать.
2579. Вĕçет — нăрлать, ларать — шăтарать.
2580. Ылттăн пуçлă, кĕмĕл çунатлă.

### Нăрă. Шĕкĕ

2581. Сухалĕ тăлпăвĕнчен вăрăм.

### Нуски-чăлха

2582. Асанне чĕрçи çинче çуралтăм та асатте ури айне пултăм.

### Нухрат

2583. И чиперук, чиперук, икĕ пичĕ сĕверӳк.
2584. Чип-чиперкке, икĕ пичĕ шĕвĕркке.
2585. Чип-чиперкке, чиперкке, икĕ пичĕ сĕверкке.
2586. Чип-чиперӳк, чиперӳк, икĕ куçлă сĕверӳк.

### Нӳхреп

2587. Ăшă чух сивĕ, сивĕ чух ăшă.
2588. Кĕлетки пысăк, мĕлки çук.
2589. Мăн асаттен хуранне çĕр аллă çын йăтаймасть.
2590. Пĕр хуçанăн шăтăк хырăм.
2591. Çулла сивĕ, хĕлле ăшă.
2592. Çулла хĕлле, хĕлле çулла.
2593. Хăй пӳрт пек, мĕлки çук.
2594. Хĕлле выçă, çулла тутă.

2595. Хĕлле — çулла, çулла — хĕлле.
2596. Хĕсĕр кĕсрен ĕмĕлки çук.
2597. Хура лашан мĕлки çук.

### Нӳхрепри юр

2598. Уйăхран, хĕвелтен мĕн пытартăн?

### Пакур

2599. Тӳрĕ те тӳрĕ, кукăр та кукăр, хӳри вăрăм.

### Пакша

2600. Йывăçран йывăça сиксе çӳрет хураçка.

### Палакан, хирте караканни

2601. Выртсан мулкаç пек, тăрсан тĕве пек.

### Палан

2602. Атăл урлă ахах куртăм.
2603. Атăл хĕрĕнче акак шăрçи ларĕ.
2604. Ăшĕ тимĕр, тулĕ мимĕр.
2605. Йонĕ пор та чонĕ çок.
2606. Чунĕ çук, юнĕ пур.
2607. Юнĕ пур та чунĕ çук.
2608. Юнĕ пур, чунĕ çук.

### Пальто

2609. Атте тăхăнман пĕрмесĕр сăхман.

### Пански йĕппи

2610. Пиллĕкĕн килчĕç,
Пуç вĕçне ларчĕç,
Йăва турĕç,
Пӳрт лартрĕç.

### Пански çыхни

2611. Вунă ăста вĕрентен пура пурать.
2612. Вунă пĕртăван çăмран пура пурать.
2613. Вунă çынна пилĕк кашта, пĕр вĕрен — туртаççĕ те тăсаççĕ, çавра çатан аваççĕ.
2614. Вуннăн килсе çитрĕç, çăм вĕрен тытрĕç, пура пураса лартрĕç.
2615. Пилĕк пĕренепе пĕр пӳрт лартăп.
2616. Пилĕк пĕренепе пӳрт лартăп.
2617. Пилĕк пĕртăван пĕр пӳрт лартать.

### Пански чăлха çыхни

2618. Тăваттăн тăраççĕ, пĕри хăвалать.

### Пан улми

2619. Çулла симĕс, кĕркунне хĕрлĕ.

### Паранкă

2620. Ӳт тесен ӳт мар,
Чăкăт тесен чăкăт мар,
Сар çу тесен ирĕлмест,
Кулаç тесен кулаç мар,
Куçĕ нумай, хăй курмас(ть),
Пур тĕнчене тăрантать.

### Параппан

2621. Тепĕр-тепĕр, тепĕртек, тăхăр така, пĕр путек.
2622. Хут пек çӳхе, хуп пек хытă.
2623. Чунли чунсăррине хĕнет, чунсăрри кăçкăрса йĕрет.

### Пас

2624. Ай-уй! Ан тивех — ӳкетĕп.
2625. Ан тĕкĕн — кайса ӳкет.
2626. Ан тĕрткеле — хăсас килет.
2627. Ан тĕрткеле — хăсатăп.
2628. Кĕçĕн пике кĕмĕлĕ кĕçех çĕре ӳкес пек.
2629. Матĕрне акка çӳреме кайнă та, çăраççи ӳкнĕ юлнă.
2630. Çĕн çын чупса пырать — тенки тăкăнса пырать.
2631. Шăнкăр-шăнкăр туй килĕ — чӳрече умне пай ларĕ.
2632. Юпа тăрринче пасарлăх.
2633. Юпа тăрринче пасар чĕнтĕрĕ.

### Пас тăкăнни

2634. Кăт тĕксен мăрт пулать.

### Патефон

2635. Пĕчĕкçеç кăвак арча: арча ăшĕнче шăрчăк пур, арча çинче шăпчăк пур; астарать те култарать, пур кăмăла тултарать.

### Патша

2636. Инчĕ*, пинчĕ, хывăх çинче пĕр пĕрчĕ.
2637. Инч-пинч (паллă мар сăмах) хывăх çинче пĕр пĕрчĕ.

### Пачча (царь)

2638. Каш-каш хăмăш варринче ылтăн пуçлă пĕр хăмăш.

## Пашалу

2639. Истĕр-пистĕр кулачă.
2640. Кăмака айĕнче хĕреслĕ тенкĕ выртĕ.
2641. Кăмакара мами тенки выртĕ.
2642. Кăмакара пилĕк пус укçа выртать.
2643. Кăмакара пуç выртат.
2644. Кăмакара çеçтенки выртать.
2645. Кăмакара çут тенкĕ выртать.
2646. Кăмакара тенкĕ ташлать.
2647. Кăмака çинче мами тенки выртĕ.

## Пăван

2648. Йĕкĕр чĕрнеллисене те, пĕтĕм чĕрнеллисене те тĕк тăратман ул-пут улĕ* эпĕ.

## Пăлан пăрушĕ

2649. Сарă-сарă шупăрлă, хĕрлĕ сахьян пушмаклă сарă хĕр чак-чак пусса çӳрет.

## Пăр

2650. Айлăм çĕрте кĕмĕл пĕркенчĕк.
2651. Вутра çунмас, шывра путмас.
2652. Ĕлĕк хăй шывран пулнă, халĕ хăй шыва тухнă.
2653. Кĕркуннехи кĕмĕл çитти çуркуннепе çĕтĕлет.
2654. Кĕрхи шывра çуралать, çурхи шывра çухалать.
2655. Мамин тенки — ват тенки çухрăмранах курăнать.
2656. Мĕскер çӳлтен аялалла кутăн ӳсет?
2657. Сивĕпе çуралать, ăшăпа çухалать.
2658. Сивĕре чул пек, ăшăра шыв пек.
2659. Сип-сивĕ те — тимĕр мар, çап-çутă та — тĕкĕр мар.
2660. Тулта чул пулать, пӳрте кĕрсен шыв пулать.
2661. Хĕллехи хулăн тир çулла çĕтĕлсе пĕтет.
2662. Шыва чиксен йĕпенмес, вута чиксен çунмас.
2663. Шыва ярсан — путмас, вутта хурсан — çунмас.
2664. Шывра путмĕ, вутра çунмĕ.
2665. Шывра çуралать, шывран хăрать.
2666. Шыв çинче кĕмĕл кĕпер.
2667. Юпасăраслăк.

## Пăр айĕнче пулăсем иртни

2668. Аслăк айĕнче çар вылять.
2669. Сак айĕнчен çар иртрĕ.
2670. Тĕп сакайĕнчен çар иртет.

### Пăр айĕнчи шыв

2671. Вăкăрĕ утса пырать, тирĕ сĕвĕнсе пырать (юлать).
2672. Сакайĕнчен вăкăр кĕтĕвĕ иртет.
2673. Тĕп сакайĕнчен вăкăр кĕтĕвĕ иртсе пырать.
2674. Тул-тулашка, тулашка, тулта выртать валашка; кăвак пĕлĕт айĕнче кулса выртать упăшка.

### Пăр кайни

2675. Асатте ирĕк памасăр аслăк ҫийĕ тапранмасть.
2676. Патшаран указ килмесен, тимĕр пукан тапранмасть.
2677. Ҫуна каять, турти юлать.
2678. Тапăртанран тапкă килмесĕр тапăрти выльăх тапранмасть.
2679. Хăлтăр-халтăр куҫса пырать, хура ҫăрха юртса пырать.
2680. Хусантан аткас килмесен тимĕр сакă тапранмас.
2681. Хусантан указ килмесĕр тимĕр хăма ҫурăлмасть.
2682. Хусантан уккас киличчен тимĕр пукан тапранмасть.
2683. Хусантан уккас килмесĕр тимĕр пукан тапранмас.
2684. Хусантан уккас килмесĕр хурт-кăпшанкă тапранмасть.

### Пăр ларни

2685. Алăсăр-урасăр Атăл урлă кĕпер хывнă.
2686. Алăсăр-урасăр кĕпер хывать.
2687. Сăвайсăр, каштасăр, хăмасăр, пуртăсăр кĕпер хывнă.
2688. Хĕлип пичче кĕмĕл урай сарса хурĕ.
2689. Юпасăр кĕпер хывтартăм.

### Пăр ҫуни

2690. Ҫул тăрăх пăрҫа акнă, татса ҫиекен никам ҫук.

### Пăр ҫурăлни

2691. Атăл урлă вĕрен утрăм.
2692. Атăл урлă вăрăм пушă выртать.
2693. Атăл урлă ҫип ҫапрăм.
2694. Атăл урлă вĕрен карнă.
2695. Атăл урлă йĕс тилхепе ывăтрăм.
2696. Атăл урлă хĕлĕх картăм.
2697. Тимĕр, тимĕр, тимĕртак, тимĕртак; тимĕртакăн тăнкăртак, ай тинĕс, тип тинĕс.
2698. Тинĕс урлă хĕлĕх карнă.
2699. Туран укас килмесĕр тимĕр хăма ҫурăлмĕ.

### Пăр тата шыв

2700. Пĕри вилсен тепри чĕрĕлет, пĕри чĕрĕлсен тепри вилет.

### Пăр хĕлле шыв ҫинче тăни

2701. Юпасăр аслăк тăрать.

### Пăр шăнни

2702. Алсăр-урасăр каçă хыватьь.
2703. Мочей кĕпер тăвать портăсăр, çĕçĕсĕр.
2704. Пĕр сăвайсăр кĕпер хыврăм.
2705. Пуртăсăр, ыйăсăр кĕпер хăвать.
2706. Пуртăсăр пăлатниксем килчĕçĕ, хăмасăр кĕперсем хыврĕçĕ.
2707. Сăвайсăр, каштасăр, хăмасăр, пуртăсăр кĕпер хывнă.
2708. Тумла тумлатать те çĕре тимест.
2709. Хĕлле хулăм тумтирпе выртать, çулла çĕтĕлсе пĕтет.
2710. Юпасăр аслăк турăм.

### Пăр ярапи

2711. Ан тĕкĕнех — ӳкетĕп.
2712. Йĕке вĕçĕнчен шыв тумлать.
2713. Карнис хĕрринче кĕмĕл туя.
2714. Кутăн Куçма çуралать, куççуль тăкса çухалать.
2715. Пӳклĕ ача куçĕнчен пӳр юхать.
2716. Пӳрт çумĕнче шур кишĕр.
2717. Пӳрт хĕрринче йĕке пур, хĕвелпеле ирĕлет.
2718. Çурт çумĕнче саламат аври çакăнса тăрать.
2719. Çурт çумĕнче шĕвĕркке ӳсет.
2720. Шĕвĕркке куçĕ пат! пат! тумлать.

### Пăравус, шалун

2721. Тимĕр çулпа тимĕр ут тимĕр хула турттарать.

### Пăрахут

2722. Асаттен пĕр хуранне çĕр аллă çын çĕклеймес.
2723. Атăл варринче шур пӳрт юхать.
2724. Кайăп-кайăп — йĕр çĕтех пырĕ.
2725. Ну! тесен — утмасть, тăр! тесен — тăмасть.
2726. Ну! тесен — утмасть, тăр! тесен — тăмасть, çиме парсан — çимест, каять — йĕрĕ çухалать.
2727. Çуначĕсем пур, вĕçмест; урисем çук, хăвалаcа çитмелле мар.
2728. Тин кайрĕ, йĕрĕ çук.
2729. Улăх тăрăх ула вăкăр мĕкĕрсе хăпарать.
2730. Шыв тăрăх пӳрт йăванать.

### Пăрăç

2731. Крачи, прачи, йăмăх чечек.
2732. Пăхма лайăх, çиме йӳçĕ.
2733. Пăхма чипер, çиме йӳçĕ.

### Пăрăх*

2734. Хусантан килнĕ хăла кĕсре мăйне тăсса шыв ĕçет.

## Пăри тĕшшисем

2735. Пĕр йĕнĕре икĕ пекĕ.
2736. Пĕр йĕнĕре икĕ пĕкĕ.
2737. Пĕр йĕнĕре икĕ çĕçĕ.
2738. Пĕр кушак кайăкăн икĕ пакарта.
2739. Пĕр пĕрмере икĕ кулач.
2740. Пĕр пĕрнере икĕ кулаç.
2741. Пĕр пӳлĕмре икĕ карчăк.
2742. Пĕр пӳлмере икĕ карчăк.
2743. Пĕр сăпкара икĕ ача.
2744. Пĕр хутаçра икĕ мăйăр.
2745. Пĕр хутаçра ик кăчăкă.
2746. Пĕр шăшийĕн икĕ пакарта.
2747. Пĕр шăшин икĕ хӳре.

## Пăри тӳни

2748. Иресун-пиресун, тринн-тринн Васили.
2749. Ир те чак-чак, каç та чак-чак, вали ват.
2750. Ир те чак-чак, каç та чак-чак, варри вак-вак.
2751. Кăш-кăш кшанкăлти, янкăлти, илешшу пилешшук, чăхă мăйĕ кăк.
2752. Тӳп-тӳп, тӳпен кут янкăлти, кăшт-кашт каштанкăлти, янкăлти.

## Пăрçа

2753. Ирчемеклĕ-чечеклĕ, урхамахлă — кĕрĕклĕ.
2754. Йывăç, йывăç çинче турат, турат çинче йăва, йăви çинче çăмарти.
2755. Йывăç, йывăç çинче турат, турачĕсерен йăва, йăвисерен çăмарта.
2756. Йывăçĕ туратлă, туратсайран йăваллă, йăвисайран çичшер маттяллă.
2757. Кукăль ăшĕнче çăмарта.
2758. Кукăр-макăр турат пур, турат çинче кукăль пур, кукăль ăшĕнче çăмарта пур.
2759. Кукăр-макăр турат, туратти çинче кукли, кукли ăшĕнче çăмарти.
2760. Луп-луп Петĕр, луп Петĕр, кăштăр-каштăр Михали.
2761. Нарат-нарат, нарат çинче турат, туратти çинче йăви, йăви çинче çăмарти.
2762. Нарат, нарат çинче турат, турат çинче йăва, йăва çинче вун ик çăмарта.
2763. Нарат-нарат, турат-турат, турат çинче йăви пур, йăви çинче çăмарти.
2764. Нарат, нарат çинче турат, турат çинче çăмарта.
2765. Çичĕ пĕртăван пĕр сăпкара çитĕнет.
2766. Тăлти-талти тăрсакай, хытса тăран енсекей.
2767. Туратлă-туратлă, турачĕсем йăваллă, йăвисем çăмарталлă.
2768. Турат, турат, туратсерен йăви пур, йăвисерен çăмарти пур.
2769. Тути такмаклă, урти уртмахлă, паттимĕр патаклă.

2770. Утрăм-утрăм, улма тупрăм.
Улталарăм, кĕмĕш тупрăм,
Элчĕ килчĕ, парне пачĕ,
Улмаш кĕрӳ ташша ячĕ.

2771. Хĕрĕх тирек, хĕрĕх турат, туратсерен вунă йăва, йăвисерен вунă çăмарта.

2772. Чу! кайăп, йăва çаврăп, сакăршар çăмарта тăвăп.

2773. Чупма халĕ пур та, чунĕ çук.

2774. Явман кантра, çăрман чуста, çупман кукăль.

**Пăрçа (хурт-кăпшанкă)**

2775. Йăлт-ялт йăрсаккай, мăрт-март мăрсаккай.

2776. Кăмрăк пек хура, мулкач пек сикет.

2777. Пĕр пĕчĕкскер, хораскер, патшаран та хăрамасть.

2778. Пĕр хура ача куритене пăрккăн çавăрать.

2779. Пĕчĕк курпунскере пилĕк тăван тытма тăчĕç — тытаймарĕç, ик тăван тытрĕç те вĕлерчĕç.

2780. Тутар таки хӳресĕр.

2781. Хура пӳртре хура така сиксе çӳрет.

**Пăрçа хутаççи**

2782. Пилĕк каччă пĕрле çывăрать.

**Пăрчăкан**

2783. Хăй пăр-пăр, хӳри лăп-лăп.

**Пăсарлăх**

2784. Вар тăрĕнче вахтăр кăçкăрать.

2785. Ик ту хушшинче пахтиер кăшкăрать.

**Пăсартăк**

2786. Вус вотăн тĕтĕмĕ йӳçĕ.

**Пăта**

2787. Пĕр пуçĕ шĕвĕр, тепĕр пуçĕ лапчăк.

2788. Пĕчĕк пиччен пӳрни кукăр (куклек).

2789. Питĕр пипак, пуçĕ пуклак.

**Пăтавкка**

2790. Алăсăр-урасăр тӳрĕ тăвать.

2791. Алăсăр-урасăр хисеп илет.

**Пăтă**

2792. Лăкăр-лăкăр калаçать, антарса лартсан чарăнать.

### Пăтулук хăмисемпе кăмакари вучах

2793. Хĕрĕх хусах пĕр хĕр çăварĕнчен пăхса выртать.

### Пăх

2794. Акрин кукăрчăк-макăрчăк.

### Пăчăр

2795. Хырлăхра хĕрлĕ куçлă хĕрсем вăйă выляççĕ.

### Пăчкă

2796. Вată мучин пĕр ĕрет шăл, çавăнпах тăранса çынна усă тăвать.
2797. Кавлеме çăварĕ пур, çăтма пырĕ çук.
2798. Пĕвĕ çук, алли пур, çăварĕ çук, шăлĕ пур.
2799. Çултан-çул вată карчăк шăмă кăшлать.
2800. Тĕртсе яр та туртса ил.
2801. Хăвăрт çиет, вакă чăмлать, хăй çимест, çынна та памасть.
2802. Шăлĕ пур, çăварĕ çук.

### Пăшал

2803. Ашшĕ урине сыриччен ывăлĕ Мускава çитнĕ.
2804. Аякран курать, хытă çыртать.
2805. Йытă, кирек епле тăрантарсан та, вăл çапах ăшра тăратмасть.
2806. Кĕмсĕр тăвать — çĕмĕрет.
2807. Кĕмсĕрт! тăвать — çĕмĕрет.
2808. Пĕвĕ тытăма кĕрет, сасси тĕнчене кĕрлет.
2809. Пĕр пӳрт ăшĕнче тепĕр пӳрт, тепĕр пӳртре урнă йытă касмăкра тăрать.

### Пăшал пени

2810. Хăвăл тăрăх шăши юсĕ юртать.

### Пăшал пулькки

2811. Хĕлĕхрен çинçе, пекĕрен çивчĕ.

### Пăшатан

2812. Хĕрелсе кĕрет, кăвакарса тухать.
2813. Хĕрелсе кĕрет, хуралса тухать.
2814. Хĕртсе чикеççĕ, кăвакарса тухать.

### Пекĕ йĕнни

2815. Пĕçĕ тăрăх ямпăл-ямпăл.
2816. Усман усăннă, лавка айне хĕсĕннĕ.

### Пельмен

2817. Чипер-чипер ачасем тăвайккинчен ярăнса анаççĕ те сиксе вĕрекен шыва чăмаççĕ.

### Перĕш

2818. Хăрах ураллă вăрăм вырăс вакка кайса шыв ĕçет.

### Перчетке

2819. Пĕр шăтăкра пилĕк йăва*.
2820. Пилĕк пӳлĕмĕн (чăланăн) пĕр алăк.
2821. Пилĕк шăтăка пĕр алăк.

### Перчетке. Пӳрнесем

2822. Пĕр пӳртре пилĕк ача, пĕрне-пĕри кураймасть.
2823. Пĕр пӳртре пилĕк тăван пурăнать, пĕрне-пĕри курмасть.

### Пĕвер, ват

2824. Хум хĕрĕ хура хыспа, ĕмпӳ хĕрĕ ешĕл йĕленпе.

### Пĕверпе ват

2825. Хум хĕрĕ хура хыс тăхăнса килнĕ, Çĕрпӳ хĕрĕ симĕс шупăр тăхăнса килнĕ.
2826. Хум хура хыс тăхăннă, хĕрĕ симĕс йĕлен тăхăннă.

### Пĕкĕ

2827. Йĕкерлĕ йинке ĕнси çинче йăм-йăм хура кĕвенте.
2828. Пĕр йывăç куп-кукăр.
2829. Утлансан — утран çӳллĕ, ансан — автанран лутра.
2830. Ут пуç çинче ула хапха.

### Пĕкĕ çинчи шăнкăрав

2831. Авăн тăрринче автан авти*.
2832. Тăрăс-тăрăс тăрăстан, тăрăс килет вырăсран.

### Пĕлесĕк. Сулă

2833. Патша майри пилĕкне çыхать, пиçиххийĕ пилĕкне çитмест.

### Пĕлĕт

2834. Асатте каснă пушăт тĕркине тытса сӳтме халăм çук.
2835. Асаттерен юлнă шурă сурăх тирне тытса тума халăм çук.
2836. Кăвак кантал пĕтĕм тĕнчене хуплат.
2837. Кăвак тинĕс çийĕнче шурă хурсем ишĕçĕ.
2838. Кевти пĕлĕте тивет, шевли çĕре ӳкет.

2839. Пӳрт çийĕнче шурă шупăр выртать.
2840. Çĕрне виçмен, мулне шутламан, кĕтӳçĕ мыракаллă.
2841. Çукран пур пулат, пуртан çук пулат.
2842. Çунасăр вĕçет, урасăр чупать.
2843. Тимпĕл-тимпĕл, тимпĕл чул,
Тимпĕл-тимпĕл, ула чул,
Куран куçа кӳрнек чул,
Йăтса илме йывăр чул.
2844. Унта чупат, кунта чупат хура утăм, ту пусĕнчен чупса пырат ман хура утăм.
2845. Ури çĕре çитмест, пуçĕ пĕлĕте тивмест.
2846. Хуйха-суйха пĕлместпĕр те — куççулĕпех йĕретпĕр.
2847. Шурă та, кăвак та — никам та улăхса тытаймасть.
2848. Шур пĕркенчĕк пĕтĕм çĕре хуплană.

### Пĕлĕт, аслати, хĕвел, çĕр

2849. Çунатсăр кайăк вĕçсе килет,
Пăшалсăр сунарçă персе ӳкерет,
Вучахсăр арăм тытса пĕçерет,
Çăварсăр старик çисе ярать.

### Пĕлĕт, çăлтăр, уйăх

2850. Пӳрт тăрринче пӳштĕрлĕ шупăр, пӳштĕрлĕ шупăр çинче ылттăн манит.
2851. Улăхĕ — виçесĕр, выльăхĕ — хисепсĕр, кĕтӳçĕ — мăйракаллă.
2852. Чăпта сарăп, пăрçа акăп, вăта çĕрне кулачă хурăп.

### Пĕлĕтпе çăлтăрсем

2853. Кăвак кавир çине ĕнчĕ сапнă,
Кавирĕ çине ларма çук,
Ĕнчисене илме çук.
2854. Пăр çине пăрçа сапнă.
2855. Çĕвĕлемен пурçăн çинче тирмен пăрçа тăрĕ.
2856. Çĕвелемен пурçăн çинче тирмен шăрçа тăрĕ.
2857. Çĕлемен пурçăн тухья çинче тирмен ĕнчĕ-мерчен.
2858. Хуран тулли шур путек.
2859. Тĕртмен пурçăн çинче тирмен мерчен ярăнса выртать.

### Пĕлĕтпе çĕр

2860. Кăвак вăкăрпа хĕрлĕ ĕнен тирĕсем пĕр тан.
2861. Пысăк кăвак кĕççене сарса пăхма халăм çук, пысăк ула кĕççене тĕрсе хума халăм çук.

### Пĕлĕтпе çиçĕм

2862. Тур хирĕнче вут чул çапни (çăхни) курăнать.
2863. Тур уйĕнче* вут çунать.
2864. Тур уйĕнче вут чулĕ çапаççĕ.

### Пӗлӗтре ҫӑлтӑр тухни

2865. Кӑвак пӑр ҫине пӑри акӗҫ.

### Пӗлӗтри ҫӑлтӑрсем

2866. Атӑл урлӑ, Сӑр урлӑ
Ашапатман карчӑк килет:
Кутӗнче пӗр тӗк,
Пуҫӗнче пин куҫ.
Ҫӳл ту ҫине ларать те
Куҫне мӑчлаттарса ларать.
«Тул ҫутличчен килмесен
Каяп», — тесе вӑл ларать.
2867. Кӑвак кавир ҫине кевер сапнӑ,
Кавирӗ ҫине ларма ҫук,
Кевер чулне пухма ҫук.
2868. Тула тухрӑм — тул куртӑм,
Ҫӳле пӑхрӑм — кӳл куртӑм,
Кӳл варринче пул куртӑм,
Сурӑм, сурӑм — суса тухаймарӑм.

### Пӗр хурамапа ҫыхса хунӑ икӗ карта юпи, ҫил хапхи юпи

2869. Пиччӗшӗпе шӑллӗне пӗр пусапа* ҫыхса хунӑ.

### Пӗрене ҫинчи турат куҫӗ

2870. Пӳрте кӗрме халӑм ҫук:
Пур-пур пичче, пурте пур,
Пурте пӳрнипе юнаса ларать.
2871. Пурте пӳрнипе тӗллесе лараҫҫӗ.

### Пӗрене ҫумӗнчи таракан

2872. Алӑкран кӗтӗм, акам куртӑм.

### Пӗрене ҫурӑкӗ

2873. Алӑкран кӗрӗп — акам кулӗ.
2874. Алӑкран кӗрӗп — акам курӑп.
2875. Алӑкран кӗрсен акам кулать.
2876. Алӑкран кӗтӗм — акам куртӑм.
2877. Алӑкран кӗтӗм, аккам кулчӗ.
2878. Ватӑ карчӑк вилме выртать, тути-ҫӑварӗ кулса тӑрать.
2879. Пирӗн пӳртре мӗн кулать?
2880. Пӳрте кӗрсен кам малтан кулать?

### Пĕркенчĕк

2881. Чипер акин арки вĕçĕ вĕлт-вĕлт.

### Пĕрлĕхен

2882. Юмми юман, тупи селен.

### Пĕрхĕт

2883. Вĕçсе килеп, вĕçсе килеп, куçа мĕн лекнине тапса килеп.

### Пĕрчĕк чей

2884. Хут арчара тăпра выртат.

### Пĕчĕк ача

2885. Вылямас-кулмасть, пĕр сăмах та каламасть, çавах ăна кашни ăнланать.
2886. Пĕвĕм те вăл, чунăм та вăл, сиктерет те вăл, чуптарать те вăл.

### Пилеш

2887. Пăхма хитре, çиме йӳçĕ.
2888. Çулçăллă, çупкăллă, теçеткеллĕ тӳмеллĕ.
2889. Юплĕ-юплĕ чĕрĕ йывăç çинче мерчен сапаки çакăнса тăрать.
2890. Юплĕ-юплĕ чĕрĕ йывăç çинче чĕрĕ аш çакăнса тăрать.

### Пилĕк

2891. Атте панă хăва хулли авкаланма юрататъ.

### Пир

2892. Кĕрт-кĕрт тăрăх кĕвĕнет,
Юртан шурă пулап тет;
Çине-çине çапсассăн
Çеп-çемçе пулап тет.

### Пир вырăнĕ

2893. Кĕтессе пĕр вырăс кĕрсе ларнă: «Хĕр те юрать, арăм та юрать, памасăр-тумасăр каймастăп», — тесе ларать.

### Пир çапни

2894. Шап-шап, шапăлтăк, пусма çине тапăлтăк.

### Пир тĕртни

2895. Алăк панче алтăртăк, вăта çĕрте вăлтăртăк, тĕпелте тĕпĕртĕк.
2896. Вăлтăрт-вăлтăрт пукане, шăлтăрт-шăлтăрт шăнкăрав.

2897. Кăтри силленет, яки шăтăк шырать.
2898. Çатан витĕр çил вĕрет.
2899. Çăрттанĕ сиксех пырать, Атăлĕ шăнсах пырать.
2900. Çăрттанĕ чăмах пырать, пăрĕ шăнах пырать.
2901. Çăрттанĕ чăмса пырать, шывĕ шăнса пырать.
2902. Çăрттанĕ чăмсах пырĕ, пăрĕ шăнса пырĕ.
2903. Çăрттан пулли сикех пырĕ, йăпăлтан пулли вылях пырĕ.
2904. Çăрттан сикех пырать, пăрĕ шăнах пырать.
2905. Çăрттан чăмать, çарĕ хирлет.
2906. Çăрттан (шӳпке) чăмать, пăр шăнать.
2907. Çăтăр-çатăр хушшине кукăр туя ывăтрăм.
2908. Тымарĕ карăнать, кăтри силленет, яки шăтăк шырать.
2909. Урипе тапать, хырăмран тĕртет, уçăлсан чиксе ярать, кăларса силлет те, татах чиксе лартать.
2910. Пулли чăмса пырать, çырми шăнса пырать.
2911. Хĕçĕ касса пырать, çарĕ хирĕçле пырать.
2912. Хырăмĕпе тĕкет, урипе таптать.

## Пир хĕççи

2913. Икĕ янах хушшинче пин шăл.

## Пир юпи

2914. Путь пуклак.
2915. Пӳрт вăти çĕрĕнче юпа ларать: çуркунне лартаççĕ, кĕркунне касаççĕ.

## Пирĕшти

2916. Пĕчĕкçеç кинĕм пур, кĕнчелине йăтать те кӳрше каçать.

## Писмен

2917. Ишикки-вашикки, московăски усламăç.
2918. Кĕлеткинчен пуçĕ пысăк.
2919. Пуçĕ пĕр пăт, пĕççи-каççи кĕрепенкĕ.
2920. Çуралман, тĕне кĕмен, хăй тӳрĕ тăвать.
2921. Çутă пуç пăринька*, мăн çăпата Апас.
2922. Типăр типак, пуçĕ пуклак.
2923. Уçки-ваçки, тĕрлĕ ваçки московăски уçламăç.
2924. Шуç пуç Микулай.

## Пиçен

2925. Ан тив, ан тив, Тимухха, тивмен çĕртен тивертен.
2926. Ипикăм-тупикăм, тупан ури хуçăкăм, исенекĕм-варакăм, курăк çине пусаймăп.
2927. Иштин-куштан, пăрати куштан.
2928. Чиркӳ тăрăллă, шуйттан чĕрнеллĕ.
2929. Эп тивместĕп ăна, хăй тивет.

## Пиçиххи

2930. Ай, инке, ай, инке! Пилĕкне çĕлен явăннă.
2931. Вăрăнтăм-вăрăнтăм та вăрăннă çĕрĕме кĕрсе çухалтăм.
2932. И! кайăп, пи! кайăп, Энтри пасарне кĕрех кайăп.
2933. Кĕмĕлленĕ кăшăл хырăма тăлларĕ.
2934. Пĕри пĕкече карĕ, тепри тавра карĕ, хăвăл хыçĕнче тĕл пулчĕç.
2935. Тимĕр пуçлă хура çĕлен хăй хӳрине çиет.
2936. Шурă çӳпçе, хĕрлĕ кăшăл.
2937. Юман йĕри-тавра юн тăкăннă*.
2938. Юпа çумне юн тăкăнать.
2939. Эп кунтан кайăп, эс унтан кайăн, Энтри лаççи тĕлĕнче тĕл пулăпăр.

## Пиçиххи çыхни

2940. Хĕçсĕр, кĕрсĕр пир тĕртрĕм.
2941. Эсĕ кунтан кай, эпĕ кунтан каям, Ерми пасарĕнче тĕл пулăпăр.

## Питлĕх

2942. Килĕрен пĕр пус.
2943. Килĕрен çур укçа.
2944. Сăмсам пиç-пиç.
2945. Хураç кутне хĕрес çакрăм.

## Пит çуни

2946. Ир тăмассерен Раманпала алă тытатăп.
2947. Пĕр улпута вуннăн çăваççĕ.

## Пичев

2948. Пиччĕшĕпе шăллĕ тупăшса чупаççĕ.

## Пичке

2949. Вăрмантан килнĕ вăрман улпучĕ пилĕкне пилĕк пиççи çыхнă.
2950. Ватла киле пĕшкĕнсе паратăп.
2951. Картлă-картлă пашалу тĕп-тĕп сакайне.
2952. Кăшăлĕ çĕмĕрт, кĕлетки юман, тути çăка.
2953. Пĕр вăкăрăн икĕ шăтăк.
2954. Пĕр çын вун икĕ пиçиххи çыхнă.
2955. Пирĕн пичче вун ик пиçиххи çыхать.
2956. Пирĕн пиччен вун икĕ пиçиххи.
2957. Пиçиххийĕ çĕмĕрт, хырăмĕ юман, кăвапи çăка.
2958. Сакайĕнче кӳпĕнсе кайнă сурăх выртать.
2959. Тăрупайăн тăрри шăтăк, Сименкийĕн хырăмĕ шăтăк.
2960. Тĕп сакайĕнче кӳпĕннĕ сысна выртать.
2961. Хăй юман, пиçиххи хурама, сăмси çăка.
2962. Хура ĕнен çурăмĕ шăтăк.

2963. Хура ёнен хырӑмӗ шӑтӑк.
2964. Этемми — юманкка, пиҫиххи — хурима, сӑмси — ҫӑка.
2965. Юман хӑма пилӗкне ҫыхнӑ, капӑркинче шӑтӑк пур.

**Пичке пӑкӑлани**

2966. Вырӑсӗ чикет, майри кӑшкӑрать.

**Пичке пӑкки**

2967. Муттельникӗн шур тӗртӗк.
2968. Пысӑк пичче пӳрнески
Кӗҫӗн инкене юрамасть,
Кӗҫӗн пичче пӳрнески,
Пысӑк инкене юрамасть.
2869. Ҫурри ёссӗр, ҫурри орӑ.
2970. Ҫурри ӳсӗр, ҫурри урӑ.
2971. Упанӑн тути ҫурӑм ҫинче.

**Пичке пӑккисем**

2972. Ҫурри йӗпе, ҫурри типӗ.
2973. Ҫурри урӑ, ҫурри ӳсӗр.

**Пичке пӑкки чӗриклетни**

2974. Майри макӑрать, вырӑсӗ чикет.

**Пичке ҫӑварӗ**

2975. Тупас, тупас туп шӑтӑк, чӑмӑр кӗрес пек шӑтӑк.
2976. Ула ёнен хырӑмӗ шӑтӑк.

**Пичке хӑми**

2977. Вун икӗ пӗртӑван, вун иккӗш те пӗр урлӑш, вун иккӗш те пӗр тӑршшӗ, пуҫӗсене те пӗрле ҫыхса хунӑ, кучӗсене те пӗрле ҫыхса хунӑ.

**Пичке. Шыв кӳме кайни**

2978. Кайнӑ чох йорласа каять, килнӗ чох хӑсса килет.

**Пичкепе сӑра**

2979. Сак айӗнче сар такмак ҫакӑнса тӑрӗ.

**Пичуркка**

2980. Ӑшши пур та, ҫутти ҫук.
2981. Ойӑх пор та, ҫути ҫок.

2982. Çур уйăхăн çути çук.
2983. Тăват чул çуртăн çути çук.
2984. Уйăхĕ пур та, çутти çук.

### Плуг

2985. Тимĕр сысна çĕр çĕтет.

### Прусна

2986. Çеçен хирте хура сăхман выртат.

### Пуйăс

2987. Тимĕр çулпа тимĕр ăйăр ахăрса чупать.
2988. Тимĕр çул тăрăх хурçă ут чупать.
2989. Ури çук — чупать, çăварĕ çук — кăшкăрать.
2990. Чух-чух тарать, ух-ух хăвалать.

### Пукан

2991. Ая юрать, ая кĕмест.
2992. Вун икĕ хуçăк — пĕр çӳхӳ.
2993. Котпа варлă, кота кĕмест.
2994. Кута юрать, кута пĕлмест.
2995. Ниме юрамасан та кута юрать.
2996. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр хӳхлĕ.
2997. Çурăмĕ пур, тумĕ çук, ури тăваттă, алли çук.
2998. Тăваттăн пĕртăван, тăваттăш та пĕр тан.
2999. Ури пур — утаймасть.

### Пукан урисем

3000. Хыçалти Энтри мĕн пĕлĕш.

### Пукане

3001. Пĕчĕккеççĕ питлĕ-куçлă, эреветлĕ-теветлĕ.

### Пукра

3002. Уй варринче тăвар килли.
3003. Уйра тăвар килли ларать.

### Пулă

3004. Пуçĕ пур та — çӳçĕ çук; çăварĕ пур та — сасси çук.
3005. Çĕр çинче утмасть, йăва çавăрмасть, ачине çуратать.
3006. Çунатлă — вĕçеймест, ури çук — хăйне хуса çитмелле мар.
3007. Çунатлă, çапах вĕçмест, ури çук, çапах çитме çук.
3008. Çуначĕ пур — вĕçеймес, ури çук, хуса çитмелле мар.

3009. Ури çук, хăйне хăваласа çитмелле мар.
3010. Шăрчĕ пур та — сысна мар, çури пур та — лаша мар.

### Пултăран

3011. Аслă улăх варринче лăпсăр-лапсăр, çĕтĕк-çатăк ачапча вăйă калать.
3012. Пуçанан пуçĕ пысăк, пултăрăн калпакĕ пысăк.
3013. Уçланкăра çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ ача макăрса тăрать.

### Пултăран, серте

3014. Çеп çерĕлтĕм, çĕрĕлтĕм, çĕрле пăяв яврăм, уртăм, суртăм, пур халăха юрарĕ.
3015. Çĕтĕк-çатăк тумлă ачасем пĕр ушкăнта тăраççĕ.

### Пуп

3016. Кам хырăмне ĕçлемесĕр тăрантать?
3017. Пĕр пуç милĕк, тепри юплĕ, варри панк.

### Пуплени

3018. Анчах кайрĕ, йĕрĕ çук.

### Пурăш

3019. Çеçен хирте çуллă тукмак выртать.

### Пуртă

3020. Вăрмана кайнă чух килелле пăхать, вăрмантан килнĕ чух вăрманалла пăхать.
3021. Вăрман варĕнче çутă куç кăçкăрат.
3022. Вăрманта кукша пуçлă тутар пуççапать.
3023. Вăрманта çара пуçлă пичче кăшкăрать.
3024. Вăрманта çутă пуçлă ватă çын кăшкăрать.
3025. Вăрман урлă çутă пуçлă старик кăшкăрĕ.
3026. Коççăр алтан сиксех авăртать.
3027. Кун каçиччен таккăп-таккăп та пӳрте кĕрсен юнлă сурса выртăп.
3028. Куççăр автан сиксе авăтать.
3029. Лутра вырăс ял касать.
3030. Пĕр мучи вăрманта çӳрен, пилĕкĕ хыçĕнче куçкĕски, куçкĕскине илчĕ, тайăлчĕ, юман йывăç йăванчĕ.
3031. Пĕчĕк кăна пĕр ача вăрман тĕпне çуллать.
3032. Пуççапать, пуççапать, киле çитсен тăсăлса выртать.
3033. Сĕм вăрманта кăвак йытă вĕрет.
3034. Сĕм вăрманта çара майра кăшкăрать.
3035. Соккăр автан сиксе автать.

### Пусапа кантăр

3036. Вырăспа тутар хутăш.
3037. Икĕ Петруха пĕр çĕрте.

## Пусă

3038. Асаттен мăн çӳпçине нимле те йăтса ӳпěнтереймěн.
3039. Çěнě савăтăн тěпě шăтăк.
3040. Тарăн савăтра шыв иксěлмест.
3041. Уй варринче тěпсěр чěрес.
3042. Хěлле ăшă, çулла сивě.

## Пусă кашти

3043. Хура така кучěпе те (сěкет), пуçěпе те сěкет.

## Пусă тараси

3044. Алсăр, урасăр, турра пуççапать.
3045. Асаннен тарăн, асаттен вăрăм.
3046. Вăрăм вырăс пуççапат.
3047. Вăрăм тăрна тарăн кӳлрен шыв ěçет.
3048. Кулава мар, тиек мар, пуççапмасăр кěресшěн мар.
3049. Лай-лай мулаххай апаш.
3050. Тăрик! Кăлтăрук!
3051. Текех пěр пуçне хăпартать, тепěр пуçне антарать.
3052. Улпутла ларать, шуйттанла кăшкăрать.
3053. Хăй ěне кашни сумассерен пěр витре парать, кěске урапана шăнăçмасть, вăрăм урапапа турттармалла.
3054. Хӳме урлă вăрăм вырăс кармашать.
3055. Чăрик-чăрик, тпру!
3056. Шă-ши кăна, йăнкăлтăм-кăлтăртин, тпру!
3057. Шен-шин, кăлтăр-кук!
3058. Шěпěн-ши, кăлтăр-кук!
3059. Шу-шу çěлен, кăлтăртин тăр, янтă кăна çěкле.
3060. Эхтем пěççи хăй-хай!

## Пусма

3061. Сак-сак сакăлтак, сакăр вун сакăлтак.

## Пуç

3062. Алпа туман çăмхан çичě шăтăк.
3063. Асамлă çăмхан çич шăтăк: иккěшě тип шăтăк, иккěшě йěпе шăтăк, иккěшě нӳрлě шăтăк, пěри тěпсěр шăтăк.
3064. Аслă вăрман, кěçěн вăрман, таса уй, йăлтăркка, мăшăлкка, мăкăртăк, шакăртăк, вěçлеккей — пурте пěрле.
3065. Аяллă сăрт, аяллă сăртра вăта сăрт, вăта сăртра вак хăва.
3066. Аял ту, аял туран вăта ту, вăта туран çӳллě ту, çӳллě туран вак хăва.
3067. Вăрăм хăва, вăрăм хăва айěнче тěм хăва, тěм хăва айěнче çавра кӳлě, çавра кӳлě айěнче тěмеске, тěмеске айěнче лěпрешке, лěпрешке айěнче мăн шăтăк, мăн шăтăкра тěп шăтăк, çав шăтăка сыхлама хěрлě йытă кăкарса хунă.

3068. Иккĕн пăхаççĕ, иккĕн итлеççĕ, пĕри калаçать.

3069. Кавлем, кавлем çинче нарат, нарат çинче кӳлли, кӳлли хыçĕ хăвалăх, хăвалăх çинче вăрман.

3070. Ляв-ляв, ляв-ляв çинче нăр-нăр, нăр-нăр çинче çут кӳлĕ, çут кӳлĕ çинче мăн ту, мăн ту çинче сĕм вăрман.

3071. Мучи пӳрчĕ — пĕчĕк пӳрт, алăкĕ мăкланнă, тĕнĕ шăтăкĕн пăкки çук, çил шăтăкĕн хуппи çук, çине кăлкан витнĕ.

3072. Нямни, нямни çинче нăрни, нăрни çинче çутă кӳлĕ, çутă кӳлĕрен вĕт хăва.

3073. Ням-ням, нăр-нăр, çутă кӳл, хушка ту, вĕт хăва.

3074. Пĕлсе тăрать, курса тăрать,
Илтсе тăрать, туйса тăрать,
Çӳлти хутра çӳре тăрать,
Пур хушăва хуша тăрать.

3075. Пĕр муклашкан çичĕ шăтăк.

3076. Пĕр çăкăр сăмси, икĕ икерчĕ, пĕр хуран кукли, икĕ йăвача, икĕ кĕлентĕр.

3077. Пĕр çăмхан çичĕ шăтăк.

3078. Пĕр ту çинче çичĕ çĕр хăвăлĕ.

3079. Пĕр хурана çичĕ çĕртен шăтарнă.

3080. Пĕчĕк çеç пĕр арчана аслă тĕнче шăнăçать.

3081. Пĕчĕк çеç пĕр арчана тĕнчери пур япала шăнăçать.

3082. Çӳлти хутра тăрать, тĕнчере мĕн пуррине курса тăрать, илтсе тăрать, туйса тăрать, пĕлсе тăрать.

3083. Çӳл ту çинче пĕчĕк пӳрт, çав пӳрт çине хăмăш витнĕ, унăн икĕ чӳрече, икĕ тăмана шăтăкĕ, икĕ кушак шăтăкĕ, пĕр тĕп сакай.

3084. Хам-хам, хам-хам çинче сам-сам, сам-сам çинче çут кӳл, çут кӳл çинче çӳл ту, çӳл ту çинче вĕт хăва, вĕт хăвара вĕт кайăк.

3085. Хып-хып, нăш-нăш, йăл-йăл, вĕл-вĕл, văш-văш.

## Пуç, ăс, куç, хăлха, чĕлхе

3086. Çӳлти хутра пурăнать, пурне те пĕлсе тăрать, пурне те курса тăрать, пурне те илтсе тăрать, (пур ĕçе те вăл хушать) пурне те хушса тăрать.

## Пуç, ăс-тăн

3087. Пĕчĕк çеç пĕр арчана пĕтĕм тĕнче шăнăçать.

## Пуç мими

3088. Уçман арчара пиçмен аш.

## Пуç: çамка, куç харши, куç, сăмса, çăвар, чĕлхе

3089. Аслă вăрман, аслă вăрман,
Аслă вăрман айĕнче чĕке ту,
Чĕке ту айĕнче вĕтлĕх вăрман,
Вĕтлĕх вăрман айĕнче ялтăравăк,

Ялтăравăк айĕнче мăшăлтăк,
Мăшăлтăк айĕнче тĕпсĕр ханкăр,
Тĕпсĕр ханкăрта çӳрен тиха.

### Пуç: çӳç, çамка, куç, сăмса, мăйăх, çăвар

3090. Çӳлĕ ту,
Çӳлĕ ту çинче аслă вăрман,
Аслă вăрман айĕнче чĕке ту,
Чĕке ту айĕнче икĕ кӳлĕ,
Икĕ кӳлĕ хушшинче çут,
Çут айĕнче икĕ хăвăл,
Икĕ хăвăл айĕнче туйралăх,
Туйралăх айĕнче çăхăр.

### Пуç турани

3091. Пин пуç лашам пур, пĕр хулăпа хăвалап.

### Пуç: чĕлхе, куç, хăлха

3092. Пĕри поплет, иккĕн пăхаççĕ, иккĕн итлеççĕ.

### Пуçри кирĕк*

3093. Хура вăрмана юр çунă, пăхмасассăн курăнмасть.

### Путек

3094. Ишелĕ, кошалĕ, амăш котне хыпалĕ.
3095. Ишелĕ-кушалĕ, амăш айне хыпалĕ.
3096. Мек! тăвать те паллаттарать.
3097. Сак çăвипе йăпăштăк, урай варрипе тĕпĕртĕк.

### Путек-сурăх каяшĕ

3098. Пĕр сак уçсан сакăр вун салтак сиксе тухĕ.

### Пухра

3099. Ой варринче тăвар килли ларĕ.
3100. Уйра кучченеç тукмакки выртать.
3101. Уйра тăвар килли ларать.
3102. Уйра тăвар килли ларĕ.
3103. Уйра ыхра килли ларать.

### Пушар

3104. Хĕрлĕ автан пӳрт çинче авăтĕ.
3105. Хĕрлĕ автан яла çунтарать.
3106. Хĕрлĕ вăкăр макăрать.

### Пушă

3107. Вăшши! Ваçка пуç тавра.

## Пушăт

3108. Вăрманта хора, уйра хушка, килте шурă.
3109. Хай-хай, каптал, хай каптал, хай каптала сӳ пăрах.
3110. Хай-хай каччăм, хай каччăм, кӳр сăхманна, хывса пар.
3111. Хай-хай каччăм, хай каччăм, хай каптална хыв пăрах.

## Пушăт йывăççи

3112. Вăрманта турă, çул çинче хушка, киле килсен шурă.
3113. Вăрманта турă, çул çинче хушка, килте çӳрен.
3114. Пӳрте сăхманпа кĕрет, пӳртрен çарамас тухать.

## Пушăт пушмак

3115. Навус çуни туртасăр.
3116. Сентĕре айĕнче шатра шапа выртать.

## Пушмак

3117. Акăлчи-макăлчи шыçмак кут.
3118. Пĕр шăшийĕн хӳри çук.
3119. Сак айĕнче шатра шапа выртат.
3120. Сентре айĕнче хытнă Настаççи выртать.
3121. Хам утнă чух вăл та утать, апат çинĕ чух сĕтел айĕнче ларать, çывăрнă чух — кравать айĕнче.

## Пӳремеч

3122. Тĕнче пĕрес, çанталăк сарас.

## Пӳрне

3123. Икĕ ывăçра вунă ача.
3124. Пĕр туратăн виçĕ сыпăк.

## Пӳрне, ывăç

3125. Сарсан пиллĕк, пĕрсен пĕрре.

## Пӳрнене çĕрĕ тăхăнни

3126. Пĕчĕк тияк йĕс пуççи* çыхĕ.
3127. Пиллĕкĕн пĕртăван, аслийĕ ĕмĕрне те пиçихи çыхмасть, кĕçĕннисем тăваттăшĕ те çыхаççĕ, анчах вĕсем те яланах çыхмаççĕ, сайра хутра анчах çыхаççĕ.

## Пӳрнери çĕрĕ

3128. Тĕпсĕр пичке тулли чĕрĕ какай.

## Пӳрнесем

3129. Алапит çемйинче пилĕк ача.
3130. Алтаккайăн пилĕк яш, пиллĕкĕш те сарă яш.
3131. Ик амăшĕн пилĕкшер ывăл.
3132. Ик арăмăн пилĕкшер ывăл.
3133. Икĕ ама, кашни аман пилĕкшер ача, пиллĕкĕш те пĕр ятлă, чĕнме тĕрлĕ чĕнеççĕ.
3134. Икĕ аманăн пилĕкшер ача, хăйсем пурте пĕр ятлă.
3135. Лараççĕ пилĕк ача, пĕри тепринчен пĕчĕкçĕ.
3136. Пĕр аман пилĕк çура.
3137. Пĕр амаран пилĕк ача.
3138. Пĕр арăмăн пилĕк ывăл, пиллĕкĕшĕ те пĕр ятлă.
3139. Пĕр вăхăтра çуралаççĕ, пĕр пек пулмаççĕ.
3140. Пĕр вăхăтра çуралнă, тĕрлĕрен пӳ туяннă.
3141. Пĕр йăвара пилĕк Йăван.
3142. Пĕр йывăçăн пилĕк турат.
3143. Пĕр йывăçăн пилĕкшер юплĕ ик турат.
3144. Пĕр этеммĕн пиллĕк ывăл, пиллĕкĕш те пĕр ятлă.
3145. Пилĕк нарат, наратсерен пилĕк турат, туратсерен пилĕк нухрат.
3146. Пилĕк пĕртăван пĕр кун çуралнă — пĕри те тан мар.
3147. Пилĕк тăван виличчен пĕр ăслă.
3148. Пиллĕкĕн çуралаççĕ, пĕр ятпа пурăнаççĕ.
3149. Тăватă пичин пĕр мучей.

## Пӳрнеске

3150. Вăталăх ывăл тимĕр шлепке вăхăтăн тăхăнать.
3151. Витре пуçлă, пин куçлă.
3152. Мăкшă куçĕ — пин куç.
3153. Мĕтрийĕн пин куç.
3154. Пĕр пиччен пин шăтăк.
3155. Пĕр сыснана йĕри-тавра шăтăкласа пĕтернĕ.
3156. Пĕр сысна пин шăтăклă.
3157. Пĕр çăмхан хĕрĕх шăтăк.
3158. Пĕр çăхăрта пин çăхăр.
3159. Пĕтри пуçĕ пин куçлă.
3160. Пĕчĕк пичин хĕрĕх шăтăк.
3161. Пĕчĕк пиччен пин шăтăк.
3162. Пĕчĕкçеç пике — шатра пит.
3163. Пĕчĕк çеççĕ туй хăлаш, хăлаш тулли чĕрĕ аш.
3164. Пилĕк тăрăх çĕр шăтăк.
3165. Пинĕн пин шăтăк, пирĕн Микулайăн пĕр шăтăк.
3166. Пӳрне пуçĕнче пуп ларать, пуп тумĕ — пин саплăк.
3167. Тĕпсĕр лутка аш тулли.
3168. Хăли Мĕтрин хĕрĕх куç.
3169. Хусăк пуçĕнче хурчăка.
3170. Чилек пуçлă, пин куçлă.
3171. Шакла пуçлă Çтаппанăн пин куç, пĕрийĕ те кураймасть.
3172. Эп пулмасан пустав тăхăнакан та пулмĕччĕ.

## Пӳрт

3173. Çурăк çамка Ваçинкка.
3174. Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăват кĕтеслĕ.
3175. Хура-мара хуртумăш, хуп-хупланкă хупламăш.
3176. Шăтăк çамка — çутă куç, шукăль çамка — каçăр пуç.

## Пӳрт кĕтесси

3177. Пĕр пуçелĕк çинче çĕр çын выртать.
3178. Пӳрте кĕрсен — майракасăр, пӳртрен тухсан — майракаллă.
3179. Пӳртрен тăваттă, тултан саккăр.
3180. Пӳртре тăваттăн, тулта саккăрăн.
3181. Пӳртре тăваттă, тулта саккăр.
3182. Урамра майракаллă, пӳртре мăкла.
3183. Шалтан тăваттăн, тултан саккăрăн.

## Пӳрт мăкĕ

3184. Пӳрт йĕри-тавра чĕнтĕр çавăртăм.

## Пӳрт мăклани

3185. Пирĕн пата, сирĕн пата та сысна çури хĕстернĕ.
3186. Пӳрт тавра вĕрен çавăртăм.
3187. Пӳрт тавра пеклĕ* вĕрен.

## Пӳрт пĕрени

3188. Толта кокăль, шалта икерчĕ.
3189. Тулта чăмăр, пӳртре лаптак.
3190. Энтри шалта, пуç тулта.

## Пӳрт пĕрени пуçĕ

3191. Çармăс чĕччи толалла.

## Пӳрт пĕçмехĕсем

3192. Шалта тăваттăн, тулта саккăрăн.

## Пӳрт çунни

3193. Пӳрт çинчен пӳрт çине хĕрлĕ автан сиксе çӳрет.

## Пӳрт тăрри

3194. Сакăр вунă салтак, икĕ шантар, пĕр улпут.

## Пӳрт улăхтарни

3195. Килчĕ хăна, килчĕ хăна — минтер хурса çитерейменрĕм.
3196. Хăни килех тăрат, кĕççи сарлах тăрат.
3197. Хуньăм хĕрĕ килех тăрĕ, айне кĕççе сарах тăрăп.

## Пыйтă

3198. Атиккěм, пытиккěм, ури чалăш.
3199. Атьăк, пăтьăк, ури чалăш.
3200. Вăрманта пурăнать — кашкăр мар, йывăç çине улăхать — пакша мар, çěр чавать — сысна мар.
3201. Вěт вăрманта вěт кайăк.
3202. Вěт, вěт вăрман, вěт вăрман, вěт вăрманта вěт сысна.
3203. Вěт, вěт хăва, вěт хăва, вěт хăвара кайăк.
3204. Вěт хăвара вěт кайăк.
3205. Ик чěпиçěм, чěпиçěм, чěпи ури чапăрçăм, минтер айне кěрех вырт.
3206. Пěçим, пěçим, пěçим ури качим.
3207. Сěм вăрманта сěнкěлтěк.

## Пыл

3208. Явман кантăра, çăрман чуста.

## Пылпа сахăр

3209. Йăм тăсăлаканне илетни, шарт! катăлаканне илетни?

## Пыл тăвакан хуртсем

3210. Врене, врене, врене ылттăн, çӳппи-çаппи пин ылттăн.

## Пыл хурчě

3211. Пěр пуянăн пахчи пур, пахчинче мунчи пур. Çинçе пилěклě пикисем мунчана шыв тултаççě. Шывě шерпет, ăшши пыл.
3212. Пěчěк пӳртрен хěр тухать,
Пилěкěнчен тыттармасть,
Çивěтěнчен турттармасть.
3213. Пěчěкçеççě тěттěм пӳртре хěрсем тěрě тěрлеççě.
3214. Пӳрт хыçěнче çул выртать,
Пěтре çӳçлě хěр пырать,
Тытăттăмччě — халăм çук,
Илěттěмччě — мулăм çук.
3215. Çу хута пыл пухать, хěл хута хал пухать.
3216. Хěвел айěнче çӳрерěм, çӳрерěм,
Ылттăн шăпăр каларăм, каларăм;
Уйăх айěнче çӳрерěм, çӳрерěм,
Кěмěл шăпăр каларăм, каларăм.
3217. Чечек çинчен чечек çине
Вěçсе çӳрет кайăксем,
Ӳчě харама кайтăр,
Сěчě халала килтěр.

## Пыл хурчěпе сăпса

3218. Анатри Атирак, тури Тутирек.

### Пыр ҫыххи

3219. Шехретинпе Марттин тус пулнӑ.

3220. Эсӗ Куптарпа*, эпӗ Ҫӗктерпе**, иккӗн пӗрле Маймак арманӗ патӗнче тӗл пулӑпӑр.

### Пыршӑ

3221. Ҫӑтӑрман ӑшӗнче ҫӑтӑр-ҫӑтӑр хӗлӗх вӗрен.

3222. Тӑвӑр кӗлетре тӗвӗмлӗ-тӗвӗмлӗ вӗрен выртать.

### «Р» сасӑ

3223. Урапан пур, утӑн ҫук, туртан пур, тевӗшӗн ҫук.

### Радио

3224. Килсерен пӗртӑван Ӑртиван.

3225. Чунсӑр, юнсӑр — юрӑ юрлать, сӑмах калать.

### Рак

3226. Ӑстаҫӑ мар, ҫӗвӗҫӗ мар — ҫӑварӗнче шӑрт, аллинче хачӑ.

3227. Ик аллинче хачӑ, ҫӑварӗнче йӗп; ҫӗвӗҫ тесен ҫӗвӗҫ мар, атӑҫ тесен атӑҫ мар.

3228. Сак айӗнче мушелник выртать.

3229. Усси вӑрӑм, вун сакӑр ура.

### Ратиялла пир тӗртни

3230. Ирли, урли, марли, треттий — кокӑркки.

### Ручкӑпа перо

3231. Патак татӑкки хӑвса пырать, тимӗр татӑкки чӗрсе пырать, йӗпе Марттин ӳксе пырать, хыҫалтан йӗр пулса пырать.

3232. Пӗр пуҫӗ йывӑҫ, тепӗр пуҫӗ хурҫӑ, ик тӑрӑллӑ та шӑтӑклӑ.

### Сава

3233. Кӑптӑртӑм-кӑптӑртӑм, якуне тӑршук.

3234. Пӗчӗкҫеҫ кимӗ пур, калла-малла ҫӳрет, мӑрйинчен хӑю кӑларать.

### Сак

3235. Алӑкран кӗреҫҫӗ те ман ҫине утланса тараҫҫӗ.

3236. Асаттен ват ӑйри пур, такам та утланать, никам та чуптараймасть.

3237. Вӑрӑм терӗҫ те — татрӗҫ,
Хулӑм терӗҫ те — ҫурчӗҫ,
Ӗнтӗ мӗнле пурӑнас
Ҫын аркине ҫулласа?

3238. Килен-каян ман çине улăхса анать.
3239. Ман çинче çуралаççĕ,
Ман çинче ĕçсе çиеççĕ,
Ман çинче выртса çывраççĕ,
Ман çинче вилеççĕ.
3240. Пĕр енĕ çутă, тепĕр енĕ хура.
3241. Сазан пулă касмалла выртать.
3242. Сарă вăрăм кинĕм пур, кашни килен-каян ун çине улăхса анать.
3243. Хăми сарă, сарлака.
3244. Ырса килекен те ман çине улăхса анать, выçса килекен те ман çине улăхса анать.

## Сак урисем

3245. Сакран çӳллĕ пулаймарăм, питрен хура каймарĕ.
3246. Ӳксе пĕве кайимарăм, питĕмрен хура каймарĕ.

## Сак хăмисем

3247. Утмăл тутар ура вĕçлĕ выртать.

## Сак хысипе саккисем

3248. Ачи-пăчи месерле, ашшĕ-амăшĕ хăяклă.

## Сак ыратипе урай

3249. Уравăша урлă, Ескетене тăрăх.
3250. Тăватă куçлă, тăватă ураллă, икĕ пуçлă; сăмси-çăварĕ çук, мыраки-хӳри çук.

## Сакă уратипе кăмака урати

3251. Сакă айĕнче сакăртак, кăмака айĕнче кăмăрчак.

## Сакпа урай

3252. Уравăша урлă, Эскетене тăрăх.

## Саксемпе чӳречесем

3253. Пӳрт тулли пӳремеч, унта-кунта кулач.

## Сала кайăк

3254. Инçĕк, кунçăк, хӳри пăр-пăр, тавит арăм талт-талт-талт.
3255. Иттĕк-кӳттĕк* хӳри пăри-пăри.
3256. Ичĕк-кучăк* хӳри пăр-пăр.

## Сала кайăк кантăр вăрри çини

3257. Качи пуçне типиçи.

## Саламат кĕперри

3258. Алăсăр-урасăр асатте кĕпер хывать.
3259. Пӳрт урлă чĕн йĕвен ывăтрăм.

## Салат

3260. Кăмака çинче хуртлă кĕççе выртать.
3261. Сак айĕнче пăшăлти пăтти пĕçереççĕ.
3262. Сак айĕнче хуртлă кĕççе выртать.
3263. Сак çинче хортлă кĕççе выртĕ.
3264. Сак çинче хуртлă кĕççе выртать.

## Салма

3265. Асатте кăмака çинче, урине çĕрелле уснă.
3266. Ĕнтен пиче сиксе ташлать.
3267. Пĕр вакăра хĕрĕх çерçи.
3268. Пĕр вакка хĕрĕх çерçи тăкăнать.
3269. Пĕр вакка хĕрĕх çерçи тирĕннĕ.
3270. Пĕр вакра шутсăр çерçи сикет.
3271. Пĕчĕкçеççĕ ачасем шурă юр çинче йăваланаççĕ те тăрса вĕрекен шыва чăмаççĕ.
3272. Çавракa кӳлле çăвăлçă çăвать.
3273. Татса илĕп, шыва ярăп.
3274. Тимĕр вакка вак çерçи.
3275. Хум çарĕ шыва путнă, çар пуçĕ чăма-чăма кăларнă.

## Салма, ăскăч

3276. Пин сурăх сĕт кӳллине чăмĕ, хыççăн кĕтӳççи кăларма сикĕ.
3277. Пин сурăх сĕтлĕ кӳлле сикрĕ, кукăр карчăк хыççăн сикрĕ.

## Салма, кашăк

3278. Пин сурăх шыва сикрĕç, кĕтӳ ачи вĕсем хыççăн чăмрĕ.

## Салма*, сĕркĕч**, ăскăч

3279. Пин çын шыва кая панă, кукăр старик кăларма сикнĕ.

## Салма яшки пĕçерни

3280. Пĕр вакăра хĕрĕх çерçи.
3281. Пин салтак шыва сикрĕ, янтаралĕ кăларма сикрĕ.

## Самолет

3282. Чунĕ çук — вĕçет.
3283. Чунĕ çук, юнĕ çук, кайăкран хытă вĕçет.

### Саппун çыххи

3284. Эс унтан кай, эп кунтан каяп, Энтри пасарĕнче тĕл пулăпăр.

### Сарана

3285. Алтрăм-алтрăм, алма тупрăм, алтса çитсен кĕмĕш* тупрăм.
3286. Вăрман варринче вирт кăвать.
3287. Сарă хĕр леш тĕнчере, ылттăн сăрки ку тĕнчере.
3288. Çĕр айĕнче йĕс пукан.
3289. Хĕл-хĕл кайăк, хĕл кайăк, хĕл хĕллесе кайсар-и*, ылтăн-кĕмĕл çăмарти йăвине тăрса юлсар-и?**

### Сарă тулă

3290. Чипер хĕрĕн хырăмĕ çурăк.

### Сасă

3291. Мĕн вăл? Пурне те хирĕç калать, хăйне курма çук.
3292. Порăнать ўтсĕр, поплет чĕлхесĕр, никам та ăна кормаççĕ, порте илтеççĕ.
3293. Тăлппўсĕр тăрат, чĕлхесĕр калаçат, хăйне никам курни çук, анчах пурте илтнĕ.
3294. Ўтсĕрех пурăнать, чĕлхесĕрех калаçать, никам та ăна курмасть, пурте илтеççĕ.

### Сахăр

3295. Нимрен хытă, нимрен тутлă.
3296. Эп пурă пек шурă, пурте мухтаççĕ мана, пурне те кăмăла килеп, анчах шăлсене пĕтереп.
3297. Юртан шурă, пылтан пылак.

### Сăвăс

3298. Йытă вĕрмест, çын сисмест, хăй çынна çыпçăнать.

### Сăмавар

3299. Айĕ те шăтăк, çийĕ те шăтăк, вăта çĕрте вут та шыв.
3300. Атăл варринче вут (авăн) çунать.
3301. Варĕнче вутпа шу, икĕ поçĕнче шăтăк.
3302. Варри вутлăх, йĕри-тавра кўллĕх.
3303. Варринче вут çунать, йĕри-тавра шыв.
3304. Вăта çĕрте кăвар тĕлкĕшет, йĕри-тавра шыв тăрать.
3305. Йăс картара хĕрлĕ автан авăтать.
3306. Йĕкĕчĕ хитре, ытарма çук — вĕçĕнчен юхса тăрать.
3307. Йĕри-тавра шыв, варринче вут.
3308. Йĕри-тавра шыв тăрать, варри тĕлĕнче вут çунать.
3309. Йĕри-тавра шыв тăрать, вăта çĕрте вут çунать.
3310. Йĕс-йĕс карта, йĕс карта, йĕс картара тимĕр карта, тимĕр картара тимĕр пăру.

3311. Йĕс-йĕс карта, йĕс карта, йĕс картара тимĕр карта, тимĕр картара хĕрлĕ пăру.
3312. Йĕс пӳртре шыв çунать.
3313. Кĕпер çинчен пуп шăрать.
3314. Кĕпер çинче пуп ларать, шăрап тесе кăшкăрать.
3315. Кĕпер çинче пуп тăрать, пурне те шăрса парать.
3316. Майра ăшĕнче вут çунать.
3317. Маттур хĕрĕн ăшĕ-чикки çунать.
3318. Мăнтăр улпут шăра кут.
3319. Мăнтăр улпут, кукăр тапак.
3320. Пăхăр вите, пăхăр витере тимĕр вите, тимĕр витере хĕрлĕ вăкăр, мĕкĕрет, тулхăрать, хӳрине тăратать.
3321. Пӳрт ăшĕнче йĕс пукан.
3322. Сала майрин ăшĕнче çунать, сала вырăсĕн пуçĕнчен тумлать.
3323. Самăр улпут, кукăр тапак, сĕтел çинчех шăрса ларать.
3324. Сарайĕнчи сар ăйăр — шăварсассăн шăмарать.
3325. Сарă карчăк кĕлтăвать, хĕрлĕ карчăк таш ташлать.
3326. Сарă лаша шыва путнă, икĕ хулхи шăнса хытнă.
3327. Сарă хĕрĕн ăш çунать, тăрри те шăтăк, тĕпĕ те шăтăк, вăта çĕрте — вут та шыв.
3328. Сар кĕпе ăшĕнче пĕр хĕр шăрас тесе кăшкăрать.
3329. Сĕтел çинче пуп ларать, шăрап тесе кăшкăрать.
3330. Сĕтел çинче шăтăк пуçлă, çурăк кутлă, шампа хырăм сар улпут чашкăрса ларать.
3331. Çӳлте пĕлĕт, йĕри-тавра шыв, варринче вут.
3332. Çӳлте те шăтăк, аялта та шăтăк, варринче вутпа шыв.
3333. Çӳлте шăтăк, аялта шăтăк, варринче шыв.
3334. Çӳлте шăтăк, тĕпĕнче шăтăк, варринче вут.
3335. Çут кӳлĕ варринче вут çунать.
3336. Тăватă ураллă, икĕ хăлхаллă, вăхăчĕ-вăхăчĕпе юрласа ларать.
3337. Тăват ураллă, ик хăлхаллă, пĕр сăмсаллă, пĕр куçлă.
3338. Тинĕс варринче авăн çунат.
3339. Тинĕс варринче авăн çунать, пĕлĕт çинче лăпсăр-лапсăр упа чупать.
3340. Тулĕ сарă, çарăк пек, ăшĕ хура, кăмрăк пек, мулла пек ларать, шуйттан пек шăхăрать.
3341. Ури пур, утмас, хулхи пур, илтмес.
3342. Ури пур, утмасть, сасси пур, калаçмасть, сăмси пур, сывламасть, хăлхи пур, илтмест.
3343. Хусантан килнĕ хăнам пур, вут çиет те шыв ĕçет.
3344. Шăтăк пуçлă, çурăк кутлă, шампа хырăм, хырăмĕнче вут та шыв.
3345. Шурă пӳртре шур сĕтел, сĕтел çинче йĕс пукан.
3346. Шурă пӳртре шур сĕтел, сĕтел çинче мăнтăр майра, пичĕ сарлака, хăлхи усмак, вут çиет те шыв ĕçет.

## Сăмавар, патнус, чей чашки

3347. Ашшĕ йĕс кевтеллĕ, амăшĕ кин кевтеллĕ, ачи-пăчи чăлтăр та чалтăр.

3348. Çӳллĕ-çӳллĕ ту ларать, ту ăшĕнче вут çунать, тавралла тӳкерек кӳлли, тӳкерек кӳллинче вун икĕ аккăш.

### Сăмавар, чейник

3349. Улпут çине майри хăпарса кайнă.
3350. Ылттăн пукан çинче шурă кăвакарчăн ларать.

### Сăмавара кăвар яни

3351. Шывлă пусса вут ятăм.

### Сăмаварпа чей куркисем

3352. Амăшĕ сарă, чăххисем шурă.

### Сăмакун юхни

3353. Вашук мăкăть пăнч-пăнч.

### Сăмах

3354. Куçĕ те çук, алли те çук, ури те çук; ни этем, ни усал — хытă каять.
3355. Манран тухса кайрĕ, сана пырса кĕчĕ.
3356. Пĕр тухса кайсан нихăçан та хуса кĕртейместĕн.

### Сăмса

3357. Виçĕ юпапа аслăк тăрать.
3358. Икĕ çăлтăр хушшинче эп пĕччен.
3360. Капан айĕнче ик çăлкуç.
3361. Сăрт айĕнче ик нӳхреп.
3362. Пĕчĕкçеççĕ тăвăм пур, хĕл варринче юр выртмасть.
3363. Сăрт айĕнче ик вар пур.

### Сăмса, куç

3364. Сăр урлă икĕ хăмăшлă кӳлĕ.

### Сăмса, мăйăх

3365. Шăтăклă тунката айĕнче тĕвĕрĕм тиха хĕври.

### Сăмсапа тапак туртни

3366. Йĕкĕр çăла кĕрпе ярап.

### Сăмсари манка

3367. Капан айĕнчен юс тухать те кĕрет.

### Сăмса, çăвар

3368. Икĕ шăтăк, пĕр алăк.

### Сăмса шăнкарни

3369. Икĕ салтак чĕçкĕрнине пилĕк салтак тасатса тăрать.
3370. Иккĕн сысаççĕ, виççĕн пуçтараççĕ.
3371. Иккĕн сысĕç, пиллĕкĕн тасатĕç.
3372. Мăрăлтатса килекен мăрсана икĕ пĕççинчен тытса çавăрса çапăп.

### Сăмса шăтăкĕ, çăвар

3373. Пĕр пӳртĕн икĕ тĕнĕ, пĕр алăк.

### Сăмса шывĕ

3374. Анаталла — хуллен-хуллен, майĕпен, тăвалла — нăшт! йăпăр-япăр.
3375. Вуçми сунтăх çинче калемпĕр выртать.
3376. Ик вар пуçĕнчен тан тапать.
3377. Ик вар хушшинчен тан тапать.
3378. Иккĕн варалаç, пиллĕкĕн тасатаç.
3379. Иккĕн тухĕç, пиллĕкĕн çапса пăрахĕç.
3380. Иккĕн чупса тухаççĕ, пиллĕкĕн çĕклесе çапаççĕ.
3381. Ик çырмаран тан тапать.
3382. Капан айĕнчен юс пăхать.
3383. Капан айĕнчи юс пĕр тухать те пĕр кĕрет.
3384. Лап! çĕре, çутă пуç.
3385. Шĕвикĕм-шенкерĕм, шыва ятăм, путмарĕ.
3386. Юмах пуртă кăна, унтан килсен кистă кăна.
3387. Юплĕ вартан тан тапать.

### Сăмса юхни

3388. Ик вар тăрăх тар юхать.
3389. Икĕ вар вĕçĕнчен тан тапĕ.
3390. Иккĕн йăпшăнаççĕ, пиллĕкĕн пăваççĕ.
3391. Пĕр вар пуçĕнче тан тапĕ.
3392. Пĕри пăрахать, тепри йăтса çӳрет.
3393. Усалĕ перет, ырри пуçтарать.

### Сăн виттĕр

3394. Йĕри-тавра йывăç карта, вăта çĕрте çутă кӳлĕ.

### Сăпка

3395. Вирелле кайрăм — чуччу!
Çĕрелле антăм — чуччу!
Вăта çĕрте — сар кайăк чĕппи.
3396. Ни çĕр çинче мар, ни шыв çинче мар, çĕрпе пĕлĕт хушшинче хуп хула ларать, хуп хулара чĕлхесĕр патша ларать.

3397. Пӳртре кимĕ ярăнать.
3398. Çĕрпе пĕлĕт хушшинче шурă хула ларать, шур хулара чĕлхесĕр ĕмпӳ ларать.
3399. Тайăлать — çĕре тивмест.
3400. Тумлат, тумлат — çĕре тимест*.
3401. Уйра мулкач сиккелет, ури çĕре тивмест.
3402. Ярански, парански, çĕмĕрт тăрри — çӳрен лаши.

### Сăпкари ача

3403. Курăс пӳртре келекей палаккай выртать.
3404. Çуни — хуп çуна, хуп çунара куштан улпут, ямшăкĕ — ват карчăк.
3405. Хуп кунтăкра чĕрĕ какай.
3406. Шурă пӳрт варринче шурă ӳт çакăнса тăрать.

### Сăпса

3407. Кайăк мар, вĕçет, çĕлен мар, сăхать.
3408. Пи-пи пилен ут, пилĕк урлă çинçе ут, тăвăллăх ăшă шыв ĕçме, вилми ут.

### Сăпса, тĕкĕл тура, пыл хурчĕ

3409. Пуян ывăлĕ Путирак, Тутил ывăлĕ Тутирак, Пынт ывăлĕ Пытирак.

### Сăра

3410. Пĕр вак касрăм та хĕрĕх ута юрарĕ.
3411. Сак айĕнче сарă тиха кĕçенĕ.
3412. Сак айĕнче çӳрен лаша кĕçенет.
3413. Сивĕлле лăпкă, ăшăлла кăпăклă.
3414. Тĕп сакайĕнче сар лаша кĕçенет.

### Сăра ăсни

3415. Майри макрать, вырăсĕ чикет.

### Сăра йӳçни

3416. Аслă ямра сим вĕрет.
3417. Сак айĕнче сарă лаша кĕçенет.
3418. Сак айĕнче сар лаша кĕçенсе тăрать.
3419. Саканче сарă кĕсре кĕçенсе тăрĕ.
3420. Сармантейĕн сар лаши сак айĕнче кĕçенет.
3421. Тĕп сакайĕнче сар лаша кĕçенет.
3422. Тĕп сахайĕнче сарă тиха кĕçенет.

### Сăра пички

3423. Кӳпнĕ сурăх сакайĕнче выртать.
3424. Ĕлĕк выртса паратчĕ, халĕ тăрса парать.
3425. Хăлăксăра тилĕртет, пултăксăра тилмĕртет.

## Сăра туни

3426. Алăк патĕнче алтăртăк, тĕпелте тĕпĕртĕк, вăта тĕлĕнче чăшт-пашт.
3427. Ăçта каян, хора кот? — Эп те пырап, çĕтĕк кот.
3428. Ăçта каян, хура кут? — Эп те пырап, шăтăк кут.

## Сăра юхни

3429. Шак-шак шакăлти мине шак-шак, туп-туп, тупарти мине туп-туп.

## Сăрка*

3430. Вĕрене, вĕрене вĕр улти, çăппи-çаппи çĕр улми.
3431. Пӳрт хыçне сӳре çакрăм.
3432. Чип-чиперкке, чиперкке, чипер çĕртен кукăрри.

## Сăрланă чĕрне

3433. Юпа тăрне юр çунă, юр çине юн тăкнă.

## Сăрнайпа купăс

3434. Пин-пин пинече пин халăха култарать, хурама хуппи хултăрчи хура халăха кустарать.
3435. Пин-пин пичче пин халăха култарать, хурама хуппи хултăрчă хура халăха култарать.

## Сăхман

3436. Асаннен шурă, аннен хура, аттен кăвак.
3437. Ярăп, ярăп, яра парăп, исмелĕп те тӳмелĕп.

## Сăхман тӳмелени

3438. Йарăп, йара парăп, исмелĕп* те тӳмелĕп.

## Сенĕк

3439. Асатте сарайĕнче тĕлĕнтермĕш кайăк пур: çăварĕ çук, шăлĕ тăваттă.
3440. Аслăк çинче Йăкăнат пĕççи выртать.
3441. Виçĕ шăлпа утă çиет.
3442. Кам тутасăр виçĕ шăлпа утă çиет?
3443. Пĕр шăшийĕн виçĕ хӳре.
3444. Пирĕн кинемейĕн виçĕ шăл.
3445. Çăварĕ çук, шăлĕ тăваттă.

### Серетепе* мачча

3446. Мамин кочĕ мамăклă, кинемин кочĕ кирĕклĕ.

### Сехет

3447. Алăсăр-урасăр çӳрет, анчах пӳртрен тухаймасть.
3448. Алăсăр шăвать, урасăр чупать, хуса çитмелле мар, ăçта çитнине кăтартать.
3449. Аслă хĕрĕм те чупать, кĕçĕн хĕрĕм те чупать, ир те чупать, каç та чупать, ĕçне хăçан пĕтерет?
3450. Ăсанĕ ăвăс çинче ларать, пырши-пакарти çĕртен сĕтĕрĕнет.
3451. Ăсĕ çук, ĕçĕ пур.
3452. Ĕçлет-ĕçлет — укçи çук.
3453. Ĕçлет-ĕçлет — ывăнмасть.
3454. Иккĕшĕ усăнса тăрать, пĕри сулланса çӳрет.
3455. Каçсерен: «Çимĕп, тутă эп, — тет, — сухалăмран туртмасан ыран ирпе çук эп», — тет.
3456. Килĕрен шăкки-шакки.
3457. Кунĕн-çĕрĕн чăнт-чăнт!
3458. Кун каять, çĕр каять, йĕп çăрти пек çĕр каять.
3459. Кун çӳрет, çĕр çӳрет, йĕп çăрти пек çул çӳрет.
3460. Куçĕ çук, алли çук, çитрĕ! тесе кăшкăрать.
3461. Лармасăр талăк ĕçлет.
3462. Пĕвĕ çук, ури çук, хăй çӳрет.
3463. Пĕр пуç, вун икĕ куç.
3464. Пĕр тăхтами çӳресен те пĕр вырăнтан хускалмасть.
3465. Çăк çаксан çӳрет, çăкне илсен çӳреймест.
3466. Тăлăх автан талăкра тăхăр вунă хут авăтать.
3467. Ула ура, чăмăр туя, вăта çĕрте чĕлхе, эсĕ çавна пĕл-хе.
3468. Урам çук — çӳретĕп. Чĕлхем çук пулсан та эсĕр çывăрма выртас, çывăрса тăрас вăхăта каласа паратăп.
3469. Урасăр утать, алăсăр шаккать.
3470. Утать-утать, ниçтан та çитеймест.
3471. Хăй çӳрет, вырăнтан куçмасть.
3472. Чĕлхесĕр, хăлхасăр, вăхăт пĕлет.
3473. Чĕлхесĕр япала вăхăт пĕлет.
3474. Чик-чак, алли çук — шаккать, пуçĕ çук — кăтартать.
3475. Чунĕ çук, хăй çавах ĕçлет.
3476. Шаккат, çавăрнат алсăр-урасăр.
3477. Шаккать, çаврăнать, никамран та хăрамасть.
3478. Шаккать, çаврăнать, пуçĕ çук — кăтартать.
3479. Шаккат-çĕмрет, никамран та хăрамас.

### Сехет тукмакĕпе çăпали

3480. Усăнса тăраканни усăнса анать, сулланса тăраканни сулланса тăрать.

### Сехет тукмакĕ, çăпали, йĕппи

3481. Асаттен усăнса аннă, аттен сулланса çӳрет, манăн çӳлелле çĕкленет.
3482. Аслашшĕн усăнса анĕ, ашшĕн сулланса тăрĕ, ывăлин тăрса кайĕ.

### Сехетри минут шучĕ

3483. Пĕр чăх айĕнче утмăл çăмарта.
3484. Пĕр чăх утмăл çăмарта пусса ларать.

### Сĕвек кĕперри*

3485. Сар-симĕс хăю сахатлăх.

### Сĕлĕ

3486. Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕрти, йĕри-тавра шерепи.
3487. Йăлтăр-йăлтăр тăват тăрри шерепи.
3488. Йăрăп-ларăп, яра парăп, исмелĕп те тӳмелĕп.
3489. Йĕлтĕр-йĕлтĕр йĕлтĕрте, йĕлтĕр тăрри шерепи.
3490. Йĕри-тавра шерепе, чăн варринче тунката.
3491. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрки, йĕтĕр тавра шерепи.
3492. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрăх шерепи.
3493. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи.
3494. Йитĕр-йитĕр йитĕрпи, йитĕр тăрри шерепи.
3495. Иттĕр-иттĕр иттерепи, йĕри-тавра шерепи.
3496. Пичче маткин пӳрнисем шав ылтăн.
3497. Хурт-кăпшанкă тапранать. Ылтăн алăк уçăлать.
3498. Шерепи-шерепи янавар, янавар вăрри улпут кайăкне тут тытать.
3499. Эреветлĕ-теветлĕ, шерепеллĕ-тевеллĕ.
3500. Ярапи, ярапи, ярапи тăрăх шерепи.

### Сĕлĕ кĕлти

3501. Йăптăх-яптăх Ялампи çӳçне-пуçне салатса ларать.

### Сĕлĕ шерепи тухни

3502. Хурт-кăпшанкă тапранать, ылттăн алăк уçăлать.

### Сĕлĕх

3503. Кĕленче чартак ăшĕнче хура хĕрсем читлĕхре.

### Сĕлкĕ

3504. Икĕ пуçлă Илемпи чӳрече куçне сыхлать.

### Сĕреке

3505. Шывра тăралла тăрать, шывран тухсан йăванса выртать.

### Сĕрен кĕперри*

3506. Пӳрет урлă чĕн йĕвĕн ывăтса каçарăп.

## Сĕрĕм

3507. Кăвак сурăх кĕрте ларĕ.
3508. Кăмака çамкинче кăвак тенкĕ пур.
3509. Кăмака çинче кăвак така выртать.
3510. Кăмака çинче кăвак тенкĕ.
3511. Кăмака çинче кăвак тенкĕ выртать.

## Сĕрме купăс

3512. Ай! тет, вай! тет; чунĕ пур та, юнĕ çук.

## Сĕт

3513. Алăпа тытман, кăмакана хывман, сĕтел çине хуман, çĕçĕпе касман, ăна çимен çын та çук.
3514. Ик-так чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
3515. Кăкăр уççи пĕç хушши (ĕнен).
3516. Кăмакана кĕмест, кĕрекене лармасть, ăна çимен çын çук.
3517. Пиçмен, хуçман, сĕтел çине хуман, ăна çимен çын та çук.
3518. Пиçмесĕр, хуçмасăр, сĕтел çине хумасăр мĕн çийĕп?
3519. Пиçмесĕр, хуçмасăр хырăм тăрантарать.
3520. Сĕтел çине хумаççĕ, çĕçĕпе касмаççĕ, ăна çимен çын та çук.
3521. Çăл пур тăвайккинче икĕ кăвакал ларать.
3522. Çăрман, çупман, çатмапа пĕçермен, çу сĕрмен, тăвар яман, ăна çимен çын çук.
3523. Çулла çурхатпала, хĕлле куркапала.
3524. Шĕвĕ — шыв мар, шурă — юр мар.

## Сĕт машинки (сепаратор)

3525. Пĕчĕкçеççĕ хура ĕнем сĕт те парать, хăйма та парать.

## Сĕт çинчи хăйма

3526. Кăвак тӳшек çинче шурă минтер.
3527. Шурă тӳшек çинче сарă минтер.

## Сĕтел

3528. Килсерен сарă вăкăр — нихăçан та тула тухса курмасть.
3529. Мачча çĕклеймĕ, урай çĕклĕ.
3530. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă майра.
3531. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă майра лараççĕ.
3532. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр йĕрет.
3533. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр качча каяç.
3534. Пĕр сунчăк айĕнче тăват пичче ларать.
3535. Пĕр шĕлеп* айĕнче тăватă тăван тăраççĕ.
3536. Пĕр шĕлепке айĕнче тăватă малай.
3537. Пĕр чатăрăн тăватă кĕтесĕнче тăватă хăта тăрать.
3538. Пĕчĕк кăна тӳрткĕлче анам пур, тăватă юпа çинче тăрать.

3539. Пуҫӗ пулмасан та шӗлепке тӑхӑннӑ, ури пулсан та аттине тӑхӑнман.

3540. Пуҫӗ ҫук — шӗлепке тӑхӑннӑ, ури тӑваттӑ — атти ҫук.

3541. Пӳрт айӗнче тӑватӑ юпа, тӑваттӑш те тӳр юпа.

3542. Сарлака ҫурӑмлӑ — выртмасть, тӑватӑ ураллӑ — утмасть.

3543. Ҫурӑмӗ пур, апла пулсан та выртмасть, тӑватӑ ури пур, апла пулсан та утмасть.

3544. Тӑватӑ аппам пур, тӑват аппан пӗр тутӑр.

3545. Тӑватӑ кинӗм пур, тӑваттӑшӗн пӗр тутӑр.

3546. Тӑватӑ пӗртӑван пӗр калпак (пӳрӗк) тӑхӑнса тӑратӗ.

3547. Тӑватӑ пӗртӑван, тӑваттӑшӗ те пӗр тан.

3548. Тӑватӑ пичче пӗр шӗлеппе*, пӗр пиҫиххипе.

3549. Тӑваткӑлча чатӑрӑм пур, тӑватӑ кӗтесӗнче пӗрер тӑхлач.

3550. Чап-чап, турӑ парсан йӑлтӑр-йӑлтӑр пуҫана.

3551. Шӗлепке айӗнче тӑватӑ ача ташлать.

## Сӗт-турӑх

3552. Ҫулла чарапа, хӗлле калакпа.

3553. Ҫулла — чӗреспе, хӗлле — каликпе.

## Сивӗ

3554. Алӑкран кӗрет, кӗрсенех пӗтет.

3555. Алӑкран кӗрет те тӗпеле иртет.

3556. Алӑкран кӗтӗм — хуҫкалантӑм, урай сыппине ҫитрӗм — хуҫкалантӑм.

3557. Алӑк тытса уҫмассерен Хӗлип мучи килех кӗрет.

3558. Алӑк тытса уҫмассерен шурӑ сурӑх пӳрте кӗрет.

3559. Алӑсӑр-урасӑр аслӑк тӑратӑп.

3560. Алли ҫок, ори ҫок, хӑва ҫапак томтир итат.

3561. Алли ҫук, пӳрни ҫук, сӑмса вӗҫне чӗпӗтет.

3562. Алли ҫук, ури ҫук, хӑй ҫапах кӗпе-йӗм тӑхнасшӑн.

3563. Алсӑр-урасӑр кӗлеткесем ӳкерет.

3564. Ӑсти килет пуртӑсӑр, кӗпер хывать хӑмасӑр.

3565. Карта хыҫӗнче кӑвак пурсай, шӑлсӑр-ҫӑварсӑр шӑмма витерет.

3566. Карта хыҫӗнче кӑвак пурсуй, шӑммӑма ҫыртма шӑлӗ витмест.

3567. Куҫӑм та ҫук, аллӑм та ҫук, тӗрӗ тӗрлес енӗпе манран ӑста ҫын та ҫук.

3568. Пуртӑсӑр ӑстасем килӗҫӗ, хӑмасӑр кӗперсем хывӗҫӗ.

3569. Пуртӑсӑр, савӑлсӑр, сӑвайсӑр кӗпер хывать.

3570. Пуяна ытаклать-кучаклать, юрлин хӗвнех кӗрсе каять.

3571. Пӳрте килчӗ те кӗчӗ, сывлӑх ыйтмасӑр иртрӗ те ларчӗ.

3572. Пӳрте шур сурӑх кӗртсе ятӑм, пӑхса тӑрсах ҫухатрӑм.

3573. Сӑнсӑр кӑна мучи пур, сӑмсаран чӗпӗтес йӑли пур.

3574. Ҫӑварӗ ҫук, шӑлӗ ҫук, ҫара ӳте чӗпӗтет.

3575. Ҫилленчӗк мучи пур: ҫитмӗл ҫулхи карчӑка вун ҫиччӗри хӗр тӑвать, ҫитмӗл ҫулхи старике вун ҫиччӗри яш тӑвать.

3576. Тункатасӑр аслӑк хывӑп.

3577. Хаяр старик пуртӑсӑр кӗпер тӑвать.

3578. Хĕлип мучи хăй аллипе тыткалать.
3579. Хирĕçтерет, çураçтарать, икĕ алла çапăçтарать.
3580. Шурă сурăх алăкран кĕрет, тĕпелелле иртеймест.
3581. Шур тухатмăш тултан кĕчĕ, тултан кĕчĕ те хуçкаланма пуçларĕ, хуçкаланчĕ-хуçкаланчĕ те куç умĕнчен çухалчĕ.
3582. Юпасăр кĕпер хывтартăм.

### Сиктĕрме

3583. Пĕчĕкçеççĕ Татьяна, сикет ларать маччана.

### Сталин

3584. Инчĕ, пинчĕ, хывăх çинче пĕр пĕрчĕ.

### Станпа кĕнчеле авăрлани

3585. Вăшт-вăшт вăшти пырать, вăшти хыççăн Михали пырать.

### Сукмак

3586. Пĕчĕк хуп татăкĕ вакка пырса перĕнет.
3587. Çинçе вĕренĕн вĕçĕ инçе.

### Сукта*

3588. Тĕркелерĕм, тăрпана хыврăм, тăтăм та тăрпаран илтĕм.
3589. Хĕрлĕ пĕвет ăшĕнче туй çимĕçĕ тутланать.

### Сула

3590. Кăмака айĕнче симĕс пукане ташлĕ.
3591. Тĕп сакайĕнче пукане ташлать.

### Сулă

3592. Мăнтăр лашан хырăмсалăхĕ кĕскерех.
3593. Пӳлерте хывнă çут пиçиххи пилĕке çыхма çитеймест.
3594. Хум пиççийĕ пилĕкне çитмест.
3595. Хум* хĕрийĕн пиçиххи.
3596. Хум хĕринĕн пиçиххийĕ кĕске.
3597. Хун хĕрин сар çиппи çитмест.
3598. Чипер акайăн пиçиххийĕ çитмест.
3599. Чипер аккан пиçиххи кĕске.

### Сулă, çиттуни* çакки

3600. Пиççийĕ пилĕкне çитмест, хури чĕрпуççине çитмест.

### Сунчăк

3601. Пĕрсе тытсан — туя пак, сарса пăрахсан — çатма пак.
3602. Çийĕнчен шыв юхать, айĕнче çын пырать.

### Супăнь

3603. Килсерен кукша пуç (каччă) ача.

### Сурат

3604. Çеçен хир варринче урлă клет ларать.
3605. Уйра пĕр урлă кĕлет ларать.

### Сурăх

3606. Ăшăтать, тăхăнтарать, этеме тăрантарать.
3607. Ир те килет Селиме,
Каç та килет Селиме,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексенчен
Тĕвĕм тӳлет Селиме.
3608. Ир те килет Телим,
Каç та килет Телим,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексенчен
Тӳме тăват Телим.
3609. Ир те лер-лер! Каç та лер-лер!
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексенчен çĕрçĕн çип хатĕрлерĕ.
3610. Çӳллĕ-çӳллĕ ту çинче, тĕрлĕ чечек хушшинче чупса çӳрет шур сăхман.
3611. Тăкăр-тăкăр тăват ура, мăтăр-мăтăр пĕр тута.
3612. Тирне туман, кĕрĕкне çĕлемен, шур аппа çавна тăхăнса çӳрет.
3613. Тулта кĕрĕкпе сăхман макăрĕ.
3614. Тусем çинче, тӳрем çĕрте кĕрĕкпе сăхман çӳренĕ. Киле хăваласа кайнă — тăррине хывса илнĕ: Ваççана кăçатă, йăмăкне перческе*, ашшĕне тăлăп, амăшне çурма кĕрĕк.
3615. Хĕлле те кĕрĕкпе, çулла та кĕрĕкпе ту çӳреççĕ.
3616. Хĕлĕн-çăвĕн кĕрĕкпе.
3617. Хĕлле те, çулла та кĕрĕкпе.
3618. Ялан кĕрĕкпе çӳрет, пĕр те тарларăм темес.

### Сурăх, йытăсем, çын, кашкăр

3619. Пурис пуртă вăрланă, ăна Сименĕ сиснĕ, Курмили курнă, Çитăрĕ çыртнă, Хăватей хăвалать.
3620. Шуру-муру килнĕ те чикки-приккине вăрласа кайнă. Çавна чам ачисем илтнĕ те хуçисене каланă. Хуçисем шуру-муруна хăваласа çитсе вĕлернĕ, чикки-приккине илсе таврăннă.

### Сурăх кĕтĕвĕ

3621. Ир те лер-лер, каç та лер-лер,
Макăрăк та макăрăк,
Макăрăк тулли тăкăр(л)ăк.
3622. Макăрук та макăрук,
Макăрукпа тулчĕ тăкăрлăк.

### Сурăх пăхĕ

3623. — Пахти, Пахти! Кăçта кайрăн?
— Кăмăрчăк шăратма.
— Пахти, Пахти! Кăçтан килен?
— Кăмăрчăк шăратса.
— Пахти, Пахти! Ма пуçу типĕ?
— Пирĕн йăли çапла!
3624. Пĕр шăтăкран хĕрĕх мăйăр тухат.
3625. Пĕр шăтăкран хĕрĕх çерçи тухат.
3626. Чипер инке шыва каять, ывăтмалли тăкăнса пырать.

### Сурăх путекки

3627. Уçман çӳпçе тĕпĕнче çĕлемен тумăм выртать.

### Сурăх сысни

3628. Пĕр сак уçăп та сакăр вон салтак сиксе тохĕ.
3629. Пĕр сак уçсан хĕрĕх çерçи тухса тарать.

### Сурăх çăмĕ

3630. Пайпикенĕн кĕрĕкне ир те хыраççĕ, каç та хыраççĕ, çăмĕ ӳсех тăрать.

### Сурăх çăмне илни

3631. Вăрман касаççĕ, турпасĕ сирпĕнмест.

### Сурăх тирĕ

3632. Пĕр енни уй, тепĕр енни вăрман.

### Сурăх тислĕкĕ

3633. Кĕçĕн çын шыва каять, мăйĕнчи шăрçи тăкăнса пырать.

### Сурпан

3634.Варрипе вар пырать, ик хĕррипе çул пырать.
3635. Вите хыçне сӳре çакнă.
3636. Вите хыçне сӳре çапнă.
3637. Икĕ хĕрринче вăрман, варринче уйлăх.
3638. Пĕр вĕçĕ ан пуç(çи) çинче, пĕр вĕçĕ кут айĕнче.
3639. Шор хорăн çине шор кайăк ларса, ик çонатне осса(я)рса.

### Сурпан çакки

3640. Вăр-вăр карта, вăр карта, тимĕр пуç Тимови.
3641. Чӳкасси чӳхенчĕк, Артакасси арканчăк, Конихлин теçетник.

### Сурпан çаккипе шăлкеме

3642. Пĕр ен хуплăх, тепĕр ен пасарлăх.

### Сурчăк

3643. Пĕчĕкçеççĕ шур тутăрăм урамра ӳксе çухалчĕ.
3644. Пыра тăркач шур тӳмеме çухатса хăвартăм.
3645. Пыраттăм, пыраттăм, пĕр тĕркем ӳксе юлчĕ.
3646. Шап-шур анчăка урама пăрахса хăвартăм.

### Суха

3647. Курпун сысна пĕтĕм хире алать.

### Суха касси

3648. Уй урлă каçнă чух пушăт чĕртĕм.

### Сухал

3649. Асатте анкартинче вăрман ӳснĕ, пуçĕ-вĕçĕ çĕре ӳкнĕ.
3650. Асатте вăрманĕнче юманлăх çук.
3651. Асатте вăрман илнĕ, кутне-пуçне каснă, кутăн çавăрса лартнă.
3652. Асаттен вăрманĕ аялалла ӳсет.
3653. Асаттесен вăрманне утпа кĕме çул çук, ут кăкарма турат çук.
3654. Вуллăм пăрăнчĕ, пăрăннă енне тăсăлчĕ.
3655. Пура хĕрринче канка ташлать.
3656. Пура хĕрринче кантис ташлĕ.
3657. Пура хĕрринче карлик ларать.
3658. Пура хĕрринче талттин ташлĕ.
3659. Пӳлме хĕрринче кĕлтти ларат.
3660. Сак урати çумĕнче тыллапуççи çакăнса тăрĕ.
3661. Сăрт хĕрринче вăрмань пур та тукмакĕ çук.
3662. Сăрт хысакне мăк шăтнă.
3663. Сик сикĕлтĕр, сикĕлтĕр, пакăс кĕлтĕр, кĕс кĕлтĕр.
3664. Сухаламан, сӳремен ана çине çирĕм çултан çăм шăтрĕ.
3665. Çыр хĕрринче ката пур.
3666. Тĕпсĕр кӳлĕ тавра хăвалăх.
3667. Тимук хирне вир акрăм, тикĕс шăтин юрĕччĕ.
3668. Ту айĕнче вăрман пур, пырса кĕме çулĕ çук.
3669. Ту айĕнче тулăксăр курăк çитĕнет.
3670. Тьфу печчес, тьфу печчес.
3671. Чипер-чăпар ярханах.
3672. Ырçи хĕрринче канти ларать.

### Сухаланă ана

3673. Çеçен хирте пĕрмеллĕ сăхман выртат.

## Сухан

3674. Арăк мар, çарăк мар, çулçи ешĕл, милĕк мар.
3675. Ихихи, чичипи, симĕс хӳри япашки.
3676. Картара аллăшар-утмăлшар хут тумтир тăхăннă хаяр старик ларĕ.
3677. Кашта, кашта, кашта, кипек иске чăпкаç киев кĕпĕк.
3678. Кăтăр-кăтăр кăткă тĕмески, симĕс кайăк — упăшки.
3679. Ларать йăранта пĕр карчăк, мĕнпур çĕтĕк çийĕнче, куран-пĕр макăрать.
3680. Майра сараппан хывать-хывать, хывса пĕтерейместь — макăрса ярать.
3681. Пĕр майрана пăхăп та йĕрĕп ярăп.
3682. Пĕр майран çĕр хутлă сараппан, кашни хутне уçмассерен макăртать.
3683. Пĕр майран çĕр хут сараппан.
3684. Пĕр майра пин хут пăхса макăртать.
3685. Пĕр муллан утмăл хут тумтир.
3686. Пĕчĕк акие куратăп та йĕрсе ярăтăп.
3687. Пĕчĕк акая пăхап та йĕреп, пăхап та йĕреп.
3688. Пĕчĕк кăна аппа пур, куçран пăхсан макăртать.
3689. Пĕчĕк кăна кинĕм пур, куçран пăхса макăртать.
3690. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, сакăр хут кĕрĕк тăхăннă, ун кĕрĕкне кам хывать, вăл макрать.
3691. Пирĕн асатте вун ик тăлăп тăхăннă; кам ăна хывать, çав макрать.
3692. Пирĕн кинемийĕн симĕс хӳре.
3693. Сала майри сарă сараппан тăхăнса янă; кам ăна хывăнтарать, куççульпе макăрать.
3694. Сар аккине салтăнтарсан йӳçĕ куççульпе макăрăн.
3695. Сарă Сарпикен сакăр вун сараппан.
3696. Сар кĕрĕклĕ старик пур, кĕрĕкне хывсан макăртать.
3697. Сар саппунлă сарă хĕр хывăнтарсан макăртĕ.
3698. Сар сăхманлă Сахвине салтăнтарса пăхрăм та — йĕрсе-макăрса пĕтрĕм.
